К С(чув)
С 31

МИХАИЛ СЕНИЭЛЬ

20166. чув.

# ÇУТĂ ШЫВ ХĔРРИНЧЕ



Национальная библиотека ЧР
4-020166
201 66 чув

КОНТРОЛЬНЫЙ ЛИСТОК
СРОКОВ ВОЗВРАТА

КНИГА ДОЛЖНА БЫТЬ
ВОЗВРАЩЕНА НЕ ПОЗЖЕ
УКАЗАННОГО ЗДЕСЬ СРОКА

Колич. пред. выдач

Воскр. тип. Т. 1 млн. З. 384—75

МИХАИЛ СЕНИЭЛЬ

С(Чув)
К С31

# Çутă шыв хĕрринче

ПОВЕÇСЕМ

ЧĂВАШ КĔНЕКЕ ИЗДАТЕЛЬСТВИ
ШУПАШКАР — 1976

С(чув)2
С 31

Ҫак кӗнеке юратупа ҫамрӑклӑх ҫинчен. Юратӑва тӗрлӗрен инкек-синкекпе йывӑр тапхӑр витӗр кӑтартать автор. Халь пулса иртеҫҫӗ-и ӗҫсем е иртнӗ вӑрҫӑпа революци вӑхӑтӗнче-и, ҫамрӑксен чун-чӗре туйӑмӗ хӗрӳ, тӑшмансене курайманлӑхӗ хаяр.

Ӑс-кӑмӑл вӑйӗ иксӗлми тапса тӑни геройсене кирек епле йывӑрлӑха та ҫӗнме май парать.

ПРОВЕРЕНО
2016

20166-чэв

Чувашская республиканская
библиотека
им М. Горького

С $\frac{0763-09}{М 136(03)76}$ 91—76 ©Чувашское книжное издательство, 1976 г.

# ФЕНИКС КАЙĂК

ПОВЕСТЬ

1

Кĕрхи кун часах иртрĕ. Ҫаҫ пулчĕ. Пурте хăй ҫутрĕҫ. Турчкакассинчи пĕр ҫуртра куҫкĕскинчен икĕ пысăк хăмăр куҫ пăхать. Александр Серде, урăхла каласан Санюк, ҫемҫе хура ҫӳҫне «пробор» туса туранă май, сылтăм куҫ хӳринчен инҫе мар турпалли ҫине тинкерсе тăрать. «Шăна пекех курăнать, мур,— шухăшларĕ вăл,— кăшт аяккарах лармалла пулман-шим ун, эккей...»

Серден пичĕ-куҫĕ хĕрачанни манерлĕрех. Тути, пиҫнĕ ҫырла пек, тăртанчăк; сăнĕнче нимĕнле арҫынлăх палли те ҫук: сухалĕ шăтайман-ха, пичĕ юн пĕрхĕнсе тухас пек тулли, кĕрен те таса. Куҫ харшийĕ вара, куҫ хăрпăкĕ... Эх, ахальтен мар ĕнтĕ ăна пурте сăну-питӳ аннӳн, сассу, калаҫни-кулни, пĕвӳ-сийӳ — аҫун, теҫҫĕ.

Ҫӳҫне майласа пĕтерсен, Серде, сарлака хул-ҫурăмлă та йăрăс пӳллĕскер, шурă кĕпи ҫинчен хура костюм тăхăнса ячĕ, ҫулăм пайăркиллĕ йĕпкĕн хура галстук ҫыхса, ăна брошкăпа кĕпи ҫумне ҫирĕплетрĕ. Ҫав вăхăтра тепĕр пӳлĕмрен амăшĕ тухрĕ:

— Нумай ан ҫӳре, вĕрĕлсе ӳкĕн, ыран вара каллех шкула каяймăн,— терĕ ăна шăппăн.

— Ырана мĕн панине ыйтса пĕлетĕп те саккăр тĕлне килте пулатăп.

— Қаллех ҫав Нелли патне каятăн пуль-ха?

— Анне!

— Тем пит килĕштеретĕн Қуян таврашне.

Тавлашни усăсăр иккенне туйса, Санюк амăшне ĕҫпе юрасшăн пулчĕ:

— Пар-ха, тухса кайиччен шыв кӳрсе хăварам.

Амăшĕ вара, чирлерех тăраканскер, урăх нимĕн те шарламарĕ, ывăлне ҫамкинчен чуптурĕ те ҫурăмĕнчен

ляп-ляп ляпкарӗ. Ҫӗнӗ костюм ҫинчен кивӗ пиншак тăхăнса, Санюк икӗ витрепе шыв ăсма тухрӗ. Ӗнер каҫ вăл хăйпе пӗр класра вӗренекен Нелли Куяновăсем патне нимене кайнăччӗ, вутă кӳме. Машшин ҫине шултра чӗрӗ ăвăс сыпăсем тиесе хытă тарланăскер, вăрмантах пӗр курка сивӗ шыв ӗҫрӗ.

Ирхине вырăн ҫинчен те ҫӗкленеймерӗ Санюк, пуҫӗ ҫурăлас пек ыратрӗ. Амăшӗ шӳрпе пырса лартсан, шӳрпи ҫине те сӳрӗккӗн ҫеҫ пăхса илчӗ, анчах кăнтăрлапа, капла чир пӗтӗмпех пусса илӗ тесе, епле йывăр пулсан та, тăрса ларчӗ:

— Анне, хура кăна чей ту-ха, сахăрсăр.

Амăшӗ сăмавартан чей юхтарма кайрӗ. Ашшӗ Санюкăн шăлаварне йăтса ура вӗҫне ларчӗ:

— Ме, тăхăн. Тăрса утса ҫӳресен аванрах мар-и? Каларăм вӗт сана, курман пек ан ӗҫле терӗм, ăшша пиҫнӗ хыҫҫăн сивӗ шыв ӗҫрӗн пуль-ха?

— Ӗҫрӗм ҫав, вутă тиесе пӗтерсен.

Санюк эхлете-эхлете веранда ҫине тухрӗ. Часах унта гантельсем чăнк-чанк! туни, Санюк вӗҫӗмсӗр эхлетниахлатни, ух! ух! тени илтӗне пуҫларӗ. Майкăсăр, плавки вӗҫҫӗн ҫеҫ пӳлӗме чупса кӗчӗ, йӗпе алшăллине амăшне парса, ҫарапакка пуҫҫăнах чей лӗрплеттерсе сыпма тытăнчӗ. «Анне,— терӗ амăшне,— ма хăлхаран тытса тăратмарăн. Алгебрăпа паян тӗрӗслев ӗҫӗччӗ, Цыфаркин каллех чӗрӗлле ҫиет ӗнтӗ мана, урока хатӗр маррипе килмен, тет...»

Санюк тухсан тепӗртакран такам алăка килсе шаккарӗ: -

— Кӗме юрать-и?

«Юрать» тейиччченех алăк уҫăлса кайрӗ те, пӳрте яштака хӗрпе хӗрача кӗрсе тăчӗҫ. Ялти «чи интеллигентлă хӗрарăмăн» хӗрӗпе, Куянова Неллипе, тепӗр ҫырă ҫӳҫлӗскер. Нелли шит тăршшӗ пăта кӗлеллӗ шур туфлипе шаклаттарса, калаҫа-калаҫа, малалла иртрӗ, тӗкӗр умне чарăнса юсанса илчӗ. Кӗске те тăвăр шупка юбкăпа, чӗнтӗрлесе ҫыхнă, витӗр курăнакан хура чăлхапа. Мăйӗнче йăлтăр-ялтăр шăрҫа вутăн-хӗмӗн ҫунать, хура свитерпа, тулли кăкăрӗ тапса тăрать. Ҫинҫе пилӗкне йӗс тăхаллă ансăр пиҫиххи ҫыхнă. Хăлха алкисем — хаклă йышши чул, хӗрӗх-аллă тенкӗ те тăраҫҫӗ пулӗ. Прическийӗ... Вăл мӗнле ятлине вăра пӗр турă ҫеҫ пӗлет, Санюк амăшӗ чухлаймасть. Сăрланăскер, Нелли ҫӳҫӗ хӗрлӗ ӗне ҫăмне асилтерет. Куҫ харшипе куҫ хăрпăкне те сăрланă пул-

малла, хӗр куҫӗсем пысӑк та ҫутӑ курӑнаҫҫӗ. Нимӗн те калаймӑн, ялта пӗр чаплӑ пике ӳстерсе ҫитӗнтерчӗ Куян Хӗлипӗн Зойи...

— Тетя Аня,— терӗ Нелли ҫепӗҫҫӗн, Анна Григорьевна ҫине хура та вӑрӑм куҫ хӑрпӑкӗсене вӑраххӑн ҫӗклесе пӑхса,— пире Александр кирлӗччӗ, ыран валли вӗренме киле мӗн-мӗн панине пӗлтересшӗнччӗ. Хӑй темшӗн шкула пыман та. Ҫула май кӗтӗмӗр... Анне салам каларӗ сире, тетя Аня.

— Тавтапуҫ... Салам хӑйне те. Санюк шыв ӑсма тухрӗ-ха.

— О, Александр маттур! — савӑнӑҫлӑн каларӗ Куянова.— Кашни арҫын ачах шыв ӑсмасть.

— Ӑскалать пирӗн. Ирӗксӗрех ӑсӑн... амӑшӗн чӗри пӗтнӗ пулсан.

— Пирӗн кӳршӗ Гера — нихҫан та. Мана та анне хушмасть те, тали пӑсӑлать, тет те, эпӗ ҫапах та...

Ҫав самантра Санюк шыв мар, пӗр ҫӗклем вутӑ йӑтса кӗчӗ, тӗпеле иртсе вучах айккине пӑрахрӗ.

— Салам хӑнасене,— терӗ пӳлӗмрен.— Эпӗ часах,— тесе, каллех тула тухса кайрӗ. Шыв патне ӗнтӗ. Ҫырӑ ҫӳҫлӗ хӗрачан ятне Анук аппа астӑваймасть. Лешӗ алӑк патне, шӑпӑр шӑтӑкне тенӗ пек, ларчӗ те — нимӗн те чӗнмест. Анук аппа ӑна шеллесе:

— Эс, хӗрӗм, малалла ирт,— терӗ,— ав ҫавӑнта, диван патне.

Хӗрача хӗрелсе кайрӗ. Йӑрӑст! тӑсӑлса тӑчӗ ури ҫине. Атӑл хӑмӑшӗ пек яштака та хӳхӗм пӳ-си. Пысӑк, тарӑн куҫӗсем шухӑшлӑ, ҫын ҫине тӳррӗн те ӑслӑн пӑхаҫҫӗ. Чим-ха, кам ҫаплаччӗ-ха Анукпа пӗр ӳсӗмрисенчен? Ара, Тимӗрҫӗ Наҫтаҫӗ ҫакӑн пекчӗ-иҫ ача чухне!

— Эс Наҫтаҫ хӗрӗ пулатӑн пуль-ха, ятна тем астӑваймастӑп?

— Оксана. Наҫтаҫӗн мар. Тамарин.

— Тамуҫӑн та ҫакӑн пысӑкӑш-и ӗнтӗ ачисем? Эс асли пуль?

— Ахӑ. Саккӑрмӗш класа ҫӳретӗп.

Анук шухӑша кайрӗ. Тултан Санюк кӗмсӗртетсе кӗрсен тин вӑл пӳртре ҫынсем пуррине астуса илчӗ, ывӑлӗпе ун юлташӗсене кансӗрлес мар тесе, тепӗр пӳлӗме тухрӗ.

Астӑвать-ха Анук, нумай та пулмасть-ха, хӑйсем те ҫапла ҫап-ҫамрӑкчӗ, ҫирӗме те ҫитменччӗ. Куянова Зоя, Нелли амӑшӗ, Кузнецова Настьӑпа Тамара (Тимӗрҫ Микулай хӗрӗсем), саккӑрмӗш класа ҫӳпатчӗҫ. Санюк

ашшӗ Матви—вуннӑмӗшне. Зоя Матвипе туслӑччӗ, лешӗ салтака кайнӑ чух район центрне ҫити ӑсатнӑ терӗҫ, уйрӑлнӑ чух вӑл Матви мӑйӗнчен уртӑнса йӗнӗ имӗш.

Вунӑ класс пӗтерсен, Куян Хӗлипӗн пике пек хитре Зойи, хӗл ларнӑ вӑхӑталла сасартӑк ача ҫуратса пачӗ. Анчах та, кӑшт пурӑнсан, ача ашшӗ Матви марри палӑрчӗ. Куянсем патӗнче хваттерте вӑтӑрсенчен иртнӗ инженер-геолог, нефть шыракансенчен пӗри, пурӑнатчӗ, вырӑс та, тутар та, чӑваш та мар тетчӗҫ ӑна, темле ҫынччӗ вӑл, хура та ҫӳллӗччӗ, питех калаҫма юратмастчӗ, юрлама, гитара калама, ташлама — ӑстаччӗ вара. Ячӗ Иванччӗ, Аскеров. Вӑл Зоя ача ҫуратиччен ҫур ҫул маларах ялтан тухса шурӗ.

Тинӗс-Ҫар флотӗнчен курма килсен, Нелли камран ҫуралнине Матви хӑех тӗпчесе пӗлнӗ, тепрер ҫултан.

Зоя пӗчӗк хӗрӗ валли вак-тӗвек туянма района кайнӑ пулнӑ. Тулли сумкӑсемпе лавккаран тухса ҫар комиссариачӗ тӗлӗпе иртнӗ чух крыльца ҫинчен патвар та ҫӳллӗ, яштака моряк ҫӑмӑллӑн сиксе аннӑ. Кӗсйинчен пирус кӑларса хыпнӑ та зажигалкине йӑл! сутнӑ. Тумӗ тӗксӗм, матроскин ҫухи тинӗс пек кӑвак, сӑмсасӑр карттусӗ шурӑ, хӑйӑвӗсем вӗл-вӗл вӗҫеҫҫӗ. Ботинки куҫкӗски пек йӑлтӑртатать, клешӗн утюгпа якатса тунӑ йӗрӗ тӳп-тӳрӗ те ҫивӗч. Тайкаланарах, анчах та питӗ хӳхӗм килет моряк. Зойӑна курсан, пӑлханса ӳкмест, васкамасӑр ун патне пырать:

— Военный моряк Матвей Серде прибыл на родину,— тет вӑл, йӑрст! тӑсӑлса тӑрса, пӗр кулмасӑр, ал памасӑр. Унтан, Зойӑна ҫын куҫӗ умӗнчех, тӑр кӑнтӑрлах, ҫухаран ҫавӑрса илсе:

— Пӗр ҫул каялла ҫакӑнта мӑйран уртӑнса йӗнине асту-ха. А ну! — терӗ, тет. Куян хӗрӗ ӗнтӗ ахаль те тӑр-тӑр-тӑр! чӗтренӗ, ури вӑйӗ пӗтсе килнӗ, кӑмӑлӗ пӑтраннӑ. Пуҫӗ ҫаврӑнса кайнипе вӑл Матвие те курми пулнӑ. Матви, Зойӑна ҫатлаттарса енчен енне ҫупа-ҫупа ярасшӑнскер, хӑйне хӑй тытса чараймасӑр, ӑна икӗ аллипе тӑнлавӗсенчен хӗстерсе тытса, пушхирте шывсӑр тилмӗрнӗ ҫын ҫӑлкуҫ умне ӳксе, тӗмсӗлсе, шыв ланкканӑ пек, тутинчен, питӗнчен, куҫӗнчен, ҫамкинчен, ҫӳҫӗнчен чуптума тытӑннӑ. Айӑпӗ мӗн тери пысӑк пулсан та, хитререн те хитре, ҫывӑхран та ҫывӑх туйӑннӑ ҫав сутӑнчӑк Зоя Матвишӗн.

Кайран вӗсем скверта ларнӑ. Каҫпа парк енне утнӑ. Ҫӗрӗпех унта ҫӳренӗ. Юратӑвӗ вара вӗсен ҫакӑнпа пӗтнӗ,

анчах Анук сисет: халӗ те юрататъ Матви Зойăна, палăртмасть çеç. Морякла çирӗп тытать хăйне паян кунчченех. Анук чӗрине вара улталаймăн, ытла та сисӗмлӗрен ӗнтӗ вăл çапла хытă хавшалчӗ. Халь мӗн ӗнтӗ, халь ачи хăйсене çитрӗ, пысăк...

Уроксене хатӗрлесе çитерсен, çамрăксем урама тухрӗç. Çил — кăнтăртан. Çанталăк кӗрхи пек мар, ăшă. Лӗп çил тирек çулçисемпе вылять, шĕпĕлтетет, ăшă каçшăн савăнать.

— Ха! — терӗ сасартăк Оксана чӗнмесӗр пынă çӗртен.— Паçăр çав енче çӗнӗ уйăх çурли пурччӗ, çи-инçескер. Халь çук, çил вӗçтерсе кайнă.

Санюк кулса ячӗ:

— Вăрман хыçне. Çапла-и? Турпас татăкӗ пек.

— Саня, эс кӗрхи ăшă çиле юрататăн-и? — каллех сас пачӗ Оксана.

— Эпӗ юрататăп,— Санюк вырăнне хуравларӗ Нелли.— Тата çав ăшă çиле хирӗç ак çапла утма кăмăллатăп,— хӗр Санюкпа Оксанăна хулран çавăтрӗ,— утасчӗ те утасчӗ çапла, чун каниччен.

Кăшт чӗнмесӗр пырсан, хушса хучӗ:

— Юратнă çынпа.

Оксана çуйăхса ярса аллине туртса илчӗ.

— Ай, тем ан калаç, Нелли!

— Эх, Оксана, Оксана,— хаш сывларӗ Куянова.— Нимӗн те ăнланмастăн çав-ха эсӗ.

Санюк ўсӗркелесе илчӗ.

— Юрату çинчен сăмахпа каламаççӗ, тенӗ Есенин.

— Хăш чух мӗнле вӗт...

— Мӗнле «хăш чух мӗнле»?—Санюк Неллине куçран тинкерчӗ. Лешӗ вăтаннă пек турӗ, çӗрелле пăхрӗ. Оксана вӗсем мӗн калаçнине уямасăр, вӗсенчен уйрăлса, пĕренесем çинче куçне çутатса ларакан кушак çурине кайса илчӗ.

— Уй, мăр-мăр, епле вăл, пӗчченех ларать. Хăрамасть те. Уй! Çивӗтри хăю патне кармашать тяппипе. Пăх-ха, Нелли, мӗн тери хитрескер? Кирлӗ мар-и, парнелес мар-и?

— Кушаксене тўсме пултараймастăп.

Санюк, çакна илтсен, картах сикрӗ. «Эсӗ ху кушак. Сана мӗне кирлӗ кушака юратни?» — тесе чут çеç персе ямарӗ вăл.

Пӗччен кайма шикленекен Оксанăна хапхинчен кӗриччен ăсатрӗç. Уйрăлнă чух вăл иккӗшне те алă пачӗ.

Хытах чӑмӑртарӗ пулмалла ун аллине Санюк, хӗрача каллех ҫуйӑхса илчӗ:

— Ай-яй, Саня, мӗнле эс, йӗркеллӗн ал пама та пӗлместӗн! Ну, ырӑ каҫ...

Хӑйсен тӗлне ҫитсен, Нелли нимле мар пулса кайрӗ. Темӗн каласшӑн хӑй, калаймасть. Ҫапах та, каларех вара:

— Пуҫ ыратрӗ-и паян?

Шухӑша кайнӑ Санюк ыйхӑран вӑраннӑ пек пулчӗ. Хӗр мӗн каланине труках ӑнланса илеймерӗ.

— А... мӗн? Пуҫ-и?

— Пуҫ ҫав.

— Ҫурӑлса тухатчӗ. Сивӗ шыв ӗҫсе пӗтрӗм пулмалла.

— Шывран мар вӑл.

— Мӗнрен?

— Эпӗ пӗр япала ятӑм куркана.

— Мӗн? Мӗн япали?

— Сана хам енне ҫаврас терӗм. Нивушлӗ сисместӗн — ҫулталӑк шухӑшлатӑп ӗнтӗ сан ҫинчен? Эсӗ вара пуҫна каҫӑртса хунӑ та...

— Ну эпӗ сан енче тейӗпӗр. Вара мӗн?

— Айвана ан пер-ха, Александр.

— Вара мӗн?

Нелли такӑнчӗ... Темӗн каласшӑн—чӗлхи ҫине сӑмах килмест, астурӗ:

— Саша, эсӗ вунсаккӑр та тултарман-ҫке-ха? Мӗншӗн халех ватӑ ҫынла пусӑрӑнчӑк тытан хӑвна? Ытла пусрӑнчӑк?

— Мӗн калас? Юрату, сан шутпа, мӗн вӑл, ача вӑййи-им?

— Юратса та курман вӗт-ха эс.

— Тӗрӗс мар. Курнӑ. Халӗ те юрататӑп.

— Кама?

— Пӗр ыйтӑва хуравла, калатӑп.

— Мӗнле ыйту?

— Ҫуркунне эсӗ мӗне пула пӗр уйӑх шкула пымарӑн?

— Каламастӑп.

— Эпӗ пӗлетӗп. Сан халӗрех качча тухас пулать, ахаллӗн пӗтетӗн.

Санюк хӑйне Нелли умӗнче ҫапла тытнинчен хӑй те тӗлӗнсе кайрӗ. Кӑшт пуҫ тавра шутланӑ хыҫҫӑн вӑл «йываҫа тӗппипех касса ячӗ».

— Эс чылай вӑхӑт ӑҫта пулнине те калама вӑтанмӑп эпӗ. Анатомипе зачет панӑ чухнех вӑтанса ирттерӗнӗ.

Нелли сиксе чĕтреме тытăнчĕ. Темĕскер шăнтма пуçларĕ ăна. Санюк хулĕ çине таянчĕ.

— Шанчăк пĕтрĕ... ĕмĕрлĕхе...— терĕ вăл хуйхăллăн.— Қаçар мана, қаçар.

Санюк чунĕ кӳтсе килчĕ. Хăйне ытла та хаяр чĕреллĕ пек, çынна нимĕн чухлĕ те ăнланма тăрăшман пек туйрĕ вăл, ытла та чул-çке ун чĕри!

Нелли сасартăк ăна мăйĕнчен уртăнчĕ, кăкăрĕнчен, питĕнчен, тутинчен чуптума пуçларĕ, хăйне хăй пĕлми пуличченех чуптурĕ. Çумĕнчен сирес тесе, Санюк хĕре пĕчĕк ачана çĕкленĕ пек çĕклерĕ. Хĕрӳлĕх хумĕ иртсен, хĕр тĕлĕрсе кайнă пек пулчĕ. Санюк çĕклемĕпех пĕрене çине ларчĕ. Нелли куçне уçса ассăн сывларĕ те ним сăмах каламасăр ура çине тăчĕ, типпĕн çеç:

— Сывă пул, Саня,— терĕ.

— Сывă пул,— çаплах кĕскен тавăрчĕ Серде.

Акă ĕнтĕ Санюк шăппăн килнелле таврăнать. «Юрататăп»,— тесе кăлт-кăлт сикет Санюк чĕри. «Юрататăп сана, Оксана»,— тет тути. Неллисен тĕлĕнчен чылай аякка кайсан калать вăл çапла. Оксана çакна илтмест те, туймасть те...

## 2

Вĕренекенсем кĕрхи çумăр айĕнчех шкултан саланаççĕ. Александр Серде ыттисемпе пĕр ушкăнра каймарĕ, сулахаялла пăрăнса сад аллейипе утрĕ. Тӳрĕрех те ку çул, тĕрткелешсе аптăратакан та çук. Қассăн-кассăн çил туллашса илет. Асфальт пек çуталса выртакан такăр сукмак çине йĕпе çулçăсем çатлата-çатлата ӳкеççĕ. Кичем çанталăк. Санюк вара унтан та кичемрех. Салху çанталăк, Санюк тата салхурах. Анчах çанталăка пула мар тĕксĕмленчĕ Серде сăнĕ, урăххи канăç памасть. Çултаłăка яхăн йĕрлерĕ ăна Нелли Куянова, мĕнле кăна япшарланмарĕ, хуçкаланмарĕ, чипер те, чăрсăр та, сăпай та тытса пăхрĕ хăйне. Сăнĕ-пичĕпе, çи-пуçĕпе шкулта пĕрре чаплă пике темелле ĕнтĕ. Çапах чунĕ туртмасть Санюкăн, туртмасть. Юлташлă çӳреме пултарать унпа Санюк, Нелли пĕркунхи пек хăтланнине вара тӳсме пултараймасть. Йĕрĕнтерет, чуна тарăхтарать хĕр çапла мĕскĕнленни, хăйне хăй ним чухлĕ те хисеплеме пĕлменни.

Пĕр эрне пуçне ватса çӳрет Санюк Неллине ăнланас тесе. Ăнланаймасть. Ăнланма ăнланать-ха вăл, анчах та хăй уççăн куракан çав чăнлăха темшĕн йышăнасшăн мар

унăн чĕри. Ытла та килпетсĕр-çке, ытла та яр-уçă, сивĕ чăнлăх: арçын ачана мăйĕнчен çакăнса юратма тархасларĕ-çке Нелли. Санюк çÿçенсе илчĕ. Вăл асăрхаман та — плащсăрах, çара пуçăнах пырать иккен. Сумккине хул хушшине хĕстернĕ те çут тĕнчене те маннă.

Хăлхине такамăн янравлă сасси çитсе кĕчĕ:

— Саня! Саня, теп. Тăхта-ха!

Серде картах сикрĕ. Çаврăнса пăхрĕ те — йĕпе сукмак тăрăх сунчăк тытнă, резина атă тăхăннă хĕрача çатлаттарса чупса килет.

— Саня,— терĕ çитсен Оксана, питне-куçне ялкăштарса.— Мĕн эс мана кĕтсе тăман? Уйй! йĕп-йĕпе хăй, кил-ха хăвăртрах сунчăк айне.

Çÿллĕ Серде Оксанăпа пĕрле сунчăк айне кĕрсе тăрсан умĕнчине ним курми пулчĕ. Пуçĕ сунчăк тимĕрĕсене лекрĕ. Оксана ахăлтатса кулать, чĕвĕлтетет. Сунчăк аврине чи вĕçĕнчен тытса чĕрне вĕççĕн тăрса пăхать, анчах кун пек ытла инçех кайма çук. Çакна курса Санюк сунчăка хăй тытрĕ. Қапла каллех инкек иккен. Сунчăк ытла çÿле кайнипе Оксана çумăр айне юлать.

Савăнать Оксана. Санюка йĕпе çурăмĕнчен çат! тутарать ал лаппипе. Çатлаттарать те хаваслăн çуйăхса ярать. Çапла вĕсем аллейăпа иртсе шоссе çине тухрĕç, малалла кайрĕç.

— Паян пирĕн ултă урокчĕ,— тет хĕрача. Вăл мĕн каланине Санюк илтет пулĕ те, хăлхана чикмест.— Анчах та пиллĕк çеç пулчĕ.

— Аван.

— Мĕн аван?

— Пиллĕк аван. Мĕнле предмет?

— Предмет мар, урок. Пилĕк урок.

— А-а.

— Çапла çав. Пилĕк урок пулчĕ.

— Мĕншĕн?

— Зоя Филипповна чирленĕ.

— Нелли амăшĕ-и?

— Ахă. Хĕрачасем тĕрлĕрен калаçаççĕ: хăшĕ пульницара теççĕ, хăшĕ Крыма курорта канма кайнă, теççĕ.

Нелли тесен, Санюка чун кĕнĕ пек пулчĕ.

— Ну, мĕнле, халĕ те Неллипе туслă-и-ха эсир? — тесе ыйтрĕ Оксанăран. Лешĕ сасартăк тĕксĕмленчĕ. Қуç харшисем пĕрĕнчĕç, пысăк та тарăн хăмăр куçĕсем ытла та шухăшлăн пăхма пуçларĕç. Ик еннелле чăрсăррăн кăнтса хунă кĕске çивĕтсем çеç çак шухăшлă çынна ку-

лăшлатаççĕ. Çав çивĕтсене пулах ĕнтĕ унăн сăнĕ хальхаль хĕвел пек çуталса каяссăн туйăнать.

— Ну, юрĕ,— терĕ Серде.— Чĕнместĕн пулсассăн, ан чĕн.

— Халĕ вĕсем Егоров Колясен Лизипе çӳреççĕ. Коли Казахстанран Нелли валли кофта янă, Лизи валли — туфлипе юбка, шикмодерн. Лиза хăй каларĕ. Неллинех алла çыхмалли сехет илсе паратăп, тенĕ, тет. Лизине тата — платье...

— Ăçтан вара çаплах пуйнă Коля?

— Çулла вĕренӳ çулĕ вĕçленсенех кайнă вĕт вăл. Уйăхне виççĕр тенкĕ ӳкеретĕп тесе çырать, тет. Шоферсене нумай тӳлеççĕ пулмалла.

— Коля шофер мар-иç. Хăçан таврăнаççĕ?

— Пĕр вунă-вунпилĕк кунтан. Шофер пулмасан та— правallă. Права пур-тăк, шофер ĕнтĕ вăл. Целинара ĕç алли çитменнипе питĕ тарăхаççĕ, тет. Коля вунсаккăрта тесе суйнă. Вунçиччĕре тенĕ пулсан, яхăнне те ямастчĕç, тет. Çул çитменнисемпе инкек сиксе тухсан, яраканнисене пĕçерккĕ лекет.

Серде каллех шухăша путрĕ. Вăт Коля... Мĕнпе уйрăлса тăрать вăл Санюкран? Нимĕнпе те. Ăс-хакăл, пултарулăх тĕлĕшпе те, сăн-питрен, пӳрен-сирен те унран кая мар Серде. Вĕренме те Коля пекех лайăх вĕренет. Математикăпа кăна пăтăрмахсем пулкалаççĕ. Пурпĕрех «иккĕсем» илмен,—«виççĕсем», «тăваттăсем». Ташламаюрлама та пĕлмест мар. Кăшт тăрăшнă пулсан, машшин çӳретме те вĕренетчĕ, анчах çук вĕт, çӳретмест акă. Целинана тухса шума та хăюлăх çитерейменрĕ, ашшĕ-амăшне итлерĕ, çамрăклах «ванасран» хăрарĕ. Коля хăрамасть. Тухрĕ те кайрĕ. Неллине илсен... Коля тиркесе тăман авă. Идеалист мар вăл Санюк пек. Пурнăçа мĕнле пур — çапла йышăнать. Санюка вара тем çитмест, темшĕн тиркешет вăл.

Хуйхăллă ача Оксана çине пăхрĕ. Лешĕ, Санюк ытла та чĕмсĕр пынăран, калаçма пăрахса айккинелле пăхкала-пăхкала утать. Пичĕ тăрăх хăйĕн çумăр юхать. Плащĕ тăрăх та шыв юхать. Чĕркуççийĕсем те йĕп-йĕпе.

— Саня,— терĕ хĕрача хуллен,— сана мĕн пулнă? Ĕлĕк эс урăхлаччĕ, манпа та калаçаттăнччĕ. Халь калаçмастăн. Апла ĕнтĕ ман сирĕн пата пырас та мар текех...

Пĕркунхи хĕрӳ те тытса чармалла мар хăватлă туйăм Санюка каллех килсе хупларĕ. Чăр! пăхрĕ Санюк

Оксанăна куçран. Итлемест иккен чĕри Санюка, итлемест. Епле тăрăшрĕ ĕнтĕ ача Оксанăна манма, ун пирки шухăшлассинчен сивĕнме. Çук, парăнтараймасть чĕрине. «Юрататăп»,— илтет Санюк ун сассине. «Юрататăп... Оксана»,— тет тути. Анчах çакна хĕрача илтмест те, туймасть те. Çилтен, çапса çума пуçланă çумăртан Санюк хӳттинерех йăпшăнать.

Урам кĕтессине çитсен, вĕсем уйрăлса каяççĕ.

3

Пĕр хушă йĕпе-сапа тăнă хыççăн, кĕркуннехи уяр кунсем пуçланчĕç. Тӳпе янкăр тăрă, сенкер. Сад пахчисемпе вăрмансем вутăн-хĕмĕн ялкăшаççĕ.

Ял çумĕнчиката хĕрринче, çеремре, кăвайт çунать. Çинçе кăвак тĕтĕм çӳлелле тӳп-тӳрĕ хăпарса вăрман çинче çухалать. Вут çине икĕ витрепе шыв çакнă иккен. Вĕреме те кĕнĕ ĕнтĕ. Вут умĕнче икĕ хĕрача тăрмашаççĕ: вуннăмĕш «А» класри Коля таврăниччен комсорга юлнă Сидорова Люсьăпа Нелли Куянова.

— Чей лайăхрах-и е хурлăхан çулçи? — тарланă çамкине алтутрипе шăлнă май ыйтать Люся. Нелли аллипе артистла сĕлтсе илет:

— Сердепе ун савнийĕ мадам де Бофор валли чей те, хурлăхан та ярас мар, серте çеçки ярса парас. Сертесем серте шывĕ сыпни илемлĕ,— тесе хурать. Çапла калать те, София Лорен пек пăркаланса утса, вăрманалла кĕрет. Тулли кăкăрĕсем чĕтренсе пыраççĕ, пилĕкĕ сăпсанни пек çинçе. Пӳне-сине трико çат тытса тăрать. Люся ăна хирĕç нимех те чĕнмест, пĕр витрине чей, теприне хурлăхан çулçи ярать. Кăштран халăха чĕнсен те юрать. «Мĕнле-ха капла? — шухăшлать Люся.— Сердене епле мухтатчĕ, юрататчĕ иккен те, халĕ вара вăн мĕнле апăрша-тамаша. Хытă кӳрентернĕ пулмалла Куяновăна. Ах, Серде, Серде. Кам шутланă эсĕ çавнашкал этем тесе».

Нелли пĕр ывăç саралнă серте çулçи татса тухрĕ:

— Акă вĕсем валли заварка. Армути ярса парăттăм та, хĕрхенетĕп, çапах та чĕрчунсем-çке-ха.

— Тем ан калаç-ха, Нелли. Ун пек, кун пек нимĕн те илтмен-çке эпĕ. Мĕн калас... илтнĕ... анчах та ун чухне эсĕ Сердепе марччĕ пек. Лешĕнпе...

— Мĕн «лешĕнпе»? Ну, кала.

— Пĕлетĕн-çке ĕнтĕ. Походра пĕрле çӳрерĕр.

— Çӳремен унпа эпир. Так ахаль... Кураймасăр калаççĕ. Серде, йăлтах Серде сивĕтрĕ. Çав айăплă.

Люся çанçурăмĕ сӳ! сӳлетсе илчĕ çак сăмахсене илтсен.

Çав вăхăтра вăрман хĕррипе велосипедлă хĕрача вĕçтерсе тухрĕ. Хулă пек çинçе те яштака хăй. Қăвайт патне çитеспе, пĕр урипе велосипед ларкăчĕ çине тăрса, теприне хыçалалла тăсрĕ. Çавна май чĕкеç пек ярăнса килет. Пăхса ытармалла мар.

Неллипе Люся, ăна курсан, савăнсах кайрĕç. Люся—ырă мар калаçу пĕтмелле пулнăран, Нелли—çĕнĕ тусĕн, Қоля Егоровăн, йăмăкĕ килсе тухса, ăна аса илтернĕрен. Хăпартланса çӳретĕрех Серде. Қоля унран нимĕнпе те кая мар. Пĕсехине ытлашши каçăртать пулсан, Қоля мĕнле калаçмаллине пĕлĕ Сердепе.

Нелли хăйне хăй çапла лăплантарса тăнă хушăра инçех те мар çулпа тата тепĕр велосипед килни курăнчĕ. Пассажирлăскер. Пассажирĕ велосипед рулĕнчен çатăртаттарса тытнă та малалла çивĕччĕн пăхса пынă май лавçине темĕн хавассăн каласа кăтартать. Иккĕш те кула-кула ярăççĕ. Оксанăпа Санюк иккен. Багажник çине çĕрулмиллĕ витре çыхса лартнă. Ак ĕнтĕ велосипедсем пĕрин хыççăн тепри килме тытăнчĕç. Колхоза пулăшма тухнă шкул ачисем кăнтăрлахи апата пуçтарăнаççĕ.

Пурте пухăнса çитсен, крушкăсене чей яма, вĕри кĕл ăшĕнчен çĕрулми кăларма пуçларĕç. «Витрере те пĕçерсе пăхар,— теççĕ.— Паçăрах каларăмăр, Нелли итлемерĕ». Нелли çакна илтсен, тутине пăрса, йĕрĕнчĕклĕн кулса илчĕ, анчах та сăмах чĕнмерĕ.

Люся куç илмесĕр Санюкпа Оксанăна сăнать. Оксани лармa-тăма пĕлмест: пĕрне тăвар, теприне çĕçĕ, виççĕмĕшне чей пырса парать. «Çисе пăх-ха ĕнтĕ çак кукăле, мĕнле, тутлă-и? Акă варени, Лиза. Ку хăмла çырли мар, çĕр çырли варенийĕ, кил-ха, хам хыптарам»,— калаçса пурин патне те çитет. Люся ӳмне ешĕл хăяр хурса хăварчĕ.

— Оксана, апельсин юрататăн-и? — ыйтаççĕ хăйĕнчен тантăшĕсем.

— Акă панулми.

— Турăх çисе пăхмастăн-и, Оксана? — теççĕ ачасем.

Оксана пурне те тутанса пăхать, кашни юлташнех кăмăллă тăвать. Юлашкинчен вăл тинех Серде патне таврăнчĕ. Лешĕ темшĕн нимĕн те çимест, пурин çине те куç айĕн пăхса ларать. Нелли, ушкăнран пăрăнса, таçта

аяккалла тинкернĕ пек тăрать, хăй çав-çавах куç хĕррипе Серде çине пăха-пăха илет.

Оксана аллисене саркаласа пăрахрĕ.

— Саня! Вăт тата... Мĕншĕн çиместĕн?

Санюк чĕркуççисене ыталаса тытнă та çерем çинче ларать. Оксана пырсан, пуçне çĕклерĕ. Нимĕн те чĕнмерĕ. Ак ĕнтĕ хĕрача ун патĕнче тăрмашать. Çăмарта шуратса хыптарать, çăкăр касса парать, Санюка пĕчĕк ачана çитернĕ пек çитерет. Апатри халăх савăнăçлăн кулать. Оксана çапла хăтланнăшăн тӳнтерле шухăшлакан никам та çук. Оксанăна пичче, Санюка йăмăк кирлĕ. Хăтланччăрах ĕнтĕ. Çавăнпа вĕренекенсем вĕсене пурте хавас. Санюк та çуталчĕ. Кăштран вăл Оксанăран та тараватрах пулса тăчĕ. Çавнашкал ĕнтĕ Серде кăмăлĕ. Хĕвел пек çиçме те, сасартăк арăш-пирĕш тăвăлланса кайма та пултарать. Ытла та сисĕмлĕ чун çав, чечен чун.

Нелли пуçне ялт! ывăтса, пăркаланса утса иртрĕ, анчах ун çине никам та çаврăнса пăхакан пулмарĕ. Пĕр Люся çеç ăна, лешĕ шĕшкĕсемпе хупланичченех, пăхса юлчĕ. «Ушкăнран йĕрĕнет, ахаллĕн ларĕччĕ те çийĕччĕ халăхпа пĕрле. Эх, Нелли, Нелли. Пĕр Сердешĕн пĕтĕм сын айăплă-им ĕнтĕ? Хăв та кăштах айăплă мар-ши? — Нелли иртенпех нимĕн те çименнине пĕлет Люся.— Каçчен кун вăрăм-ха. Улма кăларасси çăмăлах ĕç мар, Нелли пек çинçе пилĕкшĕн пушшех те йывăр. Чим-ха, чĕнсе пăхас, тен, çикелĕ»,— тесе Люся Нелли кайнă еннелле утрĕ. Юлташĕ аякрах мар иккен. Ыттисенчен уйрăларах ларакан çамрăк çăка çумне сĕвеннĕ те пĕр хускалмасăр тăрать. Вăл Люся пынине те, чĕннине те асăрхаман пек пулчĕ. Шуранка пичĕ тăрăх хăйĕн куççулĕ юхать.

— Суйрăм эп сана, Люся,— терĕ хĕр ĕсĕклесе.— Серде айăплă мар, чун кӳтсе килнĕрен каласа тăкрăм. Лешĕ хăй айăплă. Вăл халь çук, çавăнпа та пĕтĕм тарăху, пĕтĕм çилĕ Санюк çине куçрĕ.

Люся пĕр хушă ним калама аптăрарĕ, тантăшĕн куççульне шăлса типĕтме пикенчĕ.

— Ан макăр ĕнтĕ,— терĕ вăл кăштран, кĕç-вĕçех хăй те йĕрсе ярассăн.— Ак Коля таврăнĕ те... Пулнă-иртнĕ. Манăçĕç.

Нелли, чăнах та, Коля тенине илтсен, лăпланчĕ, кулкалама тытăнчĕ. Коля... Коля вăл йăлтах урăхла сын, Неллине нихçан та кӳрентермĕ. Ых, мĕнле хăравçăсем вĕсем: Серди те, лешĕ малтанхи те...

Çав вăхăтра хĕрсем патне Оксана чупса килни курăнчĕ.

— Нелли, апатсăр юлтăн-çке эсĕ! Çынсем пурте канма выртрĕç, никам та çук, сана валли икĕ панулми, варени пур. Кукăль тата...

Чупса пычĕ те аллинченех çавăтрĕ Неллине.

— Атя. Апат çисен, пĕр сăмах калатăп, çимесен — каламастăп.

Ирĕксĕрех килĕшрĕ Нелли. Çынран ырă мар. Мĕн тейĕн-ха хăвна çăкăр-тăвар сĕнекен уçă чуна, ырă сунакан, тăван йăмăк пек аларан çавăтакан çынна?

Хăйне епле хытă курайманнине сисмест çав Оксана.

...Çĕрулми кăларакан агрегат ырми-канми ĕçлет. Ачасем епле чупса çӳресе пуçтарсан та ĕлкĕреймеççĕ ун хыççăн. Люсьăпа Нелли — иккĕн пĕр витрепе. Пĕшкĕннĕ Нелли, витри тулсан, тӳрленсе тăрать, витре йăтса каякан Люсьăна, ик аллипе те пилĕкне тытса, хыçран пăхса юлать. Апла та Нелли юлташĕнчен ытларах ывăннă. Паранкăсене вăл пĕр аллипе çеç пуçтарать, тепри — пилĕк çинче. Ӳркенсе ĕçлет теме çук ăна. Питĕ тăрăшать, анчах ĕçле пĕлмест. Люся кунĕпе вĕрентсен те, вĕренсе çитеймерĕ.

Сидорова витрене пĕр-пĕччен сĕтĕрнине Санюк каç енне тин асăрхарĕ. Вихтăр Ванине хăлхинчен пăшăлтатса хĕрачасене пулăшма ыйтрĕ. Халĕ ĕнтĕ Ваня витре тулнă-тулман Люсьăпа Нелли патне çитсе тăрать. Пăтавкка пек витрене вăр-вар ярса илет те тап-тап! таплаттарса каять çĕрулми купи патне. Каялла таврăннă чух, те юриех, питĕ лӳпперрĕн килет. Витре хуçисем кăштах сывлăш çавăрса яччăр, тет-ши ĕнтĕ? Санюк çапла хушнă иккен. Настя Казаковăна, Лизăна, Оксанăна Серде хăй пулăшать. Лешсем шăши-тĕр, мĕн-тĕр курса, хыçран йĕрлесе кайсан, витрисене те хăех тултара-тултара лартать. Пĕр самăр шăшие лӳппер Ваня ата кĕллипе пусса вĕлерсен, Лизăпа Оксана макăрма тапратрĕç, Ваньăна вăрçма тытăнчĕç. Ăнлантарчĕ-ăнлантарчĕ лешĕ шăши йăхĕн сиенĕ çинчен, хĕрачасем ăнланма мар, пушшех хытă тапăна пуçларĕç. Ваня тарăхса ал сулчĕ:

— Эх, необразованнăй халăх, кама шеллемеллине, кама шеллемелле маррине пĕлместĕр.

Тепĕр си апат туса илнĕ хыççăн, кĕл улми çийе-çийе тута-çăвар та, пит-куç та хăрăм кăна пулса пĕтсен, нумай та ĕçлеймерĕç, ял енчен сăпкаллă мотоцикл вир-



хӗнсе ҫитрӗ. Хыҫалта бригадир, сӑпкине вуннӑмӗш «А» руководителӗ Владимир Николаевич, руль умне... эй ырӑ турӑ,— Настя Казакова пӗрре хӗрелсе, тепре шуралса кайрӗ,— Сева ларнӑ. Целинара ҫӳрекен Кольӑн пиччӗшӗ. Сассӑр музыка, илтӗнми музыка ҫупӑрлать Настя чӗрине. «Сева, хаклӑ ҫыннӑм...» — пӑшӑлтатрӗ ун тути. Шлемне, куҫлӑхне, алсисене хывса, каччӑ тӳрех Настя патне пырать. Ури тӗпӗсене пружина хурса янӑ пек ҫӑмӑллӑн ҫӗкленсе утать вӑл.

Сева паян ывӑннӑ сӑнлӑ мар. Тен, пур та пулӗ ывӑннӑлӑх, анчах таҫта куҫ тӗпӗнче. Настя тӳсеймерӗ, Севӑна хирӗҫ чупса пычӗ. Лешӗ хӗрачана йӑтса илсе ҫамкинчен чуптурӗ те ҫӗре тӑратрӗ.

Пуринпе те ал тытса тухсан, черет Нелли патне ҫитрӗ.

— Тем паллаймарӑм-ха,— терӗ Сева, сӑнаса пӑхса.

— Нелли.

— Нелли? А-а... Куянова. Аван, аван. Коля мӗн ҫырать?

— Часах киле пыратӑп, тет.

— Питӗ лайӑх.

Нелли хӗрелсе кайрӗ. Сева пӗрре анчах пӑхса илчӗ ӑна, вӑраххӑн, ҫунтарса ярас пек. Ывӑҫ тупанӗ ҫинчи пекех курать пуль Неллине, имӗн те пытараймӑн. Нивушлӗ Коля та ҫакӑн евӗрех вара? Эх, куҫӗсем... епле ҫунаҫҫӗ. Нимӗн те асӑрхаман, туйман пек тыткалать хӑйне, тӗрӗссипе вара чунна ӗнтсе-ҫунтарса илет пӗрре пӑхсах. Нелли хӑрать: нивушлӗ Коля та ҫакӑн пекех шуйттан? Сева ӗнтӗ Настьӑна калаҫтара-калаҫтара Серде енне утать. Оксанӑна, Люсьӑна, Ваньӑна саламлать. Лизӑна, йӑмӑкне, йӑтса илсе ҫупӑрлать.

— Салам, салам, Александр,— тет Санюк патне ҫитсе, аллине хыттӑн чӑмӑртаса та силлесе.

Егоровсем кӳршӗ ялтан. Кунта вӗренме ҫӳреҫҫӗ, Турчкакасси ачисене пурне те тенӗ пек пӗлеҫҫӗ. Сева ҫеҫ, ҫамрӑклах ютра ҫӳренипе, хӑшне-пӗрне астӑваймасть. Сердене вара, Сердене лайӑх пӗлет. Ҫын мӗнлескерри сӑнран пӑхсах паллӑ. Пӗрре курсах туйрӗ Сева Егоров Серде кам иккенне, темиҫе ҫул каялла. Ун чух та вӗсем, хальхи пекех, нумай калаҫмарӗҫ. Испани поэчӗ Федерико Гарсиа Лорка ҫинчен пӗр-ик сӑмах ҫеҫ. «Лорка вӑйӗ — канте хондора, авалхи маврсен фольклорӗнче. Ҫав фольклора поэт хӑй витӗр кӑларса музыка тунӑ»,— тенӗччӗ ун чухне Серде. Сева ҫапла хушса хунӑччӗ:



2016б-433
Чувашская республиканская
библиотека
им. М. Горького

«Вилĕмсĕр музыка, вилĕме кисретекен музыка». Ăнланчĕç вара пĕр-пĕрне. Ăнланчĕç те пĕрне-пĕри яланлăхах хисеплеме пĕр сăмах каламасăр, пуç сĕлтсе илнипех, тупа турĕç. Ак халĕ ĕнтĕ çав Серде каллех Сева умĕнче тăрать...

Хĕвел анăçалла çывхарнăçем вăрмансем тата хытăрах ялкăшаççĕ, синкерлĕн те чаплăн курăнаççĕ.

Сева Настьăпа Неллине тата Лизăна хăй патне мотоцикл çине чĕнет. Мĕн чухлĕ ĕç тунине шута илсе блокнотра палăртсан, уйри ытти ĕçлекенсем те яла таврăнма хатĕрленеççĕ. Мотоцикл тапранса кайнă самантра мăнаçлăн пăхса илет Серде çине Нелли. Серде, Егоров пекех, çынна пĕрре пăхсах витĕр курать. Çилленмест вăл айван Неллине. Айван ачапчана турă каçарать, тенĕ ваттисем.

Оксана та кунтах. Вăл ушкăнран чупса тухса шӳтлесе илме те ĕлкĕрчĕ: сăпкари хĕрсене «астăвăр, тухса ан ӳкĕр», тесе кăшкăрать. Санюкран ыйтать:

— Кам пулчĕ-ха мотоциклисчĕ? — тет.

— Мĕнле калам... Сева Егоров. Коля пиччĕшĕ.

— Нелли кайрĕ.

— Нелли вĕсен чĕрни хурине те тăмасть.

— Саня.

— Мĕн?

— Эсĕ начар çын.

— Начар-и, начар мар-и, анчах та Неллипе ерсе ан çӳре.

— Эгоист эсĕ. Санпа эпĕ ларса та пымастăп акă. Кай ху пĕччен.

Кĕтмен-туман çĕртен каланă сăмахсем Серде чĕрине витĕрех касса кайрĕç.

Санюк, чунĕ тăвăрланнă чух пĕччен пулас тесе, велосипедне Люся Сидоровăна пачĕ те уй урлă тӳрех ялалла утрĕ. Акă ĕнтĕ Оксана та ют уншăн. Ăнланасшăн мар ăна. Епле хытă кӳрентерме пултарать иккен Оксана. Кӳренчĕ Серде, анчах чунран тарăхма та, хĕрачана курайми пулма та хал çитереймерĕ. Килне кĕрсен, йĕкĕт хуларан духовой оркестрлă агитбригада килнине пĕлчĕ. Мĕн тăвас вырсарни каç килте? Концерт курма тухса утрĕ, клубра чи хыçалти рете кĕтесе ларчĕ. Куçĕсем хăйĕн чуна çывăх сăна шыраççĕ пĕрмаях, тупаймаççĕ. Класри хĕрачасем пĕтĕмпех тенĕ пек пур, кĕçĕн классем те йышлăн, Оксана çук. Концерт пуçланасси пĕр минут юлчĕ. Конферансье те сцена çине тухса тăчĕ. Çав вăхăт-

ра сасартӑк алӑк уҫӑлса кайрӗ те Настя, Нелли, Сева, Лиза, Оксана ҫитсе кӗчӗҫ. Нелли бала кайма пуҫтарӑннӑ пек йӑлтӑраса-ҫиҫсе ҫеҫ тӑрать. Тӗксӗм кӑвак бархат платье ҫийӗн хаклӑ йышши чулсем, шӑрҫасем, брошкӑсем ҫакса тултарнӑ. Сылтӑм аллине Японире туса кӑларнӑ магнит сулӑ тӑхӑннӑ. Хӑлха алкисем — ахахмерчен. Вӑрӑм куҫ хӑрпӑкӗсемпе куҫ хупанкки хӗррисене сӑрланипе ахаль те пысӑк куҫӗсем тата пысӑк, хитре курӑнаҫҫӗ. Ҫӳҫӗ хӗрлӗ ӗне ҫӑмӗ тӗслӗ, лӗпки урлӑ ӑна сенкер хӑюпа ҫавӑрттарса ҫыхнӑ. Севӑнаваррине туса, пӗр енчен Нелли, тепӗр енчен Настя ларчӗҫ. Оксана ларма иккӗленсе залра такама шырарӗ. Ҫынни куҫ тӗлне пулмарӗ куран та — Лиза ҫумне майлашса ларчӗ. Серде ытларах сцена ҫине мар, Оксана еннелле пӑхрӗ мӗн концерт пӗтиччченех. Витӗр курӑнакан кӗрен лӗпӗшсем, Оксана ҫивӗтӗсенчен ниепле те аяккалла вӗҫсе каяймасӑр, тӑтӑшах Сердене канӑҫ памарӗҫ. Хӗрача хӗрсех алӑ ҫупать-и, кулать-и е артиста килӗштерменнине кӑтартса кӑшкӑрать-и, Санюкшӑн ҫакӑ пурте питӗ ырӑ. Пӗр каҫ мар, пӗр ӗмӗр пӑхсаларма хатӗр салхуллӑ ача ҫав кӗрен те ҫӑмӑлкка бантсем ҫине.

Кӑштран Серде чунӗ каллех ҫӗткелене пуҫларӗ. Кӳршӗсем хытӑрах калаҫни те тарӑхтарать ӑна, концерчӗ те кичем те вӑрӑм, залӗ те шӑрӑх та тӑвӑр уншӑн. Пӑхса ытараймасть хӑй ҫапах хӗрача ҫивӗчӗсене, ҫав вӑхӑтрах вӗсенчен аяккалла пӑрӑнас туйӑм та пур. Тухса шӑвӗччӗ — ҫынсенчен ырӑ мар, халӑха хисеплемест тейӗҫ. Хисеплес пулать.

Концерт пӗтнӗ-пӗтмен, чӑнах та, часрах киле каяс шутпа, алӑк патне васкарӗ. Крыльца ҫине тухнӑ чух такама пырах ҫапӑнчӗ. Пӑхать: Сева. Каллех юлташа пӗччен пӑрахса хӑварса киле кайма ырӑ мар.

— Уҫӑлма-и? — ыйтрӗ Сева ҫемҫен, Санюк именсе ӳкесрен часрах сӑмах чӗнсе. Серде пӗр вӑхӑта нимех те шарламарӗ.

— Уҫӑлма,— тесе ячӗ вара. Кӑшт калаҫкаласа тӑрсан, Сева кӗтмен-туман ҫӗртен ҫапла каласа хучӗ:

— Шутламан та эпӗ пирӗн Коля ҫавӑн пек маттур хӗрсемпе туслашма пултарать тесе.

— Нелли экстравагантла хӗрача, ҫынни чӑнах та чипер ӗнтӗ.

— Мана темшӗн урӑхларах туйӑнчӗ: кичемрех унпа чух. Ку, паллах, сӑмах май. Коля вӑл хӗрачана пиртен аванрах пӗлет. Пирӗн ӗҫ — хамӑра чыслӑн та лӑпкӑн

тытасси. Дипломатсем пекрех, кăмăл-туйăма ытлашши палăртмасăр.

Йăлтах тĕрĕс. Мĕн калайăн Севăна хирĕçлесе?

Унтан тата çапла хушса хучĕ:

— Дипломат пуласси — манăн ĕмĕт.

Пуçне çĕклесе Санюка тӳрех куçран пăхрĕ. Хăй каланă сăмахсене юлташĕ мĕнле йышăннине витĕрех курчĕ вăл. Куçсенче мĕн пуррине вулама пĕлекен çынсем нумаях мар. Çавăнпа та, тен, дипломат чунлă çынсем те ытлашшиех йышлă мар çĕр çинче.

Вĕсем зала кĕнĕ çĕре оркестрантсем «Татăлнă хĕлĕхсем» янраттарса ячĕç. Яштака та çӳллĕ Сердепе вăтам пӳллĕ тăп-тăп хулçурăмлă Егоров сцена умĕпе танлăн утса иртрĕç. Акă вĕсен патне пырса иккĕн реверанс турĕç те ĕнтĕ. Сева аллине чĕре тĕлне тытса хĕрачасене хисеплесе пуç тайрĕ. Лизăпа Нелли иккен. Сева Неллине илчĕ, Санюк — Лизăна. Сăмах хушма та ĕлкĕрейменччĕ, «Акăш кӳлли» балетри акăшсем пек чечен те çăмăл чӳхенекен хĕрачасем хушшинчен Оксана сăнĕ, çутă кĕрен бантсемлĕ пуç, вĕлтлетсе иртрĕ. Пилĕкĕ тĕлĕнчен хыçалалла хитрен авăнса, хăйпе кам ташланине мансах ушкăнра такама шырать. Çухалчĕ. Каллех килсе тухрĕ. Ак тамаша! Вăкăр пек мăнă Вихтăр Ванине сасартăк пăрахса хăварчĕ те, Санюк патнелле килет. Санюк хĕрелсе кайрĕ. Оксана çывăхрах ĕнтĕ. Хумсен хушшине лекнĕ аманнă акăш тăрăшсах çӳлелле çĕкленесшĕн. Хумсем ăна пĕрре йăлтах хупласа хураççĕ, тепре çиеле хăпартса яраççĕ. Юлашкинчен ирĕке çăлăнса тухрĕ, хавасланн кулса ярса ал çупса илчĕ. Вальсри саккуна пăхăнмаллах. Серде Лизăна тав турĕ те, иккĕш те йăл кулчĕç.

— Ах, чее Оксана, ах, чее,— шӳтлĕн пӳрнепе юнаса илчĕ Лиза. Каллех хавăслă кулă. Оксана Санюкпа вальс ташласа çаврăннă çĕртенех айккинелле уртăнса Лизăна кăчăк туртрĕ. Лешĕ çывăхах пырсан, хăлхинчен темĕн каларĕ. Çакăн хыççăн икĕ çамрăк хĕрача Серде çине вăрттăн пăхса илчĕç, кĕç-вĕç çуйăхса ярасран çăварĕсене аллисемпе хупларĕç.

— Саня,— терĕ Оксана чее сасăпа, кăшт тăрăхларах,— мĕншĕн тухса тартăн-ха эс концерт пĕтнĕ-пĕтменех, мана çилленсе-и?

Мĕн каламалла-ха Серден? Вăл хирĕçнĕ пĕчĕк ача пек тăснă тутине, чĕнмест нимĕн те.

— Ну, Саня. Шыв сыпрăн-и-мĕн?

— Шыв сыпрăм.

— Эппин сыпах.

— Сыпатăп çав. Эгоистсемпе калаçмалла та мар санăн.

— Саня! Эгоист мар эсĕ, Нелли те, эсĕ те, Сева та, Люся, Лиза, Ваня, Настя, пурте, пурте ырă та маттур. Каçар ĕнтĕ, Саня.

— Эсĕ ху та каçар. Апла Севăна эсир хурала тăратнă иккен-ха?

— Вăл хăех тухнă. Ман çине пăхса пĕлнĕ. Эсĕ çĕнĕрен тарасран сана йăмăкĕн аллине кĕртсе ӳкерчĕ. Вăг çапла эпир, маттур, çивĕч ĕçлетпĕр. Пирĕнпе тапăçма хĕнтерех сана.

— Эп тапăçасшăн та мар.

Оксана хăй сăмахĕнчен хăй вăтанса куçĕсене Санюк çинчен илчĕ:

— Юрĕ ĕнтĕ. Сăмаххи урăхрах кирлĕччĕ те...

Серде кăмăлĕ çемçелчĕ. Хавхаланса кайса вальса тĕрлĕ фигурăсемпе, пĕрре юхса, тепре çаврăнса, унтан ярăнса, ташлама пикенчĕ. Оксанăна ăшă пулчĕ, тути кулать, куçĕсем савăнăçлăн çунаççĕ. Акă вăл чăрсăрланса пĕчĕк акăшсен ташшинчен темиçе па туса илчĕ. Серде, пĕр урипе чĕркуçленсе, хĕрачана хăй умне хитрен антарчĕ. Çав самантра кĕвĕ калама чарăнчĕç. Кăштран оркестрантсем «Пĕчĕк акăшсен ташши» пуçларĕç. Залра калама çук кăмăллă та ырă. Пурте чĕререн киленсе итлеççĕ кĕвве...

Севăран пырса систермесĕр хăпмасса курса, Настя Нелли çине сиввĕн пăха-пăха илет: «Ку шăрчăк эпĕ çут тĕнчере пурриие пачах манчĕ пулас? Е шăлнĕ çук чух пиччĕшĕ те юрать, тет-ши?» Настя кĕвĕçмеллипех кĕвĕçе пуçларĕ. Нелли Севăн куçне кĕрсе каяс пек тăрать, унăн кашни хускануне, кашни сăмахне вĕçертмест, анчах каччă çаплах лăпкă та çирĕп. Нелли куçĕсен асамĕ те парăнтараймасть иккен çав лăпкăлăхпа çирĕплĕхе, вĕри те ăслă чĕрери темле сивĕлĕх сыхлать çăмăлттай пуласран çак ачана. Ун пек сивĕлĕх кашнинех çук. Çавăнпах пуль ĕнтĕ кашни çынах дипломат пулма та ĕмĕтленмест. Сева та паçăрах асăрханă Настя пăлханнине. Хĕр çине вăл икĕ хутчен ĕнтĕ куç ывăтрĕ. Малтанхи хутĕнче асăрхамарĕ лешĕ, тепрехинче асăрхарĕ, ăнланчĕ. Хирĕç кăшт çеç пуç сĕлтсе илчĕ те Санюкпа Оксана çумне кайса тăчĕ.

— Мĕн пĕчченех эс, Настя?

— Ман «дипломатически корпус» «ют çĕршыва» тух-

са кайрĕ,— хуравларĕ хăй куляннине палăртмасăр Настя,— Куян çĕршывне.

Сердепе Оксана кăн-кан! пăхрĕç.

— Акă сана боевой задани, Оксана,— хăвăрт тавçăрса илчĕ Санюк, хăлхинчен тем каларĕ.

Пĕр минутран яштака Оксана Сева умне çитсе те тăчĕ.

Çакă питĕ кĕтмен çĕртен пулнипе Нелли çухалса кайса ушкăнра такама шырама пуçларĕ.

— Лиза, кил кунтарах,— чĕнчĕ вăл тантăшĕсемпе пĕрле чĕвĕлтетекен хĕрачана.

Нелли каллех пĕччен юлчĕ. Пăрăнчĕç унран, хисеплемен пек ан пултăр тесе юлташа Лизăна хăварчĕç. Мĕн калаçма пĕлтĕр-ха вăл унпа лешĕ пуканелле выляма та ĕнер çеç пăрахнă иккен те.

Курайманлăх туйăмĕ пушшех те асса кайрĕ çак чаплă, анчах никам та ытлашшиех юп курман хĕрĕн. Оксанине, Оксанине мĕне кирлĕччĕ-ши тата хутшăнса çӳреме. Нелли чĕри вуниккĕлле тапать, пуçĕ çивĕч те тĕрĕс ĕçлет.

— Тавăрас,— тет шалти сасă,— Оксанине те, Сердине те...

Вихтăр Вани куç тĕлне пулах кайрĕ.

— Ваня, эй, Ваня!

Вăкăр пек тĕреклĕ те лӳппер ача Нелли патне таплаттарса пычĕ.

— Эпĕ.

— Ваня, сана тав тума та маннă паянхишĕн. Пысăк спасибо, Ваня, пире эсĕ хытă пулăшрăн.

— Куншăн мана мар, Сердене тавтапуç каламалла. Çав хушрĕ.

— Çапах та эсĕ пулăшрăн вĕт, Серде мар, Люся та лайăх ача, тет сана. Мĕншĕн ташламастăн?

— Оксана пăрахса тарчĕ.

— Оксана? Подумаешь, Оксана... Фу, сан пек пулсан, эпĕ ун пеккисем патне пырса çулăхмастăп. Нимĕн те пĕлместĕн çав эс ун çинчен... Ну, чĕнетĕп.

Нелли сулахай аллине ачашшăн Ваня хулпуççийĕ çине хучĕ. Хитрен авăнса илсе ачана куçран пăхма пуçларĕ. Лешĕ, епле лӳппер пулсан та,именчĕ, куçне тартрĕ, кĕвĕ майĕпе хăюсăррăн шуçса çӳрерĕ.

— Эс çапла çăмăл ташланине пуçласа куратăп, Ваня.

— Çăмăлĕ-мĕнĕ ĕнтĕ.

— Ой, ҫитет чухӑнлансӑ калаҫма, чӑнах тӑ...
— Оксана тарчӗ авӑ.
— Оксана. Мӗн вӑл Оксана... Хытхура. Куҫӗпе сӑмси ҫеҫ тӑрса юлнӑ ӗнтӗ, веҫ типсе кайнӑ,— Нелли сасартӑк пӑшӑлтатса калаҫма тытӑнчӗ: — Паян мана ӑсатма пыратӑн-и, Владимир Николаевичсен Улайккинчен питӗ те хӑратӑп?.. Вара Оксана мӗншӗн типсе кайнине те пӗлӗн.
Нелли ҫӳҫӗнчен духи шӑрши кӗрет. Вӑкӑр пек капмар курӑнсан та ҫирӗпех мар иккен Вихтӑр Вани. Ун ҫанҫурӑмӗ вӗриленсе, пуҫӗ ҫаврӑнса кайрӗ. Ҫакна сиссе, Нелли ӑна урама чӗнчӗ. Каччӑ хӗр ҫумӗнче тӗлӗкри пек пырать. Калаҫтарать, калаҫтарать ӑна Нелли. Владимир Николаевичсен умӗпе те иртрӗҫ ӗнтӗ. Улайкка пӗр виҫӗ хутчен хамлатса илчӗ те урӑх шарламарӗ. Леш касра ҫеҫ йытӑсем каҫса кайсах вӗреҫҫӗ, ула-ула яраҫҫӗ. Хапха тӗлне ҫитсен, Нелли аллине, паҫӑрхи пек, Вихтӑр Вани хулпуҫҫийӗ ҫине хурса:
— Ваня, кала-ха, эсӗ чӑнах та никампа та ҫӳресе курман-и хальччен? — тесе ыйтрӗ ҫепӗҫҫӗн. Сиссе те юлаймарӗ лӳппер йӗкӗт, хӑйне хӑй пӗлми пулчӗ, хӗре чуптума пуҫларӗ. Нелли чарӑнма ыйтса тархасланӑ пек тӑвать, «не надо» текелесе илет, хӑй вара сӗлӗх пекех ҫыпҫӑнса ларнӑ ун ҫумне. «Кунта ҫын ҫӳрет, атя пӳрте»,— тет тути. Шашулккине шаклаттарса уҫса шала кӗчӗҫ. Хӑй ҫутмарӗҫ. Тӗттӗмрех пӑшӑлтатса калаҫса ларчӗҫ.
— Ыран килетӗн-и? — ыйтать Нелли тӗттӗмре куҫне йӑлтӑртаттарса. Ваня аран илтӗнмелле калаҫать:
— Килетӗп, анчах эс манран ан кул, юрать-и?
— Кулмӑп, кулмӑп. Сан вара куласах пулать хӑшпӗрисенчен. Сердепе Оксана ҫинчен ят сарас пулать. Тӗплӗн, ӗненмерсе. Манпа Серде пирки те калама пултаратӑн.
Нелли сассине ҫемҫетрӗ, ахӑлтатса кулса ячӗ.
— Турӑҫӑм, ҫак ҫула ҫитнӗ, хӗр мӗн иккенне пӗлместӗн, арҫын кӗлетки!
— Эп эс кун пек пуль темен.
— Ҫавӑн пек ҫав. Ну, кил ӗнтӗ, мӗнрен хӑратӑн?
— Хӑрамастӑп эпӗ, юрататӑп.
— Кама?
— Сана.
— Во! Питӗ лайӑх. Эпӗ хам та сана юратма пуҫларӑм. Кил ӗнтӗ ҫывӑхарах.

— Юратнă çынпа кун пек хăтланни аван мар. Ытла харсăр эсĕ, Нелли.

— Эсĕ ытла йăваш.

Нелли кĕпе вĕççĕнех тухрĕ Ваньăна ăсатма. Çÿçенкелесе çĕнĕ тусĕ çумне йăпшăнчĕ.

— Ыран ĕçÿсене туса пĕтерсенех çит, юрать-и? Эпĕ клуба тухмастăп. Çурта çынсăр хăварма юрамасть, пушар-мĕн тухас пур. Анне — Крымра... Ну, юрĕ, чипер...

Леш касра çаплах йытăсем вĕреççĕ, уласа, нăйкăшанăйкăша.

## 4

Цыфаркин, тепĕр майлă каласан Карас, чĕрне вĕççĕн тăра-тăра доска çине уравненисем çырать. Хытă карăннипе брюкийĕ анать те, пурăллă аллипе тăтăшах туртатурта хăпартать ăна шакла пуçлă преподаватель. Класри ачасем доска çине пăхмаççĕ, кам мĕн пĕлет, çавăнпа аппаланать. Юратман преподаватель урокĕнче хăшĕсем намăса пĕлмесĕр печени çисе лараççĕ, теприсем ял çинче çÿрекен тĕрлĕ сăмах-юмаха сÿтсе яваççĕ, виççĕмĕшĕсем сас-чÿ кăлармасăр, хăлхисене хупласа, илемлĕ литература вулаççĕ. Камит кăтартакан та, записка çыракан та пур. Сывлăшра йăр та яр, çăлтăрсем пек, выляса çÿреççĕ запискăсем. Акă пĕри Карасăн çутă пуçне çат! çапăнчĕ суккăр пăван пек. Хавхаланса икс, игрек çыраканскер, чăкăлтăш та кутăн Карас хыçалалла çаврăнчĕ. Класс шыв сыпнă пекех шăп. Кайри партăра çеç пĕри чăхăлтатса кулса илчĕ. Карас хут чăмăрккине саркаласа малтан куçлăх витĕр, унтан куçлăхне çамки çине хăпартса лартса тинкерчĕ.

— А-ă... кхм. Хитре уравнени ку, çамрăк çыннăмсем: Серде+Куянова=Кхм... Хăшĕ кунта неизвестнăйĕ?

Цыфаркин пуçне сĕклесе класс çине хаяррăн пăхрĕ.

— Хулиганить тăватăр, значит! Мĕн ку? Саботаж? Обструкци? Серде Александр, встать! Куянова Нелли! То есть... Всем встать!

Кăвакарса кайса çухăрать Карас. Пĕтĕм класс Сердепе Нелли енне пуçĕсене çавăрать. Серде — хăмач тĕслĕ. Сăмах та чĕнеймест. Хыçалтан такамăн мăн сасси илтĕнчĕ.

— Куянова Нелли темелле пулман унта, Кузнецова Оксана темелле пулнă. Нелли ятне ярас шухăшпа çырнă Серде ку формулăна.

Карас калаçаканăн сăнне курасшăн ретсем хушшине васкарĕ.

— Аха, Викторов. Эсĕ куртăн эппин?

— Куртăм, Серде çырчĕ.

Çакна илтсен, Вихтăр Вани çумĕнчи Настя Казакова тарăхса кăшкăрса ячĕ.

— Ну и намăссăр та эсĕ, Ваня! Куçкĕрет суятăн. Çапла каласа, Настя запискăпа сулкалакан Карас патне шак-шак-шак! утса пычĕ, хут татăкĕ çине мĕн çырнине хăйĕн куçĕпе пăхса илесшĕн пулчĕ. Аллине çеç тăснăччĕ, хĕремесленсе кайнă Нелли запискăна карт! туртса илчĕ, чăр-чар! чĕрсе, вĕтĕ-вĕтĕ татăксем туса сапаласа ячĕ, уласа макăрса класран тухма васкарĕ.

Кăштран класс алăкĕ яри уçăлчĕ те малтан Нелли, ун хыççăн Владимир Николаевич килни курăнчĕ.

— Акă вăл, Серде, мĕн тăвать! Йĕксĕк чун! Сергей Кондратьич, каласа кăтарт — мĕн хăтланать Серде!

Нелли пĕрре Цыфаркин патне пырса ун аллисенчен тытать, чунран татăлса тархасланă пек курăнать, тепре Владимир Николаевич умне пырса питне лешĕн кăкăрĕ çине чиксе ĕсĕклет. Юлашкинчен Санюк çине çисе ярас пек пăхса кăшкăрать:

— Ну-ка, кала-ха, йĕксĕк, эпĕ хам сана мăйунтан çакăнтăм-и? Е эс ху менелник каç алăсене пăра-пăра... Пĕр çул йĕрлесе çӳрерĕн, паккăç. Халь кăмăлу тулчĕ-и ĕнтĕ!

Каллех уласа ячĕ. Сердене питĕнчен çат! та çат! тутарать лакпа сăрланă чĕрнеллĕ аллипе. Класс çил-тăвăл пек кĕрлеме тапратрĕ. Неллине çавăтса кайса шыв ĕçтерчĕç.

Вĕренекенсем те, Владимир Николаевичпа Цыфаркин та кун пек лару-тăрура пулсах курман-тăр çав. Нимле мар пăхкалаççĕ. Класс кĕрлесен-кĕрлесен, сĕтел патне Коля Егоров Целинаран киличчен ун вырăнне комсорга юлнă Люся Сидорова тухса тăчĕ.

— Лăпланăр! Лăпланăр, тетĕп! — чăмăрĕпе пур вăйран шанн! çапрĕ сĕтеле.— Ята çĕртетпĕр вĕт капла, хамăр ята та, шкул ятне те! Ирĕк парăр мана çăвар уçма!

Класс тепре сĕрр! сĕрлесе илчĕ те шăп пулчĕ.

— Çакăн пек тăвăпăр,— терĕ малалла Люся.— Çапла тăвăпăр... Чăн малтанхи ыйту: запискăна кам çырнине тупас. Настя, халех урайĕнчи хут татăкĕсене шăлса пуçтар. Кам ывăтса янине пĕлер. Ыттине комитетра педсоветпа пĕрле татса парăпăр... Нелли, санăн та ларса

пуç тавра шухăшлас пулать. Тĕрĕс калатăп-и, халăх?

— Тĕрĕс, тĕрĕс!

— Эс пирĕн яланах маттур, Люся.

Класс руководителĕпе Цыфаркин та Люсьăпа килĕшсе пуç сĕлтрĕç.

— Педсовет кирлĕ мар, хамăрах вĕçне-хĕрне тупăпăр,— кăна Настя Қазакова каларĕ. Хыçалтан каллех Вихтăр Ванин хулăн сасси илтĕнчĕ:

— Саккăрмĕш класри Кузнецова Оксанăн та ларса пуçĕ тавра шухăшлас пулать!

Класра — çĕнĕрен асар-писер тăвăл. Шартах сикрĕ Серде, шап-шурă шурса кайрĕ. Ваня патне çирĕппĕн утса пычĕ те вăйлă аллисемпе вăкăр пек кӳлепеллĕ элекçе парта хушшинчен туртса кăларчĕ, пуçпа лешĕн янахĕнчен шалтлаттарса урайне кĕрс! çĕклесе çапрĕ, йăтса тăратса енчен-енне çупа-çупа яма пуçларĕ. Пĕр хулĕнчен Владимир Николаевич, тепринчен Цыфаркин çакăнсан çеç, Ваньăна хĕрачасем айккинелле çавăтса кайрĕç. Серде, йывăррăн сывласа, тарне шăлма Люсьăран тутăр ыйтрĕ, пĕр курка шыва ланкăртаттарса ĕçсе ячĕ. Унтан йăлтах лăпланса:

— Оксана çинчен тата хăшĕ çур усал сăмах калать— вĕлеретĕп,— терĕ шăл витĕр, Ваньăна илсе тухнă енне куç айĕн пăхса. Сумкине хул хушшине хĕстерчĕ.

Уроксем аран-аран пĕтрĕç паян. Юлашки звонок. Ак ĕнтĕ Серде каллех хăй юратнă аллейăпа утрĕ. Васкамасăр. Çӳллĕ те яштака каччă. Нимĕн те улшăнман пек ун сăнĕнче, çав пысăк, тарăн куçсемех, турпаллийĕ те ĕлĕкхи вырăнтах, куç харши те, тути те ĕлĕкхи пекех. Çапах та темле улшăну пурах иккен, сăнаса пăхсан, ун сăнĕнче: тарăн шухăш. Ĕлĕк вăл çукчĕ. Ĕлĕк хĕрача сăн-питлĕскер, Серде халь ĕнтĕ çитĕнсе çитнĕ сăнлă. Сулахай хулпуççи урлă плащне пуçтарса çакнă, хул хушшинче сумка, аллисене йĕм кĕсйине чикнĕ. Шăппăн утать Серде. Нимле асар-писер камит те, кӳрентерӳ те, элек те пулман тейĕн. Темшĕн ытла та тӳлек, ытла та лăпкă чунлă пулса тăчĕ. Вутлăн-тăвăллăн килсе капланнă çилли таçта кайса çухалнă, йĕрĕ те юлман.

Паян кунччен Серде хăйне темле урăхрах йĕрпе пынă пек туятчĕ, темĕн çитмен пек, темĕн ытлашши пек. Çавна пула кăшт кăна иккĕленӳ, пăшăрхану пурччĕ. Паян йăлтах вырăнне ларчĕ чунĕ, нимĕнле йывăрлăхран та хăраманлăх пур унта, вăй, теветкеллĕх... çав самантрах çирĕп лăпкăлăх. Куç умне сасартăк Нелли сă-

нарĕ тухрĕ. Алчăраса кайнипе хĕрĕн илемлĕ куçĕсем ухмахла пăхаççĕ. Ĕсĕклесе макăрнипе сăмси йĕп-йĕпе, яштака пĕвĕ хутланса кĕнĕ. Серде Неллине калама çук хытă хĕрхенсе кайрĕ, чĕрине темĕн хĕссе лартрĕ. Хаяррăн элеклемен те Нелли Санюка, Серденех айăпласа питĕнчен те çупа-çупа яман, паян нимле мыскара та пулман, малашне те нимĕнле сăмах та, нимĕнле инкек те кĕтмест. Йăлтах манчĕ Санюк. Пĕр шухăш, пĕр ыйту çеç ун пуçĕнче: «Мĕн пулнă сана, Нелли, мĕне пула çапла ытла та çамрăкла татăлса йĕрет чуну? Кам амантнă ăна, кам çапса çĕмĕрсе таптанă? Мĕншĕн çавăн чул хаярлăх санăн? Мĕнле пулăшмалла сана?»

Унтан Оксана сăнарĕ килсе тухрĕ. Пысăк та ăслă куçсем пăхаççĕ Санюк çине. «Саня,— тет Оксана,— Неллин чунĕ вутра çунать, кĕл пулса вĕçет, сивĕ çумăрсем çăваççĕ ун çине, аманнă акăш вăл, ӳке-ӳке çапăнать, пулăшас пулать Неллине. Қаçарас, йăпатас пулать, пурнăç çулĕ çине хамăрпа пĕрле илесчĕ». Оксана хăй аманнă акăш пулса Неллин чун-чĕри епле ӳке-ӳке çĕр çумне çапăннине, çӳлелле çĕкленесшĕн тилмĕрнине кăтартса парать. Айăплăн пăхать, куç умĕнчен хуллен шуса иртет. «Юрать, юрать, Оксана, ăнланатăп,— тет Санюк хĕрача сăнарне каллех куç умне ӳкерсе,— хăв пĕчĕкçеççĕ те, чĕрӳпе мĕн тери пысăк иккен эс, мĕн тери аслă. Ан кулян, кĕмĕл тĕпренчĕкĕм, çутă çăлтăрăм. Ан кулян, хĕвелĕм...»

«Қольăпах пулсан, телейне тупĕччĕ Нелли»,— тет юмахлăрах шухăшласа пынă çĕртен чăнлăха таврăнса Серде. Куç умне Люся Сидорова, Настя Казакова, Севăпа Қоля Егоровсем киле-киле тухаççĕ. Хăваласа яма май çук шухăш Санюк пуçĕнче. Мĕн тери маттур, чĕрене сывăх çынсем иккен унăн юлташĕсем...

## 6

Кулленхи пурнăçра вăхăт иртнине сиссе те юлма çук. Вăхăт иртнĕ май, унччен пулнă ĕç майĕпен манăçса пырать, ун вырăнне çĕнĕрен-çĕнни сике-сике тухать.

Шкулта, вуннăмĕш «А» класра, математика урокĕнче тухнă шăв-шава, çав «ырă мар инцидента», вĕренекенсем хăйсем те, класс руководителĕ Владимир Николаевичпа Цыфаркин та, çынни ку питĕ лăпкă марскер пулин те, айккине сармарĕç. «Қласс ятне çĕртесси — самант, ырă ята каялла тавăрасси — час мар»,— терĕç

пулас пурте. Лăпланса çитсе куççульне типĕтсен, Нелли те туйса илчĕ: «Крымран таврăнсан анне мĕн калĕ? Преподаватель хĕрĕ, хăй дисциплина енĕпе тĕслĕх кăтартас вырăнне, ав мĕн хăтланнă, тейĕ; ӳпкелешсе макăрма пуçлĕ,— шухăшларĕ вăл пăшăрханса.— Чĕре хушнă хыççăн кайса таçта та çитсе тăрăнма пулать, халь текех ача мар ĕнтĕ, часах аттестат илме вăхăт çитет, малашне ытларах чĕрене мар, пуç мĕн каланине итлесчĕ».

Нелли çакăн пек шутласси патне пырса тухни ăна кайран телей çулĕ çине кăларчĕ. Хăйне хăй çĕнме вăйхал çитерсе, хăйне çĕнĕ çулпа яма пултарнишĕн вăл кайран шăпине нумай тав турĕ, тĕнчене çĕнĕрен çуралнă пекех туйма пуçларĕ. Шутлать те тĕлĕнет вăл: ĕненме те май çук, Сердене хытă хисепленипех ăна элек айне тума хăтланчĕ, çавăнпах хăйне чыслăн тытма, хĕрупраç тивĕçне çын умĕнче «çӳлти шайра» усрама вĕренчĕ. Суя мăнаçлăх мар, чăн-чăн мăнаçлăх илешрĕ ун чунне, çак майпа Нелли тарăнрах та инçерех куракан пулчĕ. Çапла вара, мĕн тӳссе ирттерни усса кайрĕ, характера çĕнелсе çирĕпленме пулăшрĕ. Хĕр халь Коля Егоров Казахстанран таврăнасса ырми-канми кĕтет, сĕтел сунтăхĕнчен çырăвĕсене кăлара-кăлара вулать, Кольăн машшин умĕнче ӳкнĕ сăнне сĕтел çине рамкăна чиксе лартрĕ. Амăшĕ çуккипе кил-çуртне пĕчченех пуçтарма тивет; çурт пуçтарса пĕтерсен, уроксем хатĕрлемелле.

Шкулта çав пăтăрмах пулнă куннех, каçхине, Вихтăр Вани Неллисен кантăкĕнчен пырса шаккарĕ, улаха кĕртме ыйтрĕ. Айванскер, хăй тунă йĕксĕкле ĕçшĕн, Сердене, таса çыннах, вараласа элекленĕшĕн тав сăмахĕ илтме ĕмĕтленсе, Нелли ăна çакăн хыççăн тата хытăрах юратма пуçласса шанса шакăртаттарчĕ кантăкран.

Нелли Ваньăна тав туса мухтама мар, пӳрте те кĕртмерĕ. «Çитет, алхасрăмăр, комедие вĕçлеме вăхăт,— терĕ алăк урлă, лешĕ унта пырса тăрсан.— Эп сана юратман та, юратмастăп та, хăвăн пек йĕксĕк сутăнчăксене, мемме пăрусене шыра».

Çак сăмахсене илтсен, Ваня, йăваш та хăравçă пулнине пăхмасăрах, алăка вăйлăн силлесе лăкама тапратрĕ. Нелли тата хытăрах çилленчĕ:

— Лайăх чух кай, Сердене каласа парса тепре ислеттеретĕп,— кăшкăрса каларĕ вăл.

— Кирлех пуль эс Сердене, мунчала ланчашки.

— Санран вăл ыран чӳпĕк тăвать.

— Сутăнчăк.

— Эсĕ тăмана.

— Эсĕ чарусăрскер.

— Вăл сан ĕç мар. Коля Егоров килсен, сана ку сăмахсемшĕн хытă лекет-ха.

— Асту, Коля сан пек ухмах тет.

— Кай, палкаса ан тăр, эпĕ çывăрма выртатăп.

«Кайран ӳкĕнмелле ан пултăр» тесе, тата темĕн мăкăртата-мăкăртата, Вихтăр Вани килнелле утрĕ, çакăн хыççăн Неллине курсан аякранах пăрăнакан пулчĕ. Нелли вара вăл çапла хăтланнăшăн савăнать çеç.

Уйăх пĕтнĕ тĕле Крымран, сывлăхне юсама тата канма кайнăскер, амăшĕ килсе çитрĕ. Зоя Филипповна, унччен шуранка та начаркка çын, туллиленсе, çамрăкланса таврăннă. Тем сăлтавпа, нихçанхинчен те хавaслă хăй, телейлĕ тесен те юрать. Савăнăçне хĕрĕнчен пытарас темерĕ:

— Аçу тупăнчĕ,— Неллине шалт тĕлĕнтерсе пĕлтерчĕ вăл.— Крымра пурнать. Инвалид. Пенси илет.

— Эсĕ ăна инженер-геолог теместĕнччĕ-и-ха?

— Унтанпа вунсакăр çула яхăн иртнĕ. Тусем хушшине экспедицине кайсан, вăл чул хысакран татăлса аннă. Халĕ — хăрахураллă, пуçĕ кăштах чĕтрет. Инкек хыççăнах арăмĕ пăрахнă та, çавăнтанпа пĕчченех. Урăх авланас темен. Ачи-пăчи те çук. Ялтăра ятлă çын вăл: часчасах лекцисем вулать, пичетре наукăллă статьясем кăларать. Пирĕн корпуса тĕнчери лару-тăру çинчен лекци иртterme пынă та, çавăнта ăнсăртран палласа илтĕм. Çӳçĕ шуралнă ĕнтĕ, куçлăх тăхăнать. Ватă енне кайнă. Манран вунтăват çул аслă вĕт вăл, аллăсенче. Эпĕ пырса ятран чĕнсен, тӳрех палларĕ: «Эсир Зоя ятлă вĕт, чăваш?» — тет.— «Зоя»,— тетĕп. «Ну, каласа кăтарт, хĕр-и, ывăл-и?» — «Хĕр». «Вĕренет-и?» — «Вĕренет. Вуннăмĕш класра. Ача чух текех: атте ăçта, хăçан килет, тесе ыйтатчĕ те, халĕ ыйтма пăрахрĕ». «Эпĕ унта пырас пулсан, йышăнĕ-ши мана хăй ашшĕ вырăнне?» Сăмах хыççăн сăмах, калаçăвăн вĕçĕ те пулмарĕ. Килсе курас тет-ха та. Мĕнле, ирĕк парар-и килме?

— Анне, ыйтса тăратăн тата! Атте, ман тăван атте! Мĕнле халăх çынни вăл, чăвашах-и?

— Çук, азербайджан.

— Апла эпĕ те çурри азербайджан çынни пуль?

— Çапла.

— Халех çырса ярас, килтĕр.

Неллин юлашки сăмахĕсем Зоя Филипповнăна, пуш-

шех те çунатлантарса, çěнě вăй-хал пачěç. Вăхăтсăр ватăлма пуçланăскер, вăл халě пуçне çӳле çěклесе, кěлеткине тӳп-тӳрě тытса çӳрекен пулчě, шкула ěçе унччен пек ялан пěр тумпа мар, куллен урăх тумпа, нихçанхинчен шукăль çӳрет. «Чуна кайăкпа танлаштарас пулсан, хăшěнпе танлаштарас паян? — хăйěнчен хăй ыйтать Зоя Филипповна.— Вутра çунса кăмрăкланнăскер, каллех чăн тӳпене вěçсе çěкленчě вăл, каллех юрлать, каллех çунат çапать; чим-ха, авалхи грексен пěр легенди пур: темле кайăк, фениксчě пулас, çулленех çунса кěлленекенскер, çуркунне кěлрен чěрěлсе тăрать. Тăнлавра шур пěрчěсем палăра пуçласан, ман тěллěн те çуркунне çитрě...»

Кăмăлě улшăнни Неллине те çěнетрě, терěмěр ěнтě. Санюкран каçару ыйтас шухăш çав каçах, шкултан таврăнсан, пырса кěчě ун пуçне, çилли иртсех пěтменнипе кайрана хăварчě. Серди: каллех мěскěнленет, каллех йăпăлтатма хăтланать, тесрен те шикленчě хěр. Хăй çапах ăна кулленех шăппăн сывлăх сунса иртет. Пěрре аранах коридорта тытса чарчě те куçěнчен тархасласа пăхса каçару ыйтрě:

— Саня, кашни çынах йăнăшма пултарать, каçар ěнтě.

Лешě ăнланманçи турě, йăл кулса илчě те:

— Мěн урлă каçармалла? — терě.

— Айăпăма каçар.

— Мěнле айăпа кěнě вара эсě?

— Сана элекпе варлас тенě эпě.

— Эсě-и?

— Эпě çав.

— Пулман пуль ун пекки. Пулнах пулсан, каçарас.

— Тавтапуçах сана, чун тинех çăмăлланса кайрě.

— Хăвна та тавах, хам та тěк пекех çăмăллантăм. Урăх вăрçмăпăр, юрать-и?

— Юрать.

— Киле пěрле кайăпăр, юрать-и?

— Юрать.

— Оксанăна кěтсе тăрăпăр.

— Юрать.

— Каçпа сирěн пата пырăпăр.

— Юрать.

— Физикăпа задачăсем шутлăпăр.

— Юрать, юрать, юрать!

— Эп санран математикăпа сăптăрса илěп, юрать-и?



— Юрать, Саня, юрать. Ытла та аван çын çав эсӗ.

— Коля Егоров нумай хут аванрах.

— Çук, Коля та, эсӗ те, иксӗр те питӗ лайӑх çынсем.

— Ай! Ан мухта, пуç çаврӑнса кайрӗ, ӳкетӗп!

Санюк, чӑнах та ӳкнӗ пек туса, тайӑлчӗ, тайӑлчӗ... тытӑнса юлаймарӗ, персех анчӗ. Неллипе иккӗшӗ те хыттӑн ахӑлтатса кулнине илтсе, ыттисем чупса пычӗç: хӗрача Санюка алӑ парса урайӗнчен тӑма пулӑшнине çӑварӗсене карса пӑхса тӑраççӗ.

— Камитсем,— мӑкӑртатрӗ хыçаларахри Вихтӑр Вани,— ниепле ӑнланса илме май çук этемсем.

— Мӗн ӑнланмалла марри? — татса хучӗ ӑна Люся Сидорова.— Çынсем мирлешнӗшӗн савӑнас пулать санӑн, эсӗ ӑнланмана персе тӑратӑн...

Настя Казакова чупса çитрӗ:

— Тӑвансем, полундра! Цыфаркин варӗ ыратнипе урокне ырана хӑварчӗ, ыран çич сехет ларма тивет!

— У-у-у!

— Контроллӗ ӗç тӑватӑп, тет.

— Ай!

— Кӗнекерен те пӑхса илме юрать, тет.

— Ихи-хи, ха-ха-ха!

Вара пурте класа кĕпĕрленсе кĕчĕç. Сумккисене, çиелти тумĕсене ярса илсе унтан çиçĕм пек хăвăрт тухса çухалчĕç. Серде юратнă аллейăпа Люся Сидорова, Настя Казакова, Нелли Куянова, Санюк, ытти каччăсемпе хĕрсем аллисене сулкала-сулкала, кула-кула, калаçа-калаçа утрĕç. Пĕри кăна, Вихтăр Вани, вĕсемпе мар, хыçалтан йăраланса пычĕ, хăй Люся Сидоровăна шутсăр кăмăлласа пăрахни, лешĕн халлĕхе нимле савни те çукки пирки савăнса шухăшларĕ. Тепĕр тесен, мĕнрен кая Люся Неллинчен? Тен, лайăхрах та... Шоссене тухаспа ушкăна Оксанăпа Лиза хуса çитрĕç, вĕсен паян та пилĕк урок çеç пулнă-мĕн, эрнере иккĕ пилĕк урок пулать тет.

Шкултан таврăнсан, Нелли халь кулленех çыру сĕтелĕ патне пырать, «газик» çумне таяннă Коля Егорова темччен сăнать, ӳкерчĕке тĕрлĕ май çавра-çавра пăхать. Коли вара, хăйне хăш май çавăрсан та, пĕр пекех уççăн та кăмăллăн кулать. Çара пуçăнах вăл, çӳçне лупас пек ӳстерсе янă, пичĕ çилпе те хĕвелпе хуралсах ларнă, куçĕсем çеç çап-çутă, хĕвеллĕн йăлкăшаççĕ. Шакмаклă-шакмаклă кĕпине брюки ăшне чикнĕ, ярханах, çаннисене тавăрнă. Нелли сăнӳкерчĕке: «Хăçан килен?» — тет те çамкинчен чуптуса илсе сĕтел çине лартать. Лешĕ çаплах хавассăн кулать, уçă куллипе Неллин чĕрине ăшăтать. Кашнинчех тенĕ пек, Нелли, çиелти тумне хывма мансах, шкултан мĕнле килнĕ çаплипех, Коля çырăвĕсене пĕрин хыççăн тепĕрне вулама пуçлать. Хĕре пуринчен ытла каччă Целинара тухакан хаçатран касса илсе ярса панă пĕр самаях пысăк тĕрленчĕк савăнтарать, чунне мăнаçлăхпа тултарать. Тĕрленчĕкĕнче Коля Егоров шоферăн паттăрла ĕçĕ çинчен çырнă. Унăн Коли çинчен. Мĕнле савăнмăн-ха çавăн пек юлташшăн, епле мухтанмăн-ха унпа, вăл санăн савнийӳ пулсассăн? «Вута çĕнтерни» тесе ят панă Целина журналисчĕ хăйĕн материалне. Малтан вăл унта Коля ĕçлекен совхозра тулă йăтăнса пулни, кăçалхи çул çанталăк йĕпе тănипе комбайнсене мĕн тери йывăр килни çинчен калаnă. Тырри те хӳме пек çӳллĕ, хăватлă, çумăрĕ те лӳшкесех тăрать. Моторсем нăйкăшаççĕ, йĕреççĕ темелле, комбайнсене калама çук хуллен пыма тӳр килет, вунă-вунпилĕк метртан бункер тулса ларать. Шоферсем çĕрĕн те кунĕн ырми-канми ĕçлеççĕ, элеватора талăкне ултçĕр тонна яхăн тырă пырать, кашни комбайнер тăхăрçĕр центнер вырса

çапать. Уй-хир ĕçченĕсене çумăр кăна мар, вут-кăвар та чылай сиен кӳрет иккен. Океан пек хумханса выртакан тырра-пулла аçа çапни те пĕрре мар пулнă. Ансăртран сиксе тухнă çавнашкал инкеке çакланнă та Кольăпа унăн юлташĕсем. Пĕррехинче Коля «газикĕ» çултан пăраннă та комбайн патнелле васканă. Çав хушăра таçтан сасартăк килсе тухнă асар-писер пĕлĕт татăкĕ, хура та килпетсĕрскер, аялтанах иртсе кайнă. Кабинăри Коля та, çывăхрах пыракан комбайн çинчи каччă та ăна тĕлĕнсе пăхса юлнă. Тепĕр пĕлĕчĕ тата аяларахран, тата хăвăртрах шуса иртнĕ. Янкăр тăрă тӳпе сăрă тĕслĕ пулса тăнă. Самантрах мĕн тери улшăнса кайнă çанталăк! Вара çывăхрах аçа çапнă. Куçа шартаракан çиçĕм йывăç пек туратланса тулă пуссине комбайнран инçе те мар хыпаласа пăхнă, комбайн патнех çитеймен. Тулă пуссин хушшинчен аран палăракан çулăм пурçăн явлăк пек вĕлкĕшсе илнĕ. Вĕлкĕшсе илнĕ те çухалнă, пытаннă тейĕн.

— Тулла вут хыпрĕ! — кабининчен сиксе тухнă Коля. Çулăм текех пытанман ĕнтĕ, тулă пусси çийĕпе ташласа пучахсене çунтарнă. Коля çăвар карса, аптăраса тăман, машшин çумĕнчен огнетушитель вĕçертсе илнĕ, копнильщике кĕреçе ывăтса панă:

— Хăвăртрах!

Комбайнера комбайнне каялла çавăрса бригадăна кайма хушнă: тен, пулăшма çитсе ĕлкĕрĕç. Акă ĕнтĕ малта копнильщик кĕпи вĕлтлете-вĕлтлете илет, Коля ун хыççăн чупать. Вут çав хушăра вăйланнăçем вăйланать, копнильщик унран хăраса чарăнса тăрать.

— Мĕн хăрамалли пур! — йĕкĕтпе танлашса кăшкăрать Коля, вара огнетушительне пуçхĕрлĕ çавăрса çĕре çапать. Çĕрĕ çемçе, йĕпе. Огнетушитель клапанĕ çирĕп япала çумне çапăнмалла. Атă кĕлипе тапсан-тапсан, кăпăклă пайăрка сирпĕнсе тухать, Коля çулăма кăпăклă шĕвекпе шăварма пуçлать.

Копнильщикĕ, Якур ятлăскер, тĕтĕм ăшĕнче урнă вăкăр пек çĕмĕрттерсе çӳрет, кĕреçипе çулăма çапа-çапа антарать, çĕр чава-чава илсе вут-кăвара хуплама хăтланать. Таçтан муртан сиксе тухнă çил çулăма çĕр çумнех пусарса лартать те, вут чĕлхисем çынсенчен таçта мала чупса каяççĕ. Сылтăмра та, сулахайра та пур вĕсем, тепĕртакран пĕтĕм енчен çавăрса илме пултараççĕ. Коля çав чĕлхесене огнетушитель шĕвекĕпе хупласа хума тăрăшать, лешсем, питĕ чĕрĕскерсем, таçта мала сиксе

ӳкеççĕ те мăшкăлласа каллех ура хуçса ташлаççĕ. Пулăшу кирлĕччĕ те халь, пулăшу... Сасартăк Коля такăнса ӳкрĕ. Çулăмах лекрĕ вăл, аллисене пĕçертрĕ. Çулăм, савăнса кайса, ăна çӳçĕнчен, питĕнчен çуласа илчĕ. Коля огнетушительне айккинелле тапса ярса тулă ăшнелле йăваланчĕ. Çулăм — ун хыçĕнчен, анчах çитсе ĕлкĕреймерĕ, Коля огнетушителе сĕтĕрчĕ те тăват уран упаленсе вута хăйне тапăнчĕ, огнетушителе хута ячĕ. Огнетушитель вăйсăррăн пĕрĕхме пуçланăччĕ ĕнтĕ, Коля çулăма хĕнеме кĕпине хывас тесе тăратчĕ, инçетрех те мар çын сассисем илтĕнчĕç: пулăшу килет, тăват-пилĕк йĕкĕт, хăшĕ огнетушитель çĕкленĕ, хăшĕ брезент çитти сĕтĕрнĕ, теприсем — кĕреçесемпе. Огнетушитель юлашки хут чыхăнса илчĕ те чăшăлтатса сӳнсе ларчĕ. Коля ăна таçта çити ывăтса ячĕ. Вута пĕтĕмпех парăнтарнă çĕре Коля ури çинче те аран тăракан пулчĕ, çĕр унталла-кунталла тайăлать, хăлхара темĕн янăрать, сăмса шăтăкĕсене, çăвара хăрăм тулнă, куçран куççуль тăкăнать, ӳт-пӳ вуниккĕн тытса хĕненĕ пек сурать.

— Пĕр-ик минут кая юлнă пулсан, «хĕрлĕ ĕне» çĕр гектара йăлтах çуласа тухатчĕ,— мăкăртатать комбайнер. Ăна пулăшаканĕ, копнильщик, халтан кайнипе çĕре тăсăлса ӳкнĕ, ним хускалмасăр выртать. Коля çуннă ана тăрăх тем мăкăртатса утрĕ, вăл тырă мĕн чухлĕ лаптăкра пĕтнине шутласа пăхасшăн иккен. Пырсан-пырсан, чарăнчĕ: умĕнче тем тарăнăш ансăр шăтăк, шăтăкăн хĕррисем çунса-ирĕлсе чулланнă. Аслати çапнă вырăн ку. Малалла кайрĕ: вуннă, вунпилĕк утăм, çирĕм... Пурĕ çирĕм квадратлă метр çинче çуннă иккен тулă. Çĕр гектаршăн нумаях мар та, çапах шел, питĕ шел. Целинана çывăрса çӳреме кайман иккен Коля, тăван ял ятне, шкул ятне ямасть, чăваш ятне çĕклет. Çырăвĕсене мĕнле лайăх çырать тата, çырăвĕсене: жив-здоров, ваш друг Петров, текен меслетпе çырать те, мĕн тăвăн, хăйĕн стилĕ çавăн пек, кĕскен, уççăн, татăклăн калама юратать, анчах, çапах та, мĕн тери пысăк вĕсен туртăм вăйĕ! Кашни сăмахĕ ылтăн тейĕн. Кĕске çырурах кулса илме те, кулянма та, савăнма та пултарать Коля, пĕр ытлашши сăмах та çук унăн. Ăçтан пултăр ĕнтĕ: пустуй пакăлтатса аппаланма унăн вăхăчĕ ытла та сахал-çке. Ялан çул çинче вăл, ялан умра кăвак инçет, çĕрпе пĕлĕт пĕрлешекен нихçан çитме çук йĕр. Коля унта çитсе курасшăнах пуль çав, сентябрь те иртсе пырать, вăл халь те таврăнмасть. Тырпула, халăх çăкăрне, çăлса хăварасси вĕренĕве пĕр

уйăх сиктернинчен чылай кирлĕрех япала тет пуль ĕнтĕ.

Нелли тунсăхлать, Нелли юрататъ. Тата тепĕр айвана хăйне пăхăнтарас ĕмĕтпе мар, чĕри хушнипе чунран юрататъ, Кольăна кашни каçах тĕлĕкре курса асапланать, аллине тăсса ун патнелле пыма тăрать, лешĕ кабинине шалтлаттарса хупать те тăрăлтаттарать таçталла, горизонталла; Нелли аллине тăснипех тăрса юлать, вара хурланса вăранса каять. Кĕлрен чĕрĕлсе каллех чун-чĕрине йăва çавăрнă феникс кайăк тăвăр кăкăрта читлĕхри пек тапăртататъ, ирĕкелле туртăнать.

## 6

Колхозра тепĕр хĕрÿ тапхăр пуçланчĕ: çĕрулмине тирпейлесе кĕртнĕ хыççăн сахăр кăшманне черет çитрĕ. Килĕренех пĕр гектар уйăрса панă та, иртен пуçласа каçчен ватти-вĕтти мĕнĕпех кăшман уйĕнче. Юрать-ха, октябрь уйăхĕ яланхи пек çумăрлă мар, хĕвеллĕ, ăшă тăрать. Тÿпе янкăр уяр, сухаланă анасем çийĕпе эрешмен картисем вĕçе-вĕçе иртеççĕ. Сăнаса тăрсан, таçта çÿлте хуркайăксем кикаклатса кăнтăралла ăсаннине курма пулать. Тăрнасен хуйхăллă сассисем те илтĕнеççĕ. Ун пек чух Санюк, кусар пысăкăш çĕçĕпе кăшман купи патĕнче ларакансксер, тутлă тымара тасатма пăрахсах, çут тĕнче çинчен йăлтах манса, тăрна карти куçран çухаличчен ăна хыçран пăхса юлать. Хăш чух кайри мала тухать те, Санюк пуçне кĕтмен-туман çĕртен камитле шухăш килсе перĕнет: «Манăн та алгебрăпа кайран мала тухмалла». Шухăш тени çапла ĕнтĕ вăл. Ăна приказ парса заказпа кÿме çук, санран «килем-и, килем мар-и» тесе ыйтса тăмасть, килет те тухать. Кайран вара эс ăна хуть хăваласа яр, ман, хуть пурнăçа кĕрт: шухăш хăй ĕçне тунă — сан пуçна килнĕ. Ытти унăн ĕçĕ мар, сан ĕçÿ. Пĕр шухăш тепĕр шухăш çуратать. Пĕринчен тепри çуралса вĕсем тем чухлех пулса тăраççĕ. Хальхинче те «алгебра» сăмах Цыфаркин сăнне куç умне кăларса тăратрĕ. «Ун урокĕнче çапла чарусăр хăтланни ăна, ват çынна, хисеплеменнинчен ытла хамăра хамăр хисеплемени пулать вĕт,— шухăшларĕ Санюк.— Камшăн тăрăшать вăл вăйне-халне шеллемесĕр, сывлăхне хĕрхенмесĕр? Пирĕншĕн. Укçа кирлĕ-и ăна питех? Ачи-пăчи ÿссе çитнĕ, хăйсем карчăкĕпе иккĕшĕ те пенси илме пултараççĕ, килĕ-çурчĕ хула пек, сачĕ пысăк, районĕпе паллă, опытлă преподаватель юратнă предметне пире те

юраттарасшăн тăрăшать, шкулта математиксем çитменнипе икĕ çыншăн тенĕ пек ĕçлет. Пачах та укçашăн мар, пире çын тăвас тесе...» Çапла шутласа ларнă хушăра Санюкăн Сергей Кондратьевича питĕ хĕрхенес килсе кайрĕ. Хĕрхеннипе предметне те лайăхрах пĕлес кăмăл çуралчĕ. Хавхалануне ниçта чикеймесĕр, Санюк ура çине сиксе тăчĕ, кăшман купи тавра утма пуçларĕ: «Основанийĕ *a* чухне *N* числон логарифмĕ тесе *N* число тупас шутпа *a* основание *x* текен степень показательне хăпартсан калаççĕ,— аса илме тăрăшрĕ вăл паян Сергей Кондратьич ăнлантарнă темăна.— Чим-ха, мĕн тени пулать çак правило?. Астуса юлма юлнă, мĕне пĕлтернине вĕлерсен те ăнлантарса параймастăп».

Уроксем хыççăн ашшĕпе амăшне пулăшма килнĕскер, вĕсем енне пăхса илчĕ те, лешсем ытла та тату калаçса ĕçленине курса, чăрмантарас темерĕ, тепрер сехетрен килелле ахаль те тапранаççĕ пулĕ.ĕнтĕ. Çăлса хунă купа пĕтсех пырать, тепĕр çĕклем йăтса килмелле. Йăтса килсе çĕре кĕрслеттерсе пăрахрĕ те çĕнĕрен вырнаçса ларчĕ: малтан тымара «çӳçĕнчен» тытса тăпраран тасатать, унтан «сухалĕсене» касать, вара хӳрине çапса татать те «çӳçне» çарататъ; кăшман, яп-яка тăрса юлсан, пысăк купа çине, сысна çури пек, нăк! туса ӳкет. «Ма кăшман комбайнĕ кӳмест колхоз, миçе çул кăшман акатпăр? — тĕлĕнет Санюк.— Ытла та кичем капла, ĕçĕ те тухăçлă мар». Чĕрĕ кăшман çинче ларса-и, пилĕкне нӳрĕ çапрĕ, вара шăнта пуçларĕ. Каç пулать иккен, хĕвел анас патнех çитнĕ. Ашшĕпе амăшĕ те ура çине тăнă. Ĕç хатĕрĕсене ывăлне йăттарчĕç, хăйсем, купасене кăшман çулçипе витсе, каярах юлчĕç.

Санюк килне çитнĕ çĕре вырьăх-чĕрлĕхĕ хапхи умĕнче кĕпĕрленсе тăрать. Ĕни çерем çине выртнă, сурăхĕсем карта çумĕнчи чĕрĕ ăвăс çаппине кăшлаççĕ. Сурăх тени çапларах выльăх ĕнтĕ вăл, текех çулама та кăшлама пăхать. Выльăхĕсене шыв парса хуранай чĕртнĕ çĕрс ашшĕпе амăшĕ çитрĕç. Улма шуратма ларасшăнччĕ, амăшĕ чарчĕ, яшкине хамăрах пĕçерĕпĕр, эсĕ урокусене ту, терĕ. Уроксем тумаллине пĕлет-ха Санюк; алгебрăпа задачăсене епле шутламалла? Ку предметпа унран урок ыйтманни чылай пулать, ыран ыйтма та пултарать. Историпе, литературăпа, химипе вăл яшка пиçичченех таталчĕ. Умĕнхи материала аван пĕлсен, киле парса янă пĕр темăна преподаватель ăнлантарнă чухнех аван тытса юлатăн. «Умĕнхи материал» тенĕрен, логарифмсем

пуçланаççĕ кăна-ха, çавăнпа та малтанах, пуçĕнченех, теплĕн тишкĕрмелле. Алгебра учебникне уçса çеç хунăччĕ, яшка пиçрĕ.

Ашшĕ, çуллахи вăхăтра комбайнерта, ахаль чухне платникре çӳрекенскер, апат вăхăтĕнче комбайнсем çинчен сăмах хускатрĕ. Сăмахĕ вăл кăшман пиркиех тухрĕха, колхоза кăшман кăларакан комбайн питĕ кирлĕ тенинчен пуçланчĕ.

— «Комбайн, комбайн» тетĕн, кăçал ху мĕн чухлĕ нуша куртăн хăвăн чаплă комбайнупа? — хутшăнчĕ Анук аппа та.— Эсĕ кăна-и тата: хăш чух аванах выраççĕ, хăш чух чуман лаша пекех чăхăмлаççĕ. Кăçал пурте тенĕ пек хĕн куртăр вĕт, куç ӳкрĕ пулмалла: Сидоровăн çурли хуçăлса аптăратрĕ, Казаковăн — ременĕсем туха-туха каяççĕ тет. Вихтăр вара, Ваня ашшĕ, пачах ĕçлеймерĕ тесен те юрать.

— Вихтăр хăй наян, комбайнĕ айăплă мар. Унтан та ытла кăçал çанталăк айăплă пулчĕ. Кунĕн те çĕрĕн çумăр çунипе ахаль те хăватлă тырăсем шӳсе кайрĕç, выртса тухрĕç. «СК-4» текенни «СК-3» комбайнран кăшт лайăхрах та, пурпĕрех, виç-тăват çул чипер ĕçленĕ хыççăн, ывăнса çитет.

Ашшĕпе амăшĕн тавлашуне Санюк интересленсех итлет. Ашшĕ çулла ĕççинче ик эрнене яхăн ремонтра ларнине вăл аван астăвать-ха, мĕншĕн ларнине те пĕлет, комбайн пайĕсене чухланипе амăш умĕнче кăшт мухтанса илес шутпа çеç ашшĕне ыйту пачĕ:

— Хăшĕ ытларах «ывăнна» пулнă ара: турбокомпрессору-и е поршеньсем?

— Турбокомпрессор та, поршеньсем те... Çулма тырăсене аванах çултăмăр, пакуссене пуçтарса çапнă чух, вĕсем питĕ хулăм пулнипе, двигателе йывăр килчĕ, ана тавра иккĕ-виççĕ çаврăнсанах сывлăш тасатакан пайăн кассечĕсене кăларса илсе тусанран тасатма тиветчĕ, турбокомпрессор кутăнлашма пуçлатчĕ, унтан — поршеньсем...

— Вихтăр тетен мĕн «кутăнлашнă»?

— Топливо бакĕсен çĕвви кайнă, подшипник барабанĕн корпусĕ çĕмĕрĕлнĕ, юлашкинчен моторĕ анса ларнă.

— Çăмăл мар иккен комбайнер ĕçĕ.

— Вĕренес, пĕлес пулать, пĕлсен епле те майне тупатăн.

«Вĕренес пулать»... Çавă пĕтерет те пире: вĕренесех теместпĕр. Вĕренни питĕ кирлине аван чухлать-ха Са-

нюк, темшĕн куçĕсем хупăнаççĕ, шăмшак сасартăках йыварланса кайрĕ. Яшка çисе ăшă пÿртре ларни йыварлатрĕ пулмалла. Пиншак тăхăнса сада тухрĕ. Уйăх чылай çÿле хăпарнăран садра çап-çутă. Сукмак çине сулçă тăкăнса тулнă, йывăç мĕлкисем тĕрленсе ÿкеççĕ. Сывлăш уçă та таса, сивех мар. Уйăх янкăрах çутатнăран, çăлтăрсем тата пĕчĕкрех пек, тата инçетререх пек туйăнаççĕ, вăтанарах йăлтăртатаççĕ. Сăнаса пăхсан, тавралăх ывăç тупанĕ çинчи пек курăнса выртать, таçти-аякри мĕлкесем çывăхрах тăнăн, пысăкраххăн палăраççĕ. Анăçра Савкаç çутисем асамлă улăхри кăвар чечексем пек çунаççĕ. Пĕлесчĕ: мĕн тăвать-ши унта кĕçĕр Сева Егоров? Шăллĕне аса илсе диван çинче выртать-ши е кирпĕч хулăнăш «Дипломати историне» вулать? Авалхи Китай дипломатийĕ, Инди, Перси, Египет, Греци, Рим... Çĕнĕ эра, вăтам ĕмĕр, çĕнĕ вăхăт, вунсаккăрмĕш ĕмĕр, вунтăххăрмĕш, çирĕммĕш... Пуç çаврăнса кайĕ.

Сăртра, кĕпертен хăпарсан, Оксанăсен çурчĕ. Уйăх çутинче тем çÿллĕш телевизор антенни те аван палăрать, малти пÿртĕнче те, кайринче те хăйçути пур: çемйисем телевизор кураççĕ пулĕ, ку ырана «Онегинран» «Татьяна çыруне» пăхмасăр калама вĕренет, мĕншĕн тесен вырăс литературипе тахçантанпах ыйтман, ыран тÿрех ыйтма пултараççĕ. Татьяна Онегина мĕнле хытă юратнине тĕплĕн, такăнмасăр каласа парайсан, Зоя Филипповна, Нелли амăшĕ, «иккĕ» паллă мар, «пĕрре» лартаканччĕ, çиелтен тата хытă ятлаканччĕ. Неллисен килĕ Оксанăсеннинчен кăшт леререх, Владимир Николаевичсенчен иртсен. «Кĕçĕр кам мĕн тăвать-ши» тесе тăнă хушăра Санюк хăй мĕн тумаллине чут çеç манса кайман. «Логарифм,— терĕ вăл сасартăк, шăплăхра çулçă чăштăртаттарса пынă май.— Кам шутласа тупнă-ши çав тарăхтармăш япалана? Чим-ха, çакна Нелли питĕ аван пĕлет пуль, шкулĕпе пĕр чаплă математик вĕт вăл, хальхи вăхăтри Софья Ковалевская». Санюк, çапла шутласа илнĕ хыççăн, вăртах çаврăнчĕ те пÿрте кĕчĕ, хутпа кăранташ илсе Неллисем патне тухса утрĕ. Оксанăсен тĕлĕпе иртнĕ чух çутă чÿречисем çине чылайччен пăхрĕ: хĕрринчи пĕр чÿречин шурă карринче Оксана мĕлки ним хускалмасăр тăрать, чылайран тин хускалса илчĕ вăл, вăра каллех малтанхи пек хытса тăчĕ, чăнах та «Евгений Онегина» вулать пулас...

Санюк килсе кĕнĕ чух Нелли, куçа шартаракан чăпар пурçăн халат, çунса-ялкăшса тăракан чулсемлĕ ăшă та-

почка тăхăннăскер, урисене хăй айне туса диван çинче ларатчĕ. Çӳçне арăш-пирĕш салатса янă. Пуçне аллинчи кĕнеки çинелле тайнăран, çӳçĕ чут çеç урайне перĕнмест, çурăмне, пӳне-сине, йăлтах хупласа тăрать, вăйлă шывсикки пек курăнать. Санюк килсе кĕрсен, хĕр пуçне яштах çĕклерĕ те, пĕр вăхăт тĕлĕнсе пăхса тăнă хыççăн, урайне анса тăчĕ.

— Аха, Серде килчĕ, тархасшăн, тархасшăн... — пукан лартса пачĕ вăл.— Савсах килместĕн, сĕтел çинчен пуçтарсан çитрĕн, савакан çын апат вăхăтне ĕлкĕрекенччĕ.

— Савасси мĕнĕ... Савсах ĕнтĕ. Логарифм канăç памасть.

Нелли пăркаланса утса кĕнекине çыру сĕтелĕ çине кайса хучĕ:

— Мопассана вулатăп. Интереслĕ писатель. Хи-хи-хи те ха-ха-ха, çиелтен пăхсан... Пуç тавра шухăшлассăн вара — трагеди. Миçе ĕмĕр хушши эпир, прекрасный пол, пукане вырăнĕнче пулнă: выляна-вылянă та кивелсен шăпăр шăтăкне пенĕ пире. Малашне ун пек пулмасть, не позволем, терĕ тет лĕри.

— Логарифм касать-ха мана, Нелли.

— Мана homo amans... касать темĕпĕр... импонирует. Мама, çаплаччĕ-и-ха? Импонирует. Кăсăклантарать тени пулать-и вăл, мам? Пăрах-ха эс турилккӳсене, курмастăн-им: хăна килнĕ!

Пӳлĕмрен саппун çакнă, туллиленсе, хитреленсе кайнă Зоя Филипповна тухрĕ.

— Пахчари улма аврисене тирпейлесе, выльăхсене шăварса апата каçарах юлтăмăр,— терĕ вăл сăпайлăн, Санюка алă пачĕ, çиелти тумне хывса çакма хушрĕ.

— Мам, homo amans — человек любящий, çапла-и?

— Çапла, çапла, ытла хытă ан кăшкăр-ха, капла та илтетĕп. Ну, мĕнле, Саня, аçу-аннӳ сывах-и? Мĕн ĕçлеççĕ?

— Кăшман кăлартăмăр.

— Эй, çав кăшманпа... Кӳршĕ колхоз тахçанах комбайн кӳнĕ, пирĕн тем хăтланаççĕ.

— Килте халь çеç комбайнсем пирки калаçрăмăр.

— Çапла пуль, çапла пуль. Ирт-ха эс тĕпелелле, лар. Нелли, çыру сĕтелĕ çинчи лампуна çут, кăна сӳнтер, эпĕ çыврас тетĕп. Эсир калаçăр, тавлашăр, мана кансĕрлеместĕр.

Сĕтел умне вырнаçса ларсан, Нелли алгебра учеб-

никне шăп çурмаран уçрĕ те çĕр сакăрвуннăмĕш параграф вырăнне çĕр тăхăрвуннăмĕшне лексе «Ньютон биномĕ» текен тема тĕлне пулчĕ. Санюк ăна тӳрлетме хăтланчĕ, лешĕ «нимех те мар» терĕ те логарифмсем çинчен кĕнекерен вуланă пек шакăртаттарса кала пуçларĕ:

— Основанийĕ *a* чухне *N* числон логарифмĕ тесе *N* число тупас шутпа *a* основание *x* текен степень показательне хăпартсан калаççĕ. Ăна çапла палăртаççĕ... — Нелли хутпа кăранташ илчĕ те $\log_a N = x$ тесе çырса хучĕ.— Эпĕ халь çакăнта çырни $a^x = N$ тенипе пĕрех. Çавна çирĕп астуса юл. Е, сăмахран: $\log_2 8 = 3$, мĕншĕн тесен — $2^3 = 8$.

Санюк та хăйĕн хучĕ çине формулăсене çырчĕ, малалла итлерĕ:

— Хутласси, пайласси, степене хăпартасси, корень кăларасси — çăмăл ĕç мар, хушасси-кăларассинчен самай йывăртарах. Хутлă числосемпе ĕçлеме уйрăмах йывăр. Вунулттăмĕш ĕмĕрте тинĕсре çул çӳресси хытă аталансан, пысăк числосемсĕр пурăнма пачах май пĕтсе çитет. Логарифм текен япала вунçиччĕмĕш ĕмĕр пуçламăшĕнче астрономи расчечĕсем тунă чух тупăнать. Логарифм меслечĕпе халĕ пысăк шутсенче пур çĕрте те усă кураççĕ. Çав меслет мĕн енчен паха? Вăл хутлассипе пайлассине хушса-кăларсах тума пултарать. Сăмахран: 10000-не 100000 çине хутламалла. Эпир кĕçĕн классенче хутланă пек хутламастпăр, хисепсенчи нуль шучĕсене çеç çырса тухатпăр: 4 тата 5. Вĕсене хушатпăр: 4+5=9. Тăхăр нуль иккен: 1000 000 000. Халь 10 вырăнне урăх основани (2) илĕпĕр те унăн малтанхи 12 степенĕн таблицине тăвăпăр:

| Логарифм (степень показателĕ) | 1 | 2 | 3 | 4 | 5 | 6 | 7 | 8 | 9 | 10 | 11 | 12 |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Степень (число) | 2 | 4 | 8 | 16 | 32 | 64 | 128 | 256 | 512 | 1024 | 2048 | 4096 |

Çӳлти цифрăсем — степень показателĕсем, урăхла каласан — логарифмсем, аялтисем — степеньсем (числосем). Аялти йĕркери пĕр хисепе теприн çине хутлас тесен, вĕсен çийĕнчи икĕ хисепе хушни те çителĕклĕ. Тĕслĕхрен:

32-ке 64 çине хутласан миçе пулнине тупас тесен, вĕсен çийĕнчи пиллĕкпе ултта хушмалла; 5+6=11. «Вунпĕр» айĕнче — икĕ аялти хисепе хутланин результачĕ: 2048.— Нелли Санюк çине чăр! пăхса илчĕ те: — Вăт çавăн пек,— терĕ, вара кăранташне сĕтел çине пăрахрĕ.— Халĕ шут тĕнчинчен çĕр çинчи çылăхлă тĕнчене таврăнар. Шкул пĕтерсен эпĕ пирус туртма вĕренесшĕн. Хăш сигарет аван-ши? «Столичные» мĕнле пек?

— Темĕн, туртса курман.

— Илтмен те-и?

— Пирĕн халь атте те туртмасть те.

— Эх, эсир те çав — арçынсем. Апла пулсан, эп сана канхвет çитерем-ха, анне Крымран илсе килнине. Ак çак апельсинсене те çисе ярар.

Нелли буфетран пĕр турилккепе шоколадлă конфет кăларса лартрĕ, тепринпе — апельсин. Пĕр пĕчĕк хĕвелне сĕтел тăрăх кустарса ячĕ те, Санюк ăна аран çеç тытса ĕлкĕрчĕ. Иккĕш те юратсах апельсин çирĕç. Унтан Нелли ура çине сиксе тăчĕ, апельсинсене Санюк хĕвне тултарма тытăнчĕ:

— Ку аçуна, ку аннӳне, ак çакă хăвна пултăр, килне çитсен, мана асăнса çийĕн.

— Хăвна хăçан мĕнпе тав тăвăп-ха ĕнтĕ?

— Урама тухсан калăп. Алгебрăпа унта санăн отметку пачах çук, ыран Сергей Кондратьевич чĕнессе кĕтсе ан тăр, тӳрех ална çĕкле. Ăнлансах çитеймерĕн пулсан, атя тепре пăхатпăр.

— Çук, веçех ăнлантăм, тавах.

— Ыран тав тăвăн.

— Каяс пуль, вăрах лартăм.

— Тăхта, эпĕ ăсатма тухатăп.

Урама тухса тăрсан, Санюк тĕлĕннипе хытсах кайрĕ: уйăх чăн тӳпене хăпарнă, тата çутăрах пăхать. Çутин тĕсĕ шурă-кăвакрах. Тĕнче тата хитреленнĕ, аслăланнă пек туйăнать. Çуртсенче нумайăшĕнче хăй сӳнтернĕ. Урамра кăштах шăнтнă, çул уйăх çутинче куçкĕски пек йăлтăрать. Каçхи илем Неллине те хытă пăлхатрĕ пулас, унăн пысăк та тарăн, ытармалла мар хитре куçĕсем савăнăçлăн çиçеççĕ, хĕлхем сапаççĕ. Хĕр йĕкĕте хулран тытрĕ, шăппăн çеç сăвă калама пуçларĕ:

Выхожу один я на дорогу;
Сквозь туман кремнистый путь блестит;
Ночь тиха. Деревня внемлет богу,
И звезда с звездою говорит.

Санюк Нелли сăввăн пĕр сăмахне улăштарнине асăрхарĕ:

— Михаил Юрьевич «пустыня внемлет богу» тенĕ.

—Турăçăм, мĕнле уйрăмлăх? «Внемлет богу» тени те метафора çеç, чăнласах турра тăнланине пĕлтермест, калама çук канлĕ шăплăхра тĕнче тӳлеккĕн тĕлĕрнине пĕлтерет.

В небесах торжественно и чудно!
Спит земля в сиянье голубом...
Что же мне так больно и так трудно?
Жду ль чего? Жалею ли о чем?

Эх, Саня, лайăх çын эсĕ, санпа урок хатĕрлеме те çăмăл, урамра çӳреме те кăмăллă.

— Санпа та çаплах.

— Чупту-ха мана пĕрре, Саня, кĕçĕр вилнĕ пек çывăрам.

— Çамкунтан-и, питĕнтен-и?

— Тутаран...

— Кил.

Нелли чĕрне вĕççĕн тăчĕ, Санюк ăна тутинчен чуптурĕ те, амăшĕ хăйне лăпканă пек, хĕре çурăмĕнчен лăп-лăп! лăпкаса илчĕ.

— Ой, Саня, вилсех каяттăм! Тепре кăна!

— Çитет, нумай юрамасть.

— Турă хушни виççĕ.

— Юрамасть, юрамасть, тепĕр чух. Пĕлсен, Коля çилленме пултарать.

— Эсĕ Коля умĕнчех чупту, вара çилленмест.

— Юрĕ, Коля таврăнтăр-ха, ăна та, сана та чуптăвăп.

— Юрать, Саня, юрать, чипер кай, ырă тĕлĕк кур.

— Эсĕ те...

Серде, чăнах та, ирчченех ырă тĕлĕксем курса çывăрнă. Мĕн курнине вара ирпе ниепле те аса илеймерĕ. Такама курнă, такампа калаçнă, таçта çӳренĕ. Гимнастика туса çăвăнсан, апат çиййччен, каçран вĕреннине тепĕр хут хăвăрт пăхса тухрĕ, апат çирĕ те шкулалла утрĕ.

Пĕр хутлă пысăк йывăç шкул, хыр пĕренесенчен пураса тунăскер, фасачĕпе кăнтăралла пăхса сарлака урам вĕçĕнчи сăртра, урама урлă, илемлĕн çĕкленсе ларать. Унта садри аллейăпа пырса хыçал енчен те кĕме пулать, урам енчен, çӳллĕ крыльцаран, хăпарма та юрать. Серде паян крыльцаран хăпарса тĕп алăкран кĕчĕ.

Звонок вăл класа ура ярса пуссан янăраса кайрĕ. «Кăшт çеç кая юлман,— шухăшларĕ Серде,— çавăнпа коридорта пĕр чун та çукчĕ иккен». Яланхиллех, Сергей Кондратьич алăкранах калаçса кĕчĕ. Пирвай, класс хăйне саламлама ура çине тăрсах ĕлкĕреймен пулин те, «ларăр» тени илтĕнчĕ, вара старикĕн шакла пуçĕ курăнчĕ, кун хыççăн пурте çĕнĕ сăрă костюм, шурă нейлон кĕпе тăхăннă, чăпар галстук çыхнă пĕчĕкрех çынна курчĕç. Сергей Кондратьич çуркунне те, çулла та, кĕркунне те пушмакĕ çинчен çутă калуш тăхăнса çӳрет. Хул хушшине класс журналĕ хĕстерсе класа ыткăнса кĕрет те сĕтел патневаскать, калаçма хăй коридортах пуçланá, журналне сĕтел çине хурса алăк патне кĕтесе калушне хывать. Доска таса пулсан та, пулмасан та, «сотрите с доски» тет. Пĕр хушă вырăсла такăлтатать, вара тăван чĕлхе çине куçса таса чăваш чĕлхипе мĕн урок пĕтиччене каласать, тем тери йывăр правилăсене чăвашла шакăртаттарса калать. Урок ыйтнă чухне, малтан вырăсла ыйтать те, çавнах вырăсла мĕнле ăнланнă-ха тесе-ши, тепĕр хут йăлтах чăвашла ыйтса тухать.

Сергей Кондратьич ытти преподавательсем пек кам килнипе килменнине тĕрĕслесе тăмасть, пĕр вăхăт журнала тăрăнать те пуçне çĕклесе класс çине шанмасăртарах пăхса илет, вара кама та пулин доска патне чĕнет. Паян вăл темшĕн каччă пек шукăль тумланса килнĕ, юлашки модăпа тесен та йăнăш пулмĕ. Çакна пурте тӳрех асăрхарĕç, хыçалти ретре чăшăл-пăшăл туни, пĕрпĕринпе тавлашкалани илтĕнчĕ: тем сăлтавпа, Настя Казакова аллинче кĕленче вазăна чиксе лартнă астрăсемпе георгинсем чӳхенеççĕ. Пурте тем каласшăн, нихăшĕ те пуçласа яраймасть; ахаль чухне питех именменскерсем, паян хĕреле-хĕреле каяççĕ. Акă Люся Сидорова ура çине тăчĕ:

— Хисеплĕ Сергей Кондратьевич,— терĕ вăл сывламасăр тенĕ пек,— паян эсир утмăл пĕр çул тултарнă ятпа эпир сире, хамăрăн юратнă преподавателе тата аслă юлташа, чунран саламлатпăр, малашнехи пурнăçăрта çĕнĕрен-çĕнĕ ăнăçлăх, çирĕп сывлăх сунатпăр. Эпир, вуннăмĕш «А» класра вĕренекенсем, шкул пĕтерсе кирек ăçта салансан та сире нихăçан та манмăпăр, яланах ырăпа асăнăпăр!

Класс кĕтмен çĕртен кĕпĕрех ура çине тăчĕ, алă çупса ячĕ. Иккĕн, Люся Сидоровăпа Викторов Ваня, Вихтăр Вани, Сергей Кондратьич патнелле васкарĕç. Люся

аллинче — чечексем, Ваня «Шипр» одеколон тытнă. Доска патне çитсе класс енне çаврăнчĕç те, каллех Сидорова сăмах илчĕ:

— Сергей Кондратьич,— терĕ вăл чĕтрекен сасăпа,— эпир сире, паллах, нумай чухне кăмăлăра хăварнă, сире итлемесĕр, хамăра та, сире те сиен тунă, математика халăх хуçалăхĕнче мĕн тери пысăк вырăн йышăннине пур чухне те асра тытмасăр сире упрама пĕлмен...

Çак сăмахсем ватă учителе тĕлĕнмелле улăштарчĕç, чĕрине пырса тиврĕç. Ахаль чухне чăкăлташма, кăшкăрашма хăтланакансккер, хут пек шурса кайрĕ те юпа пек хытса тăчĕ. Чĕлхи çĕтрĕ тейĕн, нимĕн калаймасть, аллисем чĕтреççĕ. Çак вăхăтра Люся ăна чечек лартнă ваза тыттарчĕ:

— Çак пĕчĕк парнене класри хĕрачасен ячĕпе йышăнсамăр...

Вихтăр Вани одеколон тăсса пачĕ:

— Класри арçын ачасем сире çĕр çула çитме сунаççĕ...

Чун патĕнчи ăшă сăмах пĕчĕк ачана та, ват çынна та пĕр пекех сиплĕ иккен. Сергей Кондратьевич сăмса тутри патнелле туртăнчĕ, тӳррипе каласан, йĕрсе ячĕ. Класс шыв сыпнă пек тăрать: ак сана Карас... «Чăкăлтăш, кутăн теттĕмĕр, мăшкăллашма пăхаттăмăр. Вăл ав мĕнле иккен, нимĕн чухлĕ те çиллес мар, çемçе кăмăллă, ача чунлĕ. Пире вĕренччĕр тесе çирĕп тытнă вăл»,— Вихтăр Вани таранах çапла шутларĕç класра.

Сергей Кондратьич Люсьăпа Ваня аллисене чĕри çумне тытса икĕ аллипе те çупăрларĕ. Хăй çине-çинех: «Тавтапуç, тавтапуç»,— тет. Нумайччен лăпланаймасăр, класс вырăна ларсан та: «Ларăр, ларăр, мĕн ура çинче тăмалла, тавах чыс тунăшăн, чунран-чĕререн тав»,— тесе мăкăртатрĕ.

Лăпланса çитсен, темшĕн класс çине мар, кантăкран пăхса, çĕнĕ тема пуçларĕ, никамран та урок ыйтмарĕ.

Серде çак урокра алгебрăпа урăх пĕр темăна та, пĕр задачăна та тĕплĕн пĕлмесĕр ирттерсе ямасса хăйне хăй сăмах пачĕ, унăн пуçĕнче шухăш тата нумайланчĕ, пурнăçра тарăнрах, инçерех курасси татах ӳсрĕ. Нелли ун çинчен куç илмест, тимлĕн çĕнĕ тема итлет. Акă вăл сырма чарăнса ручкине хучĕ те Санюка куç хĕсрĕ, ăна хирĕç Санюк та куç хĕсрĕ, йăл кулса илчĕ. Ытти вĕренекенсем тăрăшсах логарифмсен тĕп свойствисене çыраççĕ, вĕсен сăмахсăр калаçуне илтмеççĕ.

— Ну, мӗнле, алгебра интереслӗ предмет-и? — тет пулас Нелли.

— Питӗ интереслӗ, калама ҫук интереслӗ,— ответлет ӑна Санюк.

Тепӗртакран коридорта шӑнкӑрав шӑнкӑртатать...

## 7

Шкултан таврӑнсанах Оксанӑна амӑшӗ Пӑлан шурӗ текен вырӑна ӗне шырама кӑларса ячӗ. Пӑлан шурӗ ялтан ик-виҫ ҫухрӑмра, вӑрман хӗрринче, унта тавра ҫулпа та, тӳррен те ҫӳреҫҫӗ. Ӗни ӑслӑскерччӗ-ха, ирхине кайса ярсан, каҫпа хӑйех хапха умне килсе тӑраканччӗ. Паян темме, те ҫанталӑкӗ иртеппех ҫумӑрлӑран, таврӑнмарӗ. Кӗркунне кӗтӳ тухма пӑрахнипе, ял ҫыннисем выльӑхсене ҫырма-ҫатрана, вӑрман хӗрринчи ҫереме хӑваласа тухаҫҫӗ. Каҫпа вара ял тулашӗнче унта та кунта выльӑхсене кӑшкӑрса чӗннӗ сасӑсем, шыраканӗсем пӗрне-пӗри йыхӑрса калаҫнисем Пӑлан шурӗ таранах илтӗнеҫҫӗ.

Нелли хӑй класӗнче туса ирттернӗ мыскара Оксана чунне хытӑ ыраттарнӑччӗ. Ҫавӑнтанпа хӗрача Неллирен писрӗ, вӗсем патне ҫӳреми пулчӗ. Ӗлӗксенче ӗне шырама та пӗрле каякаччӗ, халӗ пӗчченех Пӑлан шурнелле тухса утрӗ. Ҫине вӑл, ҫӳреме ҫӑмӑлтарах пултӑр тесе, трико, спорт куртки тӑхӑнчӗ, йыт-качка ҫыхланасран аллине патак тытрӗ.

Кӗпер урлӑ каҫсан, укӑлчаран тухиччен пӑрӑнса ун хӗррипе сулахаялла, тухӑҫалла каймалла. Лупашкана аниччен — сӑрт пекки. Ку вырӑнта Оксана пӗчӗк чух колхоз йӗтемӗ пулаканччӗ. Амӑшӗ патне авӑн ҫапнӑ ҫӗре апат леҫме кайсан, улӑм капанӗсем хушшинче пытанмалла мӗн чуль выляман-ши хӗрача юлташӗсемпе пӗрле! Улӑм ури ҫине тапаланса хӑпарса аялалла, улӑм ҫине, мӗн тери ырӑччӗ сикме! Куншӑн ӑна амӑшӗнчен яланах лекетчӗ: тӑратса е тирсе хунӑ сенӗк ҫинӗ тӑрӑнсан, вӗрлӗк е каска тӳр килсен, пӗтрӗн вӗт — хырӑмна ҫуратӑн, мӑйна е уруна хуҫатӑн. Мӑнтарӑн амӑшӗ, мӗн калана пулӗччӗ-ши вӑл Оксана пӗр ҫӳллӗ капан тӑрринчен теприн ҫине ҫӗре вӗрлӗк тӑрӑнтарса ярӑнса кайнине пӗлсен? Хӑшпӗрисем, ытларах арҫын ачасем, ҫапла та тӑватчӗҫ: шултра ыраш улӑмӗнчен хытӑ пусса кӗлте ҫыхаҫҫӗ те ун ҫине ҫунашка ҫине ларнӑ пек утланса ларса ҫеремлӗ чи чӑнкӑ ҫырантан кӗрлеттерсе анса каяҫҫӗ. Пӗри, камне те астӑвать-ха Оксана, Неллисен кӳрши Гера,

çăл тĕлĕнчи чи чăнкă çĕртен татăлса аннă та тӳрех çăла кĕрсе ӳкнĕ. Юрать-ха çăлĕнче шалча та, пури те пулман. Тĕп çăлнех лекеймен вăл, лекнĕ пулсан сывă юлаймастчĕ.

Сăртран лупашкана анатăн. Лупашкан çурри вашмăк, çеремлĕ, çырманалла пынăçем çурхи шывсем çурса тарăн вар тунă. Кунта та сахал мар килнĕ Оксана. Амăшĕ хур кĕтме ярсан, хурĕсене çырмана хуса антаратчĕç те хăйсем тăмлă çырана шуркут йăвисем пăхма хăпаратчĕç, ик енĕпе те шуркут йăviччĕ, ачасем çыранта çараçланнă чух шуркучĕсем çавăнтах инçе те мар хӳрисене аялалла-çӳлелле вылятса тăратчĕç. Вĕсен йăвисене тустарас йăла никамăн та пулман, çыранта тĕрлĕ курăксен вăрăм тымарĕсене чавса кăларса «паттăрла» вылямa меллĕ пулнă, кам вăрăмрах тымар тупать, çав паттăра юлнă. Кунсăр пуçне кунта, вар тĕпĕнчерех, нӳрлĕ çĕрте, çыран хупахĕ нумай ӳснĕ. Хупахран курка туса çăлтан шыв ĕçме питĕ ырă.

Çырма ял çумĕпе пырать-пырать те хăй урлă укăлча карти каçса кайнă вырăнта, ял вĕçĕнче, кăнтăр хĕвелтухăçнелле пăрăнать. Ун кукăрĕнче малтан çеремлĕ çӳллĕ çыран, унтан самаях пысăк лапам вырăн. Çак лапамăн пуçне сухаламан чухне Пăлан шурне тӳррен çитме пулать, халь, сухаланă та, Оксанăн çырма тăрăх, Киреметай текен çĕрпе, кайма тӳр килчĕ. Киреметай çак лапамран пуçланать, кунта çырман ик çыранĕпе те йывăç ӳсет. Аялтах, шыв патĕнче,— çирĕксемпе çӳçесем, çӳлерех — çĕмĕрт, катăркас, хурама, палан, тата çӳлерех— çăкасемпе хурăнсем. Лапама хур кĕтме, ĕне çитерме Оксана кăçал та килнĕччĕ-ха, Киреметайне çӳреме пăрахни чылай пулать. Кунта ача-пăча кăмпана, çырлана, кĕпçене чупать. Авăрсенче шампа пулă, сайра хутра çуйăн тытма пулать. Хĕрачасене пулă тытасси кăсăках мар та, вĕсем ытларах пултăран, кĕпçе, чечек татма юратаççĕ, çырлана пит кăмăлласçĕ; карта кăмпи тухсан, çеремре карта кăмпи çинче упаленеççĕ. Чăтлăхсенче çĕмĕрт ĕлкĕрсен, унта арçын ача кĕтĕвĕ пĕлĕт пек явăнать. Пуçтахраххисем йывăççем тăрне чи çӳле улăхса каяççĕ, çĕмĕртсене хуçса çĕмĕрме тытăнаççĕ, хĕрачасем вĕсене ӳкĕтлеççĕ, намăслантараççĕ, ятлаççĕ; лешсем, чарусăрсем, кусене пурпĕрех итлемеççĕ, хăйсен усал ĕçнех тăваççĕ. Мĕн тумалла? Хирĕç тăма вăй çитмест. Тавармалли пĕртен-пĕр меслет çеç: çĕмĕртпе хăналама хăтлансан, ăна йышăнмасăр çĕре ыватса яраççĕ. Çĕмĕрт

пит çиес килекен пулсан, лутра тĕмсем шыраса тупаççĕ те арçын ачасем çине çаврăнса та пăхмаççĕ. Çĕмĕрт хыççăн палан ĕлкĕрет. Палан кукли юратнипе Оксана палан татма яланах хавас, тата йывăççи те çӳлех ӳсмест. Сăртри хурăнсем пурте тенĕпе пĕрех ватă, лапсăркка, хăшĕ-пĕри аялтанах хăвăл. Çав хăвăлсене чунсăр этемсем, кĕтӳçсемех пулĕ, вут хурса хăвараççĕ те мĕскĕн хурăнсем тĕпрен çунса кăмрăкланаççĕ, лаштăртатса çырана персе анаççĕ. Çавăн пек çунтарса тӳнтернĕ хурăнсене курсан, Оксанăн куççулĕ тухать. Хурăн мурĕсене тытса тĕрмене хуптарас килет унăн. Ту айĕнчен хĕрлĕ хăйăр çине шăнкăртатса тухакан тăрна куçĕ пек тăрă çăлкуçĕ тĕлĕнче телевышка пек çӳллĕ яштака çăка ӳсет. Кун пек уçă вырăнта çăкасем çапла çӳллĕ ӳсмелле те мар ĕнтĕ, ку вара кармашать те кармашать пĕлĕтелле. Пĕррехинче çĕмĕрт татма килсен, Санюк унăн чи тăрне хăпарнăччĕ:

— Урра! Эпир çĕнтертĕмĕр! — савăнса кăшкăрчĕ вăл çӳле çитсен; лапсăркка туратсем хупланипе хăй курăнмасть те. Унăн паттăрла ĕçне курса тăракан ача-пăчана çакă питĕ тĕлĕнмелле япала пек туйăнчĕ. Санюк çӳллĕ çăкан чи тăрринче мĕнле ларнине курасшăн пурте сăрта чупса хăпарчĕç. Хăпарчĕç те, тата хытăрах тĕлĕнме тӳр килчĕ: унта хĕрлĕ ялав вĕлкĕшет!

— Фашизм тĕп пулчĕ, рейхстаг çинче — ялав! — каллех кăшкăрчĕ çӳлтен Санюк. Ялавĕ — Серден хĕрлĕ майкки пулнă, вăл кайран та çăка тăрринче нумайччен вĕлкĕшсе тăчĕ, вара çумăрпа, çилпе тĕссĕрленсе, таткаланса пĕтрĕ пулмалла, курăнми пулчĕ.

Чăтлăхра пĕрре вĕлтĕрен хытă ăшалантарнăччĕ. Хĕрачасем çӳллĕ курăк ăшне кĕпçе шырама кĕрсе çын çӳллĕш кашласа ӳсекен вĕлтрен хушшине çакланнă: ăçталла ан пус, вĕлтрен кăвар пек çунтарать. Пурте çухăрашма, макăрашма тытăнсан, Серде чупса пычĕ, вĕлтренсене чĕрĕ çĕмĕрт хуллипе ним юлмиччен касса тухрĕ. Тата çак тĕлтен çырман тепĕр енне, çăл патне, шыв ĕçме каçнине астăвать Оксана. Путлăх тĕлĕпе иртнĕ чух унтакунта пăрахкаланă вĕрлĕксенчен ури шуса кайрĕ те çăрăлчăка анса тăма тиврĕ. Пĕр çĕре пусрĕ, тепĕр çĕре, чĕркуç таран путса ларчĕ, шурлăх çаплах çăтать. Оксана, сехри хăпнипе, чун çурăлмалла çухăрса ячĕ. Каллех — Серде... Çук, ахальтен мар иккен Санюк Оксанăна тăван пиччĕш пекех туйăнать. Курманни нумай та пулмасть-ха, темĕн çитмест чуна. Мĕн çитменнине Окса-

на ăнланмасть-ха, анчах çитмест. Тен, каярахпа ăнланĕ. Халĕ унăн тĕп шухăшĕ — ĕнине шыраса тупасси. Çăкаран иртрĕ те вăрман хĕрринелле, чи курнакан вырăнта хăрушшăн каркаланса тăракан çӳллĕ те лапсăркка, кукăр-макăр, тем пысăкăш киремет хырĕсем еннелле çул тытрĕ. Хырсем виççĕн: пĕри, варринчи, акăш-макăш пысăк, ыттисем лутрарах та пĕчĕкрех. Авал ял халăхĕ çак тĕлте киремете парне кӳнĕ теççĕ, киремете пуççапнă, çакă чи хăрушă вырăн шутланнă, ун чух ача-пăчан кунта çывăха та пыма юраман, киремет тытма пултарнă. Киремет тытсан, çын çавăнтах вилсе выртнă е ĕмĕрлĕхе суккăр-чăлах, нишлĕ, пулса юлнă, имĕш.

Оксана хырсем патне çитрĕ те варринчин çĕртен тем çӳллĕш тухса кайса якалса пĕтнĕ тымарĕ çине, киремет йывăççин тĕпне, канма ларчĕ. Кунтан тавралăх ытла та лайăх курăнать, Пăлан шурĕнче выльăхсем пуррипе çуккине те асăрхама пулать. Каллех Серде аса килчĕ: мĕн тăвать-ши халь Санюк, таврăннă-ши вĕсен ĕни, çук-ши? Таврăнман пулсан, çакăнталлах çӳремест-ши, пирĕннипе, ытти çынсеннипе пĕрле? Пăлан шурĕнче сип-симĕс каю шăтнă, вăл ăсан мăйĕ çӳллĕш кăна та мар пуль, хурăнни çӳллĕшех. Сылтăмра — çак çулсенче лартнă çамрăк чăрăшсемпе хырсем. Сулахайран вăрманăн аслă ĕшнисене, Пăлан шурне, урапа çулĕ кĕрсе каять. Çулла кунта колхоз утă çулать. Çулса пăрахсан, ялти ача-пăчана утă тавăрма илсе килеççĕ. Хăшĕ-пĕрисем утă тавăрас вырăнне паккус умне кукленсе çырла çиме пăхаççĕ те, вĕсене Оксана яланах «намăса пĕлменшĕн» ятлать; çырлине хăйĕн те çиес килет те, класра староста пулни пĕтерет, Санюк умĕнче те ырă мар.

Утта пурнех те турттарса кайман иккен. Кунтан инçех мар вырнаçнă сурăх ферми валли хăварнă пулас, капансем тавра вĕрлĕк карта тытнă та, выльăх тавраш пыраймĕ тенĕ пуль. Пĕр-ик çĕрте карта çинчен вĕрлĕксем ӳкнĕ, хăш вĕрлĕкĕ йăлтах çĕрте выртать, хăшĕ — пĕр пуçĕпе картаран таяннă. Оксана вĕсене карта çине çĕкле-çĕкле хучĕ. «Ĕнесем хыçкаланса ӳкернĕ, хăйсем те таçта çывăхрах пулмалла?» — шухăшларĕ вăл. Чăнах та, капансен тепĕр енне пычĕ те, хушка çамкаллă «Маруç» тăра парать! Кавлет хăй, пĕрехмай кавлет, Оксанăна курсан, ĕнĕрлесе илчĕ. Куçĕсем, сайра хутра мăчлатса, калама çук ăслă пăхаççĕ.

— «Маруçка», ылтăнăм,— терĕ Оксана, ĕнене пуçĕнчен ачашласа.— Кĕмĕлĕм, ăçта çухалса çӳретĕн çĕр ху-



та, ма киле пымастăн? Элле унта вырăну хытă-и, шывĕ тутлă мар-и, тен, хуçисен чĕлхи çемçе мар?

«Маруçка» хĕрачана питрен çуласа илчĕ те каллех «м-м» тесе ответлерĕ. Оксана айккинелле пăхрĕ. Çулçине тăкса ĕлкĕреймен çамрăк хурăнсем хыçĕнчен виç-тăватă ĕне пуçĕ курăнать, ĕнесем пурте канма выртнă, ушкăн майрака хушшинче пĕри майракасăр, мăкла! Санюксен «Мăклашки» вĕт ку! Оксана ĕнесене тăратса пĕр

çĕре пухрĕ те ăвăслăх çумĕпе, тӳрĕрен, вăрман хĕрнелле хăваларĕ. Утă тавăрса пĕтерсен, çулла çакăнтан утнăччĕ Санюкпа. Ун чухне ăвăссем хальхин пек çара марччĕ. Ах, çав шиклĕ, çӳçенчĕк ăвăссем... Мĕнрен шикленеççĕ, мĕнрен питĕ хăраççĕ вĕсем? Кашни çулçи чĕтрет, чĕтресе пĕр-пĕрне темĕн калать. Темле инкек кĕтет пек вĕсене, инкекĕ — кĕрхи сивĕ çил. Урнă пек килсе тухать те ним шухăшласа-туса тăмасăр вĕçтерсе-салатса пĕтерет ăвăс çулçисен туслă йышне çĕр тăрăх. Мĕн ăна, хуйхă-суйхă-сăрскерне: çулçăсемпе вылять-вылять те пăрахса каять.

Çапла мар-и хĕр шăпи те хăш чухне, хĕрачасем?

Оксана васкамасăр ĕнесем хыççăн утать. Ăна каллех хăй август вĕçĕнче Пăлан шурĕнче çӳрени аса килчĕ. Çамрăк ăвăслăхра хĕвел лайăх лекекен уçăрах вырăнсенче вĕсем Санюкпа хĕп-хĕрлĕ хĕрелнĕ палан татрĕç. Палан çырли кăвар пек çунать, алсене пĕçертессĕн туйăнать. Ăшă та таса çупкамсем йывăр, çăвĕпех вĕсем çĕртен çăра та йӳçĕ сĕткен туртнă. Палана пĕр карçинкке туллиех татнăччĕ. Ялалла çын çӳресех кайман çулпа, вăрман хĕррипе утнăччĕ. Çулĕ курăк пуснă симĕс çул, йывăççенчен сивлек вăрăм мĕлкесем ӳкеççĕ. Тӳпе тăрă, анчах самай тĕссĕрленнĕ. Хĕвел палан пек хĕрелсе çĕр хыçне анать.

Оксана йĕпе çулпа утрĕ-утрĕ те анăçалла пăхса илчĕ: хĕвел, авă, халĕ те питĕ хĕрелсе анать. Хĕрача ĕнесене васката пуçларĕ: ытлах тĕттĕмлениччен киле çитмелле. Анакан хĕвелĕн кашни хĕлхемĕпе шăплăх вылять. Тĕлĕнмелле тăнăç шăплăх. Лайăхрах тăнласан, йывăçсем, курăк тымарĕсем, çĕр сывланине илтме пулать пулĕ...

Оксанăна çĕрĕн чунĕ пур пекех туйăнать. Çав чун сана чăтăмлăн итлет, сан пĕтĕм хуйху-суйхуна ăнланать. Ахальтен мар ĕнтĕ Оксана, Татьяна Ларина пек, Пушкинăн вилĕмсĕр героини пек, чунĕ тунсăхласа, тăвăрланса çитсен çутçанталăкран, çĕртен пулăшу ыйтать. Ăна вара утмăлтуратсем, салтак тӳмисем, хурăнсемпе ăвăссем кĕтсе илеççĕ, çӳçесем пуçĕнчен ачашлаççĕ. Тăван çĕр чунĕ, тăван ял çĕрĕн чунĕ, юратнă çĕр чунĕ — аслă чун. Вăл Оксана чунне те хăйĕнни пек аслă пулма хистет, çĕнĕ вăй хушать, çунатлантарать.

## 8

Всеволод (Сева) Егоров запасри кĕçĕн лейтенант, танкист, хальхи вăхăтра колхозри тракторист, акăлчан

чĕлхин грамматикине кĕнеке çӳлĕкĕ çине кайса хучĕ те сĕтел çинчи электролампăна сӳнтерсе розеткăран кăларчĕ, ун вырăнне унта магнитофон вилкине чиксе лартрĕ: Севăн акăлчан сăмахĕсене тĕрĕс калама вĕрентекен урок итлемелле, урокĕсене вăл хушăран-хушă Хусана кайса университетри лингафон кабинетĕнче çыра-çыра килет. Уйрăмах ăна, чăваша, сăмах вĕçĕсене калама йывăр. Акăлчан сăмахĕсем нумайăшĕ темле чăшăлтатса, «шнл» тенĕ пекрех пĕтеççĕ, «чш», «тч» тесе акăлчан пек калас тесен, нумай вăй хурас пулать. Сехете яхăн янăрашса ларчĕ Сева, вăл кăшкăрашнипе анраса çитсе амăшĕ кӳрше каçрĕ. Режимпа палăртнă вăхăта тăрăша-тăрăша вĕçне çитерчĕ те хăйĕн юратнă кĕнекине, «Дипломати историйĕ» текенскерне, алла тытрĕ. Çак предмет, паллах, института вĕренме кĕрекенсен программинче çук, Халăхсен хушшинчи çыхăну институтне кĕнĕ чух «СССР историне» лайăх пĕлмелле, кĕçĕнрех классенче вĕреннĕ тĕнче историне кĕскен астумалла. Çапла шутлать Сева. «Дипломати историйĕ» вара, пĕрремĕш томри умсăмахра каланине шута илес пулсан, пĕтĕмĕшле историн тĕп факчĕсене алла илнĕ çынсене, партипе çар работникĕсене, пропагандистсемпе лекторсене, истори преподавателĕсемпе студентсене тата ытти интеллектуалсене, валли пурте ăнланмалла чĕлхепе çырнă усăллă кĕнеке. Уйрăмах вăл дипломат пулма хатĕрленекен çамрăк кадрсене кирлĕ, имĕш...

Апла йăнăшмасть иккен Сева сехечĕ-сехечĕпе çак «Историе» конспект туса ларса. Икĕ томне те ăнăçлă шĕкĕлчесе тухсан, пысăк шанчăк пулать малашлăхра. Чи хăратаканни халлĕхе — ют çĕршыв чĕлхи. Çавна çине тăрсах хатĕрленмелле; хулара «инязĕ» те, «инфакĕ» те, акăлчан шкулĕ те пур, унта хатĕрленме нумай çăмăлрах ĕнтĕ, мĕн тăвăн, яла таврăнтăн-тăк, кунтах майне тупмалла. Халлĕхе Сева авалхи Рим дипломатине çеç конспектленĕ-ха. Хĕл вăрăм, хĕлĕпе чылай ĕç тума пулать.

Авалхи Римран паянхи куна таврăнса, Сева хаçат купине ухтарма пуçларĕ. Чили... Чилири трагеди... Сутăнчăк генералсен каварĕ... Хунта... Путч. Пăлхавçăсем «Ла Монеда» кермене штурмпа илнĕ... Сальвадор Альенде президент çапăçура вилнĕ. Пабло Неруда вилнĕ, çуртйĕрне фашистсем шыва путарнă. Луис Корвалан — фашистсен аллинче... Вуласан çӳç-пуç вирелле тăмалла. Хăрушă, хăрушă... Чили юн ăшĕнче. Шăлне çыртса, чыш-

кисене чăмăртаса вулать Сева Егоров Чилирен килнĕ хурлăхлă хыпарсене. Çав хыпарсем килме пуçланăранпа, Халăх пĕрлĕхĕн халăх суйласа лартнă саккунлă президенчĕ Альенде фашистсемпе кĕрешсе паттăрла вилĕмпе вилнĕренпе, уйăх иртрĕ. Юнлă террор çаплах урнă тăвăл пек асать-ха.

Сева телевизорпа «Социализм тĕнчи» передачăна пăхасшăн пулчĕ, Чили çинчен мĕн те пулин каламĕç-ши, терĕ. Кĕтнĕ пекех, экран çинче документлă фильм — «Чили. Кĕрешӳ тапхăрĕ, йывăр тапхăр». Авторĕ Ленинла преми лауреачĕ Роман Кармен кинорежиссер. Шуралнă çӳçлĕ типшĕмрех çын пусăрăнчăк сасăпа майпен калаçать. Çĕршер çын шуса иртет экранра: Сальвадор Альенде, еалхуллă та ывăннă сăнлăскер; Луис Корвалан — халăх юратса «Лучо» тесе чĕнекенскер, Анд индеецĕсен йăхĕнчен тухнăскер, сенатор, Чилири коммунистсен партийĕн Генеральнăй секретарĕ; рабочисем, хресченсем, студентсем, хĕрарăмсемпе ачасем.

Кармен Чилире темиçе уйăх пурăннă, президентпа нумай хутчен тĕл пулнă. Фильма ют çĕршыв телехроники те кĕнĕ. Пиншер сăнпа пăхать Сева çине экранран Чили, чи кăткăс, чи йывăр вăхăтра ӳкернĕ режиссер хăйĕн фильмне, трагедилле тапхăра сăнласа панă. Малтан — халăх влаçĕ çиеле тухни, унтан — президентпа паллаштарни, вара — юнпа пĕвеннĕ çуркунне. Чилире çуркунне сентябрьте килет. Кăçал вăл савăнăçлă пулмарĕ, юнпа пĕвенчĕ. Кун хыççăн кун, факт хыççăн факт кăтартса, пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕн, «гориллăсем» пăлхав патне епле шуса пынине кăтартать автор, саботаж, террор, пусмăр епле çитĕнсе çуралнине тĕплĕн уçса парать. Фильм пĕрре реквием пек, тепре оптимистла трагеди пек янăрать: «Нимĕнле хура генералсем те, халăх юнне мĕн чуль тăксан та, Чукикамата горнякĕсене, Вальпараисо пулăçисене, Сантьяго студенчĕсене чĕркуçлентерейĕмĕç, çапса хуçаймĕç»,— тет Роман Кармен хăйĕн фильмĕпе.

Экран çинче каллех Альенде... Альенден юлашки сăмахĕ... Сева сывлама та пăрахрĕ, диван çинчен тăрса экран çывăхнех пычĕ. Хăйĕн юлашки сăмахне президент «Ла Монеда» керменте халăх умĕнче радиопа тухса калама пăлхав пуçланнă малтанхи самантсенче çырнă. Пăлхавçăсем радиостанцисене пĕрин хыççăн тепĕрне яра-яра илнĕ, юлашки сăмаха коммунистсен радиостанцийĕ тăрăх панă. «Тен, ку сирĕн умра тухса каламалли юлашки май пуль манăн — «Порталес» тата «Корпора-

сьон» радиостанцисене бомба пăрахса аркатса тăкрĕç,— янăрать хăлхара президент сасси, Кармен ăна куçарса пырать.— Хамăн сăмахра эпĕ салтак тупине пăснă пугсĕрсене питлетĕп, сутăнчăк командующисене питрен суратăп. Çавăн пеккисенчен пĕри вăл — Мерино адмирал, хăйне хăй флот командующийĕ тунăскер; Сесар Мендосо генерал — йĕксĕк, ĕнер çеç правительствăна чунран парăнни çинчен кăшкăрса çўрекенскер, паян карабинерсен корпусĕн директорне хăйне хăй лартнăскер; çакăн пек сутăнчăкла ĕç умĕнче ĕççыннисене эпĕ çапла çеç каласшăн — эпĕ парăнмастăп! Историйĕн çак кукăрĕнче эпĕ халăха юрăхлă пулас тесе пурнăçа та пама хатĕр. Эпĕ шанса тăратăп: пиншер чилиец чĕрине кĕрсе вырнаçнă эпир акнă ирĕклĕх вăрлăхĕ шăтса тухатех, ăна нимпе те пĕтерме çук. Социаллă прогреса вăйпа, вилĕмпе чарса лартма пултараймаççĕ. Истори пирĕншĕн ĕçлет, историе халăх тăвать.

Манăн Тăван çĕршывăн ĕççыннийĕсем! Шанчăклă пулнишĕн тав сире. Эсир яланах шанчăклăччĕ, хама та ĕненеттĕрччĕ. Сирĕнпе пĕрле эпĕ тĕрĕслĕхшĕн тăрăшрăм, конституципе закона хисеплеме сăмах парса хам сăмаха тытрăм.

Çакă татăкла самантра, сăмахăма илттерме май пур юлашки самантра, эсир пĕр япалана лайăх ăнланăр: чи кĕ леш енчи капитал, империализмпа унăн тарçисем çар вăйĕпе усă курса традицие пăсрĕç... Пуринчен ытла эпĕ пирĕн çĕрĕн ĕçчен хĕрарăмне, пире чунран ĕненекенскерне, пирĕн ачамăрсен амăшне чĕнсе калатăп, мĕншĕн тесен вăл ачисемшĕн Халăх пĕрлĕхĕн правительстви епле тăрăшнине аван пĕлет; специалист-патриотсене чĕнсе калатăп, вĕсем сутăнчăк профсоюзсен пăтăрмахĕсене пăхмасăр ырми-канми ĕçлерĕç; юрă янраттарса кĕрешĕве çĕкленнĕ çамрăксене чĕнсе калатăп эпĕ!

Рабочисем, хресченсем, интеллигенци — Чили халăхĕ, сахал мар хурлăх тўсĕн эсĕ малашне, мĕншĕн тесен çĕршывра фашизм иртĕхет... Эпĕ сана чĕнсе калатăп: эпĕ яланах сирĕнпе пулăп, мана сирĕнтен никам та уса лпа асăнмĕ.

Ман Тăван çĕршывăн ĕççыннийĕсем, эпĕ Чилин çутă пуласлăхне ĕненетĕп, унăн телейлĕ шăпине ĕненетĕп. Çак хаяр та тĕттĕм вăхăтсем иртĕç, сутăнчăксем влаçра нумаях лараймĕç. Пĕлсемĕр: çĕнĕрен анлă çул уçăласси инçе мар. Çав çулпа ирĕклĕ çын каллех çĕнĕ пурнăç тума утĕ. Сывă пултăр Чили! Сывă пултăр Чили халăхĕ! Сывă

пулччăр ĕççыннисем! Çакăн пек манăн юлашки сăмахăм. Эпĕ курсах тăратăп — пурнăçăма пани сая каймĕ!»

Луис Корвалан та фашистсен аллинче. «Эпĕ ирĕке юрататăп, анчах та мана тĕрмепе хăратаймăр. Халăх умĕнче эпĕ таса, çавăнпа та вилĕмрен хăрамастăп»,— ку Корвалан сăмахĕсем.

Фильм вĕçĕнче Чилири тĕнчипе паллă поэт-коммунист Пабло Неруда влаçа фашистсем ярса илнĕ хыççăн çырнă сăвă янăрать.

В одной упряжке, Фрей и Пиночет
ликуют — славят пепельный сентябрь,
каратели истории чилийской,
гиены, рвущие победный стяг...

Сева хытă пăлханнипе тата тарăхнипе вырăнтан тапранаймасăр çаплах экран çине пăхса тăрать. Ăна фильм халь те пĕтмен пек, хăй халь те Неруда сăввине итленĕ пек, Альенде сăнне курнă пек, Корваланăн ăшă кулли сӳнмен пек туйăнать; халь те — сутăнчăк генералсемпе вĕсен хуçисен мăнтăр пичĕсем шуса иртеççĕ. Çакăн пек тăрса Сева сисмен те, алăкран çын кĕрсе тăнă: чăматанне кăмака хыçне лартрĕ, çиелти тумне хывать. Пичĕ бронза тĕслĕ хуралса, çуркаланса пĕтнĕ, аллисем кирпĕч пек хĕрлĕ, çӳçĕ хулпуççи таран, куçĕсемпе шăлĕсем электричество çутинче йăл-ял çиçеççĕ. Çийĕнче студентсем Целинара тăхăнакан симĕс форма, сулахай хулĕнче «ССО» тесе çырни пур: студентсен строительство отрячĕ. Шофера та юрăхлă иккен кун пек тум.

Салтак ботинкипе урайне кĕмсĕртеттерсе, çын Сева патне пычĕ те хуллен çеç:

— Сывах-и? — терĕ.

Çакă кĕтмен çĕртен пулнипе, Сева ялтах сикрĕ.

— Ай!

Коля ахăлтатса кула пуçларĕ:

— Дипломат темерĕн, хăйне йăтса кайсан та сисмест. Кама çапла çăварна карса пăрахсах пăхса тăратăн? Хăш диктор майрине: Аза Лихитченко текеннине-и е урăхне?

— Мар-ха. Хăçан çитрĕн? Сывах... Фильм куртăм Чили çинчен.

— Чили? Кĕçĕр Турчкакасси клубĕнче митинг пулать вĕт, çула май Сердесен умне чарăнтăмăр та, кĕтет вăл пире. Унсăр пуçне тата хăшпĕрисем кĕтеççĕ, тет.

— Камсем?

— Лере пӗлӗн.

— Мӗн митингӗ?

— Альендене вӗлернӗренпе ӗнер пӗр уйӑх ҫитнӗ.

— Ҫапла.

— Ҫапла-тӑк, тухса мотоцикла майла. Эп ҫӑвӑнатӑп, ҫикелес те пулать. Анне ӑҫта?

— Кӳршӗре.

— Ӑна чӑрмантармӑпӑр, хамӑрах мӗн те пулин тупса ҫийӗпӗр.

— Яшка хуранта...

Икӗ тӑван Турчкакасси клубӗ тӗлне кӗрлеттерсе ҫитнӗ вӑхӑтра шалта президиум сцена ҫинчи вӑрӑм сӗтел хушшине вырнаҫатчӗ. Сӗтел варне графинпа шыв лартрӗҫ, трибуна ҫине — шыв тултарнӑ чечен стакан. Президиумра партком секретарӗпе колхоз председателӗ, Владимир Николаевич, Зоя Филипповна, Сергей Кондратьевич, шкул директорӗ темшӗн курӑнмасть, тен, района кайса таврӑнайман, ялти ыр ятлӑ темиҫе дояркӑпа механизатор. Залра сӗрлекен халӑха лӑплантарма тесе, партком секретарӗ графина ручкӑпа шаккать. Лӑпланкаларӗҫ те, секретарь трибуна умне пычӗ. Анчах та вӑл: «Кӗҫӗр эпир...» — теме ҫеҫ ӗлкӗрчӗ, алӑк яри уҫӑлса кайрӗ, клуба, штрум ҫилӗ килсе кӗнӗ евӗр, икӗ ҫамрӑк кӗрсе тӑчӗҫ. Алӑк патӗнче ҫамрӑксем нумаййӑн кӗпӗрленетчӗҫ. Кольӑна вӗсем тӳрех палласа илчӗҫ. Палласа илчӗҫ те хӑйсем ӑҫта килнине манса харӑссӑн уласа ячӗҫ:

— У-у! Целина кашкӑрӗ ҫитрӗ! Ҫӳлелле ыватас! Маччана ҫӗклес! Раз-два! Раз-два!

Йӗкӗтсем Кольӑна чӑнах та ярса илчӗҫ те залрах ҫӳлелле ывӑта пуҫларӗҫ.

— Даешь, Целина! Урра!

Зал вӗҫӗнче мӗн хӑтланнине секретарь куҫлӑхне ҫамки ҫине хӑпартса, ҫутӑран ывӑҫ тупанӗпе хупланса ун айӗпе пӑхать. «Целина» тени хӑлхине аванах пырса кӗчӗ пулмалла. Ӗҫ мӗнре иккенне тавҫӑрса та илчӗ:

— Целина паттӑрне — президиума! — кӑшкӑрчӗ вӑл пӗтӗм зал илтӗнмелле.

Коля президиума вырнаҫса ларсан, Чили халӑх геройне, Сальвадор Альендене, вӗлернӗ фашистсене питлесси пуҫланчӗ. Хӑй пурнӑҫне халӑх ирӗклӗхӗшӗн, унӑн телейӗшӗн панӑ кӑвар чӗреллӗ президента пӗтӗм зал ура ҫине тӑрса пӗр минут хушши шӑплӑхпа чыс турӗ, ӑна нихҫан та манмасса сӑмах пачӗ. Коля хӑйне калаҫма тивет пуль тесе шутламанччӗ; тиврӗ те, трибуна умне тухса тӑчӗ:

— Эпĕ каласма пĕлместĕп,— терĕ вăл хыттăн,— анчах та «газикăнне» те, «ЗИЛăнне» те, «МАЗăнне», тата ытти çавăн йышши транспортăн баранкине çавăрма лайăх пĕлетĕп. Эпĕ ăна халĕ те çĕр çывăрмасăр виçĕ уйăх çавăрса килтĕм Казах çĕрĕнче. Халь шутлатăп, кулăшла туйăнать: мĕне пĕлтерет вăл эпĕ ялтан пĕччен кайса Казахстанра виçĕ уйăх машшин çӳретни? Ниме те. Ма тесессĕн эпĕ пĕччен кайнă, хампа ялтан никама та илсе тухса каяйман. Начар ку. Вуннăн, çирĕмĕн, аллăн каймалла пулнă. Ма тесессĕн...— ку тĕлте Коля кăкăр кĕсйинчен пĕчĕк блокнот кăларчĕ.— Ма тесессĕн хальхи вăхăтра Целинара, çанталăк калама çук çумăрлă та çиллĕ тăнипе, çĕршер гектар тулă туни çинчех, хиртех, çĕрет; пирĕн район планпа 86 пин тонна тырă памаллаччĕ, эпир патшалăх пӳлмине 122 пин тонна ăсатрăмăр. Тырă гектартан 28—30 центнер тухать. Тĕлĕнмелле пысăк тухăç! Районта кăçал кăна 100 пиншер тонна вырнаçакан 20 склад тунă, килес çул 12 тума палăртнă. Эсир тырă вырнаçтарма çакă çителĕклĕ тетĕр-и? Ним чухлĕ те... Станцинчи элеваторта тырă, ниçта хума вырăн çуккипе, çĕртех, çумăр айĕнчех, кăшăлĕ-кăшăлĕпе çĕрсе выртать. Элеватор талăкне виççĕр-тăватçĕр тонна йĕркене кĕртсе ăсатма пултарать, тырри вара икĕ хут (хăш чухне виçĕ хут!) нумайрах килет. Ĕç алли çитмест, хуть те çурăлса кай. Тырри йăтăнса пулать, пуçтарса кĕртме, çын çитменнипе, питĕ хĕн. Вăт çавăн чух кулаççĕ те ĕнтĕ пиртен тĕрлĕрен фашистсемпе сионистсем: акса ӳстернĕ пуянлăха тирпейлейменрен кулаççĕ, пуçĕсене çĕклеççĕ.— Коля тукмак пек чăмăрне çĕклерĕ те трибуна çине шан! тутарчĕ.— Эпир вĕсене кăтартăпăр! Сальвадор Альенде — вилĕмсĕр! Чили революцийĕ — вилĕмсĕр! Вăл, юмахри феникс кайăк пек, кĕлрен те чĕрĕлсе тăрать. Чили çĕнтерет! Венсеремос!

Залра тăвăл тухрĕ. Сăмах пĕтернĕ хыççăн каяллах президиума лармаллине манса, Коля зала анса кайрĕ. Ăна хирĕç Санюк, Оксана, Настя, Сева, Нелли килеççĕ. Коля пурне те, çав шутрах Севăна та, ыталаса чуптурĕ. Вара Неллипе урама тухса кайрĕç, урамра ăна Нелли мăйĕнчен уртăнса çĕр хутчен чуптурĕ. Вара тăкăрлăкалла пăрăнса тĕттĕмре çухалчĕç. Кăштран Севăпа Настя иртрĕç. Вĕсен хыçĕнчен Люся Сидоровăпа Вихтăр Вани. Севăн тата Кольăн йăмăкĕ, Лиза Егорова, паян шкултан килне кайман, Неллисем патне хăнана юлнă. Акă вĕсем Зоя Филипповнăпа клубран тухрĕç те, Лиза, тĕттĕмре

питĕ шикленсе, учительницăна аллинчен тытрĕ. Вара иккĕш тем çинчен питĕ хĕрсе калаçса анаталла утрĕç.

Оксана Коля сăмахне калама çук тимлĕн итлерĕ, Коля çапла пулса таврăннăшăн савăнчĕ те, тĕлĕнчĕ те вăл, ăна уйрăмах Кольăн пĕр сăмахĕ кăсăклантарчĕ. Çав сăмаха пĕлменнипе, Коля Целинаран ытла та ăслăланса килнĕн туйăнчĕ ăна. Феникс кайăк... Мĕнле япала-ши вăл? Санюкран ыйтса пăхсан епле-ши, кулмĕ-ши Оксанăран...

Шкул тĕлне çитсен, ыйтрĕ-ыйтрех:

— Саня, мĕн вăл феникс?

— Кайăк.

— Мĕнле кайăк? Кăвакарчăн пек-и?

— Ан култар-ха эс. Хăватлă кайăк вăл, курма ăна никам та курман та, ăмăрткайăкран пысăк теççĕ. Тĕрĕссипе каласан, феникс — авалхи египтянсен чи таса шутланакан кайăкĕ. Пилĕкçĕр çулта пĕрре феникс Египета, Ра ятлă хĕвел туррин çуртне, вĕçсе килет. Унта ăна çунтарса яраççĕ, анчах та вăл кĕлрен чĕрĕлсе тăрать те хĕрĕхмĕш кунне Индие вĕçсе каять. Урăхла калани те пур: феникс ватăлса çитсе хăйне хăйех вутра çунтарса ярать, çунтарса ярать те кĕлрен çап-çамрăк кайăк пулса вĕçсе тухса каять. Чили революцийĕ çĕнĕрен чĕрĕлсе тăрасса Коля тĕлĕнмелле лайăх каларĕ, маттур. Феникс ĕмĕрхи чĕрĕлĕх символĕ, вилĕмсĕрлĕх символĕ...

Оксана Санюка шăппăн итлерĕ, ăна ăнланса çинеçинех пуçĕпе сĕлтрĕ:

— Саня, юрату вилĕмсĕр пулать-и? — тата шăппăнрах ыйтрĕ вăл Серде çумнерех йăпшăнса, ăна сăнаса пăхса: Санюк чылайччен ответлемерĕ, хĕрачана Киреметайĕнчи хура авăр пек тарăн куçĕсенчен шухăшлăн тинкерсе тăчĕ. Унта çумăр пĕлĕчĕсем хыçĕнчен ирĕке иксе тухнă пĕртен-пĕр çăлтăр йăлтăртатать. Пĕртен-пĕр çăлтăр, Оксана çăлтăрĕ. Ăна Оксана та асăрхарĕ. Вара Санюкран ответ кĕтсе илеймесĕрех:

— Манăн çутă çăлтăрăм,— тесе хучĕ.

1973

—

# БАНДЕРОЛЬ

## ПОВЕСТЬ

Света, кĕт мана. Эпĕ Тухăçа, Дамански утравĕнчен инçех мар, лекрĕм; халĕ присяга йышăнман-ха, карантинра эпĕ, салтак мар, йышăнсан вара, халăх ĕçĕшĕн пурнăçа та пама хатĕрри çинчен командовани умĕнче, салтаксем умĕнче, пĕтĕм халăх, Тăван çĕршыв умĕнче тупа тусан, чĕркуçленсе ялав чуптусан, вара салтак ятне илетĕп. Çав самантран эпĕ — атте-аннен мар, санăн мар, пĕтĕм халăхăн, çавăнпа та ăнлан, вăхăт çитмесĕр, Çĕршывăм саппаса ямасăр, киле пыраймăп, сана кураймăп, кăвак куçунтан пăхаймăп, çӳхе тутунтан чуптăваймăп, çурăмунтан лăп-лăп! лăпкаймăп. Эс парса янă тĕрленĕ тутăр — кăкăр кĕсйинче; эс парнеленĕ, ман çине йăлкăшса пăхакан сăну — кăкăр кĕсйинче, чĕре тĕпĕнче; ир пулсан та, каç килсен те, минутсерен-пĕр кăлара-кăлара пăхатăп, çамкунтан чуптăватăп. Чĕрене ăшăтать вăл, чуна ăшăтать, куçа çивĕчлетет, ăса уçать.

Кĕт мана, никампа та ан çӳре, никампа та ан улăштар мана. Эсĕ Силемпи аппаран çуралнă вĕт, аçу та сан — Акташ. Саврăш паттăр пек, вилнĕ çĕртен чĕрĕлсе тăнăскер, шывра та путмanскер, вутра та çунманскер сан аçу. Илтнĕ-и эсĕ хăвăн аçупа аннӳ çинчен тĕлĕнмелле хитре те чаплă халап? Е ăна сана никам та каласа кăтартман-и? Света, вĕсен тĕслĕхĕ, çав хăватлă симфони, мана тĕпренех пăлхатрĕ. Ялта чухнех çырма пуçланăччĕ эпĕ повесть. Çыртăм, чылай çыртăм, хальчченех, паян кунчченех, тăрăшрăм, çĕркаç, акă, çырса пĕтертĕм. Света! ăна халĕ сана ярса паратăп. Колхоз правленинче те, шкулта та, ху пĕлетĕн ĕнтĕ, пичетлемелли машинка пур. Таса хутне района кайса Митюк тусăмран, хаçат редакцинчен, ыйтса пăх. Пĕр çĕклем парса ярĕ вăл сана

таса шурă хут, копировка текеннине те тупса парĕ. Эпĕ ун патне те çыру çыртăм-ха, вăл кĕтет те пулĕ ĕнтĕ сана.

Света, алçырăвне никама та ан кăтарт, ху çап, икĕ экземпляр, вара эп çырни тăрăх тĕрĕслесе тух та Шупашкара Василий Алендей писатель патне ярса пар. Вăл та манăн тус. Алçыру пырасси пирки эпĕ ăна та çырса ятăм.

Света! Халĕ çур çĕр çитсе пырать, ку çырăва дневальнăйпе калаçса килĕшсе, пуринчен те пытанса, çыратăп, ыйха татса, сана курас килнипе çунса хурататăп шурă хута.

Повеçре аттем çинчен ăна пĕр шеллемесĕр, анчах та вăл çапла пулнишĕн чунран хĕрхенсе çыртăм. Хĕрӳллĕ салампа сана чунран хисеплекен Михетер Мирунĕн Павăлĕ. Çырăва илсенех ответ çыр. Кĕтетĕп.

## 1. Мирун ĕмĕчĕ

...Çыхăну çур сăмахранах татăлчĕ. Трубкăра Акташ сасси:

— «Çăка», эпĕ — «Юман», мана илтетĕн-и? — терĕ те шăп пулчĕ. Ахалех кăшкăрашрĕ ăна хирĕç Мирун, вырăсла та, чăвашла та каласа пăхрĕ:

— «Юман»! Акташ! Мĕн шуйттанĕ пулчĕ, ма чĕнместĕн? Кабеле халь çеç тăсрăмăр вĕт! — тарăхса кăшкăрчĕ вăл. «Юри хăтланать йĕксĕк, ялтишĕн тавăрать, Силемпийĕшĕн халь те кураймасть. Мана бомбăсем айне провод сыпма ярасшăн»,— вĕчĕрхенсе шутларĕ Мирун тăшман самолечĕсем ĕрлесе, пĕтĕм тӳпене хупласа килнине ывăç тупанĕ айĕнчен сехĕрленсе сăнаса. Çӳлте тӳпере икĕ «мессершмитт» пирĕн самолета тапăнчĕç. Моторсем хаяррăн ула-ула яни, çуначĕсем хĕвел çинче йăлтăртата-йăлтăртата илни, пулемечĕсемпе вăхăт-вăхăт шатăртаттарни чуна кайса тивет. Пирĕн самолет, кăвак тӳпере çăра хура тĕтĕм варкăштарса, вăрман хыçне ӳкрĕ.

Çук, Мирун ĕненмест — ăна-и, вĕлересшĕн-и? Акташ ăна фашист самолечĕсемпе усă курса вĕлересшĕн-и? «Çук, тăванăм, ентешĕм, çак тамăк ăшне эсĕ чăм, провод сыпма эсĕ сĕтĕрĕнсе тух; эпĕ мар, эсĕ пĕтмелле; бомба айне тӳр килеймесен, ак хам, карабинпа...» — çапла шутласа, Мирун куçĕ умне Силемпи сăнне ӳкерчĕ: пĕрре пăхсан, хĕр сăнĕнче нимех те çук пек — çаврака çепĕç янах,

тӳрĕ селĕм сăмса, куç палăрăмĕнче темле ăнланмалла мар вăрттăнлăх... Пит питех ĕнтĕ, урăх мĕн пултăр... Анчах... пăхăр-ха ун тути çине. Кулмасть-ха тути, ак-ак кулса ярас пек... кулса яратех вăл. Ирĕксĕрех çав кулла кĕтетĕн, уçă, именчĕклĕ, ĕненӳллĕ кулла, чи пысăк телее кĕтнĕ пек кĕтетĕн. Чĕнӳллĕ, анчах чуптутарман, уçă кăмăллă пек, анчах ăнланма май çук тута. Именӳллĕ те хĕрӳ юнлă пӳ... Çĕр çинче мĕн чухлĕ хитре хĕр пуль! Мĕн тума кирлĕ вĕсем Мируна? Мирун нихçан никам çине пăхса та çапла савăнмасть, нимĕне те çапла тери юратмасть, чунне пĕтĕмпех Силемпие панă, пĕр ăна çеç! Хĕрĕн тути çеç мар çапла савăнтарать ăна — хура куç харшисем, тĕлĕнтермĕш тăрăхла куççем, вăрăм ачаш мăй авăкĕ, килĕшӳллĕ питшăмми... Епле савăнмасăр пăхăн-ха ĕнтĕ çакăн пек хĕр çине? Çакă мар-и ĕнтĕ вăл халиччен пулман илем, ăнланмалла мар вăй-хăват, тĕлĕнмелле чаплă япала?! Кăкăр-çурăмĕ, кĕлетки, утти, калаçни-кулни... «Эй, турăçăм... пĕтме ан пар мана. Анчах чим-ха, сывă юлăп, тейĕпĕр, вăрçă пĕтĕ, Акташ та сып-сывах таврăнĕ. Вара мĕн пурăнни? Силемпи манăн мар, Акташăн...»

Мирун карабинне хыпашласа пăхрĕ, магазин коробкине тĕрĕслерĕ — тулли обойма. Пĕр патронне пеме хатĕрлесе кĕпçине кĕртрĕ, затворне предохранитель çине лартрĕ; карабинне çакрĕ те кабель тĕрĕслесе кунталла шума тивĕçлĕ Акташа хирĕç кайрĕ. Çул урлă каçрĕ çеç, тăшман самолечĕсем пуç çинех çитрĕç. Унта-кунта зениткăсем кĕрслетрĕç. Хура курак кĕтӳне ачасем юрпа пенĕ пек çеç туйăнчĕ çакă — самолетсем вĕсене шута та илмерĕç. Хир çӳлтен ывăç тупанĕ çинчи пек лайăх курăнать. Тăшман Мируна та паçăрах асăрханă ĕнтĕ, паллах. Хĕвеллĕ аслă тĕнче пĕтĕмпех мотор шавĕпе тулса ларнă, çĕрпе пĕлĕт таранах, мотор улать те, шăрăхпа типсе хăрнă хир сиксе чĕтрет, кашни курăк туни хăраса пуçне чикет. Зениткăсем халь пĕрер-икшерĕн çеç пемеççĕ, урнă йытăсем пек сиксе вĕреççĕ. Кăвак тӳпере снаряд вĕçĕхĕррисĕр нумай çуралать. Мĕн пур-ши тӳперен анли, тарănни? Çав аслă тӳпере паян — тăвăр. Çунатсем, çунатсем, çунатсем, самолет кӳлеписем, хӳрисем — тăвăр; тӳпере ăçта пăхнă унта хура хĕрес. Мĕлкесем вĕлтлетнипе хир чӳхеннĕн туйăнать. Пĕр вăхăт тикĕссĕн кĕрлесе тăнă хыççăн моторсем хаярран шăхăрса улама тапратрĕç. Пĕр самолечĕ тайăлчĕ, çĕрелле ана пуçларĕ, тепри, тата тепри... Чуна кайса тивмелле улаççĕ, тĕрлĕ сăслăн — чĕре

тапма чарăна-чарăна ларать, куç хуралса килет. Самолетсем Мирун çинех анаççĕ, Мирун, шăтăкне тупайман шăши пек, ниçта кайса кĕрейми ăшталанать. Пĕрремĕш самолетран хура пăнчăсем уйрăлчĕç: фашистсем Мирунпа Акташăн артиллери дивизионне бомбăсемпе аркатма пуçларĕç.

Мирун темшĕн ури çине сиксе тăчĕ, çавăнтах тăмлă вĕри, хытă çĕре ӳкрĕ, пичĕпе, кăкăрĕпе, хырăмĕпе, пĕтĕм пĕвĕпе, армути шăрши перекен тăпра çумне йăпшăнчĕ. Мăнтарăн çĕр, пĕртен-пĕр шанчăк, хăтар инкекрен, çĕр. Мирун макăрса ячĕ. Çĕр хăрушшăн силленсе илчĕ, пĕрре, иккĕ, унтан сиксе чĕтреме пуçларĕ. Çӳлте тӳпе çурăла-çурăла каять, Мирун çине ишĕлсе анассăн туйăнать. Çителĕклĕ! Çитрĕ! Пĕтĕм тĕнче арканса кайрĕ пулмалла. Чарăнсамăрччĕ ĕнтĕ! Анчах çĕр чĕтреме чарăнмасть, бомбăсем шилесе анаççĕ те ахлатса çурăлаççĕ, сывлăшра бомба ванчăкĕсем чăшăлтатса тăраççĕ — вĕçĕ те, хĕрри те çук бомбежкăн. Шанмасть чĕрĕ юласса Мирун. Пĕчĕк, ниçта кайса кĕрейми, пурте маннă шăши. Пĕчĕк? Кам, Мирун-и? Çук, вăл акăш-макăш пысăк, пӳне самолетсенчен ниçта пытараймасть. Пурте маннă? Манман. Пĕтĕм енчен курнать. Эх, ана пыйти пек пĕчĕк пулса тăрасчĕ, хăтăласчĕ, пурнасчĕ! Вилме-и? Кунта пит̆ĕ час вилме пулать, секундрах пашалу,котлет, нимĕр туса хураççĕ. Вĕçне çитиччен тӳсесчĕ, сывă юласчĕ, пурнас, пурнас килет!

Шăплăх кĕтмен çĕртен килсе хупларĕ. Взрывсенчен те хăрушăрах, анратакантарах шăплăх. Шăплăха илтмесĕр, ăна ĕненмесĕр, Мирун çĕр çумне лăпчăнать те лăпчăнать, пĕр çĕрте çеç сывă юлнă лаптăка ыталать. Минут иртет, иккĕ,— таврара çаплах шăп. Мирун пĕвĕ пĕчĕкленнĕçемĕн пĕчĕкленсе пычĕ, унтан малтанхи пысăкăш çеç тăрса юлчĕ.

Мирун — ура çинче. Шăрăхпа типсе хăрнă хирте çил тухнă, шуйттан урапи текен ӳсентăран çăмхи кусать. Таврара пурте сып-сывах иккен, пĕр взрыв варинкки те çук — бомбăсем кунта мар, Акташ килмелли енче ӳкеӳке çурăлнă. Хăранă та тарăхнă кушак пек чашкăрса тӳперен аташнă хурçă катăкĕ килсе ӳкрĕ. Мирун тăпах чарăнса ун çине тĕлĕнсе пăхса тăчĕ: шăллă, кукăр-макăр, çунчăк хурçă татăкĕ, пуçран лекнĕ пулсан, пуç чашкине хăпăтса пăрахатчĕ.

Самолетсем кăмăлĕсем тулнăн мăрăлтатса каялла кайрĕç, зениткăсем вĕсене нимех те тăваймарĕç.

Хĕвел анса ларас патнех çитнĕ. Хирте тусан тĕтри тăрать, ăна хĕрлĕ анăç тĕсĕ çапнă. Мирун армути тĕмĕсем хушшипе тăсăлакан кабель тăрăх, татăлнă тĕлне тупса сыпса хăвармăп-и, тепре килмелле ан пултăр тесе, пĕлнĕ çĕрпе сăнав пункчĕ еннелле утать. Армути шăпăрĕ кирза атта çапăнать, атă сăмсине йăлтăраса тăракан пуличчен тусанран тасатать. Сăнав пункчĕ инçе мар ĕнтĕ, çывхарнăçемĕн çывхарса пырать, Акташпа тĕл пуласси те çывăх. Мирун кабель сыпасса кĕтсе ларать пуль, сысна, çын пĕтсен те юрать, вăл çеç сывă юлтăр. Силемпи—унăн... Вăл чĕрĕ чух Силемпи нихçан та Мируна пулас çук. Çак шухăш пуçне пăта пек кĕрсе ларнипе, Мирун Акташа курайми те курайми пулса пычĕ. Чĕр тамăкра пиçсе тухнăскер, вилĕме куçран пăхнă кĕвĕç чун, çиллине шăнарайманнипе карабинне пӳрнисем пĕлми пуличчен чăмăртать: «Ларать пуль-ха сăвăр пек пытанса, халĕ те тухман пуль. Патрона кĕртсе лартнă, затворне туртса хунă, предохранитель çинче çеç тытăнса тăрать, иксĕмĕр çеç юлсан, перетĕп те пăрахатăп,— шухăшлать Мирун,— персе пăрахатăп та чавса чикетĕп, шыраччăр унта кайран çак асар-писер вăхăтра — пĕрре пăх, эпир кунта, тепре пăх, пирĕн вырăна нимĕçсем çитсе тăнă, аташса килнĕ фашист пули çине йăвантарма пулать». Мирун шухăшне çирĕплетме тенĕ пекех, сылтăмран пĕрин хыççăн тепри виçĕ пуля çепĕççĕн юрласа иртрĕ, унтан инçех те мар пулемет шăтăртатса илчĕ. Пырсан-пырсан, армути уйĕ пĕтрĕ те, автан хӳри пек сарăлса та авăнса тăракан кăкăр çӳллĕш курăк пуçланчĕ. Курăк хушшипе ĕнтĕрĕкре пĕр мĕлке йăкăлт-йăкăлт! сиксе килет. Ку Акташ, улах вырăнта персе пăрахма меллĕ пулать тесе, Мирун карабинне вĕçертрĕ. Акташ-и? Çук, урăх салтак. Мируна асăрхарĕ те аллине арман çуначĕ пек сулкалама пуçларĕ, такăна-такăна ӳксе чупать. Хăй хытă чупнипе ăшша пиçнĕ, йĕп-йĕпе тара ӳкнĕ, куçĕсем ылмашăнса кайнă.

— Кĕçĕн сержанта...

Мирун туять: ун карабин тытнă алли тарласа кайрĕ, çурăмĕ те йĕп-йĕпе.

— Акташев кĕçĕн сержанта... Халь çеç... Бомбежка вăхăтĕнче... Çав тамăкра кабель сыпма тесе тухнă та... Куç умĕнчех... Бомба ӳкрĕ те таçта çити ывăтса ячĕ... Пырса пăхрăмăр та вилнĕ...

Мирун тарлă аллипе карабина çатăрласа тытнă та юпа пек шак хытса кайнă, сăнне хăй калама çук тĕлĕннĕ, хуйхă витĕр çапнă пек тăвать, пуçĕнче: «Çапла çăмăл

татăлтăмăр-и, çапла çăмăл пĕтрĕ-и, аван, питĕ аван»,— текен шухăш хăйĕн. Салтак çаплах лăпланаймасть:

— Никам та ирĕксĕр яман ăна... Мана хăйпе чĕнчĕ те, каймарăм... Инçе те шуса ĕлкĕреймерĕ...

Салтак çаннипе тарлă питне шăлать, тĕссĕр куçĕсемпе Мирун çине мĕскĕннĕн пăхать. Мирунăн урисем тимĕртен тунă пек йывăрланса кайрĕç, çĕр çумĕнчен хăпăтаймасть вĕсене. Пĕр вырăнтах тăрать, нимĕн те чĕнмест. Вăл сасартăк çав тери хăраса ӳкрĕ, мĕншĕнне хăй те пĕлмест.

— Лейтенанта пĕлтерес пулать,— терĕ юлашкинчен Мирун.— Ним калама пĕлмелле мар, тăванăм... Хамăр та бомба айне лекнĕ пулсан...

Мирун хăй сисмесĕрех карабинне хулпуççи çине çакрĕ те малалла талпăнчĕ:

— Кайрăмăр...

Салтак юнашар сиккелесе пырать, Мирун умне тухатуха бомба епле шăхăрса анни, çĕр çĕмĕрсе çурăлни, Акташа взрыв хумĕ тасна çити ывăтса яни çинчен çĕнĕрен те çĕнĕрен каласа кăтартать:

— Кам шутланă... Бомби ун çине тенĕ пекех ӳкрĕ вĕт... Ах, анчах... Ача çеç вĕт-ха, çирĕм те тултарман... Ача çеç... Эх-ах-ах... Çынни пит лайăхчĕ, тус тесен чунне çурса пама хатĕрччĕ...

Анăç вут хыпса илнĕ пек ялкăшать. Çĕр хĕрринче пушар çăра хĕрлĕ, юнпа пĕвеннĕ тĕслĕ, çӳлерех тĕс шĕвелет, çепĕç, таса, сарăрах та симĕсрех. Анăçран пулеметсемпе автоматсем тапратнă усалах мар харкашу илтĕнет. Паçăрхи çӳллĕ курăк çĕрелле пуçне усса тăрать. Çил лăпланчĕ те таврара сывлама сывлăш пĕтрĕ.

Пырса çитрĕç те, Мирун умне палланă лăпкă сăн-пит, çамки çумне çыпăçнă çӳç пайăрки, витĕрех тар шăрши çапнă типсех те ĕлкĕреймен сап-сарă çӳç тухса тăчĕ. Аллин чĕрнисем кăвакарма та пуçланă ĕнтĕ. Çăварĕ кăштах уçă. Чĕркуççийĕсене, пĕчĕк ача пек, хырăмĕ патне хутлатнă. Начаркка, темле пĕчĕкленсе кайнăн туйăнать. Тĕсĕ кайнă гимнастерка çат тытса тăрать, ун витĕрех кĕçĕн сержант шултра шăмшаклă, яштака хитре салтак пулни палăрать. Аттисем кивĕ, кĕлисем чалăшса кайнă.

Хăй Акташа курайми пулнă самант Мируна çине-çинех аса килет, халĕ те вăл ун умне яр-уççăн тухса тăчĕ. Ачаранпах купăс калама ярăнса, Мирун шкулта çуллен япăхрах та япăхрах вĕренекен пуçларĕ, учительсем ятлани те, килте ашшĕ-амăшĕ лайăхрах вĕренме чунран тархас-

лани те пулăшмарĕ ăна, çичĕ класс пĕтеркелерĕ те шкул çине алне сулчĕ, лаша витине ĕçе кĕрсе, туйсем, ĕçкĕсем, улахсем тăрăх купăс каласа çÿре пуçларĕ, ялти чи шухă каччă пулса тăчĕ. Пĕрре, шкула пăрахсан чылайран, çуркунне, урамра яш-кĕрĕмĕн туйĕ-çуйĕ пуçлансан, вăл купăсне çакса яланхиллех вăййа тухрĕ. Купăсĕ унăн чаплăскер, саккаспа тутарнă, корпусне лакпа витнĕ, чечеклесе пĕтернĕ купăс, капăрки йĕпкĕн хĕрлĕ, чĕлĕхĕсем, хăй каланă тăрăх, ылтăн. Çаккисене хăюсемпе илемлетсе тухнă. Мирун «Буденный маршне» шăрантарса ярсан, çамрăксем çеç мар, граждан вăрçи ветеранĕсем те хăлхисене тăратаççĕ.

Пĕррехинче Чистай хулинче ăна судья хĕрĕн çуралнă кунне ирттернĕ çĕре укçа парсах илсе кайнă. Мирун купăс калани вуннăмĕш класра вĕренекен хĕре çав тери килĕшнĕ, чунне çурса пама хатĕрскер, çамрăк майра чупса пырса хура кăтраллă çамрăк качча çамкинчен чуптуса илнĕ. «Кĕтни» вальс кĕввипе çавăрнна май, пикен пуçĕ çавăрнса кайнă та, Мируна питĕ ырă мар пулнă. Кайран Мирун çакна аса илсе нумай мухтаннă, судья хĕрĕн ăна хытă юратнипе пуçĕ çавăрнса кайнă, теме юратнă вăл.

Юратнă-и, юратман-и судья хĕрĕ Мируна, пĕлме хĕн, ял хĕрĕсем вара, Саврăшпуç пикисем, уншăн вилсех каяççĕ. Ахальтен мар ĕнтĕ ăна тĕрленĕ тутăрсем, перчеткесем çине-çинех параççĕ, купăсне тĕрлĕрен хăюсемпе илемлетеççĕ. Ялта ăна юратман хĕр çук та темелле, кашниех ăна савни тăвасшăн. Мируна пит çăмăлах çавраймăн, вăл хăй мĕн хак тăнине аван пĕлет, парнесем те ăна илĕртмеççĕ, çемçе чĕлхе те ăна витеймест. Кăшт сыпсан, вăл юлташĕсем хушшинче çапла мухтанма юратнă: «Ман чĕрене тыткăнлама пултараканни таврара çук, тупăнас пулсан, ун умне купăсăма çĕклесе çапма та хĕрхенмĕп». Тусĕсенчен чылайăшĕ ăна ĕненнĕ: Мирун ун пек пике умне хăйĕн чаплă купăсне çĕклесе çапатех. Епле тăрăшсан та, Саврăшпуç пикисем маттур йĕкĕт пуçне çаврайман, купăсçа вĕсен илемĕ те, тумĕ те, парнисем те кăсăклантарайман. Хĕрсен ушкăнне вăл яланах сÿрĕккĕн пырса кĕнĕ: хĕрупраç кулли те, çунса тăракан куçĕ те Мируна пăлхатайман. Ăнсăртран уяв картине, шур акăшсем пек юхса çаврăнакан çав тери хитре шутланнă хĕрсем хушшине, купăсĕпе пырса кĕрсен, пурне те куçне хĕсерех кичеммĕн пăхса çаврăннă; салху пуснипе ним тума аптăраса, пĕр шухă хĕрне йăл кулса кăтартнă та, лешĕ



саваннипе çу пек ирĕлнĕ. Йĕкĕт питĕ сисĕмлĕ, пӳрнепе пусна-пусман чĕвĕлтетме тытăнакан чĕлĕхсене калаçтарма пуçланă çеç, сарлакан янăракан тунсăхлă уяв юрри тăпах чарăнса ларнă, таврара çав тери шăп пулса тăнă, Мирун купăсĕн пĕрми ассăн сывласа илни тата йăлтăраса тăракан вĕр-çĕнĕ атти чăкăртатни çеç илтĕннĕ.

— Сывлăх сунатăп, шăпчăксем,— пур еннелле те пуç сĕлтсе куларах калană вăл.— Çывхарса килекен çимĕк ячĕпе саламлатăп сире, чиперккесем!

— Хăвна та çаплах саламлатпăр, Мирон Михедерович! — хирĕç таварнă уяври хĕрсем...

— Итлетĕп те, ытла та кичем юррăрсем паян, кама пит тунсăхлатăр?

— Кама тунсăхлас пирĕн, сана пулмасăр, хисеплĕ Мирон Михедерович,— те шÿтлесе, те чăнах хуравланă хĕрсенчен пĕри, шухăраххи.

— Нивушлĕ? — юриех тĕлĕннĕ пек тунă Мирун.— Нивушлĕ çапла терех тунсăхлатăр мана?

— Тунсăхламасăр тата, хăçантанпа килсе курăнмастăн пирĕн ума, Чистайра майрасене ташлаттарса çÿрен, вилес пек тунсăхларăмăр,— тĕксе илнĕ тепĕр хĕрĕ.

— Ах, иккĕлентереççĕ мана сирĕн пыл пек сăмахăрсем, чунăмсем! Ĕненме те йывăр, каçарăр та мана çакăншăн, ылтăнăмсем...— хĕрсене татах шăл йĕртересшĕн, тархаслаттарасшăн пулса сăмах вылятнă Мирун, купăсĕн шурă тÿмисене шăк-шак! пуса-пуса илнĕ.

— Эс ĕнен пире, Мирон Михедерович!

— Çав тери ырă кăмăллă пулсам пĕрре...

— Ан иккĕлен эс ним чухлĕ те,— сырса илнĕ Мируна хĕрсем саркайăк пек чĕвĕлтетсе.

— Питĕ те ăнланатăп, майрасем. Юрлама паян эсир, чăнах та, ытла салху юрлатăр. Пĕрре те манăн кăмăла килмест çакă.

— Пирĕн упа пек чĕмсĕр йĕкĕтсемпе урăхларах та юрласа ярăн, вилсе выртăн салху пусса илнипе!

— Купăссăр пирĕн темме юрри те юрланасшăн мар, ури те шумасть...

— Çитес çимĕк ячĕпе савăнтармастăн-ши пĕрре, тăванăм?

— Тивĕçтерсем ĕнтĕ ыйтăва.

— Сатин кĕпе илсе парăпăр.

— Пружинăллă койкă...

— Хĕр вăрлама — самолет...

— Каласа пар пире «Линькка-линькка», ташлар пĕрре чун каниччен.

— Краковьяк!

— Полька!

— Вальс!

Анчах та хĕрсем мĕн кăшкăрнине Мирун хăлхине те чикмест ĕнтĕ. Вăйă картинче Силемпие асăрхаса, вăл юпа пек шак хытса кайрĕ, купăс тÿмисем тăрăх чупакан пÿрнисем те тăпах чарăнчĕç. Çук, нимĕн те ăнланмасть Мирун. Çапла. Нимĕн те... Çак çÿллĕ те яштака, ютрах

сăнлă пикене курсан, вăл çут тĕнчене йăлтах манчĕ: уява та, хĕрсен сассисене те, кăкăрĕ çинче йывăррăн усăнса тăракан чаплă купăсне те. Вĕсене кăна мар, хăйне те манса кайрĕ Мирун, ялти пĕр чаплă каччă. Куçне мăч! та тутармасăр, çăвар карса, Силемпи çине вăл чылайччен пăхса тăчĕ, куçĕ хуралса килчĕ унăн, пуçĕ çаврăнса кайрĕ: «Кам ку? Нивушлĕ чиканран çуралнă Силемпи текен тăлăх хĕр çапла терех çитĕннĕ? Нивушлĕ çавă? Çавă... Силемпи...»

Юлашкинчен, çухалса-пăтрашăнса кайнăскере тинех тăн килсе кĕчĕ. Вăл хура кăтрисене вĕçкĕннĕн лăстăр! силлесе илчĕ, Силемпи еннелле çирĕппĕн пĕр утăм ярса пусрĕ, купăсне хĕрӳллĕн те хăватлăн кĕрлеттерсе ячĕ. Мăн сасăпа мĕкĕрекен бассем чĕвĕлти чĕлĕхсемпе ăмăртни мăнаçлă та чуна çӳçентермелле хаяр илтĕнсе тăчĕ — итлесен, Мирун купăсĕ хăех пĕр оркестр. Вăйă карти юрра ярса илчĕ, алран-алла тытăнса çаврăна пуçларĕ. Уяв куракан вăтă-вĕтĕ чĕрне вĕççĕн тăрса Мируна ытараймасть. Юрри, анлă та тунсăхлăскер, çынсене савăнтарса юхать те юхать:

Чĕнтĕрлĕ кермен ту çинче,
Мĕлки хура шыв çинче.
Каччи уяв патĕнче,
Кăвак куçĕ хĕр çинче.

Кăруççел пек капăр, вăраххăн çаврăнакан вăйă карти — уяв тенĕскер — юхать, вĕлтĕртетет Силемпи куçĕнче те. Ушкăнпа килтерсе юрлакан çак юрăпа Силемпи чĕри хытăран та хытă тапрĕ, хĕр пăлханнипе юрлайми кăна мар, сывлайми те пулса тăчĕ. Вăл туйрĕ: хăйпе юнашар пыракан Акташ Михайли, тури касри çӳллĕ яштака сар каччă, кăçал çеç, ĕнер пуль-и, вăтам шкул пĕтернĕ тĕреклĕ яш ача, ăна ал тунинчен тытрĕ, çирĕппĕн чăмăртарĕ. Вăйă картинче те Силемпи çав вăйлă та шанчăклă алла пула кăна тытăнса юлчĕ пулĕ, ыттисемпе пĕрле çаврăнчĕ. Акташ çине тĕренсен, вăл темле ăнланмалла мар савăнăç, телейлĕх туйăмĕ çавăрса илнине сисрĕ, хĕр ĕшенсе, ывăнса кайрĕ, унăн пуçĕ çаврăнчĕ.

Мирун Силемпи çывăхнех çитнĕ ĕнтĕ, унпа юнашарах пырать, хулпуççипе хулпуççи лекмеллех çывăх. Купăсĕ ăшĕнчен хĕпĕртӳллĕ, çав вăхăтрах йыхравлă та тунсăхлă, сасăсем тăвăллăн кĕрлесе тухаççĕ. Тĕлĕнмелле тĕрĕс те чуна витермелле калаçаççĕ «ылтăн чĕлĕхсем» Мирун пӳрнисем тӳмесем тăрăх çиçĕм пек ыткăнса çӳренĕ май:

Тăкки-такки ан пусăр,
Çĕр кисренет, ачисем,
Хĕр куçĕнчен ан пăхăр,
Хĕр вăтанать, ачисем.

Анланать Силемпи, ăна купăс кĕввипе тата аслă уяв юррипе чунран тархаслать чаплă купăсçă:

Ан кай, савни, леш касса,
ман чĕрене çунтарса!..

Çав хушăра Акташ (ăна эпир малалла та Акташах тейĕпĕр) Силемпи аллине вĕçертмесĕр, ним чĕнмесĕр пычĕ. Ялти ăста юрăçсенчен пĕри, çепĕç баритон, клуб сценин илемĕ Акташ халăхпа пĕрле юрласа ямасăр ниепле те чăтас çук. Çавăнпа та вăл чĕнмесĕр пыни пурне те хытă тĕлĕнтерчĕ. Силемпие Акташ ун çине тăраниччен пăхасшăн пулнăн туйăнать, купăс та çавăн çинченех калать пек:

Куçăма ятăм ирĕке,
чун каниччен пăхтарсам.

...Анчах та мĕн пулчĕ? Пушар пек асса кайнă хăватлă юрă мĕншĕн тăпах чарăнса ларчĕ? Пырне ларнă пек чыхăнса илсе купăс та шăпланчĕ? Хĕрсем шăри-шари! çухăрса илчĕç. Пĕр вăхăта каллех çав тери шăп пулса тăчĕ, тахăшĕн атлас кĕпи чăшăртатни, пуç çинченех вĕçсе иртнĕ кайăк çуначĕн сасси уççăнах илтĕнчĕ. Хĕрсем вăйă картине пăсса пĕр çĕре пухăнчĕç, хăравçăраххисем каччисем хыçне пытанчĕç. Йĕкĕтсем çеç вырăнтан та хускалмарĕç. Сарлака кăкăрлă та çӳллĕскерсем, карттусĕсене чалăш лартса, лапсăркка çӳçĕсене çамкисем çине уснă маттурсем, хăшĕ тĕрĕллĕ шурă кĕпепе, хăшĕ çутă сатин кĕпе çийĕн пурçăн пиçихи çыхнă, çав тери сăнарлă курнаççĕ. Кирлĕ пулсан, çивчĕскерсем, çапăçма та хатĕр.

Пăхса тăракансем курчĕç: Мирун кĕрлекен купăсĕпе Силемпи тавра чылайччен явăнчĕ, Силемпие хăйĕн илемлĕ сăнĕ-пуçĕпе, яштак пĕвĕпе, чуна çунтаракан хитре кĕввипе çавăрма тăрăшрĕ. Шухăша кайнă хĕр хăй çине пĕрре те куç ывăтманнине курса, Мирун унпа таччăнах пырса тăчĕ, Акташа уйăрса ярса хушша кĕме хăтланчĕ. Силемпи, те çакна сиссе, Акташ çумнерех тĕршĕнчĕ, ку-

пăсçа хушша кĕме памарĕ. Мирунăн ăнăçсăрлăхне курса тăракансем савăннипе уласах ячĕç. Анчах та Мирун хăравçă йышши мар, кун пек чух çухалса кайма хăнăхман. Вăл карма çăварсене илтмĕш пулчĕ, ним те кулянман пек курăнма тăрăшса хĕре епле те пулин, пурин умĕнче, çĕнсе илмех шутларĕ; антив, халлĕхе çеç, пĕр саманта, анчах çĕнсе илмеллех, терĕ вăл. Çапла шутласа, купăсне хальччен никам курманла авкалантара-авкалантара, каллех Силемпи патне çывхарчĕ. Çывхарчĕ те купăсне картах туртса, астумасăр тенĕ пек, сулахай чавсипе Акташа Силемпи çумĕнчен хăпăтса ывăтма хăтланчĕ. Çакна Акташ малтанах сисрĕ пулмалла, Силемпи аллине тата хытăрах чăмăртарĕ те хĕре каллех хӳтĕлесе хăварма пултарчĕ.

Иккĕмĕш хутĕнче те ĕç тухманнине курса тăракан карма çăварсем ахăрсах кулса ячĕç. Уяв картине кĕмесĕр кĕпĕрленекен йĕкĕтсем, çапăçу пуласса сиссе, Мируна тем те кăшкăрма, хĕтĕртме тытăнчĕç:

— Хăравçă пулни пĕтерет сана, Мирун!

— Шикли шикленнĕ!

— Купăс лăтăртаттарасси çеç мар çав хĕр çаврасси!

Мирун майлисем те пур-мĕн ушкăнра. Вĕсем те хĕтĕртсе кăшкăраççĕ:

— Ан вĕçерт чиперккене, туртса ил!

— Эх, мемме, ху тĕлне ху тăраймастăн!

— Купăсçă пулатни эс, мунчала!

— Хĕрĕ тата, хĕрĕ, патша майри пек вĕт!

— Пĕр кашăк шывпа çăтса ямалла!

— Форменнăй картинккă!

— Мĕн каласси пур!

Ахаль те ялкăшса çунакан кĕвĕçӳ вучĕ çине йĕкĕтсем «краççын» сапсах тăчĕç. Мирунăн куçĕсем чарăлса кайрĕç, чышкисем чăмăртанчĕç, çилли тăвăлса килчĕ. Мирун, пуçран çапнă пек, тăпах чарăнса тăчĕ, сиксе ӳкме хатĕрленекен усал вăкăр пек хаяррăн куç айĕн пăхса, пĕтĕмĕшпе тăсса янă купăс пĕрмине лаштах пĕрсе хучĕ. Лăй-лай! турĕ купăс, пĕрми те çурăлчĕ пуль.

Уяв юрри çурмаран татăлчĕ. Таврана каллех хăрушă шăплăх хупăрларĕ, анчах вăл нумая пымарĕ. Хуралса килнĕ, ним курми пулнă куçĕпе пĕр вăхăт Силемпи çине пăхса, Мирун хĕр шурса кайнине, çав сăлтавпа тата хӳхĕмрех курăннине асăрхарĕ, тăшманĕ çине сиксе ӳкме тесе, туртса карăнтарнă ухă пек пулса тăчĕ, купăсне икĕ аллипе те пуç çине çĕклесе хăрушшăн Акташ çине ыткăн-

чĕ. Силемпи Акташран вĕçерĕнчĕ те, çухăрса ярса, килнелле тарчĕ, Акташ вилсе тăмарĕ, Мирунран вĕлт! çеç пăрăнчĕ те хăлхи чиккинчен шан! çеç тутарчĕ. Лешĕ купăсĕ-мĕнĕпе çĕре тăсăлса ӳкрĕ. Мирун аран-аран ура çине тăнă тĕле Акташ уяврa сукчĕ ĕнтĕ...

Çавăнтанпа Акташ — Мирун тăшманĕ, çавăнтанпа Мирун купăс каламасть. Анчах та шанчăк пĕтмен иккенха: Акташ — вилĕ, Мирун умĕнче мĕскĕннĕн выртать, темиçе минутран ăна çĕре персе чикеççĕ. Акташ халь — пушăлăх, нимĕн марлăх. Вăл текех çук ĕнтĕ. Мирун вара сып-сывă, калама çук пысăк уйрăмлăх çакă, хаклă Силемпи. Мирунра — малашлăх, калама çук пысăк шанчăк, вăл эрне каялла çеç çирĕм тултарчĕ-ха. Ахалех пăркаланать Силемпи, пурнăç хăйĕннех тăвать, мĕншĕн тесен, Акташ çут тĕнчере урăх çук ĕнтĕ, пур пулсан та вăл — тислĕк, тăм чăмăркки. Акташа хурт çисе янă та çĕр апачĕ тунă. Акташ-этеме текех курма та, итлеме те, ыталама та, чуптума та, ăсатма та, кĕтсе илме те май пулмасть Силемпийĕн. Асаилме çеç пулать, анчах та асаилӳпе ĕмĕрне тутă пулаймăн. Çапларах халь ĕçсем, Силемпи. Кĕтме, аса илме май пĕттĕр тесе, куçпа курса ĕненмелли япаласем сахал мар илĕ Мирун.

Хĕрлĕ анăç хуралнăçем хуралса пырать. Хĕп-хĕрлĕ хĕрнĕ тӳпе хĕррине çĕр сăхса тăрать, тейĕн. Акташ Михайли курмасть ĕнтĕ çав анăçа. Ыран ирпе хĕвел çĕкленессе те вăл пĕлеймест. Хĕвел те, тӳпе те, кун та, çĕр те уншăн мар... Карабин кĕпçине патрон кĕртсе лартнăччĕ... Ун валли...

Çӳç пайăрки типмен-ха, çамки сумне çыпçăннă, чĕркуççийĕсене хырăмĕ патне хутлатнă, анчах та аллин чĕрнисем кăвакарнă ĕнтĕ...

Кабельне сыпса та ĕлкĕреймен пуль, «анне!» тесе те ĕлкĕреймен? Бомба шăхăрса аннă самантра, тен, Силемпи курăннă куçне! Нимех те мар — урăх курăнаймĕ...

— Пытарар, чавса чикер,— терĕ Мирун салтака.— Докуменчĕсене илтĕн-и?

— Документсемпе темле çырусем — тем чухлех, тетрачĕ пур... темле чĕлхепе çырнă, ăнланаймарăм.

— Мана пар тетрачĕпе çырăвĕсене.

— Тархасшăн, хаваспах.

— Хаваспа? Тьфу! Çын вилнĕ — вăл хавасланать...— Мирун йĕрĕнсе сурнă пек турĕ, вилене месерле çавăрса пăрахрĕ.

Çирĕм-вăтăр утăмра — кивĕ окоп. Акташа окоп тĕпне

хучĕç, бруствер çинчен карабин приклачĕсемпе тăпра тăккаларĕç те кăшт-кашт, ячĕшĕн, виткелесе хăварчĕç — пурпĕрех мар-и вилнĕ çынна. Кукленсе пĕр вăхăт шавламасăр тăчĕç — каллех ячĕшĕн, мĕншĕн тесен пурте çапла тăваççĕ.

Çыннипе пĕрле ăна витĕр курайман туйăма та çĕр айне чикрĕ пек Мирун. Анчах чăнах та чикейрĕ-ши? Хăвăн иртсе кайнă яшлăхна пулать-ши яланлăхах çĕр айне алтса чикме? Чĕрене ĕмĕрлĕхе ларса юлмасть-ши вăл, çĕре хупа пĕрле çеç, ху вилсен çеç кĕмест-ши? Пĕр япала çеç пĕтĕмпех паллă Михетер Мирунне: хăйпе пĕр ял ачин пурнăçне татассинчен хăтăлчĕ вăл. Ку — яланлăхах...

Чавса, çĕмĕрсе, аркатса пĕтернĕ хире каç тĕттĕмĕ хупласа илчĕ. Тĕттĕмпе пĕрле шăплăх килчĕ. Шăплăхпа пĕрле вара — ху чĕррине пĕлтерекен туйăм: чĕрĕ эсĕ, чĕрĕ, Мирун, тен, ĕмĕрех чĕрĕ пулăн, тен, ирччен çеç... Мирун пĕтĕм кĕлеткипе каçрăлса утса çӳрет, пытанма шутламасть те. Тĕттĕм, никам та курмасть — çавăнпа. Ырлăх — чĕрĕ те сывă пуласси...

...Çăлтăрсем çунаççĕ. Аялтах, шултраскерсем, темле тăмаланчăкскерсем.

Окопсенче тахăшĕ карăнса илчĕ те, шăмшакĕ шăтăр! турĕ, пĕри ахлата-ахлата ыратакан çурăмне вăрçать. Темиçен бруствер çине тухса ларнă, сак çинче ларнă чухнехи пек, урисене аялалла уснă, халап çапаççĕ. Кунĕпе хĕрсе çитнĕ çĕртен ăшă килет, калаçусенчен — савăнăç: çапах та чĕрĕ вĕт-ха, чĕрĕ!

Таврара шăпах, анчах та çав шăплăх ултавлă. Кам шăрпăк çутрĕ унта? Эсрел! Пытар чикарккуна! Вилсе выртас килет-и?! Упра тĕттĕме шăплăхра канассу килсен, упра тĕттĕме, плащ-палатка айне пытанса турт, окоп тĕпне анса турт.

Мирун месерле выртнă, тӳпенелле, тĕлĕрекен çăлтăрсем çине пăхать. Кун иртрĕ аранах. Мируна вара хăй тахçан ĕлĕк, пĕр вун çул каяллах, артиллери колоннинче утса пынăн туйăнать. Хире пирĕн самолет çунса ӳкрĕ. Мирун çаплах кăкăрне каçăртрĕ: ăна, Мируна, вĕлерме-и? Вĕлерейместĕç... Тахçанах пулнă çав ку, чăнах та тахçанах: айван пулнă кăнтăрла Мирун — ăна вĕлерме-и? Мĕнех, кам вăл, Мируна та вĕлерме пултараççĕ. «Аманасчĕ, киле каймалла аманасчĕ, вилме вара урăххисем, Акташ пек ухмахсем, бомбежка айне чупса тухса вилччĕр, манăн вара сывах юласчĕ-ха, аманса сывах юласчĕ те мĕн вăрçă пĕтиччен‌ех килте, Силемпи илемĕпе

йăпанса пурăнасчĕ. Тен, илемĕпе çеç мар, хăйпе те ыр курăп,— сасартăк шухăшларĕ Мирун, шухăшларĕ те хăйĕнчен хăй хăраса кайрĕ.— Анчах мĕн тумалла çапла пултăр тесен?»

Нивушлĕ пĕр кун çеç иртрĕ-ха? Çав пĕр кун хальччен пурăнса иртнерĕ вăхăтпа тан пек: иртнĕ пĕтĕм пурнăç — Саврăшпуç ялĕ, Силемпи — çак пĕр кунпа тан. Ёненме те çук.

Тăнăç, ытла та тăнăç...

Çăлтăрсем пĕрне-пĕри куç хĕсеççĕ. Ырă кăмăллăн, темле вăрттăн япала пĕлнĕ пек, Мируна хăйсен шухăшне уçаççĕ пек, йăлтăраççĕ. Нимех те мар, çăлтăр çăлтăрах ĕнтĕ, мĕн тĕлĕнмелли пур. Мĕн тĕлĕнмелли пур? Акташ Михайлишĕн вара, эсир, çăлтăрсем, сӳнтĕр — çук эсир, пачах çук, пĕтĕм сут тĕнче çук пекех çук. Ак сана — «нимех те мар».

Сасартăк çăлтăрсем шупкаланаççĕ — сĕм-тĕттĕм тӳпене пĕчĕк вут çăмха кусса хăпарать, ракета! Бруствер çинче ларакан халапçăсем окопа шуса анаççĕ. Паçăрхи салтак курăк çумнех йăпшăнать, Мирун та çĕре ыталать.

Вăрçă хирне чун кĕрет, кашни мĕлке куçать, кукăрkаланать, сиксе тăрса таçта çити тарассăн туйăнать. Хире çутатакан çутă, кăвакскер, куçа шартать, чуна сехĕрлентерет.

Çăмха кусса хăпарчĕ те анса кайрĕ. Мĕлкесем мăнланаççĕ, вăрăмланаççĕ, Мирун патнелле туртăнаççĕ — калăн, юмахри армак-чармак тухса тăнă çӳллĕ йывăçсем. Ракета сӳнсен, тавралăх тата тĕттĕмрех пулса тăрать, йĕппе пырса чиксен те, пĕр вăхăта, куç курмасть.

Салтаксем каллех бруствер çине ĕселенсе тухаççĕ, мирлĕ пурнăçа аса илсе тĕрлĕ халап çапаççĕ.

Каллех — шăп, шăп... Каллех — çăлтăрсем...

Ирхине тăшман мĕн пултарнă çавна килсе тăкрĕ: пехота, мина, снаряд, танксем, бомбăсем. Дивизион комиссарне амантрĕç. Фашист ниçта кайса кĕмелле мар хĕстерет.

Хир çунать. Хĕвел çутинче сулăм курăнмасть. Çĕртен пĕр хăлаçра пуль, тĕтĕм палăрать. Тĕтĕм хушшинчен çĕмрĕк тупă хăяккăн выртни курăнать. Пĕр туппине çĕркаç тыла ăсатрĕç — бомба сиенленĕ. Иккĕшĕ халлĕхе сывах. Вĕсен кутĕнче тĕркĕшни, кăшкăрашни, ятлаçни илтĕнсе тăрать. Чакса кайма приказ килнĕ иккен.

Çунакан тырă тĕтĕмĕпе сиксе ташлакан ăрша леш енчен нимĕç танкĕсем нăрăсем пек шуни курăнать. Вĕсем

пaçăр çеç пĕчĕкçĕччĕ, халĕ пысăкланнăçем пысăкланса пыраççĕ.

Пĕр орудие турттарса кайма хатĕр турĕç — лашисене кӳлнĕ, çавăрса тăратнă. Ездовойсем вĕсене саламатпа çунтарса илеççĕ те, лешсем малалла тапса сикеççĕ.

Инçех те мар снаряд ӳксе çурăлчĕ, салтаксен хурçă каскисем çине тăм муклашкисем кăпăрах килсе тăкăнчĕç — никам та асăрхамарĕ çакна.

Утăм хыççăн утăм, утăм хыççăн утăм — шалалла, Тухăçалла!

— Сывлăш!

Çул çинче никам та юлмасть, кюветалла — питпе, кăкăрпа ӳкеççĕ: упрасам, çĕр-анне!

Бомбардировщиксем вĕçсе каяççĕ те, çул çинче каллех — халăх. Пĕрисем бинтпа чĕркесе пĕтернĕ аллисене пĕчĕк ача пек йăтса пыраççĕ, теприсем пуçран е кăкăртан аманнă, виççĕмĕшĕсем винтовкисене туя туса лăкăштатаççĕ. Чĕрри те, çурма чĕрри те Тухăçалла чакать. Мирун та вĕсемпе пĕрле пырать, сывă юласси пирки шухăшлать...

## 2. Силемпи

Амăшне Силемпи астумасть, ашшĕ кам иккенне тĕплĕн пĕлекен çук: пĕрисем тимĕрçĕ Микулай, теприсем çĕвĕç Петĕр, теççĕ. Лаша вăрри пулнă, чăвашланнă чикан Яшкă хăй вилес умĕн: «Силемпи — манăн хĕр»,— тенĕ пулать. Тахăшне ĕненмелле — ял çăварĕ пин çăвар, кашниех тĕрлĕрен пакăлтатать. Силемпи амăшĕ, çемьере пĕртен-пĕр ача пулнăран-ши, ачашрах, чарусăртарах ӳснĕ. «Ачаш хĕр ача тунă»,— тет халăх сăмахлăхĕ. Çак сăмах, тен, пур чухне те тĕрĕсе те килместь, хальхинче вара вăл чăна килнĕ: хĕр, яла тĕлĕнтерсе, качча каймасăрах ача çуратса панă. Ачине вăрттăн, хутман мунчара, сивĕ те нӳрлĕ çĕрте, çуратнăран-ши е урăх сăлтавпа, вăл вĕрĕлет те талăка яхăн асапланнă хыççăн çĕре кĕрет. Алăри ача кукашшĕпе кукамĕш куçне тăрса юлать.

Силемпи ачаранах чĕмсĕр, никампа та хутшăнмасăр, аслисенчен те, ача-пăчаран та ютшăнса ӳснĕ, яланах пĕччен пулма тăрăшнă, ыттисемпе пĕрле алхасма та, тĕрлĕрен вăйăсем выляма та юратман. Пĕчченех çырма хĕрринче хурсем кĕтсе çӳренĕ, хирте чечек пуçтарнă, хăш

чух вăрмана çырла татма кěнě. Çын куç умне пуласран яланах асăрханнă.

Хěрача ун чух хăй сěм-тăлăххи çинчен те, ашшěпе амăшě камсем тата ăçта иккенне те пěлмен. Темшěн ěнтě вăл ялти ача-пăча ура та ярса пусма хăракан Чулпалăкçи текен вырăна кăмăллана, Киремет çырминчи шăнкăр-шăнкăр çăлкуçě патěнче выляна, çула май çăва картине кěрсе, вилтăпри тěмески çине ура усса ларнă. Мěн кăна калаçман-ши ял ачи-пăчи çак вăрттăнлăхпа илěртекен кăвакласхри вырăнсем пирки. Пěрисем каланă тăрăх Чулпалăкçи енне çěрле, çур çěр тěлěнче, вěреçěлен анать, вăл çутăласпа тин, автан виççě авăтсан, хăй çулăхнă тăлăх арăм патěнчен мăрьерен тухса ту пуçěнчи çӳллě йăмра урлă Киремет çырминелле вěçет, теприсен шучěпе ку пачах та вěреçěлен мар, аçтаха — çынна та, выльăха та çăтакан пысăк çěлен. Вěреçěлен пирки питě хăрушă япаласем кала-кала кăтартаççě! Ěлěк вăл Силемписен ялě çийěпе яланах ирте-ирте каятчě, тет. Ана ял çыннисенчен чылайăшě курнă. Пěрре арман патне аннă тет те арман хуçи умěнче çарамасах тăрать, тет. Пěр чух арçын, тепěр чух хěрарăм пулса курнать вăл. Унтан питě сыхланмалла, ахаллěн хăйěн çынни туса çӳрет, мěн чунна иличченех вěçертмест, вăрçтарсан — çынна лаша туса, çăварлăхласа утланса çӳрет, вăрçтармасан — тивмест. Вěреçěлен тыра пуссисем урлă вут тăкса иртсе кайсан, çав çул тырă пулмасть е, пулсан та, çунса каять. Çавăнпа та вăл хирсем урлă вěçессе питě сыхласа тăмалла. Тахçан авал çапла пěр мучи, çěрле, вăрман хěрринче, лаша çитерме тухнă ачасемпе кăвайт тавра ларнă хушăра, çӳлте вěреçěлен йăлтăртатса, хěм тăкса пынине курать. «Ункăллă çěçě, ункăллă çěçě парăр!» — тесе кăшкăрса ярать вăл сасартăк. Телее, пěр ачин ункăллă çěçě пулнă. Мучи ăна картах туртса илет те, темскер каласа, унки витěр кăвар кăларать. Вěреçěлен чипер вěçсе пынă çěртенех ши! шăхăрса çак ачасем патнех ӳкет, куçран пачах çухалать. Унталла пăхаççě, кунталла... Чим... мěскер ку? Айккинерех такам сăхманпа пěркенсе выртнине кураççě. Сăхманне сиреççě те — пěр вутпуççи пек çунса кайнă хуп-хура кěлетке выртса парать. Мучи маттурлăхěпе çав çул вара тыра йăтăнса пулчě, тет; пушар тухса çунса та каймарě, тет.

Чулпалăкçи текенни — авалхи пăлхарсен çăви, ялтан инçех мар вăл, ик çырма пěрлешнě вырăнта, çурутрав манерлě çеремлě лаптăкра. Хěвел питтинче — шăкăрах

шурӑ «чул палӑксем». Кунта, тахҫан авал сӗм вӑрман кашланӑ тӗлте, уҫланкӑ пулнӑ пулмалла та, тутар-монголсемпе ҫапӑҫса вилнӗ паттӑрсене пытарнӑ. Шӑрпӑк йӗнни хурмӑллӑрах чулсем ҫыруллӑ, темле ӳкерчӗксемлӗ, ӗлӗк мӗнле лартнӑ ҫаплипех лараҫҫӗ, хӑшпӗрисем ҫеҫ тайӑлнӑ. Унта мӗн ҫырнине ҫырӑва пӗлмен пӗчӗк Силемпи мар, ялти чи пысӑк вӗреннӗ ҫын та вулама пултараймасть, авалхи пӑлхарла ҫырнӑ ӑна. Хӗрачан вулас шухӑш мар, выляс шухӑш. Чулсем хыҫне пытана-пытана вылять вӑл, чулсемпе калаҫать, хӑйӗн пӗчӗк чӗлхипе палӑксене тӗрлӗрен юмахсем каласа кӑтартать, хитре вӗтӗ вутчульсем, чечексем кӑтартать, вылять-вылять те палӑк ҫумне таянса ларса ҫывӑрсах каять. Тӗлӗкре чулсем айӗнчен чӗрӗлсе тӑнӑ паттӑр тетесем курнаҫҫӗ. Вӗсем вуннӑн, ҫирӗмӗн, вӑтӑрӑн... ҫӗрӗн пӗр ҫӗре пухӑнаҫҫӗ. Шурӑ лашисене утланса ҫырманалла анса каяҫҫӗ. Анса каяҫҫӗ те тухмаҫҫӗ, анса каяҫҫӗ те тухмаҫҫӗ. Пӗри ҫеҫ леш енне ишсе каҫса сӑрталла ӗрӗхтерсе хӑпарать. Вӑл кӑшкӑрнипе хӗрача вӑранса каять: ҫывӑхри чул юпа ҫинче ула курак ларать иккен, ҫавӑ кӑранклатнӑ. Силемпи хӑраса ӳкмест, куракка чулпа персе хӑваласа ярать. Ачасем каланӑ тӑрӑх, пӑлхар масарӗнче выртакан Саврӑш паттӑр кашни ҫуркунне, йывӑҫ-курӑк ешере пуҫланӑ тапхӑрта, вилнӗ ҫӗртен чӗрӗлсе тӑрать, юлташӗсене кӑшкӑрса вӑратать, вара йӗкӗтсем тапӑртатса ташласа тӑракан ҫилҫуначӗсем ҫине утланса Кивӗ Саврӑш ҫулӗпе Пӳлерелле, пӑлхарсен юлашки тӗп хулинелле, васкаҫҫӗ. Ҫур ҫӗр тӗлӗнче, Пӳлер туне хура пӗлӗт хыҫӗнчен тухнӑ ҫурхи тулли уйӑх ҫап-ҫуттӑн ҫутатса ярсан, паттӑрсем сӗм вӑрмантан ту умне тӗпӗртеттерсе тухаҫҫӗ. Вӗсем Пӳлере ҫичӗ ютран хӑтарма васкаҫҫӗ, анчах та, мӗн чуль шырасан та, хулана тупаймаҫҫӗ. Пӳлер те, тӑшмансем те ҫук, ҫӗрпе танлашнӑ, кӗл пулса вӗҫнӗ, ҫичӗ ӗмӗр айне юлнӑ... Аслашшӗсенчен илтнӗ пулас ҫакна ачасем. Аслашшӗсем вара хӑйсен аслашшӗсенчен. Хулана та, ҫынсене те тупайман Саврӑш вара пӗтӗм вӑрмана янратса чуна ҫурасла ахлатса ярать те ҫӗре кайса ӳкет, ҫӗре ытала-ытала, йӑвалана-йӑвалана макӑрать. Ҫӗр чӑтмалла мар хуйха курса тӑракан тусӗсем учӗсене ҫавӑтса шӑппӑн вӑрманалла утаҫҫӗ. Тӳпере хура хаяр пӗлӗтсем чупма пуҫланӑ, тавра пӑчӑ-тӗттӗм пулса тӑнӑ, ҫичҫӗр ҫул каялла, Пӳлер ҫӗрпе танлашнӑ кун шӑтса тухнӑ юмансем ҫӗре ҫити тайӑла-тайӑла илеҫҫӗ, хӑшӗ-пӗрисем хуҫӑлса кӗрслетсе ӳкеҫҫӗ, ту айӗнчен хӑватлӑ ҫӑлкуҫ тапса тухать,—

çичĕ ĕмĕр каялла Пӳлерте пĕтнĕ пиншер пăлхар куççулĕ. Саврăш куççулĕпе пĕрлешсе, вăл ĕмĕртен-ĕмĕре Кĕçĕн Çарăмсаналла юхать, Çарăмсанĕ — Чулман Атăлалла. «Çитсе ĕлкĕреймерĕм, каллех çитсе ĕлкĕреймерĕм!» — çапла ӳпкелешет кашнинчех Саврăш.

Киремет çырмине каçсерен тенĕ пек тухатмăшсемпе тĕрлĕрен чуниллисем канашлăва пухăнаççĕ. Пырса лекха çавăнта çĕрле кам та пулин — пыршу-аршуна кумса хурĕç.

Çак хăрушă халапсене пĕчĕк Силемпи хăлхине тăратса, чĕререн ĕненсе итлет. Хăй вара, апла пулин те, çуллахи кашни ирех, çанталăк уяр чух, шиклене-шикленех юлташĕсенчен вăрттăн çав тĕлĕнтермĕш вырăнсене чупать. Мăн çынсем те пăрăнса иртекен çĕрсене темле синкерлĕ вăй туртать ăна. Кунта ăна çыруллă чулсемпе калаçма, вилтăприсенчен вĕсен тĕксĕм авалăхĕ пирки ыйтма, курăксем кăштăртатнине итлесе йăпанма, вĕсем мĕнле ӳснине сăнаса ларма никам та кансĕрлемен. Пĕчĕк хĕрача пĕччен хурăн сассине те чунĕ каниччен итленĕ. Хурăнĕ вара пĕччен лĕх пирки хурлă юрă юрланă, хаваслă ращаран аякра ӳсме мĕн тери йывăрри çинчен каланă, паттăр юмансем еннелле туртăннă. Силемпи хурăна питĕ хĕрхеннĕ, лăплантарма тăрăшнă, тĕрлĕ ăшă сăмах каласа, хитре юрă юрласа йăпатнă. Юррине ачан тунсăхлă, пăшăрхануллă чĕри хăех шухăшласа тупнă пулĕ, вăл ытла чуна витермелле çепĕç пулнă.

Çапла иртсе пынă Силемпи ачалăхĕ, çапла вĕçсе иртсе кайнă вăл. Уй-хирпе çырмаçи шăплăхĕнче, хĕвел çинче те çил çинче. Пĕччен выляса, пĕччен йăпанса. Ир çуралнă унăн пăшăрхануллă туйăмĕпе ĕмĕчĕсем, мĕн кирлине хăй те пĕлмен кăмăл туртăмĕ. Асра юлмалли ача чух сахал мар ĕнтĕ, анчах та яланлăха, ĕмĕрлĕхе, Силемпи асне сĕрме купăс сасси тата хирпе инçетелле кайса пыракан чикансен ушкăнĕ тарăн кĕрсе юлнă. Çакă çуллахи пĕр шăрăх кун пулса иртнĕ. Выляса ывăннăскер, хĕрача укăлча карти сулхăнĕнче нимĕнпе те интересленмесĕр тӳпенелле пăхса ларнă, хурĕсем çырмара юхса çӳренĕ, пĕлĕт таткисем пĕрерĕн-икшерĕн анăçалла шăвашăва иртнĕ, чĕкеçсем вĕçнĕ, тĕкĕлтура нăрланă. Сасартăк таçтан аякран, çĕр тĕпĕнчен тенĕ пек, сĕрме купăсăн чуна ыраттаракан тунсăхлă сасси илтĕнсе кайнă. Хĕрача ыйхăран вăраннă пек пулнă. Шуйханнă кайăк пек, сывлама та пăрахса, чĕтресе ӳкнĕ вăл, укăлча хапхинчен тухса инçетри пĕччен йывăç еннелле, çĕрпе пĕлĕт пĕр-

лешнĕ тĕлелле çул тытнă чикан ушкăнне курах кайнă. Çатан авса çиелтен хуппа витнĕ урапасене кӳлнĕ лашисем лавсене тăвалла тапса туртаççĕ. Лавĕсем çинче — чиканăн мĕн пур пек пурлăхĕ: тӳшекки-минтерри, хуранĕ-сăмаварĕ, чашки-тирки. Тилхепе тытнă măн сухаллă чикансем хăшĕ шăхăра-шăхăра, лашине хăратса иле-иле лав çулĕпе утаççĕ, хăшĕ кусла çинчех ларса пырать. Алăри ачаллă хĕрарăмсем — лав çинче, утакан-чупакан ачисене çавăтнисем — хыçалта, чечеклĕ пурçăн тутăрĕсене хулпуççирен уртса янă, лапсăркка вăрăм кĕписем çĕртен сĕтренеççĕ. Яш ачисен йĕпкĕн хура кăтрисем хулпуççи таран, çийĕсенче кăн-кăвак, сип-симĕс, хĕп-хĕрлĕ сатин кĕпесем, пилĕккĕсене пурçăн пиçиххи çыхнă, шерепisem чĕркуççине çитеççĕ, пĕр каччи сенкер пурçăн хăю çакăллă гитарине хулпуççи урлă çакнă, çамрăк хĕрĕсем пĕрпĕринпе темĕн калаçа-калаçа илеççĕ. Чикансем питĕ ывăнса çитнĕ пулмалла, аран-аран утаççĕ. Йыттисем чĕлхисене тем тăршшĕ кăларнă, йывăррăн сывлаççĕ. Шăрăх. Каяс çулăн вара вĕçĕ-хĕрри те курăнмасть. Те кичем çула кĕскетес шутпа, те урăх сăлтавпа малти лав çинче пĕр чиканĕ сĕрме купăс калать. Амăш аркинчен çакланнă тăмаланчăк пуçлă пиллĕк-улттăри хĕрачи сасартăк такăнса ӳкрĕ те макăрса ячĕ. Унтан ури çине хăвăрт сиксе тăчĕ те тăп чарăнса чылай вăхăт Силемпи ларакан еннелле пăхрĕ. Силемпие çакă: «Манăн анне пур, санăн пур-и? — тенĕ пекех туйăнчĕ.— Атте те пур, авă малта, кусла çинче, сĕрме купăспа чикан кĕвви каласа пырать...»

Чикан ачи тесен, чикан ачин ашшĕпе амăшĕ пур. Силемпин ма кукашшĕпе кукамăш çеç? Ашшĕпе амăшĕ ăçта?

Ушкăн кайнăçем аяккарах та аяккарах кайса пычĕ. Силемпи ăна мĕн куçран çухаличченех укăлча карти çине хăпарса пăхса юлчĕ. Аякран чикансем утса мар, юхса пынăн туйăнаççĕ, хирти пĕр-пĕр çырмана анса каяççĕ пулĕ те, хăш чух пачах куçран çухалаççĕ, вара кăштран татах курăнса каяççĕ.

Куçне хĕвелтен пĕчĕк ывăç тупанĕпе картласа, ăна инçет ĕмме пуçличчен, ыратакан тăвиччен тинкерчĕ Силемпи чикансене. Ăçта, инçе те телейлĕ мĕнле ене, илсе кайрĕ вĕсене купăсçă? Мĕн çапла терех пăшăрханса ӳкрĕ ун чухне хĕрача чикансене курсан? Ма куççуль тухиччenех пăлхантарчĕ ăна сĕрме купăс сасси? Ма халь те манаймасть чикан кĕввине Силемпи? Юн сĭстерĕвĕ мар-ши

çакă? Юн чĕнĕвĕ? Тăлăх туратăн кӳтсе çитнĕ чунĕ татăлса йĕмен-ши ун чухне? Тен, кĕвĕ калаканĕ пачах та чикан мар, купăсĕ те пачах купăс мар?

Иртрĕ çапла ачалăх. Питĕ хăвăрт иртсе кайрĕ вăл Силемпин. Нимĕн те асра юлмарĕ пулас унран, уй хапхинчен кĕпĕрленсе тухса çĕр хыçнелле кайса çухалнă чикансем çеç нихçан манăçас çук, халĕ те чĕп-чĕррĕн куç умĕнче тăраççĕ.

Кайса çухалчĕç чикансем.

Кайса çухалчĕ ачалăх.

Иртет, иртет яшлăх.

Анчах та тăрса юлчĕ те пурнать чун тĕпĕнче тахçан пĕр çуллахи шăрăх кун илтĕнсе кайнă пăшăрхануллă, тунсăхлă кĕвĕ, чикан сĕрме купăсĕн чĕрене ыраттаракан сасси. Пуçне чиксе шухăша кайнă самантсенче çавă çеç, çавă çеç, инçетри ытарайми сасă, аса илтерет ăна каялла нихçан та таврăнми ачалăх çинчен. Кашнинчех, асра сĕрме купăс хĕлĕхĕсем юрлама пуçласан, Силемпие кĕтмен çĕртенех салху пусать, уçăмлах мар ĕмĕтсем çавăрса илеççĕ, хăй те ăнланайми туртăм çуралать чунĕнче. Çавăнпа мар-и, вăл халь ăçта та пулин сĕрме купăс каланине курсан тĕлĕнсех каять, мĕн калама чарăниччĕнех сĕрме купăс çинчен хурлăхан пек хура тăрăхла пысăк куçĕсене вĕçертмест. Çав минутсенче унăн юнĕ хыттăн вĕреме пуçлать пулĕ, чĕрине кĕрсе ларнă тахçанхи йывăр тунсăх темле хальччен илтмен инçетри телейлĕ çĕрелле, темле ăнланма çук, урăхла, çын курман-илтмен еннелле хăватлăн чĕнет пулĕ?

Кукашшĕпе кукамăш ватă пирки Силемпи нумаях вĕренеймерĕ, çамрăклах ĕçе кӳлĕнмелле пулчĕ унăн. Ӳсрĕ, тĕрекленчĕ вăл, çӳллĕ те яштака пӳллĕ, ялта çук вăр-вар та акăш уттиллĕ хĕр пулса тăчĕ. Вара пурин куçне те илĕртекен тĕлĕнмелле илеме йĕкĕтсем асăрха пуçларĕç. Çавна туйса, пике кĕре питĕнчи пĕр çутă йăл куллипе вĕсене вилесле иментерсе ярать, хальччен паттăр та шапăлти пулнисем те шăпланса пуçĕсене чикеççĕ. Силемпи тантăшĕсем, паян-ыран качча каяс хĕрсем, чылайăшĕ, унпа ăмăртланса, ун кунтилле мар ют хитрелĕхне вăрттăн ăмсанаççĕ, хĕре витĕр курайманççĕ. Карчăкпа старик тăлăха тулли çӳпçесемпе арчасем туса парайман. Чухăн хĕре колхозра ырми-канми ĕçлесе ĕçкунĕ нумай тунăшăн кăна качча илме ухмах мар-ха ялти сумлă çынсен ачисем. Колхозĕ пулнăранпа та пилĕк-улт çултан ытла мар,

те тытăнса юлаять-ха вăл, те петсе ларать. Нумайăшне вара Силемпи «вĕлтрен кайăкĕ» пулни килĕшмест. Ашшĕ кам иккенне те пĕлмен ятсăр-шывсăра кин тума тĕнче хĕсĕр мар-ха, атте-аннеллиех, çын ĕретлиех тупăнĕ. Силемпие хĕрхенсе, хутне кĕрсе калаçакансем те пулнă, паллах, ăшă сăмахпа хĕр кăмăлне çĕкленĕ вĕсем, пулăшмалли ĕç сиксе тухсан пулăшнă та. Анчах усал сăмах чĕрене тарăнрах кĕрсе ларать. Силемпи пĕрре мар татăлса йĕнĕ килĕнче хăйпе хăй çеç юлсан, çын куç умне сайра курăннă, кaçхи вăйăсене те, уявсене, кăнтăрлахисене те пачах çÿреми пулнă. Чаплă çипуçшăн та, тулли арчашăн та çунман Силемпи. Хаклă йышши пустав та, пурçăн та, хăмач та пулман ун çÿпçинче. Қачча каяс ĕмĕтпе питшăллисемпе сĕтел çиттисем те, туй тутрисемпе кĕрÿ кĕписем те çĕр çывăрмасăр тĕрлесе ларман, пÿтлĕ çын тĕл килсен катанпирпе те, йÿнĕ çитсăпа та çырлахĕ; пĕрпĕрне килĕштерсен, туприне те, çуртне-йĕрне те тума пулĕ, телейĕ те тупăнĕ, тенĕ. Қилĕшÿпе татулăх, юрату пулмасан, пуянлăх та ниме те тăмасть, пачах кирлĕ мар япала.

Çипуçшăн питех çунмасан та, ытла лăпăс-лапăс çÿремен хĕр, ахаль кун та, праçникре те таса, килĕшÿллĕ тăхăнса çÿренĕ.

Пĕррехинче çеç тем пулчĕ ăна: амăшĕнчен юлнă халиччен те никам тĕкĕнмен, килте тĕртнĕ йĕтĕн пир кĕпене арчаран туртса кăларчĕ. Авалхи çипуçра чи капăрри пир кĕпе пулнă. Унăн умне, аркине, çаннисене, хул çиййĕсене, хыçне чаплă тĕрĕпе эрешленĕ. Çамрăк хĕрсен кĕпе ум тĕрри виçкĕтеслĕх е ромб евĕр. Қу тĕрре Саврăшпуçĕнче пÿштĕр теççĕ. Тĕрре ытларах тĕксĕм хĕрлĕ çиппе тĕрлеççĕ. Ромб хĕррине тата варрине тăваткăл-тăваткăл япаласем ÿкереççĕ. Чăваш хĕрарăм кĕпин тĕрĕпе чаплă капăрлатнă тепĕр вырăнĕ — çурăм енĕ, ĕнсе хыçĕ. Хул калаккинчен кăшт аяларах хăмач хăюсемпе тăваткаллатса, кĕтеслетсе карта пек çĕлесе тухнă, тăваткал варринчи пушă вырăна нумай тĕслĕ çиппе тĕрленĕ, расна ÿкерчĕксемпе тунă. Қĕпен хулпуççиййĕсене пĕтĕмпех тĕрĕ хупласа тăрать, вăл çаннăн çиелти енĕпе аялалла анать. Қĕпе арки вĕçне çăмран тĕртнĕ хăю çĕленĕ, хăю хĕррипе вĕт тĕрĕ лартнă... Пăхса тухрĕ те кĕпене Силемпи ахлатсах ячĕ: авалхи кĕпе! Мĕн тери илемлĕ! Тăхăнса пăхрĕ — чух кăна, ятарласа çĕленĕ, тейĕн. Қĕпепе пĕрле чĕрçитти тухрĕ. Қу Силемпи куллен çакса çÿрекен йышши мар, ĕлĕкхи, ун чухне ăна уяв кунсенче çеç çакнă, тĕрри те

хальхи пек ӳсентӗран е лаша кӗлеткиллӗ мар, хантӑс тӗрӗ.

Хӗр чӗрҫитти ҫыхрӗ те мӑйне шӳлкеме, шӑрҫа ярӑмӗсем ҫакрӗ, хӑлхине вутӑн-хӗмӗн ҫунса тӑракан кӗленче алкисем ҫаклатрӗ, пуҫне тухъя тӑхӑнчӗ. Арча сунтӑхӗнчен «илес-ши е илес мар-ши» тесе ҫеҫ алла тытнӑ куҫлӑ ҫӗрре тӗрлӗ майлӑ ҫавӑркаласа нумайччен шухӑша кайса тӑчӗ: «Чикан парни,— сасартӑк пуҫне пырса кӗчӗ кӗтмен шухӑш,— шӑрҫа ярӑмӗсем те, хуртпуҫҫисем те, алкисем те... Апла эпӗ чӑнах та чикан хӗрӗ...» Анчах Силемпи текех хурланса ӳкмерӗ. Вунҫич ҫулхи хӗр куҫне вӗри куҫҫуль пӗртте килӗшмест, хуйхӑрса пӳртре питӗрӗнсе ларма мар вӑрмантан вӑл иртерех килчӗ: паян, эрнекун, Саврӑш тӑрӑхӗнче ҫулленех пулакан кӑнтӑрлахи уяв, ҫамрӑк-кӗрӗмпе ватти-вӗтти ял варне пухӑнса ирттерекен вӑйӑ-кулӑ, юрӑ-ташӑ. Эрнере вӑл, хирти ӗҫсем пуҫланичченех, Питҭавччен, икшер, эрнекунпа вырсарникун пулать.

Силемпи хӑй ҫине куҫкӗски витӗр тепре пӑхса илчӗ те тӗлӗнсех кайрӗ: «Аюй, эп мар пуль вӑл унта курнакан-ни?! Епле маттур, епле хӳхӗм, пукане пек хитре?! Ялта кун пек чипер хӗр ҫук та пулӗ...»

Хӑйӗнчен хӑй ҫапла хытӑ тӗлӗннипе лӑпланаймасӑр, урай варринче хытса тӑчӗ, вара унчченхинчен те ытларах пӑлханса, ҫураҫнӑ хӗрӗн ӗлӗкхи чаплӑ тумӗпе ҫамрӑк ӗмӗрӗнче пӗрремӗш хут вӑййа тухас килсе кайрӗ унӑн. Урама, халӑх ҫине, тантӑшӗсем патне. Йӑлӑхтарчӗ пӗчченлӗх, ютшӑну, ҫитет ялан вунҫиччӗри пуҫпа, ҫитмӗл ҫулхи карчӑк пек, кӑмака ҫинче кӗл пӑрҫи суйласа ларса. Вӑй выляс, юрӑ юрлас килет унӑн. Вӑййа картине пырса кӗрсе акӑш пек юхасчӗ, тет, шӑпчӑк пек шӑрантарасчӗ. Ӳсӗрӗлсе, пуҫ ҫаврӑнса кайиччен савӑнасчӗ тантӑшӗсемпе пӗрле, хуйха-суйха манса, малашлӑхшӑн та пӑшӑрханмасӑр!

Ҫиҫекен сӑнпа та капӑр тумпа тухрӗ килӗнчен Силемпи, утса та мар, чупса, ҫук, вӗҫсе ҫитрӗ вӑл вӑйӑ карти патне, ҫитрӗ те унта пӗрремӗш хут мар, яланах ҫӳренӗ пек ҫӑмӑллӑн та вӑтанмасӑр кӗчӗ, тури касри ҫӳллӗ яштака сар каччӑпа, «пысӑка вӗренсе ҫӳрекен» Акташ Михайли текен яш ачапа, хӑйсен кӳрши Улька хушшине лекрӗ. Улька, лутра та мӑнтӑрkка хӗр, хӑйне Акташ каҫхи вӑйӑран пӗрре мар ӑсатни ҫинчен Силемпие икӗ хушӑри карта урлӑ каҫсах сывлаймасӑр кала-кала паратчӗ. Ял ҫинче те вӗсене каччипе хӗрӗ тетчӗҫ ӗнтӗ, ахальтен кала-



6. Михаил Сениэль.

ман пуль. Халĕ акă Акташпа Улька хушшинче Силемпи пырать. Нимех те чĕнмесĕр, çирĕппĕн тытрĕ вăл вĕсене иккĕшне те аллисенчен, ыттисен уттине пăтраштармасăр, çăмăллăн, ярăнса утса кайрĕ, çавăнтах пуринпе те пĕрле юрласа ячĕ:

Ан ишĕл, сыран, ан ишĕл,
Эпир каçса кайиччен.
Ан авланăр, ачисем,
Эпир ӳссе çитиччен.

Кĕтмен çĕртен вăййа, ялтилле каласан уява, ваттисене пысăк хисепе хунине кăтартакан авалхи чăваш тумĕ тăхăннă, çиçекен сăн-питлĕ хаваслă Силемпи килсе хутшăнни каччăсемпе хĕрсене тĕлĕнтерсе пăрахрĕ.

Яш-кĕрĕм çеç мар, уяв курма тухнă ватă-вĕтĕ те чĕрне вĕççĕн тăрсах ăна сăнарĕ, вăйă карти тавра кĕпĕрленчĕ. Вăйăрисем пурте тенĕ пекех хальччен килĕнче хупăнса ларнă, çын çине тухма юратман, чĕмсĕр хĕр вăй выляса йăл-йăл кулнине аптăраса та ăнланмасăр пăхрĕç: мĕн пулнă хĕрупраçа, тен, ӳссе çитсе хĕр пулнине пĕлтерет çакă? Вунçич çулта вĕт çапах та, чи хитре вăхăт...

Силемпи, хăй çине çăвар карса пăхакансене ним чухлĕ те асăрхаман пек, тĕлĕннипе лăпах пусрăннă тантăшĕсене те питех шута илмесĕр, çаврăнать те çаврăнать ыттисемпе пĕрле вăйă каласа, янраттарать те янраттарать йĕс шăнкрав пек сассине. Улька сассине аяла туса, ăна юрă пуçлама та памасăр, уçă та хĕрӳллĕ юрлать хăй юратнă юрра Силемпи:

Вăрманта куккук,
вăрманта куккук,
вăрманта куккук сасси çук,
çавăнпа вăрман илем çук.
Уявра савни,
уявра савни,
уявра савни сасси çук,
çавăнпа уяв илем çук.

Нихçан чунне çапла пырса тивменччĕ-ха, нихçан çав тери пăлхантарманччĕ Силемпие ĕмĕртенпе юрлакан çак тунсăхлă юрă. Иккĕллĕ туйăм çавăрса илчĕ хĕре: тус çукки, савни çукки, пĕчченлĕх пăшăрхантарчĕ ăна; çав вăхăтрах куккук вĕçсе килессĕн, вăрман илемлĕн янраса каяссăн, савни çитсе тухассăн, уява çеç мар, пĕтĕм тĕнчене чаплă сăн кĕрессĕн туйăнчĕ; çав ĕç халех, çак са-

мантрах, пулса ирттĕр тени, ăна чунпа та, чĕрепе те кĕтни хаваслантарчĕ, çунатлантарчĕ. Такама ачашлас, хĕрхенес килчĕ унăн. Савăнăçпа тата çепĕçлĕхпе тулнă чĕри кăкăрĕнчен тухса тарас пек тапрĕ. Тенкисемпе чăнкăртаттарса, пуçне кăшт каçăртса, Силемпи акăш пек юхса пычĕ, ури айĕнче çĕр туймарĕ вăл, пурте ăна тĕлĕкри пек туйăнчĕ. Сасартăк юрлама пăрахнă Улька хыçĕнчен утса, Акташ Михайлине алăран çавăтса пырса, йĕкĕт çине пĕрре çеç пăхайрĕ вăл: куçпа куç тĕл пулчĕç. Акташ алли пĕçерсе кайрĕ, куçĕ вут тăкса çунчĕ. Силемпи именчĕ те, хĕпĕртерĕ те: епле çирĕп те вăйлă алă унăн пĕчĕк ывăçĕнче, хĕрӳ, шанчăклă алă, арçын алли. Ма именчĕ-ха вăл, ма ырă мар пулчĕ ăна Акташа алăран çавăтса хăйне телейлĕ туйса пыма? Мĕншĕн тесен Акташ Улька савнийĕ. Вăл вара, Силемпи, çын савнийĕ çумне сĕртĕнчĕ, ăна аллинченех çавăтрĕ. Вăрттăн кавар тунă пекрех пулмасть-ши капла? Аван-ши кун пек хăтланни? Ма тата çын савнийĕ, хальччен унпа питех калаçса та курманскер, ăна ытла та пăлхатса ячĕ, çывăххăн, тахçанах лайăх пĕлнĕ, туслă пулнă çын пек туйăна пуçларĕ? Пĕр çакă йĕкĕт, урăх никам та мар, хăй çумĕнче пулни, Силемпие çав тери ырă туйăм кӳчĕ, ăшĕнче кăшт мухтантарчĕ те. Юнашар вĕсем кĕтмен çĕртен, ăнсăртран, пĕрпĕрин çинчен аса та илмен самантра пырса лекрĕç. Пĕри теприн çинчен нихçан та шутламан, пĕрне-пĕри кĕтмен те вĕсем, тĕл пуласшăн та çунман.

Çук, ку час-час сиксе тухакан япала мар — çак çывăхлану. Ахаль иртес çук вăл. Пурнăçа тĕпренех улăштарса, ăна урăх йĕрпе яракан темле ăнланмалла мар ĕç пулассăн туять Силемпи чĕри. Мĕнле ăнланмалла мар ĕç — пĕлмест. Хĕр питĕ пăлханать пулин те, пуçĕ унăн тĕрĕс те хăвăрт ĕçлет: çук, халĕ Силемпи унччен пек, тантăшсемсĕр, вăйă-кулăсăр, юрăсăр пурăнма пултараймасть. Тен... пĕчĕк вĕри ывăç тупанĕнче выртакан çирĕп арçын аллисĕр те... Силемпи куçа курăнми темле йĕр урлă каçрĕ пек, йĕрĕн леш енне ун иртнĕ пурнăçĕ тăрса юлчĕ; туять хĕр: каялла кайма çул çук. Хăй те кĕтмен çĕртен, сасартăк, ун умĕнче урăх, çĕнĕ, тĕнче уçăлчĕ. Çав тĕнче ытла та куçне шартса янипе вăл малтанлăха ним курми пулса тăчĕ. Анчах та, канăçсăр та савăнтаракан çутăпа куç йăмăхтарнăскер, ĕненӳллĕн те пăхăнуллăн утса кайрĕ вăл малалла — хумхантаракан, чĕнекен, паллă мар пуласлăха хирĕç, пăлханулла чĕрепе, çунакан чунпа. Ăшчике хускатакан шиклĕ туйăм хăйĕнче мĕн чух-

лĕ вăйлăрах пулса пынă, çавăн чухлĕ хаваслăрах та шухăрах тытма тăрăшрĕ вăл хăйне тантăшĕсем хушшинче, шухăшсăр та пуçтах курăнма тăрăшрĕ. Уявра паян унран хаваслăраххи çук та тейĕн.

Çав вăхăтра вăйă картине татса ун варне таврари пĕр чаплă купăсçă Михетер Мирунĕ пырса кĕчĕ. Малалла мĕн пулнине Силемпи тĕлĕкри пек çеç астăвать: Мирун ун çине куç хыврĕ, ăна йĕрлеме пуçларĕ, вĕçкĕнлĕхĕпе хĕр пуçне çавăрса ăна хăй аллине кĕртсе ÿкерме хăтланчĕ. Ĕç тухмарĕ. Акташа тапăнчĕ. Кĕске тытăçу. Вĕçкĕн çаппи çĕре лапплатса ÿкрĕ. Акташ, тăнă çĕртех, куçран çухалчĕ. Килне епле çитсе ÿкнине те япăх астăвать Силемпи.

Мирун, аран-аран ури çине çĕкленсен, умĕнче тантăшĕнчен инçех мар пĕччен тăракан Улькана курчĕ. Савнийĕ, Акташ, пăрахнăскер, Улька хăлха чикки туяннă купăсçă çине алчăранă куçпа пăхрĕ, ун кăмăлне çĕклес шутпа-ши, кулма-кулма хăтланчĕ, анчах та кулли мĕскĕн те суя пулса тухрĕ. Хăй çине пăхтарма юратакан Мирун, лешĕ уншăн вилсех кайрĕ пуль тесе, унран тусанлă питне тасатма алтутри ыйтрĕ. Питне шăлса çипуçне тÿрлеткелесен, йĕкĕт çĕмрĕлнĕ купăсне хул хушшине хĕстерчĕ те, Улькапа иккĕш урам тăрăх утрĕç.

Çапла вĕçленчĕ Силемпи пĕрремĕш хут вăййа тухни. Тантăшĕсемпе çывăхланас ĕмĕчĕ инкеке çаврăнчĕ: хĕре пула вĕçкĕн Мирун пĕрремĕш хут пысăк мăшкăл тÿсрĕ, тăшман айне пулчĕ, купăсне ĕçлĕхрен кăларчĕ; Улька хăй чунран юратнă Акташа ĕмĕрлĕхех çухатрĕ.

Акташ Силемпи куçне те урăх курăнмарĕ...

Акташ амăшĕ суккăр Тарье, ват енне сулăннă хĕрарăм, пĕртен-пĕр ачине арсăр ÿстерекенскер, арçыннине ывăлĕ пĕчĕк чухнех вăрман каснă чух йывăç çапса вĕлернĕ, ывăлне авлантарасшăн çулталăкĕпех йăнкăртатрĕ: «Хамăн куç курмасть, ĕçлейместĕп, ĕçлеме мар, ача пек çавăтса çÿрес пулать,— терĕ вăл.— Михайла текех вĕренсе çÿренипе хуçалăх та юхăнса кайрĕ; çынсем каланă тăрăх, пÿрт те ыттисенни пек çĕнĕ мар, тăйлăк-тайлăк курнать. Ывăла хăвăртрах авлантарас та, кинпе иккĕш çурт та лартĕç, туприне те тăвĕç. Эпĕ ачисене пăхăттăм».

Акташ малалла вĕренме ĕмĕтленнине те, çулĕпе те вунсаккăрта çеç иккенне те шута илесшĕн пулман хĕрарăм: ĕлĕк хăшне-пĕрне вунтăваттă-вунулттăрах авлантарнă; вăйпитти, тĕреклĕ, çынна çитнĕ, тата мĕн кирлĕ; хĕрне пуянтараххине тупсан, пачах та шеп пулĕ.

Авланасси пирки ывӑлӗ малтан ҫӑвар та уҫтарман. Амӑшӗ йӑнласан-йӑнласан, мӑкӑртатсан-мӑкӑртатсан, вӑл алне сулнӑ: вӗренме пӗр-пӗр института кӗрсе каяраххпа та вӗренӗп, тенӗ, ҫурт ишӗлсе яла култариччен аннене итлес, кам ачи — ҫавӑн ачи, тейӗҫ. Мӗнле итлемӗнха суккӑр пуҫпах хӑвна ачаран пӑхса ӳстерсе ура ҫине тӑратнӑ, вӑтам шкул пӗтерттернӗ юратнӑ аннӳне? Акташ итлекен, пархатарлӑ ывӑл пулнӑ. Амӑшӗ хушнӑ пекех, аппӗ-амӑшлӗ, хула пек ҫурт-йӗрлӗ, килкарти тулли выльӑх-чӗрлӗхлӗ кладовщик хӗрне, Улькана, куҫласа хураҫҫӗ. Ял ҫинче Улька ашшӗ Павӑл пирки колхоза ӗмсе пуять, теҫҫӗ те, кам курнӑ, кам ӑна аллинчен ярса тытнӑ? Ҫемйипех ҫӗрне-кунне пӗлмесӗр ӗҫлеҫҫӗ, хӗрӗ те ӗҫре пиҫӗхсе ӳснӗ, сахалрах вӗреннӗ ӗнтӗ, анчах мӗне кирлӗ ялти хӗрарӑма нумай вӗренни? Ачи-пӑчи пулать, выльӑх-чӗрлӗхӗ, килкарти тулли, пӳртре те ӗҫ мӑй таран, колхоз ӗҫне те тухмалла, кӗнеке тытса ларма вӑхӑт та пулас ҫук. Шутласан, ялта кам хӗрӗ питех нумай вӗреннӗ? Хӗрупраҫ мар, арҫын ача-пӑча та ытлах вӗренесшӗн мар-ха, кунта ял, хула мар.

Акташ вунӑ класс пӗтерсен тепӗртакранах хӗр ҫураҫма кайрӗҫ. Хӗр ашшӗ хӑтана пынӑскерсемпе малтанах калаҫасшӑн та пулмарӗ, ҫара ҫерҫие, хутпа кӑранташран урӑх нимӗн те курманскерне пӗртен-пӗр хӗрне пама мар, унӑн питне те кӑтартмастӑп, терӗ. Тата Акташ йӑхӗ тӳрпилӗкрех йӑх, тет, иккен, Михайла ашшӗ те ӗҫленӗ ҫӗрте вӑр-вар пулманран, ыйхӑласа ҫӳренӗрен пӗтнӗ имӗш. Пӗтӗм ӗҫе Улька татса пачӗ: вӑйӑран пӗрре ӑсатнӑшӑнах Акташа чунран юратса пӑрахнӑскер, вӑл ашшӗн хаяр сӑмахӗсене илтсен йӗрсе ячӗ, Михайлана памасан кӳлле путса вилеп, терӗ. Хӗрарӑм куҫҫулӗ курсан чӑтмалла мар аптраса ӳкекен Павӑл, чӑхӑмла-чӑхӑмлах, майӗпен, сӗтел ҫинчи тулли черккене хӑй умне куҫарчӗ. Тепӗр сехетрен, хӗре Акташа пама килӗшнине пӗлтерсе, «ҫутти» кӗленчисене пӗрин хыҫҫӑн тепӗрне пушатрӗҫ те, пулас тӑхлачӑсемпе хӑтасем ыталашма, пӗрне-пӗри тата кашни хӑй ачине мухтама тытӑнчӗҫ, ал сула-сула, пуҫӗсене ухауха тахҫанччен юрӑ юрласа ларчӗҫ, урисене тӑрс! тӑрс! тапа-тапа илчӗҫ. Сасартӑк тур умне ӳксе турра пуҫҫапрӗҫ, пӗрне-пӗри мӗн виличчен те пӑрахмасса, пулӑшса пырасса ун умӗнче тупа турӗҫ. Акташпа Улька, телейлӗ те савӑнӑҫлӑскерсем, пӗр-пӗрин ӑшшине туйса, ҫине-ҫинех куҫран пӑха-пӑха илчӗҫ, йӑл кулчӗҫ.

Тепӗр кунне — пӗтрӗ пуҫ!

Тĕнче ишĕлсе анчĕ, хĕвел сӳнчĕ, пурте пĕтрĕ. Çураçу ĕçкинчен тăна кĕрсе те çитменскерсем, «хăтасемпе» «тăхлачăсем», хир юпи пек шак хытса тăчĕç, эрех ĕçнинчен те ытла анраса шалкăм çапнă пекех пулчĕç.

Тата тепĕр кун ирхине ял çине çакăн пек хыпар сарăлчĕ: чикан таврашĕ Силемпи аскăнланса кайнă, çавна пĕлтерсе тахăшĕ хапхине тикĕтпе лапăртаса хăварнă. Кам хăтланнă çавна — паллă мар, те Павăл хушса янă пуçтахсем, те Михетер Мирунĕ? Тепĕр тесен, кирлех-ши кам иккенне шырама, пĕлмесĕрех, сăлтавсăрах туман пуль çав ĕçе. Тантăшĕсем хушшине вăййа тухнă çав инкеклĕ самантчен Силемпи çине чылайăшĕ вĕчĕрхенерех сивĕ куçпа пăхнă пулсан, çав ăнсăрт ĕç хыççăн ăна курайман хĕрсемпе хĕрарăмсен шучĕ ӳссе кайрĕ. Карма çăварлисем умĕнчи ĕçĕсене мансах хĕре çирĕç, хăйне çеç мар, кукашшĕпе кукамăшне, тахçанах çĕр айĕнче выртакан амăшĕпе ашшĕне, чикана, чи усал сăмахсемпе вăрçрĕç. Силемпи тăлăххи те, ватăсем вăйсăр та йăваш пулни те килĕшмест вĕсене.Карчăк-кĕрчĕк те, хальччен палласах кайманскер, чарăнса тăрсах ывăç тупанĕ айĕпе пăхса юлать. Кĕтӳ хапхине качакине илме кайсан, укăлча карти çинче ларакан ача-пăча, такам хĕтĕртнипе, Силемпие тăпра муклашкисемпе перет. Хĕр урамра курăнса кайсанах, унăн усăнчăк пуçĕ çине чуна çӳçентерекен усал сăмахсем пăр çунă пек тăкăнаççĕ. Тарăхнипе, çав тери кулянипе тата кӳреннипе тăрăхла та тĕттĕм куçĕсем кун çутине курми пулаççĕ, уринчен ури иртмест. Силемпи туйрĕ: шавлă та хаваслă вăйă-кулă текех уншăн мар, хĕрупраç савăнăçĕпе ĕмĕт-туйăмĕ уншăн ĕмĕрлĕхех сӳнчĕç. Анчах та мĕн тумалла-ха? Мĕн туса ăша пусармалла?

Çав хушăрах килте питĕрĕнсе ларасси те унран яшлăхпа пĕрле таçта хыçала юлчĕ, яланлăхах пĕтрĕ. Текех вăл килте пăчăхса, ниçта тухмасăр лараймасть ĕнтĕ. Çапла, çапла. Пурте иртнĕлĕхре, пурте хыçалта, пĕтĕм халичченхи пурнăç. Анчах та унта каялла таврăнма та май çук. Пĕлет Силемпи: килте унчченхилле хупăнса пĕчченлĕхре ларма вăл урăх ниепле те пултараймасть. Унччен час-часах пулакан сăлтавсăр тунсăхпа сӳрĕк кăмăл вырăнне çынсемпе çывăхланасшăн тунсăхлани, вĕсенчен хăшĕ те пулин ăшă сăмах каласса, хута кĕрессе е ачашласса кĕтни йышăнчĕ. Ыйхи килмерĕ Силемпин çуллахи çак шăрăх та пăчă каçсенче. Çурма хывăннăскер, хулăм та вăрăм çӳçне салатса ярса, вăл сехечĕ-сехечĕпе чӳрече

умěнче ларчě. Пěрре пушар пек ҫыпса илекен, тепре пăр пек шăнса ларакан чěри кăкăртан тухса тарасла кăртлатса тапать. Аялти кěпе вěҫҫěн ҫеҫ хěр, куҫне пысăк уҫса тинкерет вăл уйăх ҫутинчи ҫурма тěттěм каҫа, тулта илтěнекен аякри чăштăртатусемпе сасăсене пěтěм чунěпе тилмěрсе итлет. Чунăн ҫавăн пек ăнланмалла мар, хăнăхма йывăр тимлěхě ҫак самантсенче ăна ҫуллахи кěске каҫ вěҫнелле йăлтах пушатса хăварать, халтан ярать. Вара вăл ир енне ҫеҫ, тул ҫути палăрсан, кăшт тěлěрсе каять. Силемпи хăйне мěн пулнине хăй те ăнланмасть. Чунě теме сисет унăн, такама вăйлăраххăн та вăйлăраххăн пăшăрханса кěтет. Тен, ҫав «такам» кам иккенне йышăнасшăн пулмасăр, тен, хăйне никам та мар, пěрскер ҫеҫ, Акташ Михайли, хăш чух тěлěнмелле ҫывăххăн, хăш чух питě юттăн курăнакан пěртен-пěр ҫын, кирлине туйса ăна кěтет вăл?

Ҫапла, унпа тěл пулса калаҫу пуҫарма тӳр килет иккен. Тěрěсех ěнтě, Акташ Силемпие нимле сăмах та паман, нимле ăшă сăмах та каламан. Хěр те йěкěте ним каласа та шантарман, чунне уҫса паман. Унпа юнашар вăл пачах та ăнсăртран, тур пěлет епле, ҫумлăнах пырса тăчě вăйăра. Пěрне-пěри вěсем ун чух ҫăвар уҫса ҫур сăмах та каламарěҫ. Ҫавăнпа та вăл килессе кěтсе ҫěрě-ҫěрěпе уҫă чӳрече умěнче аялти кěпе вěҫҫěн, ҫарран, куҫ хупмасăр ирчченех ларни питě пысăк айванлăх ěнтě. Қаҫхи шăплăха тилмěрсе тăнлать вăл, тăнлать, тăнлать, кěтет ăна, кěтет. Қӳрентерет те ҫакă, чуна та ыраттарать. Ухмахла япала. Ҫакна пурне те Силемпи аванах ăнланать. Анчах та мěн тăвас-ха? Қунта каллех пăтраштаракан темле синкерлěх пурри сисěнет. Ҫавăнпах пуль, Силемпи халě ниҫта кайса кěрейми асапланать, ыйхине ҫухатса чӳрече умěнче ҫěрě-ҫěрěпе ларать, тултан илтěнекен кашни чăштăртатăва, кашни сасса илтмесěр хăвармасть. Анчах каҫхи пěр чăштăртату та, сасă та хумхантармасть, пырса тивмест унăн пăлхавлă вěри чунне. Ҫук ҫав, унăн мар, урăх ҫыннăн ура сасси илтěннě урамра, урăх ҫыннăн хаваслă та уҫă кулли янăранă инҫех те мар, ыйхăллă тăкăрлăкра. Қама кěтнě, вăл чěнмен, сас паман, чӳрече патне пыман.

Акташа ҫěр ҫăтрě тейěн, пачах ҫухалчě. Мирунпа ҫапăҫнă хыҫҫăн, ҫураҫнă хěрěнчен сивěнсен, вăл, Силемпи пекех, ҫын ҫине тухми пулчě, куҫа курăнма пăрахрě. Силемпи ҫаплах кěтрě, чěнчě ăна, йыхăрчě чунěпе, ирччченех чӳрече умěнчен каймарě, унччченхинчен те ытларах

тилмĕрсе тăнларĕ кашни пĕчĕк чăштăртатăвах, кашни аякри сассах.

Юлашкинчен, пĕррехинче, эрнеренччĕ-ши, ăнсăртран куçа-куçăнах тĕл пулчĕç. Хальхинче вĕсем çине пăхакан никам та çукчĕ, иккĕшĕ çеçчĕ çамрăксем.

Çав кун Силемпи, лашапа ĕçлекенскер, ĕçрен иртерех таврăнчĕ те тахçанах авăртса хунă çăнăхне илме армана анчĕ. Миххе хурса тухса, утне арман пĕви хĕррипе уттарса пынă чух, чылай аякка кайсан, хĕр тăрă та сивĕ шывпа питне уçăлтарасшăн пулчĕ. Ял енчи çыранта кĕпе çума меллĕ вырăнта каçма пеккисем чылай иккен. Силемпи унта чупса анчĕ, силленекен каçма çинче тăнă май пĕве çинелле пăхса çаврăнчĕ. Таçта мурта, хăвалăхра, пĕччен кăвакал нартлатать, вăхăт-вăхăт шывра шапа кăрăлтатса илет. Лăпкă та ăшă июнь каçĕ. Пĕве те, çанталăк та тăп тăрать. Хĕвел паçăрах анса ларнă ĕнтĕ. Тĕттĕмленет. Хĕвел айĕнче кунĕпех хĕвĕшнĕ çут тĕнче канма хатĕрленет, ыран каллех ĕç нумай вĕт, каçхине канса тепĕр кун валли вăй пухмалла.

Мăнаçлă каçхи лăпкăлăхра çамрăк хĕр чĕри пĕрре те лăпкă мар, вăл ывăнма та, витĕрех аманма та ĕлкĕреймен-ха, ним туйми пулса хытса ларма ăна вăхăт çитеймен. Пăлханать, хытă пăлханать, темĕн кĕтет. Кĕтни çитессĕнех туйăнать. Уйăх çӳлтен пĕве çине хытă тĕлĕнсе пăхать. Пĕве шывĕ çуталнипе çырансем тата тĕксĕмрех, синкерлĕрех курăнаççĕ. Ним хускалми тăракан шыв тĕкĕрĕ Силемпи пит çунă чух ванчĕ те, унта уйăх та арканса кайрĕ, унăн вуншар ылтăн катăкĕ йăлтăраса выляма тапратрĕ. Уйăх ванчăкĕсен вăййине сăнаса тăнă май каçма та сулланма тытăнчĕ пек, хытăран-хытă сулланать вăл, сулланнă хушăрах хĕре шалалла, пĕве варнелле туртса кĕрет. Силемпи ӳсĕрĕлсе кайнă пек пулчĕ, пуçĕ çаврăна пуçларĕ, хĕр хытă çӳçенсе илчĕ. Пăлханчăк та шиклĕ чунпа, халь тесен халь пысăк савăнăç е калама çук хăруш инкек пулас пек, тӳпе хĕрринелле пăхрĕ те чут çеç ӳкмерĕ. Шăлне çыртса, хуçне хупса, вăл ура çинче аран тытăнса юлчĕ. Çав вăхăтра, тен, тĕшĕрĕлсе те анатчĕ-и, такамăн çирĕп алли тытса чарчĕ, ӳкме памарĕ... Акташ... Силемпи вăл çывхарнине пĕртте туймарĕ, анчах кам пырса тытнине тӳрех ăнланчĕ. Каччă сасартăк килсе тухни ăна ним чухлĕ те хăратмарĕ, шуйхатмарĕ, тĕлĕнтермерĕ. Унччен тахçан малтан тĕл пулма калаçса килĕшнĕ тейĕн.

Силемпи куçне тӳрех уçмарĕ, вăл темле сасартăк çем-

çелсе, йăвашланса кайрĕ, Акташ аллисене хуллен кĕрсе ӳкрĕ. Тути, çурма уçăскер, шăппăн темĕн пăшăлтатрĕ, пĕçерсе çунма тапратрĕ, çăварĕ типрĕ. Силемпи сăмахне каласшăн-каласшăн, калаймасть, тути пăсăлать, куççулĕ шăпăрах юхса анать унăн.

Пĕр япалана çеç туять хĕр — тăлтлатса тапакан тăнлав çывăхĕнче Акташ хĕрӳн сывланине. Каччă янахĕ хĕрĕн питне перĕнет. Урăх ним те туймасть, курмасть, илтмест çак самантра Силемпи Акташ ытамĕнче. Тĕнчере иккĕн çеç — Силемпипе Акташ. Чим-ха, тĕнчи хăй пур-и-ха вăл? Тен, тĕнчи хăй те çук? Анчах та тĕнче пур иккен: Мирун, Улька, ялйыш тата ыттисем. Тĕнчере инкек, хуйхă-суйхă, уйрăлу, вĕлерӳ, ылхану,ултавпа суя, элек пур иккен. Аçа пек хаяр ылхан, вут пек вĕри курайманлăх, тамăкран пин хут хăрушă вăрçă пур иккен... Тĕнчере çынсене чĕрĕллех вута пăрахса çунтараççĕ иккен, туса тус, лешĕ вилмесĕрех, чĕрĕллех, çĕр айне те чавса чикет иккен... Тĕнчере çукки пĕртте çук.

Тепĕр кунне Силемпи аякри ĕшнене ут валли çулма кайнăччĕ те вăрçа каякан салтак ачисене укăлчаран тухсан тĕл пулчĕ. Лавсем хыççăн кĕпĕрленсе утакан яшсене, вĕсене ăсатакан ялйыша, ача-пăчана курсан, Силемпие ачалăхри пĕр сăн аса килчĕ. Ун чух хĕрача питĕ пĕчĕкçĕччĕ-ха, укăлча хапхи патĕнче ларатчĕ пулас. Таврара шăп. Çырмара хурсем юхса çӳреççĕ. Пĕлĕт таткисем пĕрерĕн-икшерĕн анăçалла шăва-шăва иртеççĕ. Чĕкеç вĕçет, тĕкĕлтура нăрлать. Çав вăхăтра, сасартăк, таçтан аякран, çĕр тĕпĕнчен тенĕ пек, сĕрме купăсăн чуна ыраттаракан тунсăхлă сасси илтĕнсе каять. Хĕрача картах сикет. Шуйханнă кайăк пек, сывлама та пăрахса, чĕтресе ӳкрĕ вăл, укăлча хапхинчен тухса инçетри пĕччен йывăç еннелле, çĕрпе пĕлĕт пĕрлешнĕ тĕлелле çул тытнă чикан ушкăнне курах кайрĕ ун чух. Лашисем лавсене тăвалла тапса туртаççĕ. Силемпи ушкăна мĕн куçран çухаличченех пăхса юлнăччĕ. Аякран чикансем утса мар, юхса пынăн туйăнаççĕ, хирти пĕр-пĕр çырмана анса каяççĕ пулĕ те, хăш чух пачах куçран çухалаççĕ, вара тепĕртакран татах курăнса каяççĕ. Куçне хĕвелтен пĕчĕк ывăç тупанĕпе картласа, ăна инçет ĕмме пуçличчен, ыратакан тăвиччен тинкерчĕ Силемпи чикансене. Ăçта, мĕнле ене илсе кайрĕ вĕсене купăсçă? Асран чикансем çухалчĕç те, ума каллех салтак ачисемпе вĕсене ăсатакансен ушкăнĕ тухрĕ. Сĕрме купăс вырăнне хуткупăс йынăшать. Ăçта, мĕнле инçе те хăрушă çĕре ăсатать, илсе каять вĕсене

купăсçă? Салтак ачисем çирĕпленсех те çитеймен уçă сасăсемпе çаврăнтарса авалхи хурлăхлă салтак юррине юрлаççĕ. Хăшĕн-пĕрин нумай юрланипе сассисем çĕтнĕ, теприсем хытă хÿхлесе макăрнипе юрлаймаççĕ те. Пĕкĕсем çумне яваласа туртаран усса янă тĕрĕллĕ питшăллисем çĕртен сĕтĕрĕнеççĕ. Ачасем те мăйĕсенчен питшăлли уртнă, хăшĕн-пĕрин аллинче вĕçрен-вĕçе çыхнă алтутри. Кулăс калаканĕ — Мирун — купăсне хаяррăн çухăртасухăрта илсе лав çинчен сике-сике анать, кĕвĕ калама пăрахса, анăçалла такама юнаса илет: «Гитлер! Юнĕçен Гитлер! Границана памăпăр!» — тенисем Силемпи хăлхине киле-киле кĕреççĕ. Акташ Михайли юрламасть те, кăшкăрашмасть те. Вăл суккăр амăшне çавăтнă. Пырсан-пырсан-пĕр, карчăка пĕчĕк ачана ачашланă пек, кăвакарнă çÿçĕнчен, лĕпкинчен ачашла-ачашла илет, тем каласа текех йăпатма тăрăшать. Амăшĕ те, утма чарăнсах, ывăлне умне тăратать те питне, мăйне, хул-пуç-çурăмне хыпаласа пăхать, алли чĕтрет мăнтарăнăн, сасси тухмасть — калама çук пысăк хуйха пула ăшне кайнă. «Çул çине тесе чикнĕ чĕтнайăн сăмсине, касса, Микул турă хыçне хутăм, çаврăнса килсе астивмелле пултăр, ачам»,— тет амăшĕ пăшăлтатса.— «Юрĕ, анне, юрĕ»,— хуравлать ывăлĕ унпа килĕшсе. «Пуçна сухатсан та чысна ан çухат, начальниксене итле, ялти пек шух ан пул».— «Шух пулмăп, анне». «Тарса ан кил».— «Тарса та килмĕп». «Вилсе ан çÿре, вăр-вартарах пул, вилсе ан кил».— «Вилсен те таврăнăп, анне. Эс кĕт, ялан кĕт. Эп вара таврăнăп». «Таврăн. Таврăнсан, Чикан Силемпине мар, шуйттан асламăшне илес тесен те чармăп»,— суккăр Тарье кăх-кăх! кăх-хăк! ÿсĕрсе илчĕ те пĕр хушă, чĕнмесĕр пычĕ. Вăл ывăлĕпе мĕн калаçнине никам та итлекен пулмарĕ — кашнин хăйĕн шухăшĕ, хăйĕн хуйхи. Уй хапхинчен тухнă чух ÿсĕррисем те урăлса кайса пуçĕсене усрĕç. Айккинчен пăхсан, çак ушкăна виле ăсатакан ушкăн теме пулать: йăл кулаканни, кăшкăрса калаçаканни никам та çук. Укăлчаран тухсан çеç Кладовщик Павăл Ульки Мируна мăйĕнчен уртăнса ÿлеме пуçларĕ, Мирунăн пулас хуньĕпе хуньамăшĕ те сăмсисене нăшăк! нăшăк! туртаççĕ, лешĕн ашшĕпе амăшне ывăлĕ патне ямаççĕ те темелле.

Силемпи лавĕ çинчен анса тăнă та юпа пек шак хытса кайнă. Унăн чĕлхи çĕтрĕ, чунĕ кÿтсе килчĕ. Тапранас, тапранас, Акташпа амăшĕ патне пырас терĕ, тапранаймарĕ, пыраймарĕ.

Уй хапхинчен тухсан, лавсем те, çынсем те чарăнчĕç — сывпуллашма вăхăт çитрĕ. Колхоз председателĕ Малов Пракух сăмах каларĕ. Сăмахне пĕтерсен, ваттисен йăлипе, çӳлелле кĕмĕл укçа ывăтрĕç. Укçи герб май ӳкрĕ те, пурте хытă савăнчĕç, малти лава кӳлнĕ ут хăш уринчен тапранасса кĕте пуçларĕç. «Сылтăмминчен! Сылтăмминчен! Çул ăнăçлă пулать! Çĕнтерсе килеççĕ!» — терĕç пурте пĕр харăс, ватти-вĕтти таранах, лавсем тапранса кайсан. Халăхран вăтанса Силемпи Акташ патне çывхараймарĕ, ун патне Акташ хăй пычĕ. Амăш аллине Силемпие тыттарчĕ те: «Киле çитерсе яр»,— терĕ, амăшне тепĕр хут çурăмĕнчен лăпкаса илсе çамкинчен чуптурĕ, вара, уйрăлса, лавсем еннелле çирĕппĕн утса кайрĕ. Пĕрре те çаврăнса пăхмарĕ. Çаврăнса пăхма юрамастьмĕн, сывă килеймест, теççĕ, вилсе килет, имĕш.

Кăкăрне çурса чĕрине такам тымарĕ-мĕнĕпе тăпăлтарса кайнăн, чĕлхерен çĕтсе, вилнĕ пек тăрса юлчĕ Силемпи. Чылайччен пăхса тăчĕ вăл анăçалла, салтак ачисем кайнă еннелле. Çĕр хыçнелле кайрĕç ачасем, тискер тăшмана хирĕç, вилĕме хирĕç... Çук, çĕнтерĕве хирĕç. Силемпие темшĕн чикансем мар, Саврăш паттăр асне килчĕ, Саврăш паттăр. Хăвăртрах çиттĕрччĕ вăл хăйĕн паттăр йышĕпе çитес çĕре, кая ан юлтăрччĕ вăл самант та, чунне çурса ӳкĕнмелле ан пултăрччех унăн. Халь ĕлкĕреймесен, çичçĕр çултан та, пин çултан та тавраяс çук çухатăва, Тăван Çĕрĕмĕре-Шывăмăра, Халăхăмăра. Кая пулать ,питĕрех те кая пулать. Кайса çухалчĕç паттăрсем.

Кайса çухалчĕ ачалăх.

Кайса çухалчĕç салтак ачисем.

Иртет, иртет яшлăх.

Анчах та тăрса юлчĕ те пурнать чун тĕпĕнче тăватă çул каялла уй хапхинче пĕр çуллахи ăшă кун илтĕнсе кайнă пăшăрханулла, тунсăхлă кĕвĕ, чуна çӳçентерекен, ăна çĕçĕ пек касса каякан салтак юрри. Пуçа чиксе шухăша путнă самантсенче çавă çеç, çавă çеç, инçетри тĕлĕнмелле витĕмлĕ, асамлă сасă, ытарайми, çав вăхăтрах хăрушă сасă, чуна çатăрлать, пăчăртать, кисретет, тăпăлтарать.

Кашни çулах, кашни уйăхрах темелле, каяççĕ ачасем вăрçа. Ял çумĕн шыв мар, куççуль çырми юхать, ял çийĕн йӳçĕ тĕтĕм мар, халăх хуйхи пăтранать-явăнать. Кĕрхи тĕттĕм те сивĕ каçсенче асар-писер çил мар ахлатать урамсенче, халăх чĕри çурăлать, халăх ахлатать. Эсрел-

чунилли мар çӳрет килрен киле, Кришка старик вилнĕлĕх хучĕсем салатать.

Кришка — мĕн, Кришка айăплă мар, унăн хăйĕн те кĕреш пек виçĕ ывăлĕ танкра çунса вилнĕ. Малов Пракух комиссар пулса вăрçа кĕнĕ те, партбилечĕ витĕрех пуля тухса кайнă. Кладовщик Павăла та вăрçа илчĕç. Павăл та... вилнĕ. Акташ Михайли — вăрçă пуçламăшĕнчех... Докуменчĕсем те, çыру тетрачĕсем те, пĕтĕм хучĕ килчĕ. Вилнĕ. Михетер Мирунĕ хăй куçĕпе хăй курнă, хăй аллипе хăй пытарнă. Вилнĕ. Вилнĕскер чĕрĕлсе тăрас çук. Мĕн тăвас тен: çур ял тенĕ пек вăрçăра вилсе пĕтрĕ. Сывă юлнисем нумай мар, Михетер Мирунĕ те тата темиçе çын. Мирунĕн те алли-ури хуçăлса пĕтнĕ, тет. Таçта, çĕр хыçĕнче, госпитальре ăшталанать, тет. Суккăр Тарье çеç ялта Акташ вилнине ĕненмест. Вилнĕлĕх хутне вулама унăн куçĕ курмасть, вилнĕ тенине итлеме — хăлхи илтми пулса ларнă. «Михайла килсен, Михайла таврăнсан»,— тет пĕрехмай карчăк. Тата... Силемпи ĕненмест.

## 3. Тискер телей

Кун хыççăн кун, çĕр хыççăн çĕр, эрне хыççăн эрне... Уйăх... Çулталăк... Иртет вăхăт. Вăрçă пуçланни виççĕмĕш çула кайрĕ. Каллех шăрăх çу тăчĕ, ылтăн кĕркунне çитрĕ, вăл хура кĕркуннене куçсан, хĕл çитесси палăра пуçларĕ.

Халĕ ĕнтĕ пирĕн салтаксем тухăçалла мар, анăçалла утаççĕ. Вăрах вăхăт походра пулнă хыççăн, шăннă çĕр çинех ларчĕç — шăнса ĕнтĕркенĕ, çара, кичем уй варрине чарăнчĕç. Армутине пас тытнă, йĕри-таврa пĕр хуралтă та çук. Вăраха чарăнчĕç-ши? Салтаксем шинель çухисене тăратнă, витĕр касса вĕрекен çил çинче шăнса чĕтреççĕ. Эх, каясчĕ малалла. Çук, çав, оборона йышăнмалла-мĕн. Килсе çитрĕç иккен. Аçта чарăннă, çавăнта çĕр чавма тытăнмалла. Аллисене кĕреçе тытрĕç...

Салтак тенин ăçта окоп, çавăнта кил. Малтанхи кун шăтăксем чаврĕç те пĕр-пĕрин çумне тĕршĕнсе нимĕнпе витĕнмесĕрех выртса çывăрчĕç. Çӳлтен юр ӳккелет. Тепĕр кунне таçтан кивĕ хăмасем, çуннă пĕренесем турттарса килчĕç. Снарядран-бомбăран хăмапа хупланнипе хăтăлаймăн та, пуç çинче хӳтĕ пурри çапах аван: хăма, пĕренесем сарнă, ăна çĕрпе витнĕ, окопсене тăшман тӳрех

курасран çиеле армути тĕмĕсем лартса тухнă. «Çуртăн» алăкĕ те пур — шăнса пăрланнă плащ-палатка. Çĕтĕк витререн кăмака пекки майласа ярăççĕ. Турпас çунать. ПГР патрунĕнчен тунă «шăшикуç» мĕлтлетет. Çĕрпӳртре ăшă пулса каять, стенасем çинче мĕлкесем сикеççĕ, типекен пӳрттенкке шăрши сарăлать. Улатăрах тулта çил, саптăрах вăл питрен юрпа. Çĕрпӳртре — хӳтĕ. Хир варринче çĕр айĕнчи ял ӳссе ларчĕ. Ялтан тĕрлĕ еннелле кабельсем тăсрĕç: хыçалалла — дивизи штабне, малалла — батальонсен штабĕсене, сулахая, сылтăма — кӳршĕсем патне. Полк оборонăна тăчĕ. Нумая-ши? Наступленине каясси пирки тăтăшах калаçаççĕ. Ахальтен калаçман иккен: пĕр пĕлĕтлĕ сивĕ ирпе тавралăх хăрушшăн кĕрлеме, чĕтреме тытăнчĕ. Снарядсем халь пирĕн çинелле мар, тăшман еннелле вĕçеççĕ ĕнтĕ, пирĕн пуç çине мар, унăн пуçĕ çине ӳксе ахлатса çурăлаççĕ.

Пăрах çĕрпӳртӳсене, ăшă вырăнна, витререн тукаланă кăмака пеккисене, пуçтарса чĕрке кабельне — малалла каймалла, наступлени.

Пĕлĕтлĕ сивĕ кĕрхи çанталăк...

Салтаксем яланах хатĕр. Тапраннă. Утаççĕ. Çул хĕррине лав тӳнсе кайнă, патрун ещĕкĕсем сапаланса выртаççĕ. Пуçтарса тиеме вăхăт пулман — тăшманăн çаврăнса пăхмасăр тармалла.

Утать салтак...

Фашистсен машини тăрать. Бензин пĕтнĕ те, куçисем çуранах тарнă.

Утаççĕ пирĕн салтаксем.

Пăрахса хăварнă тупăсем, хăяккăн тӳннĕ танксем тĕл пулаççĕ. Хăшпĕр ялсене тĕпĕ-йĕрĕпе çунтарса янă. Окопсем, хирĕç тĕллесе лартнă пулеметсем, шăнса хытнă тăшман виллисем...

Кун пĕтет те çĕр пулать. Салтак çаплах утать.

Кухньăсемпе обозсем хыçала тăрса юлнă. Наступлени умĕн старшина валеçнĕ сухари татăкĕсене тахçанах çисе янă. Çулăн вĕçĕ те хĕрри те çук. Салтак утать, пĕрехмай утать.

Ывăннă офицер иртсе каять, кăшкăркаласа илет:

— Ан юлăр, вăр-вартарах пулăр!

Сĕм-çĕрле те утаççĕ. Малта — салтак çурăмĕ. Такам çав салтак. Тахăш ротăран, тахăш батальонтан. Çул çинче пурте пăтрашăннă.

Танксем иртеççĕ, пĕри, тепри... Чăнкăр та чанкăр! Бензин çунăкĕн шăрши сăмсана кӳ! килсе кĕрет.

— Сылтӑмарах, сылтӑмарах пӑрӑнӑр, танк айне ан пулӑр!

Умра ҫав-ҫавах салтак ҫурӑмӗ. Ыйхӑ пусать. Урасем утасшӑн мар, ҫурӑм сурать, хырӑм — пуш-пушах.

Пулать-ши ҫулӑн вӗҫӗ? Тул та ҫутӑлса килет ӗнтӗ, ҫул йӗрӗ курӑнакан пулчӗ. Хирте тӗттӗм мар, ӗнтрӗк.

Умра ҫав ҫурӑмах-ши е урӑх? Сасартӑк сӑмсапа ҫав ҫурӑм ҫине пырса тӑрӑнатӑн. Ыйхӑ сирӗлнӗ пек пулать, ятлаҫса илетӗн.

Ҫул ҫине машина путса ларнӑ. Чарӑнаҫҫӗ. Тӗртсе кӑларнӑ хыҫҫӑн, малалла утаҫҫӗ.

Ҫутӑлсан, кунӗпех юр ҫурӗ, юр ларчӗ. Аманса-ҫӗмӗрӗлсе пӗтнӗ хир шап-шурӑ пулса тӑчӗ. Вилесем, хуҫасӑр окопсем, снаряд-бомба ӳксе пулнӑ шӑтӑксем юрпа витӗнчӗҫ, ҫулсем ҫеҫ ҫаплах хуран курӑнса выртаҫҫӗ.

Чунра — мӗн? Тунсӑх? Пулма пултарать. Йӗрес килни? Пулӗ те. Анчах — телейлӗ тунсӑх, анчах — куҫҫульсӗр йӗрес килни. Тап-таса шурӑ хирте таҫтан йыхравлӑ сасӑ килет пек — чӗре чарӑнса ларасла уҫӑ та ырӑ сасӑ. Мӗн сасси ку? Тӑван яла, вӑрҫӑ умне тӑрса юлнӑ яшлӑх сасси-и е тӑван ен, тӑван ҫӗр сасси? Тен, минут та манӑҫман пирвайхи юрату чӗнӗвӗ? Малта вара санӑн вӑрҫӑ. Тен, талӑкӗпех маршра пулнӑ хыҫҫӑн, ура ҫинченех, кӑшт та канмасӑр, ҫапӑҫӑва кӗмелле пулать? Выҫӑ хырӑмпа, кабель катушкисене аран-аран ҫурӑм ҫине йӑтса хурса, ҫӗнӗ юр тӑрӑх упаленме тӳр килет? Алӑсем шӑнса кӳтеҫҫӗ, тирӗ сӗвӗне-сӗвӗне каять, снарядсем вӗҫсе иртнӗ май питпе юр ҫумне лӑпчӑнатӑн. Тен, вӗлерӗҫ... Вӗлерӗҫ? Ҫук, вилме ниепле те юрамасть. Урӑххисем вилччӗр, Михетер Мирунӗ мар. Турӑҫӑм! Ҫак асамлӑ самантра сурать вӑл пурин ҫине те: чун каллех пирвайхи юрату кӗввипе тулса ларчӗ, чунра та, чӗрере те каллех — Силемпи, Силемпи... Ним те нимӗн тӗшне те тӑмасть — ҫапӑҫу, выҫлӑх, ывӑну, вилӗм,— лачлаттарса сурмалӑх ҫеҫ! Чӗнӳ сасси пур, йыхравлӑ таса сасӑ, чунра янӑрать, шалта,— ахлату та пӑшӑрхану, ӗсӗклесе йӗрӳ те ӑраскал... Тӑван ен чӗнет, туртать, юрату йыхӑрать, пурнӑҫ, пурнас килни илӗртет, канӑҫ памасть, анчах меллӗ самант ҫаплах килмест те килмест. Сисет Мирун — килмеллех вӑл, килетех. Мирун вилме тивӗҫ мар, мӗншӗн тесен вӑл хӑшпӗрисем пек сӗм ухмах мар, юлташӗсене упрама пӗлмесен те, хӑйне упрама калама ҫук лайӑх пӗлет. Меллӗ самант, меллӗ самант... Хӑҫан ҫитӗн эсӗ? Хӑҫан? Мӗнле сӑн-сӑпатпа? Хӑш вӑхӑтра? Меллӗ самант, саккунлӑ самант...

Саккунлă пек курăнакан меллĕ самант... Саккунлă самантсем те тĕрлĕ пулаççĕ иккен: саккунлă та пултăр çав самант, çав хушăрах саккунсăр та... Çавăн пек меллĕ самант çеç тивĕçтерет Михетер Мирунне, ыттисем вырăнлă мар. Саккунлă та, çав хушăрах саккунсăр та... Саккунсăрне пĕр Мирун çеç пĕлмелле, урăх — пĕр чун та. Çавăнпа Мирун хăйне хăй ăслă тет те ĕнтĕ. Киле, тăван яла чĕрĕ те сывă çитмелле — акă Михетер Мирунĕн хальхи вăхăтри пурнăç программи. Пуçĕсене айвансемпе ухмахсем хуччăр, Акташ Михайли пек мĕскĕн патриотсем. Тĕнчене этем пĕрре çеç çуралать. Çавна аван пĕлмелле, ӳт-тирпе туймалла. Вара айван та, ухмах та, мĕскĕн те пулмастăн. Кирек кам патĕнче лаша пăхсан та пĕр мар-и Мируна: хăть — колхозра, хăть нимĕç улпучĕ патĕнче. Тăван ялĕ çеç умра пултăрччĕ, тата... Силемпи. Ăçта çитсен те тăван ялĕ, тăван ялпа пĕрле Силемпи сăнарĕ Мирун асĕнчен тухмарĕ. Ун хытнă чунĕнче, эгоизмăн наркăмăшлă тăпринче, Силемпи сăнарĕ асамлă та синкерлĕ кĕлчечек пек ешерсе чечекленчĕ. Çав сăнар хăрса сӳнмерĕ, çăткăн чунăн харпăрлăх япали пулса салтака чăн-чăн салтак пулма чăрмантарчĕ, салтак тумĕ тăхăнса икĕ çулталăк ытла çӳресе те Мирун салтак пулаймарĕ. Хăйĕн пĕчĕкçĕ пурнăçне вăл пĕтĕм çут тĕнчерен те хаклăрах тесе шутлать. Вилĕмрен йĕрĕнме, ăна çĕнтерме чăн-чăн салтак çеç пултарать çав. Сан пурнăçунтан хаклăраххи тĕнчен пит нумай иккен. Мирун çавна ăнланаймарĕ. Епле те пулсан чĕрĕ юлмалла. Мĕн хака пулать-ши чĕрĕ юлма, мĕн парса? Пĕлет-и çавна Мирун? Пĕлет...

Тăшманăн оборонине татса, пирĕн çирĕм-вăтăр разведчик малти линин леш енне çирĕпленсе ларнă. Каçĕ тĕттĕм. Лапка-лапка юр çăвать. Тĕттĕмре çав çирĕм-вăтăр çын та тăшмана батальон пек туйăнать пулмалла. Фашистсем урса кайса, тĕлли-паллисĕр, пĕр чарăнми переççĕ. Çак пăтăрмахпа усă курса юласах пулать. Анчах та разведчиксемпе çыхăну çук, ракетăсем ярса хăтланни вырăнлах мар. Радиостанцисем — батальонсенче. Чĕнсе илсе майлаштариччен тул та çутălса кайĕ. Рота штабĕнчен разведчиксем патне кабель сĕтĕрмелле тесе йышăнчĕç. Урăхла нимле май та çук. Леш енчен килнĕ разведчик, Çӳллĕ Вырăс, ăна Михетер Мирунĕ çапла ят пачĕ, катушкăна çĕртен илсе çурăмĕ çине хучĕ. Мирун та çаплах турĕ. Тулта тавралăх питĕ тĕттĕм. Юр кăшт шуррăн

курăнни çеç малалла кайма хавхалантарать пек. Шурă халатлă разведчик çĕрпӳртрен тухнă-тухман сăрă юр çине выртрĕ те унта пачах курăнми пулчĕ. Вăл юра чăштăртаттарни, хушăран сăмса турта-турта илни çывăхрах илтĕнет. Çил вăйлăлансах пырать. Юр пите, алăсене пĕçерте пуçларĕ. Ăçта пăхнă унта — юр. Юрсăр пуçне урăх ним те çук тейĕн çав. Юра çеç туять Мирун. Ытти — тĕттĕм пушăлăх, хура тĕнче. Ниммарлăх. Тĕттĕмлĕх те пушлăх, нимçуклăх — çакă пуль ĕнтĕ вăл вилĕм тени. Чавса çине тăрать те Мирун малалла тапаланать, тăрать те тапаланать. Шăвать, шăвать, малта вара — вĕçĕмсĕр хура тĕнче; япаласем те, çĕр те, çăлтăрсем те, пурнăç та çук. Ху та пулмасса пултаратăн.

Мирун Çӳллĕ Вырăс çине пырса тăрăнчĕ. Лешин катушки пушаннă-мĕн, разведчик çĕççи çуккипе кабель вĕçне шăлĕпе кăшласа ларать. Мирунăн çаннисене юр кĕрсе тулнă, пӳрнисем шăнса кӳтнĕ, проводсене пĕр-пĕринпе ниепле те çыхаймасть. Вырăс пулăшрĕ, ятлаçа-ятлаçа çыхăнтарчĕ. Халĕ ĕнтĕ малта — Мирун. Акă ĕнтĕ пынă çĕртех пач куçран çухалчĕ: сăмсипе шăтăка тăрăннă иккен. Вырăс каллех мала упаленсе тухрĕ. Пĕр вăхăт ним хускалмасăр выртрĕç, сас-чĕв çук-и, хăйсем кунтине тăшмана систермерĕç-и? Тавра шăпах, тĕттĕм. Асăрханса малалла шуса кайрĕç. Нумай шурĕç-и, сахал-и, тĕпсĕр хура тĕнчене вăратса çӳлелле ракета чашкăрса хăпарчĕ. Унăн сивĕ кăвак çути юра çап-çутă çутатрĕ, юрпа пĕрле çиçсе куçа шартарчĕ. Ракета çӳлелле вĕçрĕ-вĕçрĕ те авăнса аялалла ана пуçларĕ. Тавра çаплах çап-çутă-ха. Кăвак юр ăшне чаваланса кĕрсе выртнă Мирунпа вырăс йăшăл та тумаççĕ, сывламаççĕ те. Тăшман енчен, чылай аякран, пулемет тăкăртата пуçларĕ. Пульăсем çывăхрах чăшлата-чăшлата юра шăтарса кĕчĕç. Ракета сӳнчĕ, анчах тавралăх паçăрхи пек шăп та тĕттĕм пулса тăмарĕ. Сарлака çутă йĕр хăварса, çутăлакан пульăсем иртрĕç. Пĕр мина çурăлса вут-çулăм таркăштарчĕ, тепре, тата тепре... Сивĕ вĕтĕ юр тусанĕ пите витĕрех çатăрларĕ. Часах ахаль миномет мар, ултă кĕпçелли пере пуçларĕ. Минăсем выçă кашкăр пек уласа пĕчченшерĕн мар, кĕтĕвĕпе килеççĕ. Хăрушшăн улаççĕ, хăранипе чун тухса кайĕ. Мирун шăлне шатăрах çыртрĕ. Минăсем вĕçĕ-хĕррисĕр ӳкеççĕ: улттăн çеç мар, çĕрĕн, пинĕн пуль вĕсем?

Миномет сасартăк пеме чарăнать те шăв-шав лăштах пулать. Каллех пулемет тăкăртатать. Пульăсем шăннă çĕре хаяррăн пыра-пыра çыртаççĕ.

Мирун юлташӗ, Ҫӳллӗ Вырӑс, умне нимӗҫсенчен тытса илнӗ автомат ҫакнӑскер, сиксе тӑчӗ те малалла талпӑнма хӑтланчӗ. Ҫав хушӑра ҫӗре каллех сенкер, куҫа йӑмӑхтаракан ҫулӑм хыпса илчӗ — ракета чашкӑрса хӑпарчӗ. Тем чӗриклетет, чӗриклетет. Ултӑ кӗпҫеллӗ миномет ҫаплла сасӑ кӑларать пулас. Вара сывлӑшра выҫ кашкӑр кӗтӗвӗ каллех хытӑран-хытӑ улама тапратрӗ. Унта та кунта мина кӗрслетсе ҫурӑлать. Вут-ҫулӑм сирпӗнет. Мирун куҫӗ хуралса-хуралса килчӗ. Сивӗ сывлӑшра ҫав тери йӗрӗнтерекен, чыхӑнтаракан темле шӑршӑ кӑмӑла пӑтратать, сывлама памасть. Куҫ умӗпе сарӑ ункӑсем шӑва-шӑва иртеҫҫӗ — васкамасӑр, сылтӑмалла, сылтӑмалла, хӑяккӑн,— таҫталла ҫил вӗҫтерет тейӗн вӗсене...

Тӑна кӗрсе куҫне уҫрӗ те тӗлӗнчӗ: умра ним те ҫук, хӑрӑм пек хура тӗттӗмлӗх, саркаласа Мирун пичӗ ҫинех витнӗн туйӑнакан тӗттӗмлӗх ҫеҫ. «Вилӗ-ши эпӗ е чӗрӗши? — шухӑшларӗ Мирун.— Чӗрех пуль-ха: ма тесессӗн, ав, леш енче пӗр-пӗринпе тупӑшсах пулеметсемпе автоматсем переҫҫӗ. Паҫӑр та перетчӗҫ вӗсем».

Инҫех те мар, темиҫе утӑмра, шур юр ҫинче хура япала палӑрать. Чӗтрекен хулӗсем ҫине тӗренсе, Мирун унта шуса пычӗ — юлташӗн пысӑк ҫӑматӑллӑ ури иккен. Хӑй, Ҫӳллӗ Вырӑс, маскхалат тӑхӑннӑскер, юр кӗрчӗ пек мӑннӑн курӑнса выртать; пуснӑ сысна пек, юнпа чыхӑна-чыхӑна хӑрӑлтатать. Мирун ӑна ҫавӑрса пӑрахса питӗнчен пӑхасшӑнччӗ. Ӑҫта унта! Юлашки минучӗсене сывлать, пӗтрӗ вырӑс. Хамӑрӑннисем патнелле илсе тухма-и? Ӑҫтан сӗтӗреен ҫав упана! Мирун чухлӗ иккӗ пур пуль те вӑл...

Таврашпех — перкелешӳ. Нимӗҫсем ҫывӑхрах пулас: автоматсемпе шатӑртаттараҫҫӗ, кӑшкӑрашнисем те илтӗнеҫҫӗ.

Хура тӳпе те шурӑ юр, юр та тӳпе. Автомат-пулемет туйӗ. Иккӗнччӗ вӗсем. Юлташӗ, авӑ, вилчӗ. Хӑйпе хӑй ҫеҫ тӑрса юлчӗ Мирун — тамӑк хуранӗнче пӗр хӑйпе хӑй. Никам та ҫук: пӑхса тӑракан та, итлесе тӑракан та. Вӑл чӗррипе сыввине тӗплӗн пӗлекен те халлӗхе никам та ҫук. Мирун вара чӗрӗ. Чӗрӗ кӑна мар, сывӑ та. Куҫ умне каллех ял, Силемпи килсе тухрӗҫ. Акташа аса та илмест ӗнтӗ халь Мирун. Мӗн аса илмелли тахҫанах нӳрлӗ ҫӗрте ҫӗрсе выртаканскерне. Пурнӑҫ. Акӑ мӗн кирлӗ Мируна. Самантлӑх пурнӑҫ мар, ватӑлса виличченлӗх пурнӑҫ. Мӗн парса илме пулать ӑна вӑрахлӑха ҫак чӗр тамӑкра? Мӗн парса? Пуҫа парса мар ӗнтӗ, паллах. Пуҫа ҫухат-

сан — мĕн пурнăçĕ пултăр? Пуçа пĕтерсен, Мирун мар, юмахри паттăрсем те чĕрĕ юлаймĕç. Анчах та сутăн илме пулать иккен пурнăça çăва шăтăкĕнче вилĕме хирĕç пăхса пĕр урапа тăнă чух та. Пулать. Мĕн вăл алă, мĕн вăл ура çакăн пек чух? Акă кабель. Вăл хамăрăннисем патне илсе тухма тивĕç. Унччен, хамăр енне çывхариччен, тăнран кайса çеç ӳкес марччĕ. Чăтас, тӳсес пулать, шăла çыртмалла. Автоматпа чĕркуççинчен аяларах тĕллерĕ.

Персен, каснă йывăç пек йăванса кайрĕ те тăнне çухатрĕ. Тăнĕ килсе кĕнĕ хыççăнхи малтанхи шухăш: «Автомат», пулчĕ. Автомачĕ унтах йăваланса выртать-мĕн, пур вăя пухса ăна юр айне чавса чикмелле. Чикрĕ... Аран-аран... Чавси çине çĕкленчĕ кăна — çемçе юр çине тăрăнса та анчĕ, йынăшса ячĕ: ура тупанĕнчен пуçласа ĕнсене çити ӳт-пĕве темле çивчĕ япала касса çурнăн туйăнчĕ. Мирун йĕп-йĕпе тара ӳкрĕ. Выртсан-выртсан, ыратни иртнĕ пек пулчĕ. Пĕр урине хускатса пăхрĕ аманнăскер, теприне. Пĕри чиперех хускалать, тепри вара питĕ йывăрланса, пысăкланса кайнă пек туйăнать, кăвар çине хунă пек пĕçерет, ун айĕнче юр та чăшăлтатса ирĕлет тейĕн çав. «Турра шĕкĕр, чиперех иккен-ха, ĕç ăнчĕ»,— сиввĕн шухăшларĕ Мирун. Каллех чавса çине тĕренчĕ, каллех пĕтĕм пӳ пĕçерсе, ыратса кайрĕ: çутă сарăункăсем куç умĕпе шуса иртрĕç. Мирун пичĕпе юр çине тăрăнчĕ.

Куçне уçсан, калама çук ĕçес килнипе, юр çиме тытăнчĕ. Кăштах вăй кĕнĕ пек пулчĕ, пуçĕ çăмăлланчĕ. Шăвас пулать. Аллисем аран-аран итлеççĕ, Мирун пĕтĕм пĕвĕпе юра сухаласа пырать. Инçе шумалла-ха, питĕ инçе. Ним çинчен те шутламалла мар, шумалла çеç. Шит, тепĕр шит... Каллех хал пĕтрĕ, алăсем ывăнчĕç.

Епле ырă та çемçе иккен юр. Алăсем чĕтреме пăрахрĕç, йывăрланнă пӳ те çăмăлланчĕ, ура хытах мар туртса ыратать. Ыратни пĕтĕм ӳт тăрăх сарăлать, чавсана, ал тунине çитсе систерсе тăрать, пуç çаврăнать, анчах вăйлах мар. Сивве пачах туймасть пӳ — çемçе, ырă юр çинче. Ним çинчен те шутлами пулчĕ Мирун, ним пирки те пăшăрханмасть, унăн çыврас килет. Ытларах канас килет. Тĕлĕрсе выртнă çĕртех вăл шартах сикет: çывăрма юрамасть, юр çинче çывăрса кайни вилĕмпе пĕрех. Шумалла, епле пулсан та шумалла. Хамăрăннисем патне, унта çеç çăлăнма пулать, нимĕçсем патне хăвна ху персе ӳкерсе кайнин мĕн усси? Унта каçни яла, Силемпие сухатни пулĕччĕ, нимĕçсем пире пĕрех çĕнеес çук, анчах

та эпӗ мар, урӑххисем ҫӗнтерччӗр, пуҫӗсене хуччӗр. Ухмахсем кӗрхи шӑна пек тӑкӑнччӑр — акташсемпе ҫӳллӗ вырӑссем. Эпӗ, пӗр ҫын, мӗн вӑл ҫавӑн пысӑкӑш ҫаршӑн, унта мансӑр та салтак нумай. Мансӑрах ҫӗнтереҫҫӗ фашиста, ҫӗнтерейместен те пире, ахаль ҫынна, нимӗҫ мӗн тутӑр? Коммунист та, комсомолец та мар эпӗ, ҫырма-вулама пӗлекен мирлӗ хресчен ҫеҫ. Силемпипе пӗрле, вӑл килӗшсен, шуйттан шӑтӑкӗнче те рай пулать: лайӑх ӗҫлесен, нимӗҫ тарҫинче те выҫӑ вилес ҫук-ха.

Мирун шӑвать. Шӑвать-и, ҫук-и, шунӑ пек туйӑнать хӑйне. Пуҫӗ ҫав тери йывӑрланса ҫитрӗ — ӑна аласем те, мӑй та тытса тӑраймасть. Куҫ умӗпе сарӑ ункӑсем айккинелле иртеҫҫӗ, пӗрисем иртсен, теприсем шуса тухаҫҫӗ. Кӑшт кансан, хулсене каллех вӑй кӗрет. Пӳ ҫӑмӑлланса каять, сывлӑшалла вӗҫсе ҫӗкленет тейӗн, ярӑнать сывлӑшра. Хамӑрӑннисем патнелле. Хӑй тӗллӗнех ярӑнса пырать — шума та кирлӗ мар пек.

Вӗҫӗ-хӗррисӗр юр тинӗсӗнче, шартлама сивӗре, хамӑрӑннисемпе нимӗҫсен хушшинчи тӑрӑхра, хӑрах уринчен юн юхтарса Мирун выртать. Ҫип татма та вӑйӗ юлман унӑн. Хура тӳпе, шурӑ юр. Кабель вӗҫне тухасси пулать-и, пулмасть-и... Ҫакна Мирун пӗлмест. Ҫав самантра хӑй ҫапах та савӑнӑҫлӑ, телейлӗ. Хӑрушӑ, тискер телей, хӑрушӑ, нӗрсӗр савӑнӑҫ. Ҫак савӑнӑҫпа телее Мирунсӑр пуҫне никам та туймасть, сӑнамасть, пӗлмест. Таврара тӗттӗм каҫпа шурӑ юр. Шур юр ҫинче хура мӗлке — савӑнӑҫлӑ та телейлӗ мӗлке, таса хут ҫинчи чернил лапӑрчӑкӗ, сывӑ ӳт ҫинчи кӗсен-ҫӑпан, ешӗл улӑхри шӑршлӑ лачака, ҫутӑ юхӑм шыври пӑх муклашки, чӗрӗ кӗлеткери ҫӗрӗк чун...

Ҫав хура мӗлке «Силемпи» тесе пӑшӑлтатать.

Вӑл питӗ телейлӗ, кун пек телейлӗ нихҫан та пулман. Астумасть... Пурӑнса та курман-ха вӑл пурнӑҫа, ҫирӗм пӗр те тултарман. Телей... Мӗн тери ырӑ япала иккен вӑл... телей.

## 4. Ялта

Вилнӗлӗх хутне суккӑр Тарье вута пӑрахса ҫунтарнӑ, ниепле те ӗненесшӗн пулман вӑл ывӑлӗ вилнине, ҫухатман шанчӑка. Силемпи те шанчӑка чӗри варнех вырнаҫтарнӑ. Усал хут вутра ҫунса кӗл пулнӑ, Силемпи шанчӑкӗ хӗр чӗрине ҫулӑм хыптарса кӑварлатнӑ. Силемпи

туйнă: унăн юратăвĕ вилĕмсĕр, çавăнпа Акташ та вилĕмсĕр пулмалла. Тăван çĕрне вĕçĕмсĕр юратнă пирки Саврăш паттăр çулсерен чĕрĕлсе тăрать, Акташ та, Силемпие ĕмĕрлĕхе юрататать-тĕк, вилнĕ çĕртен чĕрĕлсе тăрса тăван ялне таврăнмалла. Ăссăрлăх-и çакă? Ăссăрлăх. Анчах та кăвар чĕре вилĕм мĕн иккенне те, абсурд мĕн тамаша пулнине те шута илесшĕн мар. Чун-чĕрен унăн хăйне саккун, хăшпĕр чух вăл пуçа пачах пăхăнасшăн мар. Шутла-шутла, çуна-çуна Силемпи веçех вăйсăрланса, типсе кайрĕ. Çиме ларсан, хĕлхем çăкăр та пыра ларать, анмасть; йĕме тытăнсан, куççуль тухмасть. Типнĕ. Лаша тӳсейменне çын тӳсет. Колхозри пур-çук лашасем выçăпа тата йывăр ĕçе пула вилсе пĕтрĕç, вилейменнисем ура çине тăраймаççĕ — шăммипе тирĕ çеç. Сухара лаша вырăнĕнче — ĕне, вĕсене те пусса çисе пĕтерсен, плуга хĕрарăмсем хăйсем кӳлĕнчĕç. Сухине те турĕç, тыррине те акса хăварчĕç. Хĕрĕх пиллĕкмĕш çул çуркунне плуг кӳлĕнсе хыт ана çине тухсан, пĕр ирхине Силемпи сулăнса-сулăнса кайрĕ те лăштăрах çĕре тĕшĕрĕлсе анчĕ, пуçне ярса тытрĕ. Çавăнтан вара вăл ĕçе тухайми пулчĕ, пуçĕ хыт кашланипе вырăнпах выртать терĕç.

Пĕр лăпкă та ăшă каç вăл кăмака хыçĕнчи шăрчăк чĕриклетнине итлесе килĕнче пĕччене ларатчĕ — кăшт çăмăл пек туйрĕ те тăрса ларчĕ çав ĕнтĕ вырăн çинчен аран-аран. Урайне тултан кантăк витĕр уйăх çути ӳкет, çавăнпа та Силемпи хăйă та çутман. Ял варринчи лаптăкра яш-кĕрĕм вăйă калани илтĕнет. Вăрçă чарăнни вунă-вунпилĕк кун иртрĕ пуль-и, яла каллех чун кĕчĕ, салтаксем вăрçăран таврăна пуçларĕç — хăшĕ хăрах алăллă, икĕ уараллă, хăшĕ вара хăрах ураллă, икĕ алăллă. Хăрах куçпа таврăнакансем те, ӳсĕрнĕ чух юн суракансем те, темĕн тĕрли те пур, уксах-чăлах марри ытла та сахал. Çамрăккисемпе çамрăкрах салтаксем каç пулсанах вăййа тухаççĕ те ирччене урамра çӳреççĕ, вăрçă вăхăтĕнче ватта юлнă хĕрсене тиркесе тин ӳссе çитĕннисем çинелле ытларах пăхаççĕ. Пĕр-иккĕшĕ авланма та ĕлкĕрчĕç, 16—17 çулхи хĕрсене качча илсе арăм турĕç.

Чĕриклетет те чĕриклетет шăрчăк кăмака хыçĕнче. Уйăх кантăкран каçса кайса çутатать. Силемпи урамалла пăхрĕ те — урам та кăнтăрлахи пек çап-çутă.

Урам леш енчен кунталла пӳрт-çурт, хуралтă, йывăç мĕлкисем ӳкнĕ. Шăп, калама çук шăп. Уявра (вăйăра) хĕрсемпе каччăсем, тăват-пилĕк çул каялла юрланă пекех, авалхи юрра питĕ килтерсе юрлаççĕ:

Ан ишĕл, сыран, ан ишĕл,
Эпир касса кайиччен,
Ан авланăр, ачисем,
эпир ӳссе ситиччен.

Çыранĕ те 4—5 çул хушшинче нумай ишĕлчĕ пулĕ, шывĕ те унтанпа нумай кĕрлесе юхса иртрĕ, хĕрĕсем те ӳссе çитрĕç, чылайăшĕ, ватта юлтăмăр тесе, пăрахрĕç вăййа тухма, ашшĕне, пиччĕшне, шăллĕне, савнине çухатнисем вăхăтсăр та ватăлчĕç пуль, пӳпе мар пулин те, чунпа... Мĕн тăвас тетĕн, çын чунĕ те çыннисем пекех, пĕр пек мар вĕт: хăшĕ питĕ тӳсĕмлĕ, хăшĕ вара апла мар. Чул та тĕпренет те, этем чунĕ чул мар çав. Ачисем те, çап-çамрăкла вăрçă вут-çулăмне кĕрсе, вилĕмпе куçран-куç пĕрре мар тĕл пулса, яшлăхпа, чылайăшĕ вара пурнăçпа та, час сывпуллашрĕç, хăшĕ-пĕрисем хĕр тутине пĕрре сĕртĕнсе курмасăр, юрату мĕн иккенне те пĕлмесĕр, пуçĕсене хучĕç. Юратса курнисем те, савнисене качча илсе, çĕр чĕтретсе туй тăвас чух, юнлă туя лекрĕç. Çав туй-çуй вĕсене те çĕре нихçан тăраймасла çапса антарчĕ.

Хăш хушăра вĕçсе иртрĕ ачалăх?

Хăш хушăра çухалчĕ яшлăх?

Ăçта кайса кĕчĕ çамрăк вăхăт?

Ăçта йĕкĕтсем? Ăçта юрату? Телей?

Ачалăх — сăрт хыçĕнче. Яшлăхпа-çамрăклăх — ахăр самана çăварĕнче. Йĕкĕтсем — нӳрлĕ çĕр айĕнче... Телей — куян. Ярса тытма хӳри кĕске. Вăрçă чуна, юна, ĕмĕте ĕмсе илчĕ, пĕтĕм пурнăçа çапса хуçрĕ, пирвайхи юратăва хура юпа çумне пăталарĕ, çунтарса кĕлне çилпе вĕçтерчĕ, этемрен шăммипе тирне çеç хăварса чĕр виле туса хучĕ. Кам халь Силемпи? Ватă хĕр тесен, ватă хĕр мар, çирĕм пĕрте çеç-ха вăл. Çамрăк хĕр тесен, çамрăк хĕр мар, çамрăк хĕрсем кун пек пулмаççĕ — сăнĕ шуранка, питçăмарти путса кĕнĕ, çурăмĕ пĕкĕрĕлнĕ, куçĕсем сӳннĕ, кулли çухалнă. Типсе хăрса кайнă кĕлетки, каçарăр та, çынна тухатмăш карчăкĕ пекрех кăтартать. Эх, Акташ, мĕн туса хутăн эсĕ Силемпие хăвăн вилĕмӳпе? Ху вилсе, эсĕ ăна та вĕлертĕн. Силемпи, тĕрĕссипе каласан, тахçанах вилĕ ĕнтĕ, кĕлетки анчах çӳрекелет, часах вăл та сӳнсе çĕр айне кĕрсе выртĕ, нумай юлман. Туять çакна Силемпи хăй те. Анчах, анчах... чĕри çеç, чунĕ, çунса кĕлленнĕ пулин те, сӳнеймест, çаплах хĕмлене-хĕмлене илетха вăхăт-вăхăт, çаплах теме шанать, ĕненет, хĕлхем сӳнсе-сӳнсе тăрать те каллех чĕрĕлет.

Тухатмăш карчăкĕ те мар Силемпи. Тухатмăш карчăкĕ пулсан, тимĕр тылă çине е килĕ çине утланĕччĕ те вăрçă хирне, Акташ ĕмĕрхи ыйхăпа çывăракан çĕре, вĕçсе кайĕччĕ, малтан вилĕ шывпа, унтан чĕрĕлĕх шывĕпе пĕрĕхĕччĕ, савнă тусне тăван яла хăйпе пĕрлех лартса килĕччĕ.

Те чӳрече умĕнче уйăх çутине вăрах тинкерсе ларнипе, те асаилӳсен хумĕ хытă килсе çапса тăнран янипе, Силемпи, кунĕпе нимĕн çимен пулин те, леклетсе хăса пуçларĕ; чĕрине ярса тытса сывлăш çавăрасшăнччĕ, куçĕ хуралса килчĕ: хĕр сулăнса кайрĕ те урайне тĕшĕрĕлсе анчĕ, тăнне çухатрĕ. Тăна кĕрсен, вăл нумайччен куçне уçма хăраса выртрĕ: урамра çамрăксем вăйă калама пăрахнă, унта çын сасси мар, йытă вĕрни те илтĕнмест. Шăп. Кăмака хыçĕнчи шăрчăк та шавламасть — вăл та ыйха путнă пулас. Шăп. Калама çук шăп. Силемпи хăйĕн чĕри мĕнле тапнине, хăлхи йăнлавне, тăнлавĕсем епле талтлатнине уççăнах илтет, пуç мими вăхăт-вăхăт кăчăртатнă пек те туйăнать ăна, анчах та пуçĕ ыратмасть, кашламасть. Çакна та туять Силемпи. Туймасăр. Пуç кашланă чух хăвна кун пек çăмăл тытаймăн — пĕтĕм шăмшак сурать ун чух, пĕтĕм ӳт-пӳ сăрăлтатать, хăвна такам тимĕр тылăпа тылланăнах туйăнать.

Чим... Мĕн ку? Шашулккине хуллен шăлтăртаттарса çенĕк алăкĕнчен такам кĕчĕ. Нивушлĕ çавă? Тăвата çул каялла, Силемпи вăйă картине пирвайхи хут тухсан, Михетер Мирунĕпе вăрçса кайнă Акташ мĕн чуль кĕтсен те кaçхине хĕр чӳречи умне пымарĕ. Халĕ, авă, çакăн чуль кĕтнĕ хыççăн, тӳрех пӳрте кĕрет пулас...

Тултан çын кĕриччен çипуçне те, вырăнне те кăштах майлас тесе, Силемпи ура çине тăчĕ. Уйăх çути халь урайне кантăкран тӳп-тӳрĕ ӳкет. Ун çинелле пăхнă май, тахçан çырма çинчи каçă сулланма тытăннă пек, урай ярăнса сулланма пуçларĕ. Силемпи, чăнах та, каçă çинче тăратăп терĕ пулмалла, аллисемпе хăлаçланса тӳрленсе тăма хăтланчĕ, каçми çаплах ярăнать, шыва ӳкме тăнă çĕртен ăна пилĕкрен такам тытма ĕлкĕрчĕ. Пăхмасăрах пĕлчĕ, вăл вĕрин сывланинчен хăйрĕ хĕр. Акташ... Нимĕн те чĕнмест-ха йĕкĕт, хăвăрт-хăвăрт сывлать çеç, хĕре пуçĕнчен, çурăмĕнчен ачашлать, савса лăпкать. Хĕр тути, çурма уçăскер, шĕл кăвар пек тĕлкĕшсе-çунса тăракан çӳхе тути, йĕкĕт тутипе пĕрлешрĕ. Вара хĕрпе каччă урама тухрĕç, уйăх çутинче вĕсем урамсем тăрăх нумайччен çӳрерĕç, кĕпер урлă каçса уй хапхи патне çитрĕç те, Си-

лемпи Акташа, унччен хӑй салтака кайнӑ ҫулпах, ялтан ӑсатрӗ.

— Мӗнпе каятӑн? — пӑшӑрханса ыйтрӗ, умра нимле лав та ҫуккине курса, Силемпи.

— Аптрамӑп,— куҫӗпе ҫеҫ каларӗ Акташ,— сӑрт хыҫӗнче кӗтет йӗнерлӗ лаша. Халӗ эпӗ, Саврӑш паттӑр пек, ҫилҫунатпа ҫеҫ ӗрӗхтерсе ҫӳретӗп.

Уйӑхлӑ ҫутӑ каҫсенче, Силемпи килне пӗччен юлнӑ самантра, Акташ кашнинчех киле пуҫларӗ, анчах ҫавна астӑваймасть хӗр: мӗн калаҫать йӗкӗт, ҫӑвар уҫса сӑмахпа калать-и е каллех, малтанхи пек, куҫӗпе ҫеҫ калать? Вӑрҫӑччен ҫӑвар уҫсах калаҫатчӗ пек...

Тӗлӗнмелле: Акташпа ҫӗрле «тӗл пулма» пуҫланӑранпа Силемпи хытӑ улшӑнчӗ, курпунне кӑларса пӗкӗрӗлсе ҫӳреме пӑрахрӗ, вырӑнне пуҫтарса тӗрленӗ ҫиттипе витсе хучӗ, минтерӗсене хӑпартса пӗр-лӗрин ҫине купаларӗ, ҫакӑ вӑл ҫын текех вырӑнпа вырттмаллах чирлӗ маррине пӗлтерчӗ ӗнтӗ; кӑштах апат та ҫиет халь, ҫынсем пырсан, чӗнмесӗр лармасть, ял ҫинчи хыпар-хӑнара ыйта-ыйта пӗлет. Ларать-ларать те ҫапла калаҫкалаҫа, пӳртрен сасартӑк вӑшт! тухса ҫухалать, каҫчен ҫырма хӗрне, уй хапхине темиҫе те кая-кая килет. Ял ҫыннисем ӑна курсан пуҫ тайса иртеҫҫӗ, тантӑшӗсем чарӑнса тӑрсах хӗр сывлӑхне ыйтса пӗлеҫҫӗ: «Часрах сывал, сансӑр ӗҫре тунсӑхласа ҫитрӗмӗр»,— теҫҫӗ, Силемпи сывалнӑшӑн савӑнаҫҫӗ.

Акташ кӑнтӑрла пӗрре те килмерӗ, ҫӗрле ҫеҫ алӑк уҫса кӗрет те, урама каяҫҫӗ, пӗве хӗрринче, укӑлчара тахҫанччен шӑкӑл-шӑкӑл калаҫса ҫӳреҫҫӗ. Мӗн ҫинчен калаҫҫӗ — Силемпи астумасть. «Мана курнине ҫынна ан кала», — тет пулас лешӗ. Тен, апла та каламасть? Мӗнле сӑнлӑ Акташ, ватӑ курнать-и, ҫамрӑк-и? Мӗн тӑхӑннӑ? Астӑвать пек те Силемпи, астумасть те... Мӗншӗн тата яла килет те каллех каять-ха вӑл? Лере ҫапла хушаҫҫӗши? Ма халь те ямаҫҫӗ ӑна салтакран? Ҫынсем тахҫанах килнӗ-ҫке? Акташ вилнӗ-ҫке вӑл... Мӗнле вилнӗ пултӑр? Мӗнле вилнӗ пултӑр? — кукашшӗпе кукамӑшӗ вырсарни кӗллине Чистая каймассерен, кашни эрнере тенӗ пек, алӑка килсе шаккать те хӗре урама чӗнет.

Мӑнукӗ апат ҫие пуҫланӑшӑн ватӑсем ача пек хӗпӗртеҫҫӗ, Силемпие хӑнана пӑхнӑ пек пӑха пуҫларӗҫ, мӗнле техӗмлӗ апат пур, пурте Силемпи валли, сывалтӑрччӗ ҫеҫ, вӑй-хал кӗтӗр, урӑх ан чирлетӗр. Акташ, суккӑр Тарье ачи, вилнӗскер, чӗрӗлсе тӑрас ҫук ӗнтӗ, пуҫ пулсан,

сывлăхĕ аптрамасан, каччи те тупăнĕ-ха, çирĕм урлă çеç каçнă-çке мăнукĕ. Çапла кулленех сăн кĕрсе пычĕ Силемпие, вăл чăмăрланса, яштакаланса, вĕрсе тултарнă пек хитреленсе кайрĕ, куçĕ яш чухнехи пек хĕм сапа пуçларĕ. Питне çеç мар, çӳçне те çĕнĕ тĕс, пурнăç тĕсĕ, çапрĕ пек. Силемпи халь шалти çутăпа çуталса темле юмахри пике пек курăнать.

Çурхи кунсем çу кунĕсемпе ылмашăнчĕç. Хĕрсем хире вир çумлама çӳреççĕ. Ял çине Акташ вилнĕ текен хыпар сарăлнăранпа, тăватă çул хушши ĕнтĕ, Кладовщик Павăл Ульки Силемпипе каллех туслă. Унченхиллех уçă кăмăллă кӳршĕ хĕрĕ, ним ыйтмасăрах тем тĕрлĕ çĕн хыпар та, темле вăрттăн япала та каласа кăтартать. Хуйхисуйхине вăл та çамрăклах самай тӳсрĕ ĕнтĕ — вăрçăран ашшĕ таврăнмарĕ, сывлăхсăра кайнă амăшне пула, çуртри хĕрарăм ĕçне те, арçын ĕçне те хăйĕн тума тӳр килет. Çуртрине кăна-и, колхозрине те. Хытă аврĕ Улькана та вăрçă вăхăчĕ, анчах Улька аванмарĕ, хуçăлса ӳкмерĕ, пурнăçĕ мĕн чуль йывăртарах, çавăн чуль çирĕпленсе, тĕрекленсе пычĕ. Ун патне ик-виç хут та хăтана çитрĕç ĕнтĕ, унччен тахçан такам тиркенĕ тесе тăмарĕç, пĕрре тата чут çеç вăрласа каймарĕç, анчах та вăрлама пыраканĕсем, салтака та кайма ĕлкĕреймен йĕпе сăмсасем, виççĕнлетсе те Улькана трантас çине йăтса çапайман, Улька пурне те чыша-чыша йăвантарнă, лешсене юнаса:

— Мирун пиччĕр, салтакран таврăнсан, кăтартать-ха сире хĕр мĕнле вăрламаллине, куç умĕнчен мар, ялтан çухалăр, ахаллĕн пĕтрĕр,— тесе хăратнă.

Мирунĕ чăнах та таврăнмалла, тет, ĕнтĕ, тахçанах сывалнă, тет, Свердловскри госпитальре темиçе çул сывалса выртнă. Урине малтанах касмалла тенĕ, темле нерва татăлнă, тет-и, ӳчĕ те çĕре пуçланă, кайран тепле майпа татмасăр хăварнă — пĕлме çук. Халĕ сулахай ури виçĕ сантиметр кĕскерех, тет, пачах та хуçланмасăр юпа пек хытса тăрать имĕш. Госпиталь хыççăн, яла çара çерçи пек нимсĕр килсе кĕресрен, пĕр организацинче снабжени пайĕнче ĕçленĕ. Самаях тупраллă, тет, халь, пысăк хитре купăс, баян, туяннă, çипуçне майлаштарнă, велосипедпа çĕвĕ машини таранах йӳнеçтернĕ, тет. Тупраллă килет иккен яла Михетер Мирунĕ, вилме кайса пуйса килет... Çакна пĕтĕмпех Силемпие Улька каласа пачĕ. Савăнăçне ниçта чикеймест Улька, анчах вăхăчĕпе кулянать те — вăрçа кайнăранпа тăватă çул хушшинче пурĕ те тăватă çыру çеç ячĕ, тет, Мирунĕ.

— Ан кулян, Улька,— лăплантарчĕ кӳршĕ хĕрне Силемпи,— часах килсе çитет акă. Курнăçăр, пĕр-пĕрне унчченхинчен те ытларах юратса пăрахăр. Ман çунтараканни çеç темшĕн яланлăхах таврăнасшăн мар-ха, çур çĕр тĕлĕнче килет те ним сăмах чĕнмесĕр кăвак çутăччен сӳрет, вара укăлчаран таçта мура кайса çухалать.

Силемпи сăмахне Улька хăй пек ăнланчĕ:

— Çапла-а,— терĕ вăл тăсарах, шăппăн,— кашни каçах курнаççĕ вĕсем, хăйсем вара тăххăр выртса пĕрре те тĕлленмеççĕ пуль пирĕн çинчен. Ертсе килĕ, акă, пĕр-пĕр майра. Пур Михетер Мирунĕн ун пек çăмăлттайла йăли. Астăван пуль?

— Астăватăп-ха... Епле астумăн.

Қалаçкаласа тăнă май икĕ тантăш сисмен те, хĕвел уйра пĕччен тăракан лапсăркка юман хыçне пытанма хăтланать, пытансан вара сăрт хыçне каясси те инçе мар унăн. Хĕрсем, юлташĕсем ялалла аннине пăхса, хыпăнса ӳкрĕç, чĕресе юлнă ăшăнса кайнă шыва пĕрер çăвар сыпса, ыттине çĕре тăкрĕç. Яла кĕреспе Улька тӳррĕн кайрĕ, Силемпи, тахçантанпах Акташ амăшне кĕрсе курманскер, тавраран утрĕ, карчăка мĕнле те пулин пулăшу кирлĕ мар-и тесе, пĕчĕк те лапчăк пӳрт патнелле тӳрĕлесе пычĕ. Акташсен пӳрчĕ, унччен кивелсе çитнĕскер, халĕ татах пусăрăннă, тăрринче тĕл-тĕл улăмĕ сĕвеленнĕ те, çумăр çусан çумăр шывĕ витĕрех шапăртатса анать пулĕ. Çĕрнĕ улăм çине унта-кунта мăян шăтса ларнă. Пĕчĕк чӳречисене тахçантанпах шыв сапса юхтарман, тасатман, тусанлă кантăк витĕр анакан хĕвел çути аран-аран кĕрет. Вĕрлĕк хапха лăштăрах ишĕлсе аннă, курăк пуснă килкартинче пĕр кĕтӳ хур какăлтатать, такам пăрăвĕпе виçĕ качака çӳрет. Карчăк, куçĕ курманскер, хăлхи илтменскер, килкарти тулли выльăха та асăрхамасть куран, çавăнпах пуль, килекен çынна хирĕç те тухмасть. Ыр çын килĕ те кайĕ, усалли килсе те кĕрес çук: кама мĕн тунă суккăр Тарье, камăнне мĕн илнĕ? Ăна та никам ним парăмлă мар, вăл та никама та нимĕн памалла мар. Никама та кĕтмест суккăр Тарье, никамран та хăрамасть те. Кĕтме кĕтет-ха вăл... Акташ таврăнасса кĕтет, вăхăчĕвăхăчĕпе Силемпи халĕсене пĕлесшĕн вăл, пулас кинĕн сывлăхĕ начаррине илтнĕччĕ те, çĕрĕ-çĕрĕпе куç хупмарĕ карчăк, Силемпишĕн пăшăрханчĕ. «Эх, хĕрĕм, хĕрĕм,— тенĕччĕ пĕррехинче, Силемпи хăй патне кĕрсен,— ытах ан ăшталан-ха, тен, плина лекнĕ пуль, тен, урăх çĕрте. Тур майне парсан, чиперех çаврăнса килĕ-ха. Салтак

ачисене леçме каякан лаши те ун чух сылтăмран тапранчĕ, укçи те... Çăкăр сăмси те кĕтет авă турăш хыçĕнче — миçе çул выртрĕ, кăвакарман та теççĕ. Çук, çук, вилмен Михайла, чун сисет... Плинрах пуль, çичĕ ют аллинче авкаланать пуль, чĕрĕлле тирне сĕвеççĕ пуль? Эх-ах-хах... Ырă турă... Пӳлĕх...»

Силемпи самайланнине пĕлсен, Тарье хытă савăнчĕ, туйипе такластарса урам урлă та каçакан пулчĕ. Паян ăçта-ши тата, курăнмасть?.. Силемпи, пӳрте кĕриччен, килкартине тирпейлеме шутларĕ: чи малтан выльăх-чĕрлĕхе урама хăваласа кăларчĕ, унтан çил хапхана тăратса лартса кирлĕ çĕре пăта тупса çапрĕ, тăпсине, хăпăнса кайнăскерне, лайăх шаккаса вырнаçтарчĕ, кивĕ пралука авса ункăларĕ те хапхана выльăх хирсе уçмалла мар туса çаклатса хучĕ. Кивĕ пусма тупса пӳрт маччине улăхрĕ, унта темиçе хуппа хăма татăкĕсем упранса юлнă иккен — пӳрт тăррине майлаштарчĕ. Лупас айне кайса пăхрĕ те карчăкăн вут-шанки пĕтĕмпех пĕтсе çитнине асăрхарĕ. Икĕ кустăрмаллă кивĕ урапана туртса тухса хăрăк турат пуçтарма ял çумĕнчи ращана хăпарчĕ. Хăрăк турачĕ кунта тем чухлех, шала та кĕмелле мар — часах тиесе хучĕ.

Вут-шанкă туртса анаканскерне суккăр Тарье хапха умĕнче кĕтсе илчĕ. Хапхине те уçса хунă хăй, ăçтан вăй çитернĕ, мăнтарăн. Кинемей сĕм-суккăрах мар пулас, хăрах куçĕ çын мĕлкине палăртать, ывăç тупанĕ айĕнчен тĕмсĕлсе пăхсан.

— И-и,— терĕ карчăк Силемпи хапха умне çитсе килкартинелле кĕнĕ чух,— каларăм çав кин кĕретех паян тесе, тĕлĕкне те курнă. Михайлапа утă çулатăр пек, калатăп çав... Хапхана та юсанă, çаклатсах хăварнă, урапа та çухалнă... Калатăп çав урапам вăрманалла çул тытнă тесе — хăрăк турат пуçтарма. Мĕн тăвас тен, тăлăх турата та хăрăк турат кирлĕ çав, чуна ăшăтма, ват шăмшакка ăшăтма. Мĕн-и, кин, тертленсе пĕтмерĕн-и? Хам пенççи, Михайлашăн параканнине, илме кайрăм. Илес темесен те вăйпах параççĕ — Михайлана укçалла сутнă пекех капла... Илме те йĕрĕнмелле...

— Ил эс пурпĕрех. Ăна сана патшалăх парать, Михайла çухалнăшăн... Ай, мĕн терĕм эп? Çухалман-çке Михайла, аюк... Тен, вăл пĕр маншăн çеç çухалман? Эх, кăтартасчĕ ăна пĕтĕм ял умне кăларса. Тепĕр вырсарни каç килĕ-ши вăл? Мĕн терĕм эп? Э-э, ил эс пурпĕрех, параççĕ пулсан, укçа-тенкĕ пурри кансĕрлемĕ вăл...

Силемпи хăйпе хăй каласса тăнине карчăк илтеймерĕ: «Эп кĕрем-ха, улма çакам хурана»,—тесе, пÿртелле кăш-тăртатрĕ. Карчăк алăк хыçне çухалсан, Силемпи хăрăк турата пушатрĕ те пусма умĕнче выртакан катăк пуртта ярса тытрĕ, пĕр çĕклем кăвайт туса пÿрте илсе кĕчĕ. Карчăк ăна улма пиçмесĕр ярасшăн та марччĕ, Силемпи, килĕнче те ĕç нумаййине астуса, васкасах тухса кайрĕ: «Вăхăт пулсан татах кĕрĕп»,— терĕ. Карчăк темле кăмăл-сăрланса, пусăрăнса юлчĕ. Тĕрĕссипе, хĕр килĕнче ĕç нумайран та мар, кашни вырсарни каçах çĕрле хăй патне кĕрекен Акташ ватă амăшĕ патне пĕрре те кĕменшĕн тарăхса, хăй тарăхнине карчăка систерес мар тесе, тухса утрĕ.

Хĕвел çĕр хыçнелле кайса пыратчĕ ĕнтĕ. Хытă пăлханнипе, тулта сулхăнлатнă пулин те, Силемпие ăшă пулчĕ, пичĕ тăрăх унăн икĕ шултра тар пĕрчи юхса анчĕ. Питне çуса чунне уçăлтарас шутпа хĕр тÿрех килне кĕмерĕ, çырма хĕрнелле çул тытрĕ.

Çыранта, ытти çулсенчи пекех, кĕпе çума меллĕ вырăнта, каçма пеккисем пур. Ăшăх шыва шалçасем çапнă та çиелтен урлашкасемпе çирĕплетсе вĕсем çине хăмасем хунă. Хăштпĕр «каçмасем» шывалла чылай шала кĕреççĕ, темиçе сыпăкран тăраççĕ. Кăнтăрла кунта кĕпе çума килнĕ амăшĕсем патĕнче кунĕпех ача-пăча хĕвĕшет. Пĕчĕккреххисем шыва кĕме хăраса каçма çине лараççĕ те тяппинисене шыва чиксе, ăна акăш-макăш пăлхатса, кĕпе çăвакансене тарăхтараççĕ, аслăраххисем каçма çинченех шыва чăмаççĕ.

Лăпкă та ăшă июнь каçĕ. Пĕве те, çанталăк та тăп тăрать. Хĕвел аннă ĕнтĕ, таврапăх тĕттĕмленет. Таçта, хăвалăхра пуль-и, кăвакал нартлатать, шывра шапа кăрăлтата-кăрăлтата илет. Чим... Хăçан çапла пулнăччĕ-ха? Ытла та палланă, теме аса илтерекен самант. Силемпин кÿтсе çитнĕ чунĕ кăртах турĕ: ах, мĕн тери ырă та манăçми самант — тăвата çул каялла, çакăн пек пĕр уйăхлă та ăшă каç пулса иртнĕччĕ çав ĕç, Акташ пирвайхи хут чуптунăччĕ Силемпие! Пурте пĕтĕмпех куç умне тухса тăчĕ. Хĕр чĕри тутлăн ыратса кайрĕ, çав иртнĕ телейлĕ вăхăт пĕртте иртмен пек, халь тесен халь каялла килес пек туйăнчĕ ăна.

Унччен пекех, уйăх тÿперен пĕве çине шăрантарса пăхать. Ним хускалми тăракан шыв тĕкĕрĕ Силемпи пит çунă чух ванчĕ те, унта уйăх та арканса кайрĕ — йăлтах унччен пек! Тĕлĕнмелле! Уйăхăн вуншар ылтăн катăкĕ

йалтăраса выляма пуçларĕ. Çав вăййа сăнаса тăнă хушăра каçма та сулланма тытăнчĕ пек, хытăрах та хытăрах ярăнать вăл, хĕре шалалла, пĕве варнелле туртса кĕрет — çапла туйăнать Силемпие. Силемпи ӳсĕрĕлсе кайнă пек пулчĕ, пуçĕ çаврăна пуçларĕ, пĕтĕм кĕлетки çӳçенсе чĕтĕресе илчĕ. Пăлханчăк та шиклĕ чунпа, шăп та лăп тăватă çул каялла пулса иртнĕ пек, тӳпе хĕрринелле пăхрĕ те чут çеç ӳкмерĕ. Шăлне çыртса, куçне хупса, вăл ура çинче аран тытăнса юлчĕ. Çав вăхăтра, тен, тĕшĕрĕлсе те анатчĕ-и, такамăн çирĕп алли тытса ĕлкĕрчĕ, ӳкме памарĕ... Ах, пурнăç, пурнăç... Нивушлĕ сана каялла тавăрма пулать, нивушлĕ чи телейлĕ ырă самантсем иртмесĕр пĕр вырăнта тăпăртатса тăраççĕ е эпир хушсанах таçти аякри çĕрсенчен калле килсе пире çын чăтайми ырлăх кăтартаççĕ?!. Силемпи пĕр сăмах çеç пăшăлтатма пултарчĕ: «Акташ...» Вăл çывăхарнине пĕртте туймарĕ, анчах кам пырса тытнине тӳрех ăнланчĕ — Акташ. Кам пултăр-ха урăх тата? Ăна, пĕр ăна çеç чун пек кĕтет хĕр миçе кун хушши, миçе эрне хушши, миçе çул хушши?! Чим-ха, мĕнле-ха апла, паян шăматкаç çеç вĕт-ха, вырсарни каç мар, ытла ир çитрĕ мар-и Акташ, пĕр кун малтан çитрĕ? Тен, яланлăхах?

Силемпи куçне халĕ те, тăватă çул каялли пекех, тӳрех уçмарĕ, вăл темле сасартăк çемçелсе, йăвашланса кайрĕ, çирĕп алăсен ытамне хуллен кĕрсе ӳкрĕ. Тути, çурма уçăскер, «Акташ» тесех пăшăлтатрĕ, пĕçерсе çунма тапратрĕ, çăварĕ типрĕ. Халтан кайнăскер, Силемпи сăмахне татах каласшăн, калас тет, калаймасть, тути пăсăлать, куççулĕ шăпăрах юхса анать пичĕ тăрăх. Пĕр япалана çеç туять хĕр — талтлатса тапакан тăнлав çывăхĕнче каччă хĕрӳн сывланине. Каччă янахĕ хĕрĕн питне перĕнет. Урăх ним туймасть, курмасть, илтмест çак самантра Силемпи хĕрӳ ытамра. Тĕнчере иккĕн çеç — Силемпи те Акташ... Силемпие ӳкесрен пырса тытаканĕ те, антраса кайнă тейĕн, «Силемпи» тенинчен урăх нимех те калаймасть. Сывлăш çавăрса ярсан тин: «Ылтăнăм,— терĕ,— хĕвелĕм, ĕмĕр сӳнми çутă çăлтăрăм...» Хăй яка тумланнă, хула костюмĕпе, шурă кĕпепе, галстукпа. Çӳçне те хулалла кастарнă. «Тăватă çул ĕмĕтлентĕм, вутлă тăвăл витĕр, чĕрĕ тамăк витĕр тухса, пиншер çухрăмран ыткăнса килтĕм, саншăн тĕнчере ним те шеллемерĕм... пул манăн, Силемпи, ман эс Акташа, вилнĕ вăл тахçанах, хальччен çĕрсе те кайнă ĕнтĕ çĕр айĕнче. «Акташ» тесе ан çунтар ман чуна, Акташ мар эпĕ, Мирун...»

Пĕлĕт татки хыçне пытаннă уйăх каллех сиксе тухрĕ те тавралăха çутатса ячĕ. Силемпие тăн килсе кĕнĕ пек пулчĕ — хăлха патĕнчех темле ют сас мăкăртатать. Халĕ çеç кунтаччĕ Акташ, ăçта кайса çухалчĕ вăл? Кам ку ăна çупăрласа тăраканни? Мирун? Мĕнле Мирун? Мĕн сӳпĕлтетет вăл? Акташ халĕ çеç кунтаччĕ, ку вара, Мирун текенни, Акташа манма хушать... Тинкеререх пăхрĕ те Силемпи, чунĕ тухасла хаяррăн ахлатса ячĕ:

— Чунилли! Эсĕ вĕлернĕ Акташа! Ăçта Акташ? Хăп ман çумран, шуйттан эсĕ, мăйракалли! Кашни вырсарни каç килетчĕ ман пата, паян шăматкун килчĕ те, эсĕ ăна хăваласа ятăн, вĕлертĕн пулмалла! Ах, ах! Вилетĕп пулмалла, хăтарăр!

Силемпи Мирун ытамĕнчен хăпăл-хапăл вĕçерĕнчĕ те çӳçне-пуçне тустарса çӳллĕ çыраналла чупрĕ. Вăхăтра тытса чарса пусса выртмасан мĕн пулса тухасса ăнланнă Мирун хĕр хыççăн чупрĕ.

— Қаçар сасартăк пырса тухса хăратнăшăн,— терĕ вăл хĕре хуса çитсе,— тархасшăн каçар. Киле тин таврăнатăп-ха эп, сана асăрхарăм та пĕве урлă каçнă чух хыçалтан систермесĕр пырса куçна хуплас тенĕччĕ — кам хупланине пĕлейĕ-ши, çук-ши, терĕм. Пĕлнĕ пулсан ак çак пурçăн тутăра мăю çине уртсах ярăп, тенĕччĕ.

Мирун пиншак кĕсйинчен шурă пурçăн тутăр кăларса хĕр мăйĕнчен уртса ячĕ. Силемпи сиксе чĕтрет, Мирун çывхармассерен кăшкăра-кăшкăра ярать:

— Кай, ан çывхар, тĕсне курассăм килмест, кала, ăçта хутăн Акташа?

— Хăçан? Ăçта?

— Халь. Халь çеç кунтаччĕ Акташ. Е эсĕ Акташ пулса килтĕг-и ман пата? Тен, вырсарни каçсенче те, кукамайпа кукаçей Чистая кĕлле кайсан, эсĕ ман пата Акташ пулса пытăн? Кала, эсрел, ман чуна илесшĕн пуль эсĕ?

— Чим, тăнла-ха, мĕн шӳтлешен? Тин çеç таврăнатăп-çке эпĕ, Свердловскран таврăнатăп, госпиталь хыççăн. Акташ вăл вилчĕ, бомба айне лексе вилчĕ, тăватă çул каялла, эпĕ те чут çеç сывă юлтăм, аманса тăнран кайнăскерне юлташсем вилĕм хирĕнчен çĕклесе тухнă. Эсĕ упрарăн, пирĕшти пек, мана, Силемпи, сан пата çитес тесе тăватă çул ĕмĕтлентĕм эпĕ, тинех çитрĕм, эсĕ вара мана чунилли, çын вĕлерекен тесе ятласа кĕтсе илетĕн. Лайăх ачаччĕ Акташ, анчах та вăл тахçанах вилнĕ, хам алăпа хам çĕр айне пытарса хăвартăм; мĕн тăвас тен, вăрçă. Эпĕ те чут çеç вилеттĕм, юлташсем хăтарчĕç.

— Хă... вилеттĕн... Ма вилмерĕн?! Ма вилмерĕн?! Ăçта Акташ, кала! Вилмен Акташ, ыран каç килет, эсĕ вара вилнĕ... Фу-у! Мĕн ку? Шăршлă тунката... Йăтă вилли,— Силемпи сасартăк каллех урса кайрĕ: — Шуйттан! Çухал куç умĕнчен, çухал! — сасартăк хĕрӳн Мирун çине хĕрес хура пуçларĕ.— Эй, ырă турă, хăтар, эй, ырă турă, хăтар...

Сехри хăпнă Мирунăн çӳçĕ чăшăлах вирелле тăчĕ. Илтнĕччĕ вăл Силемпи пĕр вăхăтра питĕ чирлĕ тенине, анчах мĕнле чирпе чирлине пĕлмен. Нивушлĕ... пуçпа асапланать?.. Çапла шухăшласа тăнă самантра Силемпи ăна çӳçрен çавăрса илчĕ те тăпăлтарма пуçларĕ. Аран-аран хăтăлса, урнă хĕр еннелле лачлаттарса сурчĕ те сăртарах лартса хăварнă чăматанĕпе плащĕ еннелле уксахласа утрĕ. Сулахай ури чăнах та виçĕ сантиметр кĕскерех пулас, Мирун питĕ нушаланса утать, тата пĕр чĕркуççийĕ пачах та хуçланмасть. Çавăнпа та Мируна пушшех утма кансĕр. «Мĕнех,— терĕ Мирун сăрталла васкамасăр утнă май,— пулать пурнан пурнăçра: пирĕшти патне утатăп тесе вуншар çул утатăн та анкă-минкĕ ашапатман-тухатмăш патне пырса тухатăн. Эпĕ ăна тӳпери чи çутă çăлтăр, чĕрери нихçан сӳнми хĕвел тенĕ, вăл вара ăсран тайăлнă киревсĕр хĕрарăм çеç иккен. Эпĕ пур пĕр уншăн вилĕмрен çăлăнса тухрăм, вăл мана чунилли, çын вĕлерекен тесе хăй патĕнчен хăвалать. Тавтапуç. Тьфу! Ытла та йĕрĕнмелле. Çапах та, мĕнле-ши Улька? Улька, мĕнле пурнатăн, ылтăнăм, кĕтсе ил мана, эпĕ çитрĕм, тусăм...»

Мирун хыçалалла тепре çаврăнса пăхрĕ, тепре лачлаттарса сурчĕ. Силемпи темĕн мăкăртатса çӳллĕ çыран еннелле утрĕ. «Пĕтин пĕттĕр, кама кирлĕ çав тухатмăш карчăкĕ»,— шухăшларĕ Михетер Мирунĕ плащне тăхăнса чăматанне çĕкленĕ май. Улька сăнарĕ ун умне уççăнрах та уççăнрах тухса пычĕ...

Тепĕр кун ял çине «Чикан Силемпине вĕри çĕлен ернĕ» текен усал хыпар сарăлчĕ. Силемпине ял çумĕнчи катаран тытса тавăрнса больницăна çыхса-пăрахсах илсе кайрĕç: «Атя киле, вăрманта каçа хирĕç мĕн туса çӳрен?» — тенĕ, тет, тытма каякансем. «Часах Акташ килмелле, çавна тĕл пулса илме килтĕм»,—тавăрать, тет, лешĕ. «Вăл таврăнчĕ ĕнтĕ, сирĕн патра ларать»,—тесен çеç килме килĕшрĕ, тет, килне. Пырса çитсен пăхать—Акташ та, никам та çук килĕнче. Урсах кайнă Силемпи. Вара çыхса пăрахнă мăнтарăна. Хĕре хулана ăсатсан, стариксем пухăнса пӳртĕнче виçĕ хутчен пăшал печĕç, тет,—

вĕри çĕлене хăратма ĕнтĕ, текех ан çулăхтăр мĕскĕн тăлăха, сывалтăр Силемпи, çын кулли ан пултăр — чипер хĕрччĕ, мĕн каламалли, кăмăлĕ те ытла та аванччĕ. Кама усал тунă вăл ял çинче? Никама та. Мĕн тери юратнă иккен шеремет Акташне — ăсĕ пăтрашакан пуличчен кĕтнĕ ăна... Эх, вăрçи... Мĕн тери ырă ачасем çап-çамрăклах пуçĕсене хучĕç. Ылханлă вăрçă, ылханлă Гитлер, акă кам чăн-чăн çынçиен! Харам пулчĕ ытармалла мар йĕкĕт Акташ, харам пулчĕ пĕр кашăк шывпа çăтса ямалла чипер сарпике Силемпи. Çапла шутларĕç ялти сумлă çынсем вăхăтсăр сӳннĕ икĕ çамрăк чун пирки. Пăшăрханчĕ халăх чунĕ, ыратрĕ. Мирун çеç ним чухлĕ те кулянмарĕ, Улькана кăнтăрлах ял урамĕпе хулĕнчен çавăтса çӳре пуçларĕ.

Тепĕр эрнерен вĕсем пĕрлешрĕç... Тĕлĕнмелле-и? Мĕн тĕлĕнмелли: çапла ĕнтĕ вăл сутăнчăк тени — юратушăн тесе тăван çĕрне сутать, юратăвĕ вара унăн шăршлă шыв кӳленчĕкĕ пек ăшăх. Хăй тирĕ çеç ăна пуринчен те хаклă, хăй тирĕ тата ырлăхĕпе киленĕвĕ. Мĕн тума кирлĕ ăна ăсран тайăлнă Силемпи, саппасра муллă, мăнтăркка, вăйпитти, хăйне чунран парăннă Улька пур чух?! Тĕнчере чи хакли савни те, амăш те, Тăван çĕр те мар, вăл хăй çеç,— Михетер Мирунĕ...

## 5. Акташ

Света! Малтанах эп повеçе çакăнпа вĕçлесшĕнччĕ. Çакăнпа вĕçлесен те мана вулакан темех ӳпкелеймен пулĕччĕ: мĕнех вара, пулать вăл ун пекки йывăр вăхăтсенче— çын тӳсет-тӳсет те, чăтать-чăтать те, юлашкинчен е чун хавалĕ пĕтсе çитет, е организмĕ этем йăтайми çав йывăр çĕклеме текех çĕклейми пулать. Силемпи, мĕн ачаран çав тери сисĕмлĕ-туйăмлăскер, ытла та пурне те чĕри патне çывăха илекенскер, туйăмпа шухăш хăватне, шалти вута чăтса ирттереймесĕр чирлесе каять. Сахал пулнă-и пурнăçра çакăн пек тĕслĕхсем? Сахал мар. Ĕлĕк авал та, хальрех те. «Вĕри çĕлен ернĕ» тенисене эпир мĕн ачаран илтнĕ. Ĕлĕкхи тĕттĕм халăх çав чире тĕшмĕш япалипе çыхăнтарнă, эпир вара халĕ аван пĕлетпĕр: тĕнчере нимле «вĕри çĕлен» те çук, ку — нерв системи, пуç, чун чирĕ. Çав чиртен ĕлĕк пуртех тенĕ пек вилнĕ, халĕ çав амакран сыватаççĕ. Ĕлĕк те сывалнă тĕслĕхсем пулнă: йăлтах этемĕн организмĕнчен тата пурнан пурнăçран, ĕç-хĕлтен,

килет. Мĕнле çавăрăнса каять пурнăç: калама çук йывăр хуйхă вырăнне тĕлĕнмелле пысăк савăнăç килсе хупласан, сăмахран, çын сасартăк сывалать. Этеме кĕтрет хĕвелĕ çупăрласан, каласа ĕненмелле мар, куçпа курсан çеç, хăлхапа илтсен çеç ĕненмелле тĕлĕнтермĕш килсе çапсан, этем пĕтнĕ çĕртен пурнăçа таврăнать.

Çавăн пекки те пулать пурнăçра. Эпĕ, Михетер Мирунĕпе Улька ывăлĕ, шантарсах калатăп сана çакна. Каллех калатăп, повеçе эпĕ Силемпие больницăна ăсатнипе вĕçлесшĕнччĕ. Пессимистла вĕçленет, тесшĕн-и? Çук-çке: Силемпи юлашки самантченех ĕненме пăрахмарĕ Акташ таврăнасса. Амăшĕ вара, суккăр Тарье, амăшĕ... Акташ вилнĕ ĕнтĕ, текех нихçан та таврăнмасть текене куçран лачлаттарса сурма, пырне кăшласа татма хатĕр. Кăмăлĕ çапларах унăн. Аслă ĕненӳ! Вилĕмсĕр ĕненӳ! Хĕвеллĕ ĕненӳ! Мĕн калайĕ мана вулакан? Нимĕн те. Повеçĕн теми те, тĕп теми, çавă: Ĕненӳ, Шанчăк. Вулакан нимĕн те калаймĕ, анчах эсĕ, Света... Эсĕ, Акташпа Силемпин кĕçĕн хĕрĕ, повеçе çапла вĕçленĕшĕн мана ĕмĕрне те каçарас çук: мĕншĕн тесен Силемпи аппа халĕ те сып-сывах, Акташ, Михайла тете, чĕп-чĕрех. Аннӳ больницăран, аçу вилĕм шăтăкĕнчен тахçанах тăрса тухнă.

Света! Ман повесть мистикăлла произведени мар, халап-юмах маррине те аванах куратăн, фантастика та мар, анчах та вăл питĕ чăтăмлăн кĕтме, çав тери тарăннăн ĕненме тархаслакан произведени. Аçупа аннӳ пек пул, повеçре çырса кăтартнă хăшпĕр типсем пек ан пул. Чăтăмлă пул, тӳсĕмлĕ пул. Çак пĕтĕм историе, паллах, эс çиелтен ĕлĕк те темиçе те илтнĕ пулĕ, анчах ман пек тарăннăн сана ăна никам та каласа паман, мĕншĕн тесен эпĕ ăна илемлетсе, хăшпĕр пулман япаланах пулнă пек туса, каласа патăм. Сăмахран, Михетер Мирунĕ çапăçу хирĕнче хăйне хăй пенине, вăлах Акташа персе пăрахма хăтланнине тата ыттине те. Акташпа Силемпи çинчен çырни вара пĕтĕмпех тĕрĕс. Света, савнă тусăм, мухтанма тивĕç эсĕ вĕсемпе. Тĕлĕнмелле таса та çутă, çирĕп чунсем вĕсем.

...Пирĕн çарсем Тухăçалла чакса кайнă хыççăн, çапăçу хирĕ, Михетер Мирунĕ хĕрĕх пĕрмĕш çулхи çулла хăтăлса тухнă хир, калама çук шăп пулса тăчĕ, унта тăшманăн танкĕсем те, пехоти те чарăнма шутламарĕç, пултарнă таран малалла талпăнчĕç. Тепĕр каç та анăç вут хыпса илнĕ пек чӳхенчĕ, ялкăшрĕ. Çĕр хĕрринче «пушар»

çăра хĕрлĕ, юнпа пĕвеннĕ тĕслĕ, çӳлерех тĕс шĕвелет, çепĕç, таса, сарăрах та симĕсрех — ĕнер кaç мĕнле пулнă, халь те çаплах.

Тавра шăп, питĕрех те шăп. Пăшал-пулемет сасси е аманнисем ахлатни мар, кураксемпе çăхансем карлатни те пулин илтĕнмест: юлташĕсене чиперех тирпейлесе пытарма ĕлкĕрнĕ пулас совет салтакĕсем. Хĕрлĕ анăç хуралнăçем хуралса пырать. Хĕп-хĕрлĕ тӳпе хĕррине çĕр сăхса тăрать, тейĕн. Вилнĕ салтаксем курмаççĕ ĕнтĕ çав анăçа, ыран ирпе хĕвел çĕкленессе те пĕлеймеççĕ вĕсем. Хĕвел те, тӳпе те, кун та, çĕр те вĕсемшĕн ним те мар текех.

Умрах — армути уйĕ, кунтарах — автан хӳри пек сарăлса та авăнса тăракан кăкăр çӳллĕш курăк ашкăрса ларать. Çав курăк та, армути те тарăн шухăша путнă, пуçĕсене усса каç шăплăхне итлеççĕ. Чавса, çĕмĕрсе, аркатса пĕтернĕ хире каллех каç тĕттĕмĕ хупласа илчĕ. Тĕттĕмпе пĕрле шăплăх та ӳсрĕ. Шăплăх... Унпа пĕрле ху чĕррине пĕлтерекен туйăм, ĕмĕрех чĕрĕ пуласса калакан туйăм килинех. Ун чух пĕтĕм кĕлеткӳпе каçăрăлса утса çӳрĕттĕн, пытанма шутламăттăн та. Тĕттĕм, никам та, ним те курăнмасть. Ырлăх — чĕрĕ те сывă пуласси. Анчах... кам патне килтĕр вăл çав туйăм вилнисем пурте нӳрлĕ çĕр айĕнче выртаççĕ пулсан?..

Çăлтăрсем çунаççĕ. Аялтах, шултраскерсем, темле тăмаланчăкскерсем. Çутă çăлтăрсем. Армути хушшинчен вăрăм хăлхаллă пĕчĕк чĕрчун йăпшăнса тухрĕ. Қашни тăпра муклашкине, курăк тунине шăршласа пăхать, тĕмерен тĕмене сиксе окоп бруствере çине хăпарсан, хăлхисене чанках тăратрĕ. Мулкач. Қайри урисем çине ларчĕ те малти тяпписемпе питне çума пуçларĕ: савăнăç — çапах та, чĕрĕ вĕт-ха, чĕрĕ! Кунĕпе хĕрсе çитнĕ çĕртен ăшă çапать. Çăлтăрсем пĕрне-пĕри куç хĕсеççĕ. Ырă кăмăллăн, темле вăрттăн япала пĕлнĕ пек, хăйсен шухăшне часрах мулкача уçса парасшăн пек йăлтăраççĕ. «Нимех те мар, çăлтăр çăлтăрах ĕнтĕ, мĕн тĕлĕнмелли пур?» — тенĕн пăхса илет те кĕске хӳре çăвать те çăвать тяпписемпе питне. Вилнĕ салтаксемшĕн вара эсир, çăлтăрсем, сӳнтĕр,— çук эсир, пачах çук, пĕтĕм çут тĕнче çук пеккех çук.

Анăçри хĕп-хĕрлĕ хĕрнĕ тӳпе хĕррине çĕр çăтса пĕтерсен, сасартăк çил тухрĕ: автан хӳри пек сарăлса та авăнса тăракан кăкăр çӳллĕш курăк канăçсăррăн хускалса илчĕ. Çиле армутисем те туйрĕç. Тӳпере çăлтăрсем

пĕрин хыççăн тепри çухалма тытăнчĕç: пĕлĕтсем туртăна пуçларĕç иккен, хĕвел ахальтен мар çапла хĕрелсе анчĕ, халĕ, акă, çил тухрĕ. Çилĕ ăшă та нӳрĕскер — çумăра пулмалла. Çанталăк пăсăлать. Çумăр пуласса çĕр хурчĕсем те сисеççĕ. Унта та кунта ăман йăшалана пуçларĕ. Кĕске хӳре пит çуса ларнă бруствер çинчен аяла ансан, окопа лекетĕн, окоп тĕпĕпе те ăман шăвать. Çанталăк улшăнасса вăл та туять-шим? Шурĕ-шурĕ те, пĕччен шума кичемрен пуль-и, окоп тĕпĕнчи тĕмене шăтарса кĕчĕ, юлташне шыраса вăл тăпра айĕнче выртакан вилĕ салтакăн хĕвнех кĕрсе кайрĕ. Салтак ӳчĕ ăманнăни пекех сивĕ, тăпра унтан нумай ăшăрах. Хĕврен тухса пит çийĕпе шунă чух тусне тĕл пулчĕ те, çамка çинче канма чарăнчĕç. Çав вăхăтра çӳлте çил вăйлăланчĕ, тӳпене йăлтах çумăр пĕлĕчĕсем карса илнĕ, пĕр çăлтăр та курăнмасть. Часах çумăр чашлаттарса ячĕ. Вăл, вăйланнăçем вăйланса, шăннипе тăр-тăр! чĕтрекен мулкача окоп тĕпне хăваласа кĕртрĕ: кунта, çумăрĕ çапсах çăвать пулин те, çил лекмест, самаях хӳтĕ. Сайкка шăнса кӳтрĕ. Çумăр вĕçсĕр тăкнă май, окопа шыв тула пуçларĕ. Йĕпене юратман кĕске хӳре ирĕкелле тапса сикесшĕнччĕ, пултараймарĕ, йăнăш енне сиксе çӳллĕ çĕре лекрĕ те яка тăм çийĕпе окопа каялла шуса анчĕ. Виле тĕмески çине ӳксе, сехри хăпнипе ниçта кайса кĕрсйми чĕтре пуçларĕ. Амансем, çамка çинчен шуса анса, çиеле тухрĕç. Тĕмеске хускалса илнĕ пек пулчĕ. Мулкач çакна сиссе окопран тухса тарчĕ те çумăр витĕр армути пуссинелле çиçĕм пек вĕçтерчĕ. Çав хушăра окоп тĕпĕ каллех хускалса илчĕ, тĕттĕмре шывпа тăм пылчăкĕ ăшĕнчен хура мĕлке ĕселенсе тухрĕ. Тĕреленсе тăчĕ те, окоп хĕррине кайса ӳксе, этем сассипе татăлса макăрса ячĕ. Макăрсан-макăрсан, макăрайми те пулчĕ. Темрен калама çук хытă хăранипе анрасах кайнăскер, кĕлетке чĕркуç таран шывран çӳлелле тухмаллине те тавçăрса илеймест. Чунран татăлса йĕрет, нăйлата-нăйлата, ула-ула ярать, антăхса кайса, хашкахашка, ӳпки-пĕверĕпе çеç мар пуль, пĕтĕм пĕвĕпе уçă сывлăш çăтать. Алчăраса кайни кăштах лăплансан, çĕр айĕнче вăраннă хыççăн темиçе секунд хушшинче мĕн туйни асне килсе капланчĕ, пуçне тимĕр кăшăлпа хĕстерчĕ. Тăн килсе кĕрсенех вăл сывлăш ӳпкере пачах çуккине туйса илчĕ. Сывласа ярĕччĕ, ниепле те май çук: темĕн чăтмалла мар хытă пусарса, хĕссе тăрать, çĕртен пулакан йĕрĕнчĕк шăршă пуç мимине витĕрех витнĕ, йĕклентерет вăл, хăсас килтерет, питĕ тăвăр пирки урана та,

алла та, пуҫа та хускатма ҫук; тинĕс тĕпне лекнĕ тейĕн, пĕр сас-чĕв те, ҫутă пайăрки те ҫитмест кунта, тĕттĕм, шăп, виле хурчĕсем пуҫ миминех шăтарса кĕнĕ, сывлăш та, курăк та таҫта ҫӳлте, тус-юлташсем те унтах, эсĕ чĕррине, сывлăш хумĕпе тăнна ҫеҫ ҫухатнине вĕсем пĕлмеҫҫĕ, пĕлнĕ пулсан, чĕрĕллех пытарса та хăвармĕччĕҫ, хăйсемпе илсе кайĕччĕҫ. Эсĕ халĕ тĕнчере ҫук ĕнтĕ, эсĕ ҫĕр айĕнче, виле эсĕ. Чĕре вуниккĕлле тапать, ак-ак кăкăртан сиксе тухать тейĕн, тискер, хăрушă ҫак тĕнчере ху текех ҫуккине туйма. Кам пур-ши чĕрĕлле пытарнă ҫынсенчен телейсĕртереххи ҫĕр ҫинче!

Макăрса тăрансан, салтак хăй питĕ вăйсăррине туйса илчĕ. Шăнса хытнипе сиксе чĕтрет вăл, шăлĕ ҫине шăлĕ те лекмест. Тапалана-тапалана окопран тухать те хăй сисмесĕрех кĕсйисене хыпашлама пуҫлать. Аллине ниҫта та нимĕн те лекмест. Йăлтах кăларса илнĕ: документсем те, ытти япаласем те ҫук — мĕн мурне кирлĕ пултăр вилсе выртнăскерне леш тĕнчере документ, блокнот, кăранташ, сăнӳкерчĕк?! Мĕн тума кирлĕ ăна тата унта хĕҫпăшал? Унта нимĕн те кирлĕ мар: хырăм та выҫмасть, тум та ҫĕтĕлмест, вар та ыратмасть, шăмшак та сурмасть, куҫ та пăсăлмасть, сивĕ те мар, ăшă та мар, ырă та, начар та мар, хăрамастăн та, савăнмастăн та. Унта аҫупа аннӳ те, тусусем те, савнийӳ те, тăшмансем те, вăрҫăпа мир те ҫук...

Виле шăтăкĕнчен тухрĕ кăна, пурте кирлĕ пулса кайрĕ. Чи малтанах ҫул тупмалла. Ҫул ҫынсем патне илсе ҫитерме тивĕҫлĕ, тăшмансем патне мар, хамăр ҫынсем патне. Унта ҫитсен, ăшăнĕччĕ те пĕрер татăк ҫăкăр ыйтса пăхĕччĕ. Пĕр татăк ҫеҫ. Анчах та ăҫтан ҫул тупмалла? Хăш енче кăнтăр, хăш енче хĕвелтухăҫ. Хĕвелтухăҫнелле кайсан, фронт линийĕ урлă каҫса хамăр енне ҫитме пулĕччĕ. Анчах та ăҫта-ха хамăрăннисем?

Пĕр вырăнта хытса тăраканскер тинех малалла сĕнкĕлтетрĕ: пырсан-пырсан, пуҫĕ ҫаврăннипе, ӳкет те тăрса татах малалла каять, ӳкет те тăрать, ӳкет те тăрать. Ҫумăр сайрарах ҫăва пуҫларĕ. Вĕтелсе-вĕтелсе пычĕ те сарăк тăпах чарăнчĕ. Акă ĕнтĕ тумлам та ӳкми пулчĕ. Малта тӳпери хура чаршавăн пĕр хĕрри уҫăлчĕ те куҫ умне пысăк ҫутă ҫăлтăр тухса тăчĕ. Ăна курсан, каҫхи ҫулҫӳрен чиксĕр хĕпĕртесе ӳкрĕ:

— Силемпи, ҫутă ҫăлтăрăм, эсĕ ҫутататăн манăн йывăр ҫула...

Пĕччен ҫăлтăр ҫумне тата тепри хутшăнчĕ. Тĕттĕм

хирте самаях çутă пулса тăчĕ. Салтак малалла хăвăртрах та çирĕпрех утса кайрĕ:

— Аннем, эсĕ те куртăн-и мана? Эсĕ те чĕнетĕн-и, кĕтетĕн-и, çул кăтартатăн-и?

Часах тӳпе пĕлĕтсенчен йăлтах тенĕ пек тасалса çитрĕ. Акташ, юмахри Саврăш паттăр пек, вилĕмрен чĕрĕлсе тăнăскер, пурнăça хирĕç утать. Вăл ăна тĕл пулса илмеллех. Пурнăça пĕтĕмпех туянма халь çул мар, пĕр татăк çăкăр çеç, нумай та мар, пĕр татăк, кирлĕ. Çулне вăл хăй те тупать — çăлтăрсем кăтартаççĕ: ав мĕн чухлĕн вĕсем тӳпере!

Армути уйĕпе пырать. Армути шăрши сăмсана çурать, пуçа ыраттарать, курăк урана тăллантарать, ахаль те вăйсăрскерне йăлтах сĕлтен ярать. Уринчен ури те иртмест ĕнтĕ салтакăн. Пĕр-ик çухрăм пек кайсассăн, армути пĕтрĕ. Акташ темле сукмак çине тухрĕ. Сукмакпа утма çăмăлрах, анчах та хал пĕтсен, çулĕ мĕнле такăр пулсан та, инçех каяймăн çав. Çĕр метр пек куçать те тĕмеске тупса канма ларать, татах куçать. Кутпа шуманни кăна, йăлтах хал пĕтнĕ. Паçăртанпах ĕнтĕ Акташ тĕлĕкри пек пырать: пуçĕ ĕçлеме пăрахнă, пуш-пушă, туйăм-сисĕм тени çухалнă, алли-ури хуçине пачах итлесшĕн мар. Канма ларсан çеç пĕр саманта çынна чун кĕнĕ пек пулать, тăн килсе кĕрет, пуç мимин пĕр кĕтесси Акташ вăрçа тухса килнĕ куна çине-çинех куç умне ӳкерет. Салтак ачисем çирĕпленсех те çитеймен уçă сасăсемпе çаврăнтарса авалхи хурлăхлă салтак юррине юрлаççĕ. Хăшĕн-пĕрин нумай юрланипе сассисем çĕтнĕ, теприсем хытă хӳхлесе макăрнипе пачах юрлаймаççĕ. Пĕкĕсем çумне явалаеа туртаран усса янă тĕрĕллĕ питшăллисем çĕртен сĕтĕрĕнеççĕ. Ачасем те мăйĕсенчен питшăлли уртнă, хăшĕн-пĕрин аллинче вĕçрен-вĕçе çыхнă алтутри. Купăс калаканĕ — Михетер Мирунĕ — купăсне хаяррăн çухăрта-çухăрта илсе лав çинчен сике-сике анать, кĕвĕ калама пăрахса, анăçалла такама юнаса илет. «Гитлер, юнĕçен Гитлер!» — тенисем хăлхана киле-киле кĕреççĕ. Акташăн юрлас та, кăшкăрашас та килмест. Вăл суккăр амăшне çавăтнă та, пырсан-пырсан-пĕр, карчăка, пĕчĕк ачана ачашланă пек, кăвакарнă çӳçĕнчен, лĕпкинчен ачашла-ачашла илет, ăшă сăмахпа йăпатма тăрăшать. Амăшĕ те утма чарăнсах ывăлне умне тăрататать те питне, мăйне, хул-çурăмне хыпаласа пăхать, алли чĕтрет мăнтарăнăн сасси тухмасть — калама çук пысăк хуйха пула ăшне кайнă. «Çул çине тесе чикнĕ читнайăн сăмсине, касса,



Микул туръ хыҫне хутӑм, сывӑ ҫавӑнса килсе активмелле пултӑр, ачам»,— тет амӑшӗ пӑшӑлтатса. Акташ, унпа килӗшсе, пуҫне сулать. «Пуҫна ҫухатсан та чысна ан ҫухат, начальниксене итле, ялти пек шух ан пул, тарса ан кил, вилсе ан ҫӳре, вӑр-вартарах пул, вилсе ан кил...»

Амӑшӗн пехилне пурне те астӑвать Акташ. Ун чухнехи пекех, вӑл халӗ те ҫапла пӑшӑлтатрӗ: «Ҫавӑнса ҫитетӗпех, анне, эсӗ Микул турӑ хыҫне хунӑ ҫӑкӑр сӑмсине активме. Пуҫа ҫухатсан та чыса ҫухатмӑп, ан пӑшӑрхан, начальниксене те итлӗп, хамӑрӑннисене, паллах, ютсене мар; тарса мар, вӑйпа хӑвалаcа ярсан та фашиста тӗп тумасӑр киле пырас ҫук эпӗ, анне. Ялтинчен пин хут шухӑ та чӑрсӑр пулӑп, каҫар ӗнтӗ мана ҫакӑншӑн, ватӑскерӗм: шухӑ та чӑрсӑр ҫын ҫеҫ вӑрҫӑра ҫиеле тухать — шухӑ ӑс, чӑрсӑр ӑс кирлӗ.

Аосӑр хӑтланни вилӗмпе тан. Вилсе те килмӗп. Эсӗ ҫӗр ҫинче пур чух мана вилме ниепле те юрамасть...»

Силемпи таҫтан таврӑнатчӗ, лавӗ ҫинчен анса тӑнӑ та юпа пек шак хытса кайнӑ.

Уй хапхинчен тухсан лавсем те, ҫынсем те чарӑнчӗҫ, сывпуллашма вӑхӑт ҫитрӗ. Такам сӑмах каларӗ, такам ҫӳлелле кӗмӗл укҫа ывӑтрӗ... Укҫи гербӗ май ӳкрӗ пулас...

Халӑхран вӑтанса, Силемпи Акташ патне ҫывхараймарӗ, ун патне Акташ хӑй пычӗ, амӑш аллине Силемпие тыттарчӗ те: «Киле ҫитерсе яр»,— терӗ, амӑшне тепӗр хут ҫурӑмӗнчен лӑпкаса илсе ҫамкинчен чуптурӗ, вара, уйрӑлса, лавсем еннелле утса кайрӗ. Пӗрре те ҫаврӑнса пӑхмарӗ. Ҫаврӑнса пӑхма юрамасть-мӗн, сывӑ килеймест, вилсе килет имӗш. Кӑкӑрне ҫурса чӗрине такам тымарӗ-мӗнӗпе тӑпӑлтарса кайнӑн, чӗлхерен ҫӗтсе, вилнӗ пек тӑрса юлчӗ Силемпи. Ҫаврӑнса пӑхмарӗ ҫав Акташ, халӗ акӑ ҫаврӑнса пӑхманшӑн чунран ӳкӗнет...

Ӑҫта хамӑрӑннисем? Ӑҫталла илсе каять сукмак? Пуҫӗ кашлать Акташӑн, хӑлхинче темӗн янӑрать, ҫурӑмӗ хыҫӗнче ҫӗр пӑтлӑ кабель ҫакӑнса пынӑн туйӑнать, ниепле йӑтма пӗлмелле мар: мӗнле йӑтсан та ҫурӑма авать, пусса ӳкерессипе хӑратать, пилӗкне хуҫассӑн сулланать. Таҫтан шалча тупӑнчӗ. Акташ шалча ҫине тӗренсе малалла куҫать. Умра йӑваш ҫеҫ хӑйҫути мӗлтлете пуҫларӗ. Акташ ӑна асӑрхать пек те, асӑрхамасть пек те — хӑлхине таҫта самолет шӑхӑрса иртни хуплать, мотор сассипе пӗрле: «Ҫӑка!» Эпӗ — «Юман!» «Ҫӑка!» Эпӗ — «Юман»! Илтетӗн-и?!» — тени килет. Кӑна Акташ хӑех калать пулас. Хирӗҫ вара никам та чӗнмест. Акташ науш-

никсене таçта çити ыватса ярас тесе хăлхисене ярса тытать: нимле наушниксем те çук иккен. Хăлхисене ывăç тупанĕсемпе хуплать. «Çăка!» Эпĕ — «Юман!» — тени çаплах хăлхана çурать, пуç мимине каса каса каять. Шăнса кўтнипе тата выçăхса çитнипе сиксе чĕтрекенскер, çывăхрах паçăрхи йăваш хăйçутие курать, шалча çине тĕренсе ун патнелле пĕр утăм, икĕ утăм тăвать, хăйçути урса кайса ташлама, шавлама, кĕрлеме пуçлать, бомба шăхăрса анать те çĕр чĕтретсе кĕрслетсе çурăлать. Такамăн пахчи хыçĕнчи мунча пăлтăрне Акташ шалчи мĕнĕпе кĕмсĕртетсе кĕрсе ўкет, тăнне çухатать.

Халь çеç заданинчен таврăннă, ури тупанĕнчен пуçласа пуç тўпине çити пылчăкпа вараланса пĕтнĕ амăшĕ мунча кĕнĕ вăхăтра хуралта тăракан вунвиçĕ çулхи Петрусь Смидович шартах сикрĕ: нивушлĕ амăшĕ лапка çинчен персе анчĕ?! Апла тесен, сасă ма шалта мар, пăлтăрта, юнашарах, илтĕнчĕ?! Петрусь, амăш каланине манса тата нимĕçсем ялта çуккине асра тытса, карабинне хул урлă çакнăччĕ те мунчаран хăпса пусă патне пынăччĕ, каçран пулă çинĕскер, шыв ĕçме шутланăччĕ. Вăл витрепе шыв ăсса хăпартрĕ çеç, ĕçсе те ĕлкĕреймерĕ, мунчара кĕтмен çĕртен сасă пулчĕ. Амăшне чўречене хупламасăрах хăй çутнăшăн, хăйне ытла та мемме пулнăшăн чĕререн ятласа, Петрусь мунча патне йăпшăнса пычĕ. Пĕр сас-чĕв те çук. Амăшĕ çутта сўнтернĕ те алăкран кĕрекене тўрех персе ўкерме пистолетне хатĕр тытнă пулмалла. Пĕр минут иртет, иккĕ... Никам тапăнса кĕрекен те çук. Пăлтăрта тахăшĕ йывăррăн сывлани çеç илтĕнет. Ывăлне такам çапса пăрахрĕ пулĕ тесе, çара çан çинченех пиншак тăхăннă амăшĕ алăка тапса уçать, пăлтăра сирпĕнсе тухать, кĕсъе хунарĕпе çутатса пăхать те тинех ăнланса илет: окруженинчен тухакан хамăр салтак... аманнă пулас, тăнран кайнă. Петруçе чĕнсе илет. Мунча чўречине çĕтĕк-çурăкпа хуплаççĕ те хăй çутаççĕ. Салтак çарапуç. Пуçĕ те, пичĕ-куçĕ те тăм пылчăкĕпе вараланса пĕтнĕ. Кĕпи-йĕмĕ пăхма çук лапра, йĕп-йĕпе. Ачи çапçамрăк, хитре ача хăй. Çарран. Аттисене çăрăлчăк урлă каçнă чух унта хывса хăварнă куран, утма çăмăлрах пултăр, тенĕ ĕнтĕ. Вырăс мар пулас, тухăç çынни пекрех курăнать. Шăлне шатăр çыртнă. Куçĕ мĕнле чарăлса кайнă, çапла тăрать, патне çутă илсе пырсан та мăчлатмасть, çутта сисмест пулмалла. Чĕри питĕ хуллен тапать, юн таппи çукпа пĕрех. Пичĕ-куçĕ шĕвĕрленсе, тути шуралса кайнă. Çынна вилнĕ сăн çапнă. Ольга Смидович ывăлне

шкапран аптечкăпа пĕрле шприц, медицина спирчĕпе нашатырь тата вĕретнĕ сĕт илсе килме хушса ячĕ. Хăй тăнсăр салтака меллĕрех вырнаçтарса хучĕ те пылчăкран çуса тасатма пуçларĕ. Тепĕртакран Петрусь таврăнсан, чирлĕ çыннăн шăлне тимĕр кашăкпа хайăрса çăварне уçрĕç те унта пĕчĕккĕн сĕт яра пуçларĕç. Тип пырне ан кайтăр тесе, салтака тăратсах лартрĕç темелле. Анчах та сĕт ниепле те шала каймасть, каялла юхса тухать. Вара укол турĕç — камфора çăвĕ те кофеин. Петрусь нашатырьпе йĕпетнĕ ватăпа чирлĕ çыннăн сăмси шăтăкĕсене сăтăрать. Амăшĕ салтака чĕре тĕлĕнчен массаж турĕ-турĕ та аллисенчен ярса тытса вĕсене пĕрре пуçĕ вĕçнелле, тепре кăкри çинелле çӳрете пуçларĕ. Вунă-вунпилĕк минутран салтак пичĕ кăштах кĕренленчĕ, куçĕ хупăнса илчĕ. Вăл асаплăн сывласа ячĕ. Ĕнсинчен çĕклесе тăрса, Ольга ăна вĕретнĕ ăшă сĕт ĕçтере пуçларĕ. Тăраниччченех ĕçтерчĕ. Çамкине тытса пăхрĕ те хăраса кайрĕ: паçăр сип-сивĕскер, салтак çамки халь кăвар пекех вĕри. Çын калама çук нушаланса, йывăррăн сывлать. «Ӳпке шыçнă тетӳн, Петрусь,— ывăлне шăппăн каларĕ Ольга,— киле чуп та ун валли кăмака çине вырăн майла, ăна халь ăшăпа типĕ тата ырă апат кирлĕ, имçамне тупăпăр, ăшшипе типпи ытларах пултăр. Таса кĕпе-йĕм илсе кил, аçун пижамине те манса ан хăвар».

Акташ халиччен нихăçан та курман хĕрарăмпа ача ăна типĕ те таса кĕпе-йĕм, ун çинчен пижама тăхăнтартрĕç те аçампа чĕркесе пӳрте çавăтса кĕчĕç, кăмака çине лайăххăн майласа вырттарчĕç. «Малашне, салтак юлташ, эсĕ Петруçăн куккăшĕ, манăн шăллăм пулатăн,— терĕ Ольга Смидович Акташа ырă каç сунса.— Мĕн те пулин кирлĕ пулсан, тӳрех ыйт, эпир кунтах пулатпăр, Петрусь ашшĕ те сан пекех салтакчĕ, кайнăранпа та пĕр хыпар çук...»

Акташ ырă хĕрарăма тав туса вăйсăррăн пуçне сĕлтрĕ. Ольга çутă сӳнтерсен çывăрма выртмарĕ-ха, вилĕмрен çăлăннă салтакăн кĕпи-йĕмне çĕр айне алтса чикме тухрĕ. Çутăлнă-çутăлман аттисене тупса килчĕ те вĕсене те ял çумĕнчи ращара алтса чикрĕ.

Уйăха яхăн Ольга ниçта та кайса çӳремерĕ, чирлĕ çынна пăхрĕ. Смидовичсен çурчĕ ял хыçĕнче пĕр-пĕччен ларать те, çирĕклĕх витĕр унта никамах та пырса аптăратмасть, уçлăх енчен — çаврăнăç. Мĕн те пулин кирлĕ пулсан, ял çине Ольга хăй тухать, Петрусь та çаплах тăвать. Буйновичи белорус ялĕ. Те ытла пĕчĕкрен, нимĕç-

сем унта пурӗ те пӗрре ҫех пулнӑ, ялта «ҫӗнӗ йӗрке» тума Микола ятлӑ пӗр пӳтсӗр ҫынна хушса хӑварнӑ. Староста Микола, совет влаҫӗ вӑхӑтӗнче вӑрӑ ӗҫӗпе тӗрмене ҫакланнӑскер, ял тӑрӑх чӑн-чӑн хуҫа пек утса ҫӳрет. Ватӑ-вӗтӗ, ӑна курсан, таҫтанах пуҫ тайса иртет, яшкӗрӗм вара куҫ тӗлне пулас мар тесе аякран пӑрӑнса утать.

Петрусь Акташа ялти пӗтӗм хыпара пӗлтерсе тӑрать, калаҫнӑ чух ӑна ҫине-ҫинех Акташ тете мар, Аркаш тете тесе чӗнет. Кӑшт самайлансанах Акташ Петруҫпе амӑшне хӑй ҫинчен тӗпӗ-йӗрӗпе каласа кӑтартрӗ. Чӗрӗлле пытарнӑ ҫӗртен тӑрса тухнине пӗлсен, амӑшӗпе ывӑлӗ тӗлӗнмеллипех тӗлӗнчӗҫ. «Пурнас куну пӗтмен пулнӑ, айяй-яй мӗн тери тамӑк курнӑ эсӗ, чӗрӗллех леш тӗнчене кайса килнӗ,— пуҫне сулкала-сулкала, аллисене саркала-саркала, пӗҫҫисене ҫапа-ҫапа итлерӗ Акташ калавне Ольга Смидович.— Совет салтакӗсем ҫавӑн пек паттӑр ҫынсем ӗнтӗ вӗсем...»

Пӗррехинче Ольга ӗҫпе ирех кӳршӗ яла кайсан, Петрусь ӗнине пахча хыҫӗнчи ҫерем ҫине кӑкарса килчӗ те «Аркаш тетӗшне» пӳрт маччи ҫине илсе хӑпарчӗ. Пӳрт сӑртарах ларнӑран ял ывӑҫ тупанӗ ҫинчи пек аван курӑнать. Тӗп урам Нерусса шывӗ хӗррипе тӑсӑлать. Ҫурҫӗр енчен яла сӗм вӑрман хупӑрласа тӑрать, тухӑҫран анӑҫалла Нерусса юхать. Шыв урлӑ самаях пысӑк кӗпер хывнӑ, анчах та мӑн ҫулӗ яла кӗмест, кунтан пӗр виҫтӑват ҫухрӑм аяларах ялӑн хӗвеланӑҫ енӗпе ҫурҫӗртен кӑнтӑралла, район центрнелле, иртет.

— Атте ҫав кӗпершӗн ҫапӑҫса вилчӗ вӗт,— сасартӑк персе ячӗ Петрусь, персе ячӗ те шӑлне ҫыртрӗ, пӗр вӑхӑта шӑп пулчӗ.

— Епле апла? Аннӳ вӑл фронтра ҫапӑҫать терӗ-ҫке?

— Сана начар пӗлнипе ҫапла каларӗ, халь никама та тӳрех шанма юрамасть. Чӑннипе вара атте вилнӗ. Хам куҫпа хам куртӑм. Ӑҫта пытарнине те аван пӗлетӗп. Вӗсем те, сан пекех, «унка» тӑрса юлнӑччӗ. Тӑшман унки хӗсӗнсе те хӗсӗнсе пынӑ. Юнлӑ ҫапӑҫусенче вӗсене юлашкинчен йӑлтах аркатса тӑкма пултарнӑ. Тӑххӑрӑн ҫеҫчӗ ушкӑн, апла пулин те, пурте — хӗҫпӑшаллӑ. Докуменчӗсене, партипе комсомол билечӗсене пӗри те пӑрахман. Аттепе юлташӗсем пирӗн патра виҫӗ каҫ пытанса пурӑнчӗҫ. Вара тепӗр ушкӑнпа ҫыхӑнса Зерново станцинчи фашистсен гарнизонне ҫӗмӗрсе тӑкнӑ. Киевпа Мускава ҫыхӑнтаракан магистраль ҫинче вӑл ҫав станци. Нерусса

урлă хывнă çак кĕпере сывлăша сирпĕтме кайсан, ĕç ăнман, атте пуçне хунă, анне аллинчех вилсе кайнă. Кĕперне вара сирпĕтесех пулать, ун урлă урăх пĕр эшелон та ирттерсе ямалла мар.

Вунвиç çулхи ача çапла калаçни Акташа шухăша ячĕ, ăна намăс пулса кайрĕ: ытла та вăрах хĕртĕнет-çке вăл тăлăх арăм кăмаки çинче! Ăçта кайса кĕнĕ унăн шухлăхĕпе чăрсăрлăхĕ, ăсĕпе паттăрлăхĕ? Мĕн тунă вăл хальччен урнă тăшмана тытса чарасчĕ тесе? Мĕн тейĕ ăна амăшĕ, мĕн тейĕ Силемпи, мĕн тейĕ ялйыш, çĕршыв? Нивушлĕ мачча çинче пытанса çӳресех сынçиенсене çĕнтересшĕн вăл, çĕнтерӳпе килне таврăнасшăн, ырă-сывă çитсе, амăшĕ Микул турă хыçне хурса упракан çăкăр сăмсине астивесшĕн?

Вунвиçĕ çулхи ача мĕнлерех сăмахлать! Нивушлĕ вунвиçĕ çулхи пионер чухлĕ çук эсĕ, Акташ комсомолец?!

— Петрусь, аннӳ ăçта кайрĕ?

— Қалама хушман.

— Эсĕ йăлтах каласа патăн ĕнтĕ.

— Нимĕн те каламан. Ан ыйт, вăхăт çитсен, хăвах пĕлĕн, сывалса çит-ха.

Ачапа йĕкĕт çапла калаçкаласа мачча çинче тăнă хушăра яла кĕпер енчен фашист машинисем кĕрлеттерсе çитрĕç. Петрусь васкасах аяла анчĕ, Акташа мăрье хыçне пытанма хушса хăварчĕ. Лешĕ пӳрт çамкинчи чӳрече умĕнчен ниçта та хăнмарĕ. Фашистсем ял тăрăх саланса пĕтрĕç. Унта та кунта автомат шатăртата пуçларĕ. Ял çинче ĕне мĕкĕрни, сурăхсем макăрни, чăх кăтиклени илтĕнсе тăрать. Ялти пĕтĕм выльăха вĕлерсе пĕтерсен, çуртсене çаратма пикенчĕç: тӳшек-минтере, тума-юма, пĕтĕм çĕтĕк-çурăка машинсем çине йăтаççĕ. Юлашки сурăх виллине кузова çĕклесе çапрĕç те кайма тесе паçăр килнĕ еннелле çаврăнчĕç. Çав вăхăтра офицер патне Микола староста чупса пычĕ, аллине сулкала-сулкалах Акташ пытаннă çурт еннелле кăтартать, темĕн ăнлантарать. Офицер пĕрре Микола çине, тепре сехетне пăхса илчĕ, вара алне сулчĕ: «Кайăрах, кеплеттерсе антарăр тепрер ĕнине, мухтавлă Германи çав ытлашши ĕнепе татах та хăватлăлантăр»,— терĕ пуль-и? Фашистсем, Петрусь ĕнине аякранах асăрхаса, тӳрех пахча хыçне кĕрлеттерсе пычĕç, янавара машин çинченех персе ӳкерчĕç те ушкăнпа тытса кузова пăрахрĕç. Ĕне ӳкнĕ вырăнта чĕпчĕр юн кӳлленчĕкĕ тăрса юлчĕ. Шăлне шатăрах çыртрĕ Акташ, анчах нимĕн те тума пултараймарĕ. Çарату вăхă-

тӗнче тулта пӗр ял ҫынни те курӑнмарӗ. Ҫынсем пурте вилсе пӗтнӗ, тейӗн, ялта. Машинсем кайсанах урама тем чул халӑх тапса тухрӗ. Колхозниксем пӗрин патӗнчен теприн патне ҫӳреҫҫӗ, чӗнмесӗр, хуллен иртеҫҫӗ урамсем тӑрӑх. Ял ҫине чӗр юн шӑрши сарӑлчӗ.

Маччана Петрусь чӗрмеленсе хӑпарчӗ.

— Кӗҫӗртен урӑх йӗксӗке ҫут тӗнчере хӑвармастӑп,— терӗ вӑл такама ҫав тери ылханса. Ҫаннипе куҫне шӑлса типӗтрӗ, сӑмсине хыттӑн шӑнкарчӗ.

— Кама, Петрусь?

— Кама пултӑр, Миколӑна.

— Ялта тивме юрамасть, шӑллӑм. Ӑна пула пӗтӗм яла персе пӑрахма, ҫунтарса яма пултараҫҫӗ. Ӑҫта та пулин ҫул ҫинче сыхласа тӑмалла. Лайӑх ҫӗҫӗ пур-и сан?

— Ҫӗҫӗ мар, унран меллӗреххи те тупӑнать.

— Ну?

— Ну мар, тпру! Килсе ҫитрӗмӗр, атя, анар... Эпӗ кӗҫӗр «Красульшӑн» Миколӑна пурпӗрех тӗп тӑватӑп. Тытса чарма ан та шутла.

Маччаран анчӗҫ те пӳрте кӗчӗҫ. Тӗпсакай хӑмине уҫса тӑпрас ҫинчен Петрусь ҫӗтӗк-ҫурӑкпа чӗркенӗ сулмаклӑ япала илчӗ. Чӗркенине салтрӗ те, куҫ умне карабин тухса тӑчӗ.

— Кунпа персен, сасӑ пулать, шӑллӑм.

— Хӑ... сасӑ пулать... Тӑшманпа эсӗ пӗр сас тумасӑрах вӑрҫасшӑн-и? Тупса пар эппин сасӑсӑр пӑшал.

— Ну, юрать, санпа кӗҫӗр эпӗ те пыратӑп: йытта — йытӑ вилӗмӗ. Ахаллӗн вӑл пӗтӗм яла фашистсене тытса пама пултарать.

Каҫ пуласса чӑтӑмсӑр кӗтрӗҫ икӗ тус. Каҫӗ те, октябрь уйӑхӗн ҫурринче, вӗсем кӗтнӗ пекех, питӗ тӗттӗм. Кӑштах ҫумӑр пӗрӗхнипе вӑл пушшех те хура. Куҫран пырса тӗксен те курӑнмасть, теҫҫӗ ун пек чух халӑхра. Ялта пӗр ҫутӑ та ҫук. Кунта пӗр чӗрӗ чун юлман, пурте вилсе пӗтнӗ, тейӗн. Анчах та апла мар иккен: ҫуртсем патне ҫывӑхарах пырсан, шалта ҫутӑ пурри палӑрать, хупланӑ чӳречерен тӗлӗ-тӗлӗпе сарӑ пайӑрка ӳкет.

Икӗ пӳртлӗ пысӑк ҫуртра, колхоз председателӗн хваттерӗ пулнӑскерӗнче, Микола пӗчченех пурнать, пӳртне-ҫуртне аппӑшӗ, асат хуҫнӑ пӗчӗк те хаяр хӗрарӑм, тирпейлесе тӑрать, имӗш. Тарҫӑ тытӗччӗ Микола, шикленет: тем курса тӑрӑн, ҫак ахӑр саманара шанчӑклӑ ҫын ӑҫтан тупан?

Икӗ сехете яхӑн явӑнаҫҫӗ ӗнтӗ ҫак ҫурт тавра Петрусь-

пе Акташ, патне пыма ниепле те пултараймаççĕ. Шала кĕме вара ан та шутла: килкартинчи арăслан сассиллĕ йытă хăр-хар! харлатать те сăнчăрне чăнкăр-чăнкăр! чăнкăртаттарса хапха патнелле ыткăнать. Çакăн чуль çӳресе тăшмана тавăрма мар, вăл килте пуррипе çуккине те пĕлеймен-ха тавăруçăсем. Акташ тарăха пуçларĕ, карабина таçта çити ывăтса ярса каялла каяс шухăш çуралчĕ унăн: мĕн ĕç кăлараян çак йĕпе сăмсапа, чĕчĕ ачипе. Анчах та... Ан тив, Петрусь çитĕннĕ çын пултăр. Ун чух мĕн тума май пур? Кантăкне ватса шалалла карабинпа пеме, тейĕпĕр. Кама? Ăçта тĕлĕ? Тен, унта Микола пачах çук? Алăкне çĕмĕрме тапратсан, хăй кирек кама та леш тĕнчене ăсатма пултарать. Çуртне вут тĕртсен, тухса тарать. Тахăш енчен — ăна пĕлме çук. Персе ӳкересси пирки ан та шутла. Хăтăлсан, пĕтĕм яла çĕрпе танлаштарттарĕ. Çумăр самаях хытă пĕрĕхет. Иккĕшĕ те шăнса кӳтрĕç. Ал сулса каялла çаврăнас тенĕ вăхăтра Акташ Петруçпе тепре калаçса пăхма шутларĕ.

— Петрусь...

— А?

— Шăнмарăн-и?

— Кучан пекех шăнса кӳтрĕм. Çăмăл мар иккен вăл партизан пуласси.

— Мĕн тăвăпăр ĕнтĕ? Çурт патне те çывхараймастпăр вĕт. Ма çĕр çăтса каймасть çав карма çăвар йытта! Атя хальхинче тивер мар Миколăна, меллĕ самант килсен тавăрăпăр «Красульшăн».

Сисет тĕттĕмре Акташ: ачана тем пулчĕ, вăл йывăррăн сывла пуçларĕ, калама çук тарăхса кайрĕ, карабина картлаттарса туртса илчĕ те Микола çурчĕ патнелле уттара пачĕ.

— «Красульшăн» çеç мар, аттешĕн те...— хыттăнах каласа хучĕ ача.— Хăратăр пулсан, тухмалла та марччĕ килтен...

Акташа Петрусь сăмахĕсем вутпа пĕçертнĕ пек çунтарса илчĕç, вăл ăна каллех тытса чарчĕ:

— Мĕн тăвасшăн ăна эсĕ, Петрусь?

— Чĕнсе кăларасшăн та персе пăрахасшăн.

— Тухмасан?

— Тухать, майне тупатпăр.

— Яла мĕн кăтартĕç кайран?

— Кăтартаймаççĕ, аллисем кĕске.

— Кĕске мар, шăллăм, халлĕхе питĕ вăрăм. Итле-ха, ак мĕнле тăвăпăр: эпĕ карабинпа йывăç хыçне тăратăп.

Эсĕ, йытă урса тулашнине пăхмасăрах, хапха патне пыратăн та хапхана хытă шаккаса силлеме пуçлатăн. Ху текех: «Микола тете! Микола тете!» — тесе çухăр. Сассине илтсен: «Герр офицер чĕнет! Герр офицер сана чĕнме ячĕ! Çăмăл машини ял вĕçĕнчи лачакана путса ларнă!» — тесе вĕçĕ-хĕррисĕр кала. «Герр офицер» теме пĕрре те ан пăрах, çеккунт та чĕнмесĕр ан тăр. Малтанах калатăп: е пĕтрĕмĕр, е çĕнтеретпĕр. Микола хапхаран тухсан, пĕр вырăнта çывăрса ан тăр, малалла ертсе кай. Йывăç тĕлĕпе иртнĕ чух эп ăна прикладпа пуçран çапса ӳкеретĕп...

Миколăна сĕтĕрсе килсе витене пăрахнă çĕре çумăр татах вăйланчĕ, витререн ячĕ. Алли-урине хытăрах пăрса çыхрĕç те çăварне тӳсех чӳпĕк тултарчĕç. Петрусь таçтан кире пуканĕ мекĕрленсе йăтса килчĕ. Хуçисĕр тăрса юлнă арăслан сасăллă хаяр йытă çаплах яла янратать... «Курпушки килте пулмарĕ-ха, шăллĕ çухалнине сисмесĕрех юлчĕ»,— терĕç икĕ юлташ, пӳрте кĕресшĕн крыльца çине хăпарса. Пӳрте кĕресси пулмарĕ, анăçра аça çапнинчен те вăйлăрах темĕн кĕрслетрĕ, унтан пĕтĕм тавралăх кăнтăрлахи пек çап-çутă пулса тăчĕ, анăça талккăшпех пушар ярса илчĕ. «Кĕпере сирпĕтрĕç,— терĕ Петрусь пăшăлтатса.— Авиабензин çуннă пек туйăнать. Халĕ çынçиенсем урсах каяççĕ ĕнтĕ, облава хыççăн облава тума пуçлаççĕ».

Пĕрер сехетрен Петрусь амăшĕпе тепĕр палламан çын килсе çитрĕç. Вĕсем килкартишне анкарти хыçĕнчен кĕчĕç те, Акташа Ольга тӳрех çула хатĕрлеме тытăнчĕ. Палламан çынна Петрусь айккинелле чĕнсе илчĕ, хăлхинчен пăшăлтатса вите алăкĕ çине кăтарта пуçларĕ. «Йăтса кайса пăрахăпăр, аннӳ пӳрте кĕтĕр-ха»,— хытах хуравларĕ палламан çын. Килнĕ-килменех куккăшне çыпăçнăшăн Ольга ывăлне ятласшăнччĕ те, вăхăчĕ пулмарĕ, пӳрте кĕрсе çухалчĕ. Петрусь куккăшĕпе Акташ Миколăна витерен сĕтĕрсе кăларчĕç, хăпăл-хапăл йăтса, çырмара путарма илсе кайрĕç. Кире пуканĕ çĕкленĕ Петрусь вĕсем хыçĕнчен аран ĕлкĕрсе пычĕ...

Фашистсем пирĕн çĕр çинче ĕмĕрлĕхех хуçаланма ĕмĕтленнĕччĕ. Ку вĕсене малтанлăха ансат та çăмăл пек туйăнчĕ: çил-тăвăл пек килсе çапмалла та халăха бомба-снаряд айне тумалла, вутра çунтарса, такансем çине çакса тухмалла, вара ĕçĕ те пĕтрĕ: совет халăхĕ сехĕр-

ленсе ирĕксĕрех Аслă Германи аттине ўксе чуптăвать Анчах фашистсем хытă улталанчĕç! Еç тухмарĕ!

Тăшман куçĕ умĕнчех, кунран-кун, юн ăшне путнă, вутра çунса кăмрăкланнă, анчах парăнман ялсемпе хуласем кĕрешĕве çĕкленчĕç, юлашки вăя пухса çапăçăва кĕчĕç: çĕнтерў е вилĕм. Гитлер Ирĕке, Юратăва, Пурнăçа тĕп туса совет çыннине мĕскĕн чурана çаврасшăн пулчĕ, ĕç выльăхĕ туса хурасшăн хыпăнчĕ. Анчах пĕр япалана шута илмерĕ каппайчăк фюрер: совет çыннисем вилеççĕ, анчах парăнмаççĕ; пĕр япалана ниепле те уççăн курса тăраймарĕ умĕнче: совет çыннисем вилсен те каялла чĕрĕлсе тăраççĕ. Вĕсен вăйĕ шанчăкра, ĕненўре. Шанчăк тўсĕм çуратать; ĕненў, çĕнтерессе ĕненни, иксĕлми вăй хушать, хăват парать.

Хальччен пулман çак хаяр вăрçăра Юрату вилмеллех аманса темиçе хут та çăва шăтăкне кĕрсе выртрĕ, анчах аппасемпе йăмăксем, кукамайсемпе асаннесем, чун савнисемпе ниxçан асран кайми аннесем хушнипе вăл вилнĕ çĕртен чĕрĕлсе тăчĕ, вут хыпса илнĕ Çĕр тăрăх тăшмана тĕп тума васкарĕ.

Акташ Çĕнтерў кунне Польша çĕрĕнче кĕтсе илчĕ. Польша партизанĕсемпе пĕрлешсе, вĕсем Варшавăна çити кайрĕç. Варшавăран киле килме тухрĕ...

Света! Аçупа аннўне салам кала. Аттене текех усалпа ан асăнччăр — йывăр тăпри çăмăл пултăр, хăй персе амантнă уриех вăхăтсăр çĕре кĕртрĕ ăна, хускалмиех пулса ларнăччĕ вĕсем, вара атте вырăнпах вырта пуçларĕ, кайран, нумай вăхăт хушши хускалмасăр выртнипе, чĕре чирĕ аталанчĕ. Çакна эсĕ, Света, ху та аван пĕлетĕн. Мĕн тума çыратăп-ха?

Чуна кăштах çăмăл пултăр тесе. Атте шăпине аса илсен, чĕрене темĕн кăшлама пуçлать. «Қаçарар вилнĕскере, хамăр ун пек пулар мар»,— тетĕп эпĕ хурланса. Қам пĕлет ăна: урине те хăех пенĕ, те тăшман персе амантнă. Эпĕ хăй пенĕ пуль тесе шутлаттăм, çавăн пек туйăнатчĕ. Ыйтас, ыйтас тенĕ çĕртех çул хыççăн çул иртрĕ, малтан: ача-ха, халех ыйтам мар; каярахпа: тута ешĕл-ха, çитĕнсе çитсен ыйтăп, тесе пурăнтăм. Акă халĕ, ыйтăттăм та, май çук...

Силемпи Акташ вилĕмрен чĕрĕлсе тăнипе хăрушă савăннăран сывалнă тесе паçăрах систертĕм ĕнтĕ сана. Ăна эсĕ ху та питĕ аван пĕлетĕн, çакна медицина та хирĕçлемест. Повеçри геройсем прототипсенчен чылай уйрăлса

тăнине те лайăх чухлатăн, çавăнпа та эпĕ ăна çакăнпа вĕçлесшĕн.

Света! Калама мансах кайнă: повесть пирки аçупа аннӳне те, пиччӳпе аппуна та ан кала, ялта кун çинчен халлĕхе пĕр чун та ан пĕлтĕр. Итле-ха, тен, повеçри тĕп геройсен ячĕсене улăштаратпăр? Митюкпа та канашласа пăх-ха кун пирки. Ман шутпа, Акташ вырăнне Актай, Силемпи вырăнне Салампи тăвас пулать, Михетер Мирунне Минисса Хĕлипĕ тес. Чим-ха, «Салампи» тесен, Александр Артемьев çилленме пултарать, Актай тени те пурччĕ пулас унăн? Мĕнле ят памалла-ши тĕп геройсене? Эппин, Митюк патне çит те, Акташне Муркаш, ун пек ятлă паттăр та пулнă чăвашсен, Силемпине Илемпи, Мирунне паçăр каланă пекех хăварăр. Митюк редакцилесе, пăхса тухтăр та, машинкăпа çапма пултаран.

Куляран пăрăнарах çӳре, вăл питĕ чее çын, чике тăршшех лартма пултарать, кайран чавса çывăх та çыртма пулмĕ. Юрĕ эппин, сывлăх сунатăп, хам та сывă юлатăп. Кĕт мана, питĕ кĕт. Савса -- Павăл...

1974

# ÇУТĂ ШЫВ ХĔРРИНЧЕ

ПОВЕСТЬ

## 1

Кӳлĕ хĕрринче иккĕн ларатпăр: эпĕ те Кириле мучи. Эпĕ, шăпăрлан, çын шутнех кĕрсе çитеймен-ха, вунулттăра çеç, кăçал сакăр класс пĕтертĕм. Халлĕхе мана хушаматпа шкулта урок ыйтнă чух çеç чĕнкелеççĕ, атте ячĕпе вара никам та чĕнекен çук. Йытта е кушака «Васька», «Мишка», пăрăва е качакана «Майкка», «Зойкка» тенĕ пек, мана та кĕскен «Хумкка» теççĕ. Хумкка-тăк Хумкка пулам, мĕн кӳренмелли уншăн. Аттене те, авă, ĕмĕр тăршшĕпех Хумкка тесе чĕннĕ те, аптраман вăл, питех кулакан та пулман унран çак куна çитсе, халь тесен, пушшех те кулмаççĕ, кулма мар, хисеплесе Фома Фомич теççĕ-ха тата. Чĕнмĕттĕн те, чĕнесех пулать çав: колхозĕпе чи чаплă кĕтӳç Фома Фомич! Кăçал вара, аллă çул тултарнă ятпа тата ĕçре пысăк çитĕнӳсем тунăшăн, Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕ пачĕç. Акă кам вăл Фома Фомич Фомин! Коммунист. Партком секретарĕн заместителĕ, парти райкомĕн бюро членĕ. Çынна ячĕ чаплăлатмасть иккен, ятне çынни чаплăлатать. «Пушкин» тетпĕр эпир. Çапла калатпăр та, пирĕн çурăм тăрăх сивĕ чупса каять. Мĕн тери чаплă та мухтавлă, сăваплă та илемлĕ ят! Мĕн тери хитре сăнар тухса тăрать куç умне! Сăнасарах пăхсан вара: мĕн вăл Пушкин? Пушок е пушка тени. Пушокĕ — мамăк, пушки — авалхи тупă. Грибоедов тата? Кăмпа çиекен тени вĕт ку. Тамаша! Эпĕ хам, туллин каласан, атте пекех Фома Фомич Фомин, хамăр класри Аськина Анюк, Никкăн Анюкĕ, каларăшле — $(Ф^3)^2$. Сăмах май хушса хурам, ятăм-шывăм формули ытла ансатах мартан, доска хыçне те, учитель курмалла мар çĕре, ыттисене çырнă пек $М+В=Ю$ (Мĕтри+Верук=Юрату) тесе мар, $(Ф^3)^2+А^2Н=Ю$ тесе çыраççĕ. Вăт çавăн пек ĕнтĕ вăл хушаматпа ят мыскари.

Паян çулса пăрахнă утăран хамăр хальрех çеç туса лартнă хӳшĕ умĕнче эпир вут çине çакнă витрери шыв вĕреме кĕрессе кĕтсе ларатпăр. Вучĕ самаях хитре ташлать-ха. Вут-шанки, хăрăк туратпа типĕ çапă, тĕтĕм кăлармасăр хĕрӳн ялкăшса çунать. Ҫириле мучи кăвайт пусăрăнма пуçламассерен витре айне, вут çине, хурăн çаппи хуçа-хуçа пăрахать. Ҫăвайт каллех хăват илет те ялкăшса çунма пуçлать. Старик юлашки хуçăкне вута пăрахрĕ те сасартăк ман енне çаврăнса кĕтмен-туман ыйту пачĕ:

— Авланас теместĕн-и-ха?

— Авланас?

— Эре.

— Хм, мĕнле калас, авланас тетĕп. Е сан сăнанă хĕр пур-и? Евчĕ тăвап, килĕш. Ёнеллĕ-и, кĕрĕклĕ-и, тӳшеклĕ-и? Чошшă текенни, «Жигули» илсе парать-и, «Волгине» те тиркемен пулăттăм?

— Эс мĕн-ха, чим-ха, ан шăл йĕр-ха, эп чăнласах калатăп. Эхе-хей, алла, тутар пек каласан, çĕре нӳрĕ çапрĕ, кӳлĕ çине пăх-ха, шыв епле пăсланать. Тĕтре пек вĕт, э. Ыран, мар-ха, паян, кĕçĕр эппин... Ҫаç пулать вĕт, шăллăм. Хĕвел те, авă, кӳлĕ хыçне кайрĕ. Ав çав утрав мĕн ятлă — пĕлетни? Чарлан утравĕ... Темме çапла каланă, чарланĕ те унта пĕр-иккĕ кăна пуль. Ҫитсе курнă-и эс Чарлан утравне?

— Чарлан утравĕ? Илтмен-çке тем ку утрава çапла каланине.

— Чарлан утравĕ çав. Ав вĕçет, куратни? Чим, мĕн мурне çапла терех çуйăхать вăл? Нивушлĕ ыран ире çумăр пулать, пĕтрĕ вĕт вара пирĕн утă, типме ĕлкĕреймесĕрех çĕрсе каять.

— Пулмасть пуль-ха çумăрĕ, хĕвел пĕлĕте лармарĕ.

— Мĕн терĕм-ха эп маларах?

— Мана авлантарма пуçларăн.

Эпĕ çапла каласан, старик ăшшăн кулса ячĕ, йĕтĕн пек шурă сухалне ачашласа илсе ура çине тăчĕ. Ҫириле мучи, ялтилле каласан, Эстун Ҫирили, тĕреклĕ старикха. Саккăрмĕш теçеткере пырать пулин те, кĕлеткине тӳп-тӳрĕ тытса çӳрет, хăрах куçĕ хĕсĕкреххи те ун сăнне илемсĕрлетеймест, ытти ватăсем пек кукша та мар вăл, шуралнă вăрăм çӳçлĕ, илтме те аванах илтет. Ҫирилен майĕ хулăн, кăкăрĕ вăкăрăнни пек тĕреклĕ. Тумланма мучи питĕрех те тирпейлĕ тумланса çӳрет. Утă çулма та вăл шурă кĕпепе хура шăлавар, самаях çĕнĕ салтак атти

тăхăнса килнĕ. Хулпуççийĕ çине матрос бушлачĕ уртса янă. Хĕсĕкрех куçĕ шывланмассерен, кĕсйинчен шурă тутăр кăларать. Те вут çине чылай пăхса ларнăран, те инçетелле тинкерсе нумай тăнăран, унăн йăвашрах куçĕ татах шывланчĕ.

— Эккей,— терĕ старик,— ватăлатăп пулмалла. Ĕлĕк апла шывланакан марччĕ. Çамрăк чух, Питĕрте, пăсрăм эп куçа. Пĕри юсанчĕ, тепри ĕмĕр тăршшĕпех çапла йăвашрах.

— Мучи, эс каллех мантăн-ха паçăрхи сăмахна. Ма авлантарасшăн эс мана халех?

— Халех, тет. Миçере-ха эсĕ?

— Вунулттăра.

— Ĕлĕк вунтăваттăрах авланнă. Аннӳ вилни вунпилĕк çул çитрĕ иккен апла?

— Эп курман çав аннене, пĕлейместĕп.

— Авлан. Кил-çуртра хĕрарăм алли пулнине мĕн çитет.



— Ан кул-ха, Қириле мучи, мана халь качча пыракан та пулмӗ. Малтан вунӑ класс, унтан институт пӗтермелле-ха. Вара куҫ курӗ.

Қириле лӗх-лӗх-лӗх кулса илчӗ.

— Авлан та авлан, тенӗрен, ан шутла эс эп сана чӑнах та авланма хушать тесе. Кӳлӗ варринчи Чарлан утравӗ ҫинелле пӑхнӑран-и, яшлӑх аса килчӗ, яшлӑха таврӑнма ҫуккине кура, ҫав сӑлтава пула вунҫич ҫулхи хӗре качча илме те май килменнине туйса, авланма сана сӗнсе пӑхас терӗм...

Яшлӑх... Питӗр хули... Чарлан утравӗ... Мӗн калаҫать старик? Нимӗн те ӑнланмастӑп. Эстун Қирили чӗмсӗр ҫын, теҫҫӗ ялта. Асту, чӗмсӗр ан пултӑр. Пӗр ҫич ҫул каярах-ши, Қириле патне тимӗрҫӗ лаҫҫине турчӑка тутарма кайрӑм эпӗ. Вӑл ун чухне кив лаҫӑра пӗччеnех ӗҫлетчӗ, тытӑнчӗ мана калаҫтарма: «Аҫу мӗн тӑвать, мӗн пӗҫерет, мӗн ҫӗлет, мӗнле кӗнекесем илсе пачӗ, малашне те пӗчче-



нех пурнас тетĕр-и?» — тет. Тем те, тем те ыйтса пĕлет. «Шкул пĕтерсен, мана пулăшма лаççа кил, эп сана лайăх тимĕрçĕ тăвăп»,— тет. Хĕлле ярăнма тимĕр тупанлă селĕм тăркăч туса пачĕ. «Тепре килнĕ çĕре селĕм çуна туса хурăп, татах кил, аçуна салам кала»,— тесе ăсатса ячĕ.

Пирĕн, ача-пăчан, яланах вăхăт çук çав, ерçейместпĕр, яланах таçта васкамалла. Панă сăмаха та часах манатпăр. Қаяймарăм эп ун чух Қириле патне тимĕрçе вĕренме. Килте аттепе çеç пурăннăран, выльăх-чĕрлĕхне те хамăрăн пăхмаллаччĕ, пӳрт-çуртне те хамăрăнах пуçтармалла, колхоз ĕçĕнчен те юлмастчĕ атте, платникре çӳретчĕ; çапла уйăх хыççăн уйăх, çул хыççăн çул иртсе пычĕ. Эпĕ ĕнтĕ текех çиччĕ-саккăрта мар, Қириле те шуралчĕ, текех тимĕрçĕре ĕçлемест, пенси илсе пурăнать. Çемйи унăн пысăк мар: карчăкĕ, Урине мăнакка, хĕрĕ те мăнукĕ. Мăнукĕ Михаля кăçал кăна флотран служба пĕтерсе таврăнчĕ. Михаля бушлачĕ Қириле çинче камитлерех курнать. Шур мăн сухаллă старике, моряк бушлачĕ тăхăннăскерне, ман темшĕн «Макаров адмирал» тессĕм килсе кайрĕ. Пуç тавра лайăхрах шухăшларăм та, тăхтамалла пек туйăнчĕ: адмирал-и, адмирал мар-и, Қириле мучи, çапах та, ман пек вунулттăри йĕпе сăмса мар, çитмĕл пиллĕкри нумай хура-шур курнă çын, сумлă старик, ялта ăна курсан ахаль çынсем çеç мар, парторгпа колхоз председателĕ те таçтанах çĕлĕк хывса пуç таяççĕ. Унăн орденĕ те, медалĕ те пур тенине илтнĕ эпĕ. Хампа пит çывăххăн та ăшшăн калаçнипе, çыннăн пуçĕ çинех хăпарса ларам мар-ха. Ачапча тесе çапла уçă кăмăллă ĕнтĕ вăл манпа. Çитменнине, паян эпир унпа иксĕмĕр те чин тĕлĕшĕнчен пĕр пек: вăл та утă хуралçи, эпĕ те, вăл та пулă шӳрпи пĕçерекен, эпĕ те...

Витрери шыв вĕреме кĕчĕ. Халь кăвайта вăйлă çунтармасан та юрать. Çĕрулми шуратса ятăмăр. Тепĕр витрере хĕрлĕ çунатлă уланкăсем шыва шăмпăлтаттарса выляççĕ. Сумккинчен Қириле мучи сухан пуçĕсем кăларчĕ. Эпĕ куççуль юхтара-юхтара сухан шурата пуçларăм. Мучи çаплах сумккипе тăрмашать. Тăвар, лавр çулçи... Витререн пĕр пуллине тытрĕ те чĕрĕллех хуппине тасатса вĕрекен шыва ячĕ. Уланкă чалт! çеç турĕ, çӳлелле вĕçсе хăпарчĕ, каллех вĕри шыва çатлатса ӳкрĕ те урăх çĕкленеймерĕ. Эпĕ ахăлтатса кула пуçларăм. «Пар-ха, эпĕ те ярса пăхам»,—тетĕп. Тытрăм пĕрне. Тасатас тесе çĕçĕ илтĕм. Старик ним те шарламасть, сухал витĕр кулкалать

çеç. Чи малтанах пуллăн пуçне касса пăрахрăм, вара пуçĕ енчен хӳринелле тасатма хăтланса çĕçĕпе хырма тытăнтăм. Сĕвĕнмест пулă хуппи — мĕн япала? Халĕ ĕнтĕ эпĕ мар, Кириле мучи сасăпах кулса ячĕ:

— Эх, мăнтарăн пулăçĕ. Кам пулла пуçĕнчен тасатма пуçлать? Тытнăскерне те тасатма пĕлместĕн эсĕ, тытма вара епле тытайăн-ши? Вăт эпир Эстонире... революциччен...

— Мучи, эс Эстонире те пулнă-и? Аçтарах вăл Эстони? Мĕнле хула, мĕнле тинĕс патнерех?

— Эстони Балтика тинĕсĕ хĕрринче. Питĕртен, хальхи Ленинградран, инçех мар вăл. Революциччен ман çав тинĕсри пĕр утрав çинче пурăнма тӳр килнĕччĕ. Патша йыттисенчен пытанса пурăнтăм эпĕ. Вăт çавăн чух, çав утрав çинче, паллană пулăçсенчен кимĕ ыйтса илеттĕмĕр те залива кĕрсе динамитран тунă пĕчĕк бомба пăрахаттăмăр. Темĕн йышши пулă та тухатчĕ çиеле, икшер-виçшер пăт турттарса килеттĕмĕр.

— Динамит тетĕн-и? Бомбине ăна кунта тума çук-и? Шкулти лабораторире?

— Тума май пур та, юрамасть. Бомба пăрахсан, кӳлĕри пĕтĕм чĕрчуна вĕлерсе пĕтеретĕн. Саккун хушмасть. Ун пек çынна тытса хамах милицине кайса яратăп, тĕрмене хуптаратăп йĕксĕке.

— Уланкă мĕнпе лайăх кĕрет-ши, мучи?

— Вăлта ярсан-и?

— Ахă.

— Ир çинче, хĕвел тухас умĕн, çăкăр çемçипе... Аманпа.

Калаçнă май Кириле чĕрĕ уланкăсем чăмпăлтатакан витрене аллине чике-чике ярса мĕскĕнсене пĕрерĕнех тытса пĕтерет. Акă ĕнтĕ пур уланкă та вут çинчи витре тавра çаврăна пуçларĕ. Тăварне те, суханне те паçăрах янă. Мучи лармассерен кашăкпа шӳрпе ăсса илсе вĕреверĕре сивĕтет, тăвар тата кирлипе кирлĕ маррине тĕрĕслет. Юлашкинчен вăл çырлахрĕ пулмалла: «Шăллăм,— терĕ,— шӳрпе пиçрĕ, кăлар чашкусене, çăкăр кас...» Тепĕртакран эпир, каçхи икĕ хуралçă, лĕрплеттерсе пулă шӳрпи сыпа пуçларăмăр. Сыпса тăрансан, бидонран шыв ăсса илсе, савăт-сапа çурăмăр, шӳрпене тутăрпа витсе хӳшĕ çумне лартрăмăр. Еç пĕтсен тин старик ассăн сывласа ячĕ:

— Пулă шӳрпи те пулин яшлăха аса илтерет. Эккей, турнăçĕ... Хăш хушăра кĕрлесе иртрĕ? — хăйпе хăй ка-

лаçрĕ вăл.— Пăх-ха, шăллăм, Чарлан утравĕ еннелле — темле çутăсем мĕлтлетеççĕ пек. Те мана çеç çапла туйăнать?

— Нимле çутăсем те çук-çке... Утравĕ те Чарлан утравĕ ятлă мар вăл, ятсăр утрав.

— Пулĕ, пулĕ. Балтика тинĕсĕнчине вара чăнах та Чарлан утравĕ тетчĕç, лайăх астăватăп. Утравăн тăршшĕ вунă, сарлакăшĕ пилĕк çухрăмччĕ. Талккăшпех тем çўллĕш хыр вăрманĕ кашласа ларатчĕ, кăнтăр енче пĕртен-пĕр ял — Кивĕ Ял ятлăскер — пурччĕ. Эпир çурçĕр енче ĕçлеттĕмĕр... Унта та ял пекки пурччĕ.

Çинĕ хыççăн эпĕ, хўшше кĕрсе выртса, тĕлĕрсе илесшĕнччĕ, Кириле мучи çулса пăрахнă çарана пăхса çаврăнасшăн пулчĕ.

— Çывăрма юрамасть ĕнтĕ пире, хуралçăсене, вăрман урлăсем килсе хамăр ыйхă туртнă хушăра пĕтĕм çарана тапта-тапта, юрла-юрла тиесе кайĕç. Вăрман урлăсем авалтанпах кукăр ăлăллăрах, пурте мар, паллах, хăшĕ-пĕрисем. Пуян Кантратти йăхĕнчисем — уйрăмах,— терĕ вăл, тавраналла пăхкаласа.

— Эс вĕсене те астăватăн-и, мучи? Кантратти таврари чи пуян çын пулнă, теççĕ?

— Пуян пулмасăр, ара, питĕ пуян, пуянăн ывăлĕ те хăй пекех путсĕрччĕ. Службăна эпир пĕр карап çинех лекрĕмĕр, вăл офицер, эпĕ ахаль матрос. Мана чут çеç тĕп тумарĕ, эсрел пуçĕ.

Кириле мучи куç умĕнчех урăхланса, çĕнелсе пырать. Урлă-пирлĕ перкелешсе калаçкаланă хушăрах мĕн тери кăсăк япаласем пĕлетĕн ăна итлесен. Йĕркипе каласа пама ыйтсан мĕнле-ши: Кириле мучи, Эстун Кирили, историн чĕрĕ палăкĕ, вăл революцинччен тинĕс-çар флотĕнче службăра тăнă, революци мĕнле тунине хăй куçĕпе курнă?! Ыйтса пăхас, чăнах та, тен, каласа парĕ. Çапах та, юлташлă вĕт эпир: пĕр витререн пулă шўрпи сыпрăмăр, иккĕн пĕр çарана хураллатпăр, иккĕн пĕр пулса хўшĕ турăмăр, пĕр ялсем, мучийĕ тата кăмăллăскер! Лайăх çын иккен вăл Эстун Кирили, эп ахалех ун патне тимĕрçе вĕренме çўремерĕм, ўркентĕм. Мĕн тери интереслĕ çын Кириле мучи.

— Кириле мучи, хĕвел пĕлĕте лармарĕ. Апла ыран çумăр пулмасть пуль-ха?

— Пулмасть пуль.

— Санран пĕр япала ыйтма юрать-и?

— Ыйт.

— Сана мĕншĕн Эстун Кирили теççĕ? Сан аçу Эстун ятлă пулнă-и-мĕн? Чăвашсен Эстун ятлă ят та пур-и?

— И-и, шăллăм, Эстун вăл Эстони сăмахран пулнă. Яш чух эпĕ яла Эстони майри ертсе килтĕм. Çавăн хыççăн Эстун Кирли теме пуçларĕç. Ял ун чух тĕттĕмччĕха, тин çеç ирĕке тухнăччĕ. Çыпăçрĕ те çав ят паян кунччен те хăпмасть...

Çарана пăхса çаврăннă çĕре вăрман тăрринчен уйăх тухрĕ. Кириле мучи ӳпĕнтернĕ витре çине ларса аттисене хыврĕ те пурттенккисене такан çине типме çакрĕ.

— Эс, шăллăм,— терĕ вăл, вута çĕнетес шутпа çапă таткалама пуçласа,— çын пурнăçĕпе, çын кунçулĕпе тес пулать-и, пит кăсăкланатăн иккен. Пурнăçĕнче ман тем тĕлĕнмеллиех пулман та, çын мĕн тӳснĕ çавна тӳснĕ те, çăмăлах та килмен çав, ай-яй, хытă авнă пире самани.

— Каласа пар, мучи, каласа пар. Ӳссен эп сан çинчен кĕнеке çырса кăларатăп.

— Кĕнеке çырма кирлĕ мар пуль те... Асран тухмасть-мĕн çавă вăхăт, яшлăхпа тӳр килнĕ-çке вăл, хăямат.

— Эсĕ революцие хăямат тесе вăрçатăн-и?

— Çук, революцичченхине. Ну, мĕнрен пуçлас-ха ĕнтĕ? Ытла та ешĕл вĕт-ха эсĕ, шăллăм. Пурне те ăнланайăн-и?

— Эпĕ вунулттăра. Гайдар вунултă çулта полк командирĕ пулнă, Лермонтов тĕнчипе паллă «Испанецсем» трагедине вунулттăра çырнă.

— Тăлăх ачапча час тăна кĕрсе, ӳссе çитет, тетчĕ ĕлĕк анне. Эсĕ те çурма тăлăх ӳснĕ вĕт. Хумма, аçу ăслă пулчĕ, çĕнĕ арăм туянса сана амаçуриллĕ тумарĕ. Пăрахмарĕ вăл сана. Кайран эсĕ те ан пăрах ĕнтĕ ăна.

— Пăрахмăп, мучи, ма пăрахас-ха ăна ман? Унсăр пуçне никам та çук-иç çывăххи?

— Халь пăрахмăн-ха та... Кайран, ӳссе çын пулсан, мăшăрланас тейĕн. Мăшăрĕ путли лексен, юрĕ-ха, тухатмăш тĕл килсен — темле.

Çапла такмакла-такмакла Кириле пурттенккисене те типĕтрĕ, аттине те тăхăнчĕ. Калавне çав-çавах пуçласшăн мар-ха. Эх, хăçан ӳссе çитес-ши: хисеп çук ачапчана, хисеп çук. Мучи хӳшĕ çăварĕ патнелле пычĕ:

— Шала кĕрсе ларар пуль, унта ăшăрах пулма кирлĕ, пĕр-пĕрин çумне тĕршĕнĕпĕр. Вара эп сана чулсем хушшинче хам епле пытанса пурăннине те каласа кăтартăп.

Эпир хӳшше упаленсе кӗтӗмӗр, пӗр-пӗрин ҫумне тӗршӗнсе лартӑмӑр: эпӗ Эстун Ҫирилине итлеме хатӗрлентӗм. Янкӑр тӳпери уйӑх, вӑрман ҫийӗпе шуса иртсе, пирӗн хӳшӗ ҫӑварӗ тӗлнех килсе тӑнӑ. Ун ҫутипе кӳлӗ ытармалла мар ҫиҫсе-ялкӑшса выртать. Ҫап-ҫутӑ! Кӗмӗл пек! Таҫта, вӑрманта, тӑлӑх кайӑк тискеррӗн кӑшкӑра-кӑшкӑра илет.

Анӑҫра — тӗксӗм хӗрлӗ йӗр. Вӑл халь-халь сӳнессӗн туйӑнать.

## 2

Эп ун чух Эстун Ҫирили пулман, тесе пуҫларӗ Ҫириле хӑй калавне. Пирӑн йӑха Эльмук йӑхӗ тенӗ. Атте, Эльмук Энтри Миккулайӗ, пitӗ чухӑн ҫынччӗ, пилӗк ачаллӑскер, ҫич ҫынна пӗччен тӑрантаратчӗ. Ҫемьере виҫӗ арҫын чунӗ пулин те, ҫӗрне пӗр пай ҫеҫ акаттӑмӑр, икӗ пайне, ҫитмен пурнӑҫа пула, сутса яма тиврӗ. Пӗр пай ҫӗрпе ҫичӗ хырӑма усрама пачах та май ҫукчӗ. Пӗтӗм лайӑх ҫӗрсем Пуян Кантратти аллинчеччӗ. Хамӑр тырӑ ҫӗнӗ ҫула та аран ҫеҫ ҫиткелетчӗ. Нуша пусса ҫитернипе ҫӑлӑнӑҫ шыраса, атте вӑрман хуралҫине кӗчӗ, талӑкӗ-талӑкӗпе вӑрманта ҫухалса ҫӳрекен пулчӗ. Хуҫалӑха анне тытса пыратчӗ. Пилӗк ачине выҫӑ лартас мар тесе, тара кӗрӗшсе ӗҫлетчӗ. Кунӗпе вӑрман лартнӑшӑн вунӑ пус паратчӗҫ. Атте, вӑрман хуралҫине кӗрсен, пире, Энтюк тетепе иксӗмӗре, сунар ӗҫне хӑнӑхтарчӗ. Ҫӗрхи тӗтрелле кунсенче тата хӗлле куян тытма ҫӳреттӗмӗр. Ҫаярахпа куяна пӑшалпа кӑна мар, мӑйкӑчпа та лайӑх тытма вӗренсе ҫитрӗмӗр. Пӗр вӑхӑтра пурнӑҫ самаях сыпӑнса кайнӑ пекчӗ. Энтюк тетепе Сӑпани акка ӳссе ҫитрӗҫ те хуҫалӑхра пулӑшакан пулчӗҫ. Эпӗ те пӗчӗккех марччӗ ӗнтӗ, вунултта кайнӑччӗ. Икӗ йӑмӑк кил хушшинче аннене самаях пулӑшатчӗҫ. Анчах та ҫакӑн пек пурнӑҫ вӑраха пымарӗ, пире калама ҫук пысӑк хуйхӑ килсе ҫапрӗ: пӗррехинче анне вулӑса пасара кайнӑ та таврӑннӑ чух вӑйлӑ ҫумӑр айне пулнӑ. Ҫӳхе тумланнӑскер, витӗрех йӗпеннӗ вӑл, вунӑ ҫухрӑм шывпа пылчӑк тӑрӑх ҫӑпатапа килсе, шӑнса пӑсӑлнӑ. Виҫӗ уйӑх вырӑнпах выртрӗ. Вӑл вӑхӑтра тухтӑр тавраш пулман. Анне тем тери тертленсе, сывлӑшсӑр пӳлӗнсе вилчӗ. Атте хуйхӑпа ӗҫке ярӑнчӗ. Тӑтӑшах ӗҫнӗрен вӑрманне те лайӑх пӑхаймастчӗ. Пӗрре ҫапла эпӗ вӑрмантан таврӑнатӑп. Укӑлча хапхинчен кӗтӗм те хурал пӳрчӗ патӗнче халӑх туй ха-

лăхĕ пек кĕпĕрленсе тăнине куртăм. Мана хирĕç пĕр карчăк сĕнкĕлтетсе килет.

— Ма халăх пухăннă?

— Аç?

— Мĕн пит халăх кĕпĕрленет?

— Вĕлермен... Хĕнеççĕ.

— Кама хĕнеççĕ?

— Виçĕ тĕп юман вăрласа сутнă Пуян Кантраттинне.

— Кам?

— Эльмук Энтри Миккулайĕ.

Эпĕ шартах сикрĕм. Ура вăйĕсем пĕтсе ларчĕç, янах чĕтре пуçларĕ. Карчăкпа тек калаçса тăмарăм, хурал пӳрчĕ патнелле чупрăм.

Аттене, аллисене хыçалалла пăрса, хурал пӳрчĕ умĕнчи ут юпи çумне тилхепепе çатăрласа çыхса хунă. Унăн çӳçĕ-пуçĕ туснă, сăмси-çăварĕнчен манка-сурчăкĕ юхса тăрать, пуçне уснă, мăнтарăн, ӳсĕр пулмалла, пĕрре ахăрса-мĕкĕрсе, тепре юрласа ярать. Ăна икĕ енчен икĕ уретник чĕн пушăпа хĕнеççĕ. Атте, самаях тĕреклĕ çын, уретниксем туртса касмассерен кăртах сиксе илсе какăрнă чухнехи пек сасă кăларать. Кĕпи çурăлса пĕтнĕ, çанçурăмĕ хĕп-хĕрлĕ юн. Эпĕ унка татса тухрăм та хаяррăн кăшкăрса ярса атте патне ыткăнтăм.

— Куда, щенок! Назад! — çула пӳлсе хучĕ çутă тӳмеллĕ, пустав тум тăхăннă, çӳллĕ тăрăллă карттуслă пĕр çамрăк ача, хам çулаллискер-ши е кăшт çеç аслăрахскер? Аллинче унăн та саламат. Мана тӳрех сăмса урлă сăтăрчĕ пушшипе. Куç-пуçран вут тухса сирпĕнчĕ. Эпĕ, урса кайнăскер, çакна ая пĕтĕрсе чиксе таптама тытăнтăм. Тилĕ сăмси пек шĕвĕр питлĕскер, самаях тĕреклĕ тата хăй. Тĕмле мелпе мана çавăрса çапма хăтланать. Вĕçерĕнсе атте патне ыткăнас тесе çеç шутланăччĕ, такам хыçалтан пырса çӳçрен пĕтĕрсе илчĕ. Пĕтĕрсе илчĕ те çĕклесе çĕре нăчлаттарчĕ, вара ураран сĕтĕрсе тапа-тапа айккинелле туртса кайрĕ. Пăхрăм та: Пуян Кантратти! Куçĕ чарăлса кайнă, çăварĕнчен кăпăк тухать. Леш шукăль улпут Кантратти Ехремĕ пулнă иккен, Чистайра гимнази текен шкулта вĕренекенскер. Пуян Кантратти, хăй вулама-çырма та пĕлменскер, ывăлне чăн-чăн улпут туса ӳстерме шут тытнăччĕ. Ехремĕ халь чăвашла пачах калаçмасть, йĕрĕнет тĕттĕм чăвашсенчен, улпут-купса ачисемпе пĕр шкулта, гимназире вĕренетçке-ха...

Хĕнесен-хĕнесен, атте урăлса çите пуçланă, шыв ыйт-

нă, шыв вырăнне ăна уретниксем çур витре лаша шăкĕ пуçĕ тăрăх янă, пĕрехмай: «Эпĕ вăрă, ман пек вăрă ан пулăр!» — тесе кăшкăрма хистенĕ. Урă чухне ытла та çынран именекенскер, атте ялйыш умĕнче курнă çак мăшкăла чăтса ирттереймерĕ. Тепĕр кунне вăрман çулĕ çинчен ун виллине турттарса килчĕç: тепре ĕçсе ӳсĕрĕлнĕ те вăрман хĕрринчи çăкаран çакăннă. Çапла вара пилĕк пĕртăван аттесĕр те, аннесĕр те тăрса юлтăмăр. Часах пирĕн тĕнчен тĕрлĕ еннелле саланса пĕтмелле пулчĕ. Сăпани аккапа Энтюк тете йăмăксене приюта кайса пачĕç. Энтюк телей шырама Питĕре кайрĕ, акка пĕр ват çынна качча тухрĕ те, çулталăкран ача-пăчаллă пулчĕ, хăйĕн çемье, хăй нуши хăйне çитет. Эпĕ кутамкка çакса Чистаялла çул тытрăм. Икĕ эрне пек ĕç ширанă хыççăн Чулман Атăлпа çӳрекен пĕр паршă çине матроса кĕтĕм. Мана, çамрăк ачана, пысăккисен шалăвĕн çуррине çеç тӳлетчĕç. Паршă çинче пĕр ватă çын, шурă çӳçлĕ Кавăрле пурччĕ, çамрăклах йывăр йăтса пилĕке хускатасран, вăл мана çăмăлтарах ĕçсем тупса паратчĕ, хăш чух пуç пăхтаратчĕ. Михĕсем сĕтĕрттерсе халран янисĕр пуçне пире Кавĕрле тата тепĕр «ĕç» хушатчĕ, тырă вăрлаттаратчĕ. Вăл асличчĕ те, итлемесен юрамастчĕ. Чистайран çу каçа анаталла вунă миллион пăт тырă каятчĕ. Паршăсем ыраш, пăрçа, хуратул тиесе Атăлалла вĕçĕ-хĕррисĕр шăватчĕç. Каçхине, вахтă пĕтсен, кашни матросах михĕсене «хыпашласа» тухса виç-тăватă кĕрепенккерен кая мар тырă тумаллаччĕ. Паршăра çĕр пин пăт тырă пулсан, çав майпа икçĕр ытла михĕ тырă вăрлама пулатчĕ. Тырра çыранта, чарăннă-чарăнман тенĕ пек, сутса пĕтеретчĕç. Кавĕрле пĕтĕм ĕçшĕн кашни матроса пилĕк тенкĕ тӳлетчĕ, хăй вара тырă сутса пуйнă укçапа темиçе хутлă çурт лартнăччĕ. Паршă çинче çӳре-çӳре чун тухас патне çитсен, эпĕ Питĕре çитсе Энтюк тетене шыраса тупма шутларăм. Вăл кайни ик çула яхăнччĕ ĕнтĕ, матросра тăратăп тесе çыратчĕ...

Хумкка йăшаланса илчĕ. Ăна уретниксен тискерлĕхĕ, Пуян Кантратти Ехремĕпе Кантратти епле хăруш çынçиенсем пулни хытă пăлхатрĕ. Ехремĕ, çамрăклах çапла сăхăскер, кайран ăçта кайса кĕнĕ-ши? Çавна питĕ пĕлес килет Хумккан. (Хам пирки эп юриех виççĕмĕш сăпатра калатăп, «эпĕ» теекенни халлĕхе, ан тив, пĕр Кириле мучи çеç пултăр.)

— Кириле мучи, Ехрем кайран ăçта кайса кĕчĕ?

— Ехрем-и? Питĕрте куçа-куçăн тĕл пулма тӳр килчĕ унпа. Анчах кун пирки каярах калаcа парăп. Каларăм ĕнтĕ, манăн текех паршăпа çӳрес килми пулчĕ. Атăл çинчи пĕр хулара анса тартăм та пуйăспа Питĕре çитсе ӳкме шут тытрăм, анчах та, вокзалта тĕлĕрсе кайсан, мана çаратрĕç. Эпĕ татăк çăкăрсăр, çур пус укçасăр тăрса юлтăм. Пĕрер уйăх пек ватă майра патĕнче тарçăра пурăнтăм, Питĕре çитмелĕх укçа тăвайманрăм. Пĕррехинче, чейпе çăкăр пулмĕ-ши тесе, хупаха кĕтĕм. Хупахра çак ват майран хĕрĕ урай çăватчĕ. Вăл мана хăш чухне çăкăр татăкĕсем, пылак чей тупса паркалатчĕ. Кăнтăрла иртнĕччĕ ĕнтĕ, эпĕ шывпа çăкăр çисе лараттăм. Ман сĕтел патне икĕ çӳллĕ йĕкĕт пырса тăчĕç:

— Сирĕн сĕтел хушшине ларма юрать-ши? — ыйтрĕ пĕри шӳтлерех.

— Ларăр, тархасшăн, хăна пулăр,— хуравларăм çав сасăпах. Йĕкĕтсем çирĕмсенче пуль, иккĕш те сывлăхлă, таса, пичĕсенчен юн пĕрхĕнсе тухас пек туйăнать, сарлака хул-çурăмлă. Аллисем шăнăрлă та чукмар пек пысăк. Çавăн пек чăмăрпа пĕрре çапсан, Пуян Кантратти Ехремне кăна мар, Кантраттине те вĕлерсе пăрахма, çав маях уретникĕсене те тирпейлесе хума пулать.

— Ну, мĕнле, тутлă-и кăвакал сĕчĕ? — сăмах хушрĕ тепри.

— Тутлă,— терĕм эпĕ,— уйрăмах ĕнертенпе ăша нимĕн те яман пулсан.

— Ĕнертенпе?

— Ĕнертенпе.

— Официант! Виç çын валли — прибор!

— Каçарăр та, мĕнлеччĕ сирĕн ят? — каллех ман енне çаврăнчĕ малтанхи.

— Кириле, вырăсла Кирилл.

— А эс мĕн вырăс мар-им?

— Вырăс мар.

— Тутар?

— Чăваш. Тăлăх эпĕ, атте те, анне те çук. Тете патне Питĕре çитес, тетĕп.

— О, Питĕр инçе. Тата вăл питĕ пысăк хула, унта тетӳне йăпăр-япăрах тупма та пулмĕ. Тăхта-ха, атя пирĕнпе, эпир сана ĕçе вĕрентĕпĕр, хырăму тутă, çийӳ питĕ пулĕ. Каярахпа тетӳ патне те кайăн. Халлĕхе эпир вăрманта, çĕр пӳртсенче пурăнатпăр, Атăл шăнса пăр хулăмлансанах ăсăкăçсем лартатпăр та шыв тĕпĕнчен вĕтĕ чул кăларма пуçлатпăр.

— Пултарайăп-ши эпĕ?
— Пултаран. Миçе султа-ха эсĕ?
— Вунулттăра.
— Эс апла каччă пулнă-иç. Атя, пуçтарăн.
Пуçтарăнмалли манăн нимех те çукчĕ, халь тесен халь çула тухма хатĕрччĕ эпĕ. Йĕкĕтсенчен пĕри таçта кайрĕ, тепри манпах юлчĕ, сасартăк шухăша путса кантăкран Атăл çинелле пăхса ларчĕ. Тулта тĕттĕмлене пуçласан, кайнă йĕкĕт таврăнчĕ те, эпир урама тухрăмăр, пĕр-ик çухрăм хирпе пынă хыççăн сукмакпа вăрманалла пăрăнтăмăр. Вăрмана кĕрсен, эп шикленсе ӳкрĕм: камсем кусем, ăçта илсе каяççĕ?
— Атьăр, калле хире тухар, хиртех лайăх.
Каччăсем кулса ячĕç.
— Вăрă-хурахсем мар эпир, ан хăра, тивместпĕр,— терĕ те хурарахххи сарăраххине кăлт! тĕксе илчĕ.—Çапла вĕт Князь?
— Çапла, Барон.
Ансăр сукмак ахрат çырми патне илсе тухрĕ. Тĕпĕнче шыв йăлтăртатни курăнать. Тепĕр енче, пĕр пĕчĕк лаптăкра — хӳшĕ. Хӳшĕ патне çитсен, Князь хуллен çеç:
— Асатте, сана валли пулăшакан тупса килтĕм,— терĕ. Çапла каларĕ те тĕттĕмелле кĕрсе çухалчĕ. Хӳшĕрен, ĕхлете-ĕхлете, пĕр старик ашăка сирсе пăхрĕ, шалалла кĕме чĕнчĕ.
— Çакă пулать-и вара çĕрпӳрт? — ухмахла персе ятăм эпĕ.
— Кам каларĕ сана çĕрпӳрт тесе? — кăмăлсăр пулчĕ мучи.
Тем те пĕлес килни, çав вăхăтрах хытă шикленни канăç памарĕ мана: эпĕ старикрен тата темĕн ыйтасшăнччĕ, анчах та вăл таçта çывăхра, манран инçех те мар пулас, майлашса выртрĕ те урăх нимĕн те чĕнмерĕ.
Тулта пĕр сас-чӳ те çук. Кĕрхи каç сулхăн та лăпкă. Пĕр вăхăт шăплăха тăнласа выртнă хыççăн, эпĕ сисмен те, йывăр ыйха путнă. Улăм ăшĕнче тӳшек çинчинчен пĕртте кая мар лайăх çывăрнă.
Ирхине, хӳшĕрен упаленсе тухсан, тӳрех мучие куртăм. Вăл, вăтам пӳллĕскер, çăпатапа, саплăклă кивĕ кĕрĕкпе. Ватăскер, пĕрехмай тем мăкăртатать. Мана асăрхасан, ĕç хушрĕ: çапă сĕтĕрсе килсе кăвайт хатĕрлемелле. Кăвайт хатĕрлесе çитерсен, эпĕ шыв хĕрне антăм, шыв ăсса килтĕм. Ик витре кĕрекен хуранпа яшка

çакрăмăр. Типĕ туратсем самантрах чĕрĕлсе кайрĕç те ялкăшса çуна пуçларĕç.

Пиртен инçех мар хÿшĕсем татах пур иккен: хăшне брезентпа, хăшне михĕсемпе вителенĕ, шала типĕ курăк тултарнă пулмалла. Çывăхарах пытăм та, шалтан çынсем харлаттарса çывăрни илтĕнет. Пĕр вăхăт шухăша кайса тăтăм: мĕн мурне вăрманта пытанса тискер кайăксем пек пурăнаççĕ кусем? Çак тĕттĕм вырăнта урăх пĕр чун та çук пуль, чараксăр çăварлă чакак çеç таттисĕр чарăлтатать.

Ахрат çырми çыннисем кăнтăрлана тин вăранса хÿшĕсенчен тухрĕç. Тĕл-тĕл курăнакан юрпа çăвăнкаласа унталла-кунталла чупа пуçларĕç, майĕпенех пĕр çĕре пуçтарăнса тĕмескесем, тункатасем, каскасем çине ларса тухрĕç: мучи апат валеçсе парасса кĕтеççĕ. Вунă-вунпилĕк арçын, пурте çамрăк та вăйпиттискерсем, икĕ витре кĕрекен хурана часах ним юлмиччен пушатрĕç. Сăнаса ларса, эп акă мĕн асăрхарăм: çирĕмсенчисем те, вăтăр-хĕрĕхрисем те, сарăрах вăрăм кăтра çÿçлĕ, яштака та сарлака хул-çурăмлă çамрăк паттăра, темшĕн пурте Князь тесе чĕнекенскерне, пăхăнаççĕ, унăн кашни сăмахне хăлхана чикеççĕ, мĕн хушнине çавăнтах пурнăçлаççĕ. Лайăхрах пăхрăм та, Князь мана çакăнта ертсе килнĕ йĕкĕтсенчен пĕри пулчĕ кайрĕ! Князь! Çапла çав, Князь терĕ вăл ун чух хăй ятне. Тепри — Барон. Тĕлĕнмелле ятсем пур иккен тĕнчере...

Князь сăпайлăн та уçăмлăн калаçать. Сăнĕнчен пăхсан, вăл питĕ ырă кăмăллă çын пулни паларать. Пысăк çырă куçĕсем, ăшă кулли чуна ăшăтса яраççĕ, ирĕксĕрех çак илемлĕ те вăйлă çын патне пырса: «Сывă-и, Князь тете, мĕнле çĕр каçрăр?» — тесе ыйтас килет.

Апат çисе тăрансан, нумайăшĕ туртса ячĕç. Вара пĕрин хыççăн тепри таçта кайса пĕтрĕç. Вĕсемпе пĕрле Князь та кайрĕ. Лагерьте мучи, эпĕ, Барон юлтăмăр. Баронпа мучи хÿшĕсене сÿтсе урăх çĕре куçарчĕç. Малтанхи вырăна типĕ çапă сĕтĕрме хушрĕç. Эпир самантрах пилĕк-ултă çĕре çапă сĕтĕрсе купаларăмăр та чĕртсе ятăмăр. Купасем çатăртатса, хĕлхем сапса, ялкăшса çунаççĕ. Эпĕ, ниçта кайса кĕмелле мар хавасланнипе, вĕсем тавра чупатăп, чăтлăха кĕрсе çапă сĕтĕре-сĕтĕре килетĕп. Çапă куписем пĕр вăхăт çĕкленсе çунчĕç те лăпланчĕç. Вара пачах пусăрăнчĕç те, юлашкинчен, кăвар çеç тĕлкĕшсе выртакан пулчĕ. Кĕлпе кăмрăк çеç тăрса юлсан, мучи таçтан сарлака йывăç кĕреçе, пысăк шăпăр-

сем йатса килчĕ. Кĕлпе кăмрăка кĕреçепе хырса пăрахса шăпăрпа шăлтăмăр, таса вырăна каллех хӳшĕсем туса лартрăмăр, шала утă-улăм тултартăмăр. Çапла вара каçа валли «ăшă хваттерсем» хатĕр пулчĕç.

Кун хыççăн кун иртсе пычĕ. Çанталăк сивĕтнĕçем-сивĕтет, юр çăвать. Тавралăх шурă тумпа пĕркенчĕ. Хĕл çитрĕ. Хĕл çитрĕ пулин те, ĕç пирки сăмах хускатакан никам та çук. Хӳшĕсем патне каллех виççĕн юлсан, пĕррехинче, хăра-хăрах Баронран:

— Тете, Атăлтан вĕтĕ чул хăçан кăларма тытăнатпăр? — тесе ыйтрăм.

— Часах, часах,— çурăмран лăпкаса ăшшăн кулчĕ вăл. Мучи вара, темме хытă пăлханса та тарăхса, шăл витĕр каласа хучĕ:

— Эс мĕн, хăвăртрах путса вилес тетĕн-им? Пулă апачĕ пулас килет-им? Ĕлкĕрĕн...

Эпĕ тĕлĕннипе хытсах кайрăм: авă мĕнле иккен, ĕçleme кунта никам та шутламасть-мĕн. Куляннипе, эпĕ хуйха ӳкрĕм: хальччен, çуран утнă пулсан та, Питĕре тахçанах çитеттĕм. Ăçта лекрĕм эпĕ? Камсем çак сынсем?

Эпĕ кăмăлсăрне курса, Барон ман пата пычĕ:

— Эс, шăллăм, çи те çывăр, çи те çывăр, малашне пурăнма вăй пух, пиртен ан хăра...

Темиçе кунтан ушкăн пуçлăхĕпе, Княçпе хăйĕнпе, калаçса пăхма шутларăм. Вăл тунката çинче чĕлĕм туртса ларатчĕ, вăхăт-вăхăт айккинелле чăртлаттарса суратчĕ. Князь мана кăмăллăн кĕтсе илчĕ.

— Ну, мĕнле, тăванăм, сивĕ мар-и? Выçă мар-и?

— Çук, тете, тавтапуçах.

Князь асăрханса çеç ман çĕлĕке хыврĕ те çемçе çырă çӳçе тытса пăхрĕ, пуçран ачашласа илчĕ.

— Аçупа аннӳ вилни нумай пулать-и?

— Анне маларах вилчĕ, атте — нумаях пулмасть.

— Эхе-хей, апла иккен...— ассăн сывларĕ йĕкĕт ват çын пек.— Тетӳне Питĕрте епле тупăн-ха, Питĕр хули сирĕн ял пысăкăш кăна мар вĕт вăл, пы-ысăк хула? Çухалан эс унта, ачам, çухалан. Ан кай, хамăрпа юл. Çын тăвăпăр.

— Камсем эсир, тете? Хăçан чул кăларма пуçлатăр?

— Эпир-и? Çынсем. Чулне техник килсе çитсен кăларма тытăнасшăн. Эс пурăн, пурăн, нимшĕн те ан кулян...

Князь тете ăшшăн ĕнентерсе калаçни мана кăштах

ляпплантарчĕ. Аванах ăнланатăп-ха: тăлăх-турата ниçта та никам та ăшă йăва хатĕрлесе хуман. Хулинче ĕç тупаймасан, выççах вилетĕн. Кунта çапах, хÿшĕре пурăнсан та, хырăм тутă хуть. Ляпланса çеç ситетĕп, çынсем хăйсене хăйсем тĕлĕнмелле тыткалани каллех шухăша ярать: пĕр кĕтмен-туман çĕртен таçта кайса çухалаççĕ, çĕрĕпех таврăнмаççĕ. Ир енне çеç килсе выртса кăнтăрлаччен çывраççĕ те каç енне каллех саланса пĕтеççĕ. Барон каçхине Атăл çыранне тухса чылайччен çул çинелле пăхать, темĕн сăнаса тăрать.

Пĕр уйăх çын çăкăрне çисе ним тумасăр тенĕ пек пурăнни мана асапа кĕртсе ÿкерчĕ. Çуран утса та пĕр уйăхра Питĕре çитеттĕм. Кунта пурăнни мана малашне мĕн пама пултарĕ-ши? Нимĕн те. Шанчăксăр та иккĕленÿллĕ пурнăç кунта. Тарас. Пуç сывă чух часрах тухас ку ахрат çырминчен!

Çын куриччен эпĕ хамăн хутаç пеккине тĕмсем хыçне пăрахрăм та, Князь тетене тĕл пуласран шикленсе, каç пуласса кĕте пуçларăм, йывăççем хыçне пытантăм. Тĕттĕмленсен, вăрманалла чăмрăм, унччен хамăр килнĕ сукмак еннелле кайрăм. Сукмак çине тухасси пулмарĕ, темле çула тухрăм. Пĕр вăхăт вăрман хĕррипе пынă хыççăн çул каллех вăрманалла кĕчĕ. Утрăм-утрăм, вăрман çаплах пĕтмест. Ир енне çеç мал енче йытă вĕрнĕ сасă илтĕнчĕ, вăрман та сайралчĕ. Хире тухнă çĕре ураран ура та иртми пулчĕ. Пĕр тĕмеске çине канма лартăм та, ыйха путасран шикленсе, темиçе минутран каллех ура çине сиксе тăтăм, шăла çыртса малалла талпăнтăм. Утса пынă май, пуçа темле шухăш та пыра-пыра кĕрет, вăхăтсăр вилнĕ атте-анне, акка аса килет, куç умне пĕр сăн хыççăн тепри туха-туха тăрать. Пуян Кантраттипе унăн çĕлен пек ывăлĕ курăнать... Шухăша кайнипе эпĕ асăрхаман та, умра икĕ пысăк мĕлке тăра парать.

— Чарăн, ăçта каян, мĕншĕн? — хаяррăн ыйтрĕ тÿрккес сасă.

— Питĕре, тете патне,—шартах сикрĕм эпĕ хăранипе.

— Паспортна кăтарт.

— Паспорт тавраш çук ман. Хĕрхенĕр тăлăха...

— Паспорт! — хĕçĕпе чăнкăртаттарса кăшкăрчĕ жандарм.

Эпĕ сехре хăпнипе макăрса ятăм. Çакна курса, тепĕр жандармĕ питне çывăхах илсе пычĕ те мана куççăн шăтарас пек пăхрĕ.

— Суятăн пулсан, асту...

Кĕсъене, хутаҫа ухтарчĕҫ, нимĕн те тупайманнипе-ши е урăх сăлтавпа:

— Ут ху ҫулупа! — терĕҫ.

Яла кĕреспе салтаксем куртăм. Пусă патĕнче хĕрарăмсем хĕрсе кайсах тем пирки тавлашаҫҫĕ. Пăшаллă икĕ ватă ҫын иртсе пыраҫҫĕ. Ҫак мучисем мĕншĕн пăшал йăтса тухнине пĕлес килнипе эпĕ вĕсен патне пытăм:

— Элле вăрçă хусканнă-и, асаттесем?

— Эс ăçтан килетĕн? — ыйту ҫине ыйтупа тавăрчĕҫ шăнса кӳтнĕскерсем.

— Вăрмантан.

— Эс пиртен лайăхрах пĕлме тивĕҫ мĕн пуçланнипе пуçланманнине.

— Ну, эпĕр унта вутă хатĕрлерĕмĕр.

— Вутă? Ҫĕрле-и?

— Ҫĕрле.

— Тьфу! Сан сивĕпе манку шăнса ларнă пулмалла. Ав ҫав виҫҫĕмĕш кил — манăн пӳрт, кĕрсе ăшăн, ахаллĕн ҫул ҫинчех ӳксе вилĕн.

— А эсĕр ма шăнса тăратăр?

— Эпир — хурал.

— Кама хуралласатăр?

— Икĕ пуян хуҫана вĕлерсе ҫаратакансене сыхлатпăр.

Эпĕ ăнланнă пек туса пуҫа сĕлтрĕм те мучи кăтартнă ҫурт еннелле утрăм. Ҫав хушăра хамăн пĕтĕм ӳт-пĕве пĕр шухăш ҫиҫĕм пек ҫурса анса кайрĕ: «Ахрат ҫырми, хӳшĕсем...» Куҫа хӳшĕсенче пурнакан тетесем, Княҫпе Барон, яшка пĕҫерекен мучи курăнчĕҫ...

## 3

Кириле мучи сасартăк калама чарăнчĕ те тула, уйăх ҫутине, тухса тăчĕ. «Атя-ха, шăллăм, татах кăшт ҫӳресе килер, тем юн ҫывăрса кайрĕ, пилĕк хытрĕ,— терĕ вăл, ывăҫ тупанĕ айĕпе кӳлĕ ҫинелле пăхса.— Ҫутă шыв... Чи ешĕл яшлăхăм ман, йывăр вăхăтра килчĕ пулсан та, ҫутă, тăрă шыв умĕнче иртрĕ. Пĕлесчĕ сан. Эстонире кӳлĕсем епле тăрă иккенне».

Эпĕ Эстун Кирилине пӳлсе пĕр сăмах та чĕнмерĕм: калаҫтăрах ĕнтĕ, аса илтĕр хăйĕн яшлăхне. Тен, Хумкка та кайран, ватăлсан, аса илĕ-ха хăй Кириле старикпе ҫутă кӳлĕ хĕрринче утă ҫулса хуралланине. Тен, Хумккана та ҫутă шыв ватлăхра ҫине-ҫинех аса килĕ. Хама

каллех виççĕмĕш сăпата тăратса, эпĕ Хумкка ятлă яш ачана Хумкка старик ролĕнче курма хăтланса пăхрăм, анчах та хал çитерейместĕм: эй, мĕн халех ватлăх пирки шутламалли пур, вунулттă та тултарман-ха... Çирлĕ-кирлĕ марпа халех пуçа çĕмĕрес мар. Ватлăхпа яшлăх çинчен шутлама пăрахса, эпĕ тăлăх ача Кириле Питĕрĕ епле майпа çитсе ӳкнине пĕлесшĕн пултăм.

— Мучи, Питĕрне вара мĕнле çиткелерĕн?

— Питĕрне-и? Çуран. Икĕ пин çухрăм ытла çуран утрăм. Шăнса та вилмерĕм, выçă та пĕтмерĕм, утрăм та утрăм, юлашкинчен çапах та Питĕр хулине çитрĕм-çитрĕмех. Энтюк тетене, епле шырасан та, тупасси пулмарĕ. Питĕр хули, Князь калараăшле, чăнах та, пирĕн ялтан самай пысăкрах иккен. Ĕçе вырнаçса пулмĕ-ши тесе, портра сулланса çӳренĕ хушăра пĕр старикпе паллашрăм. Старик, типсе хăрса кайнăскер, пĕчĕк те кукăр кĕлеткине темле чĕтретерех утса пыратчĕ. Утса пыратчĕ тени тĕрĕсех те мар-ха вăл, сĕтĕрĕнсе пыратчĕ, пырать-пырать те чарăнса ӳсĕрет, юнлă сурчăк сурса пăрахса анакан йĕмне хăпартать те малалла каять. Акă вăл чипер утнă çĕртех такăнчĕ те кăшт çеç татăлса анмарĕ, шĕлепки пуçĕнчен тухса ӳксе малалла кусса кайрĕ. Çакна асăрхаса, эпĕ ватă çын патне чупрăм, шĕлепкине çĕртен илсе тăхăнтартрăм та пăрăнса хам çулпа утасшăн пултăм. Старик тав туса пуçне сĕлтрĕ, вара каллех ӳсĕрме пуçларĕ.

— Йĕксĕк ĕçе пула сывлăха пĕтертĕм,— терĕ вăл хытах.

— Мĕнле ĕç пирки калатăр эсир, пичче? — ыйтрăм эпĕ, хам та ĕç шыраканскер.

— Асфальт ĕçĕ. Маçтăр эпĕ, вăтăр çул ытла çĕр айĕнче ĕçлерĕм. Ĕçĕ питĕ йывăр пирĕн. Нӳрĕ çапасран, снаряд хумалли складсен ăшчикне вĕри битумпа витеттĕмĕр. Склачĕсем пурте тенĕ пекех тинĕс тĕпĕнчен те аяларах, пĕр тумлам шыв ан лектĕр, нимле снаряд та ан тивейтĕр тесе çĕр тĕпне тунă ĕнтĕ. Асфальт маçтăрĕ пулас килсен, атя хампа, мана çын кирлĕ.

— Ăçта вара сирĕн кантур?

— Инженер управленийĕнче.

— А миçе çултан маçтăра тухайăп-ши?

— Ху ухмах та наян пулмасан, пĕр сезонрах.

Эпĕ калама çук савăнса ӳкрĕм. Каярахпа акă мĕн палăрчĕ: ватă маçтăра взятка тавраш кирлĕ мар иккен, эрехне те ĕçейми пулнă ĕнтĕ, укçи те хăйĕн хăйне çитсе

пырать, перекетлени те самаях пур, ватлăхра выçă ларас çук. Вĕренекенне вăл часрах маçтăра кăларасшăн та хăй ĕçрен тухса ватлăхра канса пурнасшăн. Сывлăхĕ те япăх, çитменнине. Чăнах та, пĕр сезон тамăкра пулнă хыççăн, эпир старикпе управление пытăмăр:

— Ваше благороди,— терĕ вăл пуçлăха.— Эпĕ ватăлса çитрĕм, текех форт склачĕсем тăрăх çӳрейместĕп. Ак çак йĕкĕт, ман пулăшакан, эп кăтартарах тăрсан, кирек хăш ĕçе те лайăххах тума пултарать. Мана заместитель кирлĕ, килĕшĕр, ваше благороди?

Инженер-капитан ман çине ура тупанĕнчен пуçласа пуç тӳпине çити пăхса тухрĕ те килĕшсе пуçне сулчĕ.

— Пит аван, ĕçлетĕр.

Вара эпĕ пĕр чуллă-сăртлă çыран хĕрне кайса лекрĕм, фортсен тарăн путвалĕсенче эрни-эрнипе çухалса çӳрекен пултăм. Тимĕрбетон маччасен айĕнче ĕçлесси шахтăринчен пĕртте çăмăл мар: ниçтан уçă сывлăш кĕмест, сывлăш вĕри битум шăршипе, сĕрĕм-тĕтĕмпе лăках тулса ларать, сывлама, куçа уçма май пĕтсе çитет, çирен шапăртатса тар юхать, пуç çаврăнать, хăсас килет, ытла хытă ӳсĕрнипе ӳпке çурăлса-татăлса тухассăнах туйăнать.

Икĕ çул хушшинче эпĕ çичĕ хутчен вилес пек йывăр чирлерĕм, юлашкинчен икĕ уйăха яхăн вырăнпах выртрăм, хăлха илтми, куç курми пулчĕ. Çавăн чух ĕнтĕ хăрах куç хытă хавшаса юлчĕ. Иртнĕ ылханлă саманан парни вăл, ĕмĕр тăршшĕпех канăç памарĕ мана, суккăрланасран аран хăтăлтăм ун чухне. Вара урăх нихçан та çав тамăка кайса пуçа чикмессе сăмах патăм. Вăл вăхăтра иккĕмĕш çул ĕнтĕ тĕнче вăрçи пыратчĕ. Портра çĕрĕн-кунĕн пневматически мăлатук шаккатчĕ, металл шăтаракан пăрасен сасси шăхăрса тăратчĕ. Декабрьте эпĕ пĕр канонерка çине ĕçе кĕтĕм: унта эпир çĕр çирĕм



миллиметрлă çĕнĕ тупă вырнаçтараттăмăр. Пĕрре-хинче ирех порт управленийĕнчен çын килчĕ те пире, виçĕ йĕкĕте, порт кантурне пыма хушрĕ. Эпир пынă çĕре унта икĕ врач, темиçе тинĕс офицерĕ ларатчĕç. Çара илекен комисси иккен. Пăхакансем пирĕн сывлăхпа ытлашшиех интересленмерĕç, унтан-кунтан çавăркаласа пăхрĕç те: «Ăмăрткайăк!» — тесе кăкăртан чăмăрпа шан! тутарчĕç. Эпир комиссире çиреме яханччĕ, пурте — «ăмăрткайăк-сем». Манăн пăсăк куçпа никам та интересленекен пулмарĕ. Çапла эпĕ, кĕтмен-туман çĕртен, тинĕс-çар флотне службăна лекрĕм. Пире çар ĕçне вĕрентес вырăнне ку-нĕн те çĕрĕн, талăкне вунултă сехет, карапсем çине груз тиеттереççĕ, тулли килнисене пушаттараççĕ. Çар кара-пĕсене ăсататпăр çеç, тĕрлĕ транспортсем килсе çитеççĕ. Тиесе пушатнисĕр пуçне пирĕн оборудование çĕннипе улăштарас ĕçе те тума тивет. Çыранти казармăра ним йĕрки çук. Еçеççĕ, туртаççĕ, картла çапаççĕ. Вăхăт-вă-хăт акăш-макăш вăйлă çапăçусем пулса иртеççĕ. Мат-роспа матрос, матроспа кĕçĕн офицер юна ӳкиччен тӳпе-лешеççĕ. Кĕçĕн офицерсем матроссене, ватă матроссем тинрех службăна пынисене çиеççĕ. Пĕрре çапла моряк-сем тимĕрленĕ кивĕ крейсер çине виçĕ талăк пĕр канма-сăр чукун балласт тиерĕç. Таçти залива тăшман эскадри кĕресрен фарватерне чукун тултарма шутланă-мĕн ко-мандовани. Çур çĕр иртсе пĕр сехетре тин офицер: «Ша-



баш!» — терĕ. Çамрăк матроссем казармăна аран-аран сĕтĕрĕнсе çитсе нарсем çине йăванса кайрĕç те йывăр ыйха путрĕç. Виç сехет каннă-и, çук-и, тăмаллине пĕлтерсе шăхăртса та ячĕç. Ӳт-пӳ тăхлан тултарнă пек йывăрланса кайнă, куç пачах та уçăлмасть. Малтан атăсене тупаймасăр хăшкăлтăм, тупсан — тăхăнаймасăр. Те вĕсем пĕчĕкленсе ларнă, урана ниепле те кĕресшĕн мар. «Мур илесшĕ, урăх атăсем килсе хунă пуль, юри, кулассшăн!» — ятлаçаççĕ матроссем. Кĕçĕн чин, вахта офицерĕ, ниçта кайса кĕрейми тилĕрсе, янраса çӳрет, çăварĕнчен сурчăк сирпĕнет. Эпĕ ун куçĕ тĕлне пулах кайрăм та тĕлĕннипе çăвара карса, куçа чарса пăрахрăм: умра тилĕ сăмси пек шĕвĕр пит-куçлă, чăваш сăнлă, самаях тĕреклĕ çамрăк офицер тăрать. Мана палларĕ-и, çук-и, пĕлместĕп, эпĕ тӳрех палласа илтĕм: Пуян Кантратти Ехремĕ! Тĕлĕннипе тата пăлханнипе ниепле те хăрах атта урана лектерейместĕп, çавна пула ӳсĕр пекех курăнатăп пулмалла. Ехрем ман умах çитсе тăчĕ:

— Пĕтĕ хĕрарăм! Ене! — çухăрса ячĕ вăл. Унтан сăран перчеткипе мана икĕ енчен çутăлтара-çутăлтара илчĕ. Çилĕ тăвăлса килнипе, куçăм курми, хăлха илтми пулса ларчĕ, ялта аттене уретниксем хĕненĕ чух хам унта ыткăнса пыни, ман çула çак çĕлен, кулак сĕлеки, пӳлсе хуни яр-уççăн аса килчĕ. Пит тăрăх перчеткепе мар, каллех чĕн саламатпа туртса каснăн туйăнчĕ. Эпĕ, сывлăш пӳлĕнсе килнипе хаяррăн кăшкăрса ярса, тăшман çине урнă вăкăр пек ыткăнтăм, Ехреме тĕшĕрсе антарса таптама тытăнтăм. Юлташсем чарман пулсан, татăкăнтатăкăн çурса тăкаттăм. Мана, пуçран темле хытă япалапа çапса анратса, çыхса пăрахнă. Пуç тăрăх пĕр витре сивĕ шыв ярсан тин тăна кĕнĕ эпĕ. Тăна кĕрсенех, конвойпа гауптвахтăна ăсатрĕç. Портри гауптвахта начальникĕ, служба пĕтерсе хăй ирĕкĕпе флота юлнăскер, йĕксĕк, матроссем мăшкăлласа «шкура» текенскер, мана «смирно» тăма хушрĕ. Эпĕ яштах тăсăлса тăрсан, винтовкăллă икĕ конвоир умĕнчех йăлтăр-ялтăр çупса ячĕ. Унтер-офицер çине эпĕ çисе ярасла пăхрăм пулмалла, вăл ман умран унталла-кунталла утса иртрĕ те, темрен шикленсе, хăвăртрах мана йышăнни çинчен пĕлтерекен хут çине ал пусма пĕшкĕнчĕ. Ал пуссан: «Пĕрремĕшне!» — терĕ те разводящине куçĕпе виçсе илсе таçта тухса кайрĕ. Шăвăнас, терĕ пуль, темрен тем сиксе тухма пултарать, матроссем халь, вăрçă вăхăтĕнче, кашкăрсем пекех хаяр. Йĕксĕксем яланах тенĕ пек хăравçă пулаççĕ.

Пĕччен лармалли камерăра стена çумне пĕчĕк сĕтел çыпăçтарса хунă, ларма пукан пур, леререх — çакăнса тăракан койка... Койкине кăнтăрла питĕрсе илеççĕ, вырт-са канаймастăн... Йĕксĕк çупнă вырăнсем вут пек пĕçе-реççĕ. Вăт йытă! Янахне çапса çĕмĕресчĕ. Тен, пирĕн кучченеçе те тутанса пăхăн-ха, моряксем кивçене юла-кан марччĕ.

Виçĕ кунтан хурал улшăнчĕ. Ристансене пăхса çÿре-нĕ чух çĕнĕ хурал пуçлăхĕ ман пата та кĕчĕ. Хăй çăра уççисемпе чăнкăр-чăнкăр! тутарать. Куç хĕссе илчĕ те кулса ячĕ:

— Начальниксене мĕн сăтăр турăн?

— Тĕшĕрсе тăкрăм.

— Кама?

— Пĕр çĕлен-калтана.

— Уççăнрах каласан?

— Пĕр ентеше. Çĕрме пуян ачи...

— А-а... Ăнланатăп, ăнланатăп. Класла курайман-лăх. Мухтатăп...

— Мухтатăп, тетĕр-и? Мĕншĕн?

— Кулак ачине, юнĕçене, тытса силленĕшĕн.

— Эсир ăна паллатăр-и вара?

— Кăна палламастăп та, ыттисене, чылайăшне, пал-латăп. Тĕпрен илсен, вĕсем пурте пĕрешкел.

— Кун ашшĕ, Пуян Кантратти, виçĕ тĕп юманшăн аттене пĕтĕм ял умĕнче саламатпа хĕнеттерчĕ, атте вара мăшкăла тÿсеймесĕр çакăнса вилчĕ.

— Питĕ шел. Анчах та эсĕ шухăш-кăмăлна ытла та пытармасăр калаçатăн. Капла майпа чунна турра пама та часах пулать.

Пирĕн калаçăва разводящий çăварне карса итлет. Эпĕ хам ытла та пысăк йăнăш тунине тинех ăнланса ил-тĕм: эх, айван, кама каласа паратăп хамăн хуйха-суйха? Хурал пуçлăхне. Тарăхса шăла çыртрăм. Караул на-чальникĕ мана ура тупанĕнчен пуç тÿпине çити, куçне мăч та тутармасăр, пăхса тухрĕ те тем аса илме хăтлан-са сылтăм аллипе çамкине тытрĕ. Унтан вĕсем урăх ним те каламасăр камерăран тухса кайрĕç, урăх ниçта та кĕ-мерĕç. Эпĕ шухăша путрăм. Тепĕр сехетрен çав унтер-офицерах ман камера алăкĕ патне пырса тăчĕ, ман çине вăрттăн сăнаса пăхрĕ. Мĕн кирлĕ ăна манран? Тен, ку та лешĕн пекех йĕксĕк, чеерех çеç? Эпĕ те пăхнине кур-сан, унтер-офицер пăрăнчĕ, анчах нумайлăха мар. Çур сехетрен вăл таврăнчĕ те камерăна кĕмсĕртеттерсе уçрĕ,

тимĕр бак йăтса кĕчĕ. Бакĕнчен тутлă яшка шăрши тухать, сăмсана кăтăклать, сĕлекене юхтарать. Кĕсйинчен çăкăр чĕлли кăнтарса тăрать. Алăка хупрĕ те, ăшшăн йăл кулса, пысăк çырă куçĕсене йăлтăртаттарса, сĕтел патне пычĕ:

— Эп, шăллăм, палларăм сана,— терĕ вăл шăппăн,— эсĕ, шăпăрлан, паллаймарăн мар иккен?

Эпĕ шартах сикрĕм. Ытла та паллană сасă! Нивушлĕ?

— Князь тете! Тăванăм...

Князь яшкипе çăкăрне сĕтел çине хучĕ те мана ыталаса илчĕ, пĕчĕк ачана чуптунă пек питçăмартинчен чуптурĕ.

— Мĕнле-ха эс, шăллăм,— терĕ вăл шывланнă куçĕсене ал тутрипе типĕтсе тата куççульне çăтса,— тӳрех паллаймарăн? Князь эпĕ... Князь тетӳ, тĕрĕсрех каласан, Иван Ларионов. Эх, Кирюш, Кирюш, ытла час манатăн-çке тусусене.

— Манман эп, тете, нихçан та манас çук. Эсĕ ун чух сухалсăрччĕ, халĕ, авă, епле хӳхĕм мăйăх пĕтĕрсе янă.

— Эпĕ ун чух айван пулнă, йăнăш çул çинче тăнă, халĕ вара манăн пачах урăхла платформа. Пуян хуçасен кĕсйисене тавăрса текех хĕçпăшал туянмастпăр, Ленин юлташ хушмасть...

— Эпĕ сире ун чух хурахсем пуль тенĕ, çавăнпа пăрахса тартăм. Чут çеç жандармсен аллине лекеттĕм.

— Эпир те кăшт çеç çаклanмарăмăр, анчах чеерех пултăмăр, вĕсене асăрхасанах ахрат çырми тăрăх Атăл хĕрне тухрăмăр та пĕр кĕпĕрнерен теприне куçрăмăр.

— Вăрмансенче пурăнмарăр пуль урăх?

— Çук. Саланса пĕтрĕмĕр. Эпĕ, сăмахран, сулă юхтаракана кĕтĕм: вăрçă пуçлансан, çара илчĕç те çырăва лайăх пĕлнипе унтер туса хучĕç. Унтере вара мăйăхсăр пачах та килĕшмест, мĕнле унтер вăл пĕтĕрсе янă хӳхĕм усси пулмасан!

Иван тетен (Князĕн) ырă сăнĕнчен пĕртте кулă çухалмасть. Эпĕ хаштах сывласа ятăм та, хама малашне мĕн кĕтнине астуса, пуçа усрăм. Иван çакна тӳрех курчĕ.

— Сана мĕн пуласса пĕлетĕп,— терĕ вăл, кулма пăрахса.— Çар трибуналĕ, анчах эс ан кулян, эпĕ йăлтах шутласа хутăм: чирлерĕм тесе, тухтăр патне яма ыйт, тухтăр патне кĕнĕ чух коридорта сылтăмри алăка тĕртсе пăх, эсĕ пынă çĕре эпĕ ăна уçтарса хуратăп, асту — сылтăмри пĕрремĕш алăк.

— Юрать... сылтăмри пĕрремĕш алăк.

— Конвоирсем сисмен вăхăтра йăшт! тухатăн та урамри халăх хушшине кĕрсе çухалатăн.

— Тавтапуç...

— Эпĕ сана вокзалта кĕтсе илĕп, поезд çине билет хатĕр пулĕ.

— Юрать, Иван тете... Эсĕ каланă пекех тăвăп.

Иван, виççĕмĕш хут хурала килсен, мана лазарета кайма хут çырса пачĕ. Пире, кӳршĕ камерăри тепĕр матроспа иксĕмĕре, виçĕ конвоир часах тухтăр патне хуса та кайрĕç. Лазаретра чирлĕ рабочисемпе матроссем туллиех кĕшĕлтетеççĕ. Конвоирсенчен пĕри, аслăраххи пулас, манпа килнĕ матроса тухтăр патне илсе кĕчĕ, ытти иккĕшĕ, çанă пек чикаркка чĕркесе, пĕр этем хăй йытти çинчен тем суйнине итлеме пуçăнчĕç.

— Ниепле те ăнланаймастăп,— суять лешĕ.— Те йытта эп хăтартăм, те йытă мана хăтарчĕ...

Суеçĕ матрос халапне итлесе пĕтерессн пулмарĕ, атă сăмсипе сылтăмри алăка тĕксе пăхас терĕм, уçăлчĕ! Иван каланă пек, йăшт! çеç турăм вара, урама сиксе тухрăм та хĕвĕшекен халăх хушшине чăмрăм.

Эпĕ вокзала çитнĕ çĕре Иван билет тупса, вырăн йышăнса хунăччĕ ĕнтĕ, пуйăсĕ те халь тесен халь тапранса каяссăн хашкаса тăратчĕ.

— Тепре куриччен, шăллăм, ан манса кай тетӳне, ак сана паспорт: халĕ ĕнтĕ эсĕ Эльмуков мар, Иванов, çуралма та Чистай уесĕнче мар, Чĕмпĕр енче çуралнă. Кирек ăçта кай — çул уçă,— терĕ Иван тете, мана инçе çула ăсатса. Эпир пĕртăвансем пек пĕрне-пĕри ыталаса чуптурăмăр. Те тĕл пулаятпăр малашне, те çук, ăна никам та пĕлмест. Самани ытла та ахăрса кайрĕ-çке. Эпĕ ун чух çапла шухăшласа пăшăрханни чăнахах пулчĕ: Иван Петрович Ларионов, граждан вăрçи вăхăтĕнче, вунсаккăрмĕш çул, Хĕвелтухăç фронтĕнчи пиллĕкмĕш çарăн полк комиссарĕ Шур Атăлшăн пынă хаяр çапăçура паттăрсен вилĕмĕпе вилнĕ. Çакăн çинчен мана унăн тусĕсем чылай вăхăт иртсен çырса пĕлтерчĕç...

## 4

Кириле мучипе эпир хамăр утта мар, колхоз утине хураллама юлнă кĕçĕр. Пирĕн нимле пăшал та, йытă та çук, паллах. Пăшал... Мĕне кирлĕ вăл ялти хуралçа, унпа персен те çӳлелле çеç пеме пулать, вăррине пеме юра-

масть. Утă вăрланăшăнах пере-пере пăрахсан, пĕтрĕмĕр, утă çинче капла мĕн пулса тухĕ-ха вара? Кашнинех утă кирлĕ, улăхĕсем пирĕн хĕсĕкрех, вĕсене те колхоз çулать. Эх, хăçан ларекра сĕт сутма пуçлĕ-ши колхоз? Атте çавăншăн тăрăшать те-ха, ларекне ниепле те туса пĕтерсе хута яраймаççĕ. Ларек уçсан, мĕн тума нушалана-нушалана килте ĕне усрамалла? Мĕн чухлĕ чăрмав унпа, ачана пăхнă пек пăхас пулать ăна, ахаллĕн сĕт памасть. Хуралта пире йытăсăрах лайăх, пĕрмай туллашса хăлхана йĕрĕнтерекен çук капла, вăрри килес пулсан, ăна çич çухрăмранах сисетпĕр-ха, суккăр та, хăлхасăр та мар. Хамăр çеç эпир хуралта, пире шухăшлама та, сăмахлама та никам чăрмантаракан çук.

Хальхинче эпир ката хĕрне çитиех кайрăмăр.

— Çак вăрман,— терĕ мучи,— эпĕ ача чух вĕтлĕх çеçчĕ. Халĕ пăх-ха, мĕн тери хăватлă юмансем лараççĕ. Атя-ха çавăнталла, Павăл хăртни текен лаптăкалла, аттене çав çул çинче тупса тухнăччĕ.

Эпир Павăл хăртнинелле çул тытрăмăр.

— Эстонире,— терĕ Эстун Кирили шавламасăр пырсан-пырсан,— эпĕ пĕр утрав çине лекрĕм...

— Эс кун пирки каларăн ĕнтĕ, Чарлан утравĕ çине.

— Çапла, Чарлан утравĕ çине... Çар трибуналĕнчен тарса хăтăлсан пулчĕ ку. Пĕр паллана механик мана Эстоние каякан пăрçĕмренĕн кăмрăк шăтăкне пытарчĕ. Карап çитес çĕре çитсе чарăнсан, механик кочегарсем патне анчĕ те çак вырăнта чылай тăма тӳр килессине пĕлтерчĕ. Кочегарсем çăвăнса тасалчĕç, çĕнĕ тум тăхăнса çыран хĕрне тухрĕç. Вĕсемпе пĕрле кочегаркăран механик та çӳле хăпарчĕ, анчах унта нумай тăмарĕ, каялла таврăнчĕ. Вăл шаккаса паллă парсан, эп шăтăкран пуçа кăлартăм.

— Аçта чарăнтăмăр?

— Пирс патне, анчах та çырана тухма тăхта-ха.

— Мĕншĕн?

— Тепре тĕрĕслесе кĕрем.

Эпĕ пытаннă çĕртен ĕселенсе тухрăм та çирен кăмрăк тусанне шаккаса тасатрăм, çăвăнтăм. Çав вăхăтра трап тăрăх механик хăпарчĕ.

— Халĕ тухма юрать. Тăхта-ха, чей ĕçĕпĕр, ан васка...

Механик патĕнче чей ĕçсе ларнă чух вăл мана иллюминатортан хăш çулпа каймаллине кăтартрĕ. Паçăрах каларăм ĕнтĕ, утравĕ пысăк мар, кайран пĕлнĕ тăрăх,

тăршшĕ вунă, сарлакăшĕ пилĕк çухрăм. Кăнтăр енче ял пур иккен, леререх тата тепре пур тет. Манăн кăнтăр енчине çитмелле, унта шанчăклă çын кĕтет. Утрав çине тин ура ярса пуснине никама та пĕлтерес мар тесен, яла çитмелли çула никамран та ыйтмалла мар. Çавăнпах ĕнтĕ механик ман чăматана йăтрĕ те çырана тухрĕ. Ăна вăл пысăк чул хыçĕнчи виçĕ хыр патне, сукмак çине, кайса лартать, каялла таврăнать те, эпĕ механикпа сывпуллашатăп.

Тус çур сехетрен таврăнчĕ. Унпа эпир çырана тухрăмăр та, хыр вăрманĕ хĕрне çитсен, ал парса уйрăлтăмăр.

Сукмак тăвалла кукăркаланса чупать. Çине-çинех гранит чулсем тĕл пулаççĕ, çынсем те ирте-ирте кайрĕç, тĕлĕнсе пăхса илеççĕ те малалла, хăйсен çулĕпе, утаççĕ. Чăматана никам та тĕкĕнмен. Ун патне çитсен, лăпланса, кăвак валун çине лартăм, çăмăллăн сывласа ярса, хыр шăршиллĕ сиплĕ уçă сывлăша кăкăр туллин çăта пуçларăм. Кăмрăк шăтăкĕнче эпĕ икĕ талăка яхăн выртнă. Ытларах сывласа ларнă пулсан та пăсмастчĕ те, каймалла, шанчăклă çынна шыраса тупмалла. Вăл мана çар строительстви валли чул хатĕрлекенсен ушкăнне ĕçе вырнаçтарма тивĕç. Чăматан йăтса тĕмсем хыçне кĕтĕм те тума улăштарса тăхăнтăм: хура костюм, галстук, пальто. Вара васкаса ялалла утрăм. Чулçăсен кантурне çăмăллăнах тупрăм. Унта ыраш улăмĕ пек сарă сухаллă секретарь, мана кирлĕ çын, пĕччення лаpaтчĕ. Пăрçĕмĕрен механикĕн ятне асăнсан, вăл ура çине тăчĕ те мана алă пачĕ.

— Сирĕн пирки инженерпа калаçрăм,— терĕ вăл, килнĕ çынна пукан сĕнсе.— Халĕ çеç тухса кайрĕ. Чăматанна хăвар та чуп-ха ав çав сукмакпа,— секретарь кантăкран сăрт айккинелле кăтартрĕ,— инженер халь çеç аялалла анса кайрĕ, эс ту урлă каç та ăна хирĕç тух...

Эпĕ çитнĕ çĕре инженер лаши пирс патĕнче тăратчĕ. Хăй темле майрапа калаçать. Калаçса пĕтерчĕç те лашине буксир патне уттарса пычĕç. Çак вăхăтра эпĕ çитрĕм.

— Ваше благороди, сире чăрмантарма юрать-и?

— Мĕн шуйттанĕ? Мĕн кирлĕ сире манран?

— Механик сире çуралнă кун ячĕпе салам ярать!

— А-а... Таркăн моряк Иванов, Чĕмпĕр таврашĕнче çуралса ӳснĕскер? Кăтартатчĕç-ха сана Чĕмпĕр, ху Эльмуковран епле майпа Иванов пулса тăнине пĕлеймесĕрех леш тĕнчене ăсанаттăнччĕ, сиссе те юлаймастăнччĕ,

Княҫа тав ту. Ах-ха-ха-ха-ха! — инженер тавранa янратса, пӗҫҫине икӗ аллипе ҫапа-ҫапа кула пуҫларӗ, унпа пӗрле майри те ахӑлтатать.— Эх, Кирюш, халӗ те паллаймарӑн-и? Кил ӗнтӗ ыталам!

— Барон?!

— Мӗн баронӗ пултӑр, Вячеслав Петрович эпӗ, Вячеслав Петрович Ларионов, Ваня манӑн пичче вӑл...

Ҫакна илтсен эпӗ, тӗлӗннипе, юпа пек хытса тӑтӑм. Сӑнасарах пӑхрӑм та, чӑнах та Барон. Ҫав вӑхӑтра буксир тапранса кайрӗ, эпир виҫсӗмӗр те лав патне тавранӑтӑмӑр, ларса кантура килтӗмӗр. Барон — ман пулас начальник, ҫавӑнпа та, хӑй каласа памасӑр, эпӗ унран нимӗн те ыйтса пӗлесшӗн пулмарӑм. Кантурта вӑл мана таса хут листи тӑсса пачӗ:

— Ҫыр-ха ҫакӑнта мӗн те пулин.

— Мӗн?

— Ну: Зина, эп сана юрататӑп,— те.

— Тавай.

Эпӗ шурӑ хут ҫине питӗ тӑрӑшса хӑвӑрттӑн: «Зина, эп сире пачах та пӗлместӗп»,— тесе ҫырса хутӑм. Барон хута илчӗ те, вуласа пӑхсан, савӑнӑҫлӑн кӑшкӑрса ячӗ:

— Зина, пӑх-ха, манран темиҫе хут хитререх ҫырать, писарь, каллиграф!

Эп ҫырнине паҫӑрхи майра та пырса пӑхрӗ, «Зина, эп сире пачах та пӗлместӗп», тенине курсан, хӗрелсе кайрӗ.

— Зина вӑл эпӗ пулатӑп.

— Питӗ аван,— тавӑртӑм хавaслӑн.

Барон хута чӑмӑркка туса карҫинккене пырса пӑрахрӗ те:

— Строительство материалӗсен начальникӗ пулатӑн,— терӗ.— Уйӑхра виҫҫӗр тенкӗ тӳлетпӗр, ҫиме те, тумланма та, хӗрсемпе ҫӳреме те ҫитет. Хыт тӑрӑшса ӗҫлесен, преми илетӗн.— Кӗтесре ларакан секретаре кӑшкӑрчӗ: — Тусӑмӑра хваттере вырнаҫтар!..

Сар сухал мана ҫыран хӗррипе ертсе кайрӗ. Ял хӗрринчи пӗр пӳрт умне ҫитрӗмӗр.

— Ырӑ кун пултӑр! — ним именмесӗр, тӳрех пӳрт алӑкне уҫрӗ юлташ.

— Хӑвӑра та — ырӑ кун.

Ватӑ карчӑк кӑштӑртатса тухрӗ, ун хыҫҫӑн старик пуҫӗ курӑнчӗ. Эпир шала кӗрсе тӑтӑмӑр. Мӗншӗн килнине пӗлсен, малти пӳртне илсе кӗчӗ те кравать ҫине кӑтартрӗ:

— Акă сана кравать, пурăн, тархасшăн, ачасем çук пирĕн, никам кансĕрлекен те пулмасть.

Пÿлĕмĕ таса. Чÿречисем иккĕшĕ кăнтăралла, иккĕшĕ хĕвелтухăçнелле, дюнăсем çинелле, пăхаççĕ.

Тепĕр кун эпĕ контура ĕçсемпе паллашма кайрăм. Пĕрьевĕрлĕ кичем пурнăç пуçланчĕ. Ялта арçынни те, хĕрарăмĕ те эстонла çеç пуплеççĕ. Ĕçре тăлмач урлă калаçма тивет. Эстон чĕлхине вĕренме ĕмĕтленсе пĕринпе çыхлантăм, вăл, эсрел, мана веçех намăс сăмахсем вĕрентсе тултарнă. Пĕр сăмахне çеç каларăм, намăс сăмах та пулман-ха, «юратап» тени çеç пулнă, хĕрарăмсем çĕре пусса антарчĕç те ĕнсе хыçне, хĕве юр тултарса ячĕç, хăйсем вилес пек ахăлтатаççĕ.

Ют çĕре лекрĕн-тĕк, чĕлхине пĕлнисĕр пуçне, йăлийĕркине пĕлни те питĕ кирлĕ. Ахаллĕн темĕн те курса тăма пулать. Эстон пулăçисем, сăмахран, кайăк кăвакалне вĕлернĕшĕн хытă çилленеççĕ, çапла туни пысăк çылăх, теççĕ. Кăвакал тытнă çынна курсан, эстонец-пулăçă шурса-кăвакарса каять:

— Мĕн сана, пулă сахал-им, турă кайăкне вĕлеретĕн?! — кăшкăрса тăкать вăл. Çакăн хыççăн санпа урăх калаçма та, сывлăх сунма та пăрахать.

...Тĕнче вăрçи çак пĕчĕк утрав çинчи мăнаçлă хырлăхсене те килсе пăлхатрĕ. Пĕрин хыççăн тепри, ĕмĕрхи хырсем кĕрслетсе ÿкеççĕ, чул сăртсене сирпĕтнĕ сасă тупăсем пенĕ пек кĕрлесе тăрать. Чул форт, шоссе тунă çĕре каять. Барон çĕнĕрен те çĕнĕ лавсем хăвала-хăвала килет. Вăрман, чул тиенĕ лавсем вĕçĕ-хĕррисĕр тăсăлаççĕ.

Сĕрекесĕр чухăн пулăçсем çемйи-çемйипе стройкăра ĕçлеççĕ. Хĕрсем вĕтлĕх вăрман иртеççĕ. Кăклана тĕмсем айĕнче — çур метр хулăнăш торф. Ăна сирсен, пăхатăн та, шăкăрах яп-яка та çавраска чул выртать. Чулсем хушшинче ыйха путнă çара çерçисем нумай. Пĕррехинче бурильщиксене динамит, шнур, запалсем валеçсе патăм та хĕрсем патне пытăм. Вĕсем мана кăшкăра-кăшкăра, кула-кула кĕтсе илчĕç. Пурте хăйсем «пăх-ха, пăх-ха!» тесе çĕрелле кăтартаççĕ. Пăхрăм та — çĕрте темĕн чуль çара çерçи! Хĕрсем мана юр çине çĕклесе çапрĕç те ĕнсе хыçне çав çерçисене тултара пуçларĕç. Эпĕ çÿçеннипе тата йĕрĕннипе ниçта кайса кĕрейместĕр тапаланатăп. Мĕн кураттăм пулĕ малалла, пĕлместĕп, пĕр хĕрачи: «Начальник, начальник килет!» — тесе çухăрса ячĕ, пурте айккинелле тарса пĕтрĕç, хăвăртрах ĕçе пуçăнчĕç.

Барон пӗсехине касӑртса, никам ҫине те пӑхмасӑр, чӑнах та калама ҫук пысӑк начальник тейӗн, ман паталла утать:

— Хулӑпа купарчаран хӗртмелле вӗсене, хулӑпа, эп сире хӗрсемпе вылянӑшӑн ҫавӑн чухлӗ шалу тӳлетӗп-им?! — аякранах кӑшкӑрса килет вӑл.— Вӗсемпе хивререх пулас пулать,— тет ман пата ҫитсе, вара хӑлхаран ҫеҫ: — Ахаллӗн ху та сисмӗн, Кивӗ Ял кӗрӳшӗ пулса та тӑрӑн,— тесе хурать. Иксӗмӗр те ахӑлтатса кулатпӑр...

Пин те тӑхӑрҫӗр вунулттӑмӗш ҫулхи ҫуркунне эпӗ сунара ҫӳреме ярӑнтӑм. Сунара каймасӑр пӗр кун ирттерместӗм. Ҫыран хӗрринчи пӗчӗк кӳлӗ пеккисене кайӑк кӑвакалӗсем пӗлӗт пек килсе хупларӗҫ, ӗшнесенче ӑсан кӗтӗвӗсем ҫӳреҫҫӗ. Ҫӗрле ҫывӑхах пытанса тӑратӑн та пӗр-пӗринпе ҫапӑҫакан ӑсан аҫисен ушкӑнӗ ҫине тӗллесе перетӗн, иккӗ-виҫҫӗ перҫе вунна яхӑн ӑсан тытатӑн. Ҫыран хӗрринче кайӑк-кӗшӗк сасси шавласа-кӗрлесе тӑрать. Сунарҫӑсем пӗрне-пӗри хӑлхаран кӑшкӑрса та аран ҫеҫ илттереҫҫӗ.

Барон ӗҫлекенсем патне кӗтмен-туман ҫӗртен килсе тухма юратать. Зинӑпа кантуртан тухать те, яла кӗмесӗр, вӑрмана анать, ик-виҫӗ сухрӑм ҫуранах утаҫҫӗ. Вара, тӗмсем хыҫне пытанса, ӗҫ мӗнле пынине сӑнаса тӑраҫҫӗ. Рабочисене мӗн чуль ӗҫ тунӑшӑн мар, кашни куншӑн тӳлетчӗҫ, ҫавна пула нумайӑшӗ ӗҫлес вырӑнне сӑмах ҫапса ларма юратарах паратчӗҫ. Ҫавӑн пек ҫитменлӗхсене асӑрхасан, Барон хӑйӗн майрипе кантура таврӑнатчӗ те аслатиллӗ тӑвӑл кӑларатчӗ. Пӗррехинче эпӗ ӑна ҫакӑншӑн ӳпкелеме пуҫларӑм: «Эсӗ пӗртте пиччӳ пек мар, халӑха хисеплеме пӗлместӗн»,— терӗм. Ҫапла каласан, вӑл пушшех те тарӑхса кайрӗ:

— Ҫав ӑҫтиҫук кахалсем халӑх-и? Жуликсем вӗсем, ним тумасӑрах укҫа хырса выртасшӑн. Намӑссӑрсем!

Эп, унпа килӗшмесӗр, каллех ӑна тапӑнатӑп:

— Кам валли крепость тӑватӑн эсӗ? Патшапа унӑн йыттисем валли. Вӑрҫӑ кама кирлӗ? Патшана, капиталистсемпе помещиксене. Мӗн тума кирлӗ вӑрҫӑ? Ҫӗнӗрен кӗрлесе килекен революцие юн ӑшне путарма.

Ҫакна хирӗҫ Барон, куҫне-пуҫне чаркаласа, ҫапла ответлерӗ:

— Тупӑннӑ политик, революционер! Патша валли мар, Раҫҫей валли тӑватӑп эпӗ, Раҫҫей тесе вара помещикпа капиталиста мар, хресченпе рабочие шутлатӑп.

Патшана кутран тапса сирпĕтсен, тарçисене хăваласа ярсан, çак фортсем, чикĕри крепоçсем тăшманран кама хӳтĕлеççĕ? Питĕре. Питĕрти рабочи класа. Раççей хапхине...

— Хăçан тапса сирпĕтĕç-ха вĕсене?

— Ан васка.

Çавăнпа пирĕн калаçу татăлать. Вара Барон, Зинине кантура пăрахса хăварса, сунара каять, приказ парсах мана хăйпе илет.

— Акă сана виçĕ патрон,— тет вăл çыран хĕрне çитсен,— мана виçĕ кăвакал илсе килсе паратăн.

Çыран хĕрринчи хăйăрпа пырса, эпĕ хăмăшсем хушшинче, залив пеккинче, кайăк кăвакалĕсем асăрхарăм.

— Ваше благороди, ав çав валунсем хыçне пытанса, çывăхарах кĕрĕр!..

— Мĕн тетĕн эс мана? Благороди? Парăп эп сана благороди, ăнлантăн-и?

— Ăнлантăм, ваше благороди!

— Çук, ним те ăнланмарăн, ухмах!

— Лараканнисене перĕр!

— Пыр, хăратса яр.

Çӳллĕ чулсенчен пăрăнса кăвакалсем патнех пытăм та хăратса ятăм. Аçапа ама кăвакал пăр! çеç çӳлелле вĕçсе хăпарчĕç. Барон иккĕ персе икĕ кăвакалне те лектерчĕ, пăшал кĕпçипе ăçтарах ӳкнине кăтартрĕ. Чĕркуç таран шыва кăвакалсем патне кĕтĕм, илсе тухсан, ама кăвакалне шеллесе:

— Кăна пемелле марччĕ,— терĕм.

— Ма?

— Çăмарти пур унăн.

— Эс ăçтан пĕлен, хыпаласа пăхрăн-и элле?

— Хыпаласа пăхрăм. Ача чух анне хур амисене хыпаласа пăхтаратчĕ.

«Ача чух», «анне» тенисене илтсен, Барон тĕксĕмленчĕ, калаçăва урăххи çине куçарчĕ:

— Аттуна хывса шывне тăк, ахаллĕн шăнса пăсăлатăн. Чим-ха, эсĕ мĕншĕн вăрăм кунчаллă атă туянмастăн, шурлăхра çӳремеллине?

— Кунти лавккара çук, хула — инçе.

— Хулана кайма юрамасть, ярса тытĕç...

Кăвакал урăх перес темерĕмĕр, шыв чăххисем шырама пуçларăмăр. Шыв чăххисем ăçта пуррине эпĕ аван пĕлеттĕм: сăрта хăпарас пулать, унта пысăках мар кӳлĕ çуталса выртать, кӳлĕ хĕрринче шыв чăххисем тем чух-

лех. Сăрчĕ самаях чăнкă, çулпа çаврăнса кайма тивет.

— Тискер кайăк иртеймен вырăнтан сунарçă иртетех,— терĕ Барон паттăррăн. Вара эпир тӳррĕн кайма шутларăмăр. Сăрта талккăшĕпех тĕрлĕ пысăкăшлĕ шултра чулсем сырса илнĕ. Хушшисенче хырсем ӳсеççĕ. Хăпарма йывăррине туйса, атăсене хыврăм та çарран, чул çинчен чул çине сике-сике, çӳлелле улăхса кайрăм. Барон часах ывăнчĕ те сăрта вăрçа пуçларĕ. Пĕчĕк кӳлĕ патне çитнĕ çĕре йĕп-йĕпе тара ӳкрĕ, хăй çапах тĕл перет, шуйттан, кашни пемессерен пĕр шыв чăххи тытать. Эпĕ те ларакан икĕ чăххине персе илтĕм.

Хĕрӳ ĕçре тата сунарта сисĕнмесĕрех çу иртсе кайрĕ, хĕл çитрĕ. Хĕлле вăрманта калама çук шăп. Пĕр улатакка çеç хăйĕн кулленхи ĕçне тăвать: сăмсипе йывăçа таккать, хăйне валли апат шырать. Асансем, пĕсехисене хурăн папки тултарса, юр çине персе анаççĕ те юр ăшне кĕрсе çывраççĕ. Мулкач-тăр, мĕн-тĕр ыткăнса иртсен, хăраса вăранса каяççĕ, пăрлатса вĕçсе хăпараççĕ. Тăмансем пуçланчĕç, ик метртан çынна уйăрса илейместĕн. Çакăн пек çанталăкра ĕçе тухасси пирки калаçмалли те çук. Эрне хыççăн эрне, сисместĕн те, уйăх та пĕрин хыççăн тепри иртет. Пĕр тăманлă кун эпĕ хăнана кайса килме шутларăм. Кӳршĕ ялти Яак ятлă рабочи мана çине-çинех хăнана чĕнетчĕ. Вăл, питĕ хаваслăскер, шӳтлеме юрататчĕ, пире эстонла калаçма хăнăхтаратчĕ. «Пыр-ха ман пата хăнана, словарь парнелесе паратăп, çуллана пирĕнле шакăртаттарса калаçакан пулатăн,— тетчĕ.— Пирĕн лавкки те пысăкрах, таварĕ те ытларах, сирĕн Кив Ялти пек мар...»

Çил — нордчĕ, çула май. Йĕлтĕр лайăх шăвать. Пулăçсен ялĕ çыран хĕрринчех иккен. Хуçи мана ял вĕçне тухсах кĕтсе илчĕ. Çурчĕ ун ултă кĕтеслĕ, тимĕр витнĕскер. Начар пурăнмасть-мĕн Яак. Арăмĕ те, хăй те хулалла тумланнă. Сĕтел çине темĕн тĕрлĕ пулă тухса ларчĕ. Эпĕ пĕр кĕленче коньяк кăлартăм. Çакна курсан, Яак савăнăçлăн: «Пурнатпăр, шуйттан илесшĕ!» — тесе кăшкăрса ячĕ. Пĕр черкке ĕçрĕм те урăх ĕçесшĕн пулмарăм, чей тултарнă стакана ярса тытрăм. Яакпа арăмĕ мана ăна çи те, кăна çи тесе кăна лараççĕ. Епле йăлăнса ыйтсан та, урăх тумлам та ĕçмерĕм, пыр ыратни çине йăвантартăм, тĕрĕссипе вара ӳсĕрпе темтепĕр пакăлтатса парасран шиклентĕм. Хам шухăша эп сăмахпах персе ятăм, «шан-ха çынна» терĕм пулмалла, Яак тĕлĕнсе куçне чарса пăрахрĕ: «Эс чăваш-и?» — ыйтрĕ вăл таса

чăваш чĕлхипе. Эпĕ те Яак пекех антраса кайрăм: «Чăваш»,— терĕм хам мĕн каланине хам та ăнланмасăр. Вара иксĕмĕр те ăсран тайăлнă çынсем пек ахăрса кулма тытăнтăмăр. Пĕрне-пĕри ыталаса илсе кулатпăр.

— Апла пулсан, эсĕ Якку пуль?

— Якку.

— Ăçтарахрисем?

— Самар енчисем.

— Эсĕ вара?

— Чистай уесĕсем. Чулман Атăл çинчен.

Пирĕнпе пĕрле Якку арăмĕ те кулать: «Вырăсла калаçăр-ха, ним те ăнланмастăп»,— тет. Эпĕ ун енне пуç сĕлтетĕп:

— Ку майра-им?

— Эстони майри, вырăсла самаях ăнланать.

— Эп вĕт санпа, шуйттанпа, çак куна çити тăлмач урлă калаçнă, ма хальччен пытартăн?

— Сăлтавĕсем пулнă. Эс ĕç-ха, кун пирки каярахпа калаçăпăр.

— Çук, халех калаçар, вара ĕçсе паратăп.

Эпĕ, чăнах та, коньяк тултарнă черккене тĕппипех ĕçсе ятăм.

— Тавай, пуçла, кĕтетĕп.

— Эп сана малтан вырăс пуль, тенĕ, анчах хăш енчисем иккенне пĕлмен. Пĕр çын каланă тăрăх...

— Ну, кун пирки, ху каларăшле, кайран... Епле çакăнта килсе çаклантăн, каласа кăтарт?

— Таркăн моряк эпĕ, патша çакса хурасран çиччĕмĕш çулта тарса килтĕм. Питĕрте восстани турăмăр: шпионсемпе тĕрлĕ провокаторсем, рабочи тумне тумланнăскерсем, пире, çамрăксене, эрех лавккисем, нўхрепсем çĕмĕрме хĕтĕртсе ертсе кайрĕç. Эпир, айвансем, çавна сисмен. Нумай моряк хĕн курчĕ çавăн чух, чылайăшне судсăр-мĕнсĕрех çака-çака хучĕç. Эпĕ çулталăка яхăн пĕр ялта пытанса пурăнтăм, пытанса пурăнма май пĕтсен, çĕтĕк-çурăк тум тумлантăм та пулăçсемпе пĕрле çакăнта çитсе ўкрĕм. Тем те курма тўр килчĕ; килсĕр-çуртсăр йытта ыйткалакан та пулин тапса сирпĕтме хăтланать. Малтан тулăхрах пурнакан пулăçсем патĕнче тарçăра пурăнтăм, каярахпа çак çурта киле кĕтĕм.

Якку арăмĕ ачи патне тепĕр пўлĕме тухрĕ. Якку малалла каларĕ:

— Унăн малтанхи упăшки пулла кайсан путса вилнĕ,— терĕ арăмĕ тухнă енне кăтартса.— Кунта сахал

çын хăй вилĕмĕпе вилет, нумайăшĕ яланлăха канма тинĕс тĕпне каяççĕ. Çыннисем ку ялта аван, хăнăхрĕç мана, влаçсене пĕлтермерĕç, арăма пула мана та эстони çынни теççĕ.

— Тăван çĕрелле чун туртмасть-и?

— Ютра йыттăн та тăрасси килмест. Малтан питĕ тунсăхлаттăм. Çемьеленсен, çăмăлрах пула пуçларĕ. Халĕ, авă, ывăл ÿсет, çичĕ çулта. Питĕрте мĕн пулса иртетши, пĕлместĕн-и?

Питĕрте мĕн пулса иртнине Барон час-часах каласа кăтартатчĕ-ха мана. Çавăнпа та эпĕ татсах каларăм:

— Питĕрте паян тесен паян революци пулма пултарать, Якку.

— Пире пиллĕкмĕш çулти пек революци кирлĕ, ун чухнехи йăнăшсене çеç тăвас марччĕ. Рабочи класпа хресчене, салтаксене пĕрле пĕтĕçтермелле парти ялавĕ айне.

— Эс, Якку, политикăна питĕ аван ăнланатăн иккен?

— Атту эс ăнланмастăн пуль...

Якку арăмĕпе ывăлĕ тахçанах тĕлĕк кура-кура çывăраççĕ ĕнтĕ. Эпир çаплах пĕр-пĕрин çинчен ыйтса пĕлетпĕр. Çутăлас умĕн çеç, лăпланса, çывăрма выртрăмăр.

Хăнаран таврăнсан темиçе кунтан тăман лăпланчĕ, çанталăк уяртрĕ. Стройкăна эпĕ яланхи çулпа мар, вăрманпа кайрăм. Сăрта хăпарса уçланка тухсан, хĕрарăм макăрнă сасă илтĕнчĕ. Пăхатăп та, сарай хыçĕнче вăрман хуçи Тоомас кулак пĕр хĕре пушăпа хĕнет: сулахай аллипе вăрăм сарă çивĕтĕнчен ярса тытнă, сылтăммипе ислетет анчах мĕскĕне. Çывăхрах — пĕр çĕклем хăрăк турат çыххи. Кулак мĕншĕн урса кайнине эпĕ тÿрех ăнланса илтĕм. Хĕрачи палланăскерех, ятне çеç астăваймастăп. Ман çине çав тери йăлăнса пăхать, хăй тĕллĕн ниепле те çăлăнса тараймасть. Эп чупса пытăм та старике тĕксе ятăм, хĕре çурăмĕнчен лăпкаса лăплантаралăплантара каска çине лартрăм. Старик çĕртен пурттине илчĕ те куçне хăрушшăн вылятса хирĕлме тытăнчĕ:

— Ку йĕпе сăмса вырăс мар, сан ĕçÿ те çук ун çумĕнче,— кăшкăрчĕ вăл,— ут ху çулупа!

Сых ятне эп те сарай çумĕнче тăракан лума ярса илтĕм:

— Эп сана кăтартăп «вырăс мар». Сан вăрману вунă квадратлă километр çинче кашласа ларать, йытă, пĕр çĕклем хăрăк туратшăн çынна пушăпа хĕнетĕн! Çухал куç умĕнчен халех!

Старик тата темĕн кăшкăрашрĕ, велереосипе хăратрĕ пулмалла, пурттине пиçиххи хушшине хĕстерчĕ те, хăрăк турата çĕклесе, вăрмана кĕрсе çухалчĕ.

Хĕрача Риййна ятлă, пĕр вунсаккăрсенче пуль. Куçĕ кăн-кăвак, çӳçĕ шур пурçăн пек хумлăн-хумлăн юхса, йăлтăраса тăрать. Çӳллĕ кăкăрлă та çинçе пилĕклĕскер, яланах хавасла çӳретчĕ вăл ĕçре, халĕ акă куççуль юхтарса ларать. Куççуль шăрçисем чечен, таса, шурă пичĕ тăрăх юр çине куса-куса анаççĕ. Халĕ ĕнтĕ вăл старик пушăпа çапса ыраттарнăран та мар, эпĕ çакна курнипе вăтанса йĕрет. Эпĕ таса тутăрпа ун пит-куçне шăлса типĕтрĕм. Çав хушăра хама пĕр япала аса килчĕ: кăнма çыхса тунă çакмалли вырăнта эп канса выртаттăм; çак хĕрача систермесĕр пынă та çаккине салтса янă; эп çĕре кĕрслетсе антăм; хĕрача кула-кула сывлайми пулса вăрмана тарчĕ. Çав пуçтах та ашкăнчăкскер халь мĕскĕннĕн йĕрсе ларать. Эпĕ пĕлнĕ-пĕлмен чĕлхемпе хĕре лăплантарма тăрăшрăм. Сăмахпа мар, ĕçпе пулăшмаллине ăнланса, вăрмана кĕтĕм те тем чул хăрăк турат пуçтарса тухса ун умне купаласа хутăм, пирус чĕртсе купа çине лартăм, шухăша путрăм. Риййна инçех те мар ларакан хыр çумне кайса тăчĕ, ăна икĕ аллипе те ыталаса ман çине куçне илмесĕр пăха пуçларĕ.

— Халĕ кай ĕнтĕ,— терĕ вăл шăппăн.— Тавтапуç сана, ырă йĕкĕт. Эсĕ питĕ лайăх вырăс каччи, ырă кăмăллă господин.

— Господин мар эпĕ, Риййна, сан пекех ĕçлекен çын.

Эпĕ хĕрача патне пытăм, алла хулпуççийĕ çине хурса, кăвак куçĕнчен пăха пуçларăм. Вăл, мана ыталаса илсе, питрен хытă-хытă чуптурĕ. Çавăнтах йăл кулса ярса: «Эпĕ сана питĕ юрататăп»,— терĕ.

Вут-шанка пĕр çĕклем туса çыхрăмăр. Çĕклеме йăттарса ятăм та, хĕр хăй килĕ патне çитиччен йывăç хыçĕнчен пăхса тăтăм. Килĕ умне çитсен, Риййна тутрине салтса тахçанччен ман енне сĕлтсе тăчĕ...

Икĕ çул пурăнтăм эпĕ патша йыттисенчен пытанса çав утрав çинче. Юлашкинчен тахçантанпах кĕтнĕ хавасла хыпар çитрĕ. Хыпарне Барон, Вячеслав Петрович Ларионов большевик, темле маяк çинчен шыв айĕнчи кабель тăрăх пĕлтерчĕ:

— Петроградра революци! — терĕ вăл таçтан, леш тĕнчерен, аран çеç илтĕнекен сасăпа.— Патшапа министрĕсене вырăнтан кăларса сирпĕтнĕ, анчах та влаçа буржуази ярса илме хăтланать. Эпĕ утрав çине текех

пыраймастăп, вăхăт çук, эсĕ унта, Кирюш тăванăм, хуçалăха упра, вăл халĕ хамăрăн ĕнтĕ, халăхăн! Анлантăн-и?

— Анлантăм! — кăшкăртăм эпĕ пĕтĕм вăйран.—Сывлăхăра упрăр, асăрхануллăрах пулăр.

Барон: «Ху та асăрхануллă пул»,— терĕ те трубкине хучĕ. Çавăнпа пĕтрĕ калаçу. Урăх тепĕр кун та, эрнерен те, уйăхран та унтан хыпар-хăнар пулмарĕ, кайрĕ те çухалчĕ çын. Кунсем Питĕрте чăнах та питĕ хĕрӳ пулнине эпĕ каярахпа пĕлтĕм, анчах та Вячеслав Петрович Ларионова урăх тĕл пулса пулмарĕ. Петроградра вăл нумаях пурăнман, ăна фронта, салтаксем хушшине, вăрттăн ĕçлеме янă.

Хуçалăхпа аппаланса апрель те çитсе тăчĕ. Пĕррс çĕрле пĕр юлташпа çыран çинче тăратпăр. Сылтăм енче тинĕсре çутăсем йышлăн курăнса кайрĕç.

— Пирĕн карапсем Российăналла таврăнаççĕ пулмалла,— терĕ юлташ.

Ир енне эскадра утравăн хĕвеланăç вĕçĕпе танлашрĕ. Чăнах хамăр карапсем-ши тесе, эпир çывăхранах кайса пăхма шутларăмăр. Юлташ икĕ мăшăр йĕлтĕр тупса килчĕ. Аяла чупса анса йĕлтĕрсем тăхăнтăмăр та пăр çине кĕтĕмĕр. Эскадра патне çывхарсан, юлташ:

— Карапсем пулаççĕ-и кусем, мăйăр хупписем,—тесе мăкăртатать. Малта пăрçĕмĕрен шăвать. Ун хыçĕнчен пăрахутсем, транспортсем пыраççĕ, чăн карапсем çук. Вĕсене пăхса тăрса эпир асăрхаман та: пире шыв иле пуçланă. Йĕлтĕрпе хытă килнĕ чух пăр катăлса ĕлкĕреймен, авăнса çеç пынă. Йĕлтĕрсем шӳнипе хуллен лыма тытăнсан, пăр путма, тюлень шăтăкĕсенчен шыв фонтан пек сирпĕнме тапратрĕ. Урăх шалалла кĕме юрамасть. Эпир çĕлĕксене хывса сулларăмăр, морякссем пире сăмсасăр карттусĕсемпе хăйăвĕсене вĕлкĕштерсе сĕлтеççĕ.

Çыран хĕррисем темиçе кунтан пăртан тасалчĕç. Пĕррехинче эпĕ юлташ сăрт çинче тем кăшкăрашса аллисене сулкаланине куртăм.

— Мĕн çухăрашатăн?

— Кил-ха, кил хăвăртрах, мĕн шăвать çавăнта? — кăтартрĕ вăл тинĕселле. Эпĕ те вăл кăтартнă еннелле пăха пуçларăм. Тинĕсре, чăнах та, пирĕн утрав патнелле хура пăнчă шăвать, майĕпенех çывăхарса пырать. Эпир йăпăр-япăрах сулă çине анса тăтăмăр та шалçасемпе авăса-авăса пăнча хирĕç кайрăмăр. Çурçĕртен йăваш çил вĕрет, вăл килекен кимме (пăнчă çывхарнăçем кимĕ пулса тăчĕ) çырантан хĕвелтухăçнелле пăра пуçларĕ. Шал-

çасемпе тaçтах каяймăн. Эпир шухăша путрăмăр. Çав вăхăтра çил хĕвеланăçнелле çаврăнчĕ те, кимĕ пирĕн сулă патне шăппăн, васкамасăр юхса пычĕ. Кимĕре çамрăк çын месерле выртать. Питне карттуспа хупланă. Тинĕс офицерĕ, анчах та пакунĕ те, кокарди те çук. Аллисем çапса хуçнă пек усăнса тăраççĕ. Сулахай кăкăрĕнчен юн юхать. Ал тымарне тытса пăхрăмăр, тапмасть. Вилнĕ. Хальрех çеç чунĕ тухнă пулас, сивĕнме те ĕлкĕреймен-ха. Карттусне пичĕ çинчен илтĕм те хăранипе тата тĕлĕннипе шартах сикрĕм:

— Ехрем! Пуян Кантратти Ехремĕ...

Ман улшăнса кайнă сăна курса, тем мăкăртатнинчен хытă тĕлĕнсе, юлташ шак хытса тăчĕ.

— Мĕн, паллана çын-им? — шăппăн ыйтрĕ вăл Ехреме çырана илсе тухнă май.

— Паллана çын, кӳршĕ ялсем...

— Пулать вĕт пурнăçра. Çынни йĕркеллĕ çынахчĕ-и?

— Йывăр тăпри çăмăл пултăр та, йĕксĕкчĕ. Çавна пула чут çеç трибунала çакланаттăм.

Эп каланине çирĕплетме тенĕ пекех, юлташ Ехрем кĕсйинчен хут туртса кăларчĕ: «Йытта йытă вилĕмĕ»,— тенĕ унта. Анчах та эпир Ехреме йытта пытарнă пек мар, этеме пытарнă пекех тирпейлесе пытартăмăр. Тăпри çине хĕрес лартса, кам вилтăприйĕ иккенне палăртса çырса хутăмăр. Киммине, малашне питĕ кирлĕ пуласса пĕлсе, шанчăклă вырăна пытартăмăр.

## 5

Чипер утса пынă çĕртенех Кириле мучи тăп чарăнчĕ:

— Акă вăл Павăл хăртни,— терĕ,— çакăнтан пуçланать те Эльмук юманĕ тĕлĕнче пĕтет. Юман патĕнчен, кĕтесрен, вăрманалла çул кĕрсе каятчĕ, атте вăрман пăхма ялан çав çулпа çӳретчĕ. Эльмук юманĕ тесе Павăл хăртни кĕтессинче вăрман хĕрринче акăш-макăш сарăлса ларакан çӳллĕ те хулăм юмана калаççĕ. Мĕншĕн ăна пирĕн мăн асатте юманĕ тенĕ, калама пултараймастăп. Павăл хăртни тени пĕр йышлă çемьеллĕ чăваш тахçан авал вăрман хăртса тырă акма хăтлансан тухса кайнă, теççĕ. Хăртайнă-и вăрманне, çук-и, ăна эпир пĕлместпĕр, ячĕ вара юлнă, хальччен упранать.

Хумкка, урăхла каласан — эпĕ, кун çинчен ĕлĕк те илткеленĕ. Вăл старик ашшĕ мĕнле çакăнса вилнине тĕплĕнрех пĕлесшĕн: шӳтле япала-им, этем хуйхăпа ça-

кăнса вилнĕ, хăрушă япала. Хăвна ху çапла харам тăвасси мĕн тери асаплă пуль, мĕн тери тертленсе, кўтсе çитнĕ пуль çын. Анчах та Кирилерен нимĕн те хăйса ыйтаймарĕ, астуса илсен хăех каласа кăтартĕ, терĕ.

Кириле юман патне çитсен ассăн сывласа ячĕ çеç. «Çак тĕлте»,— терĕ те урăх ним те шарламарĕ. Пăхса тăрсан-тăрсан тин:

— Хăйĕн те шалчи тулчĕ,— тесе хучĕ.

— Камăн, Кириле мучи?

— Камăн пултăр, Пуян Кантраттин. Ав лере, ик вăрман хушшинче, эсремет çўллĕш юман хĕрес кăнтарса тăрать, çур ĕмĕр иртрĕ, халĕ те çĕрсе ўкмест, йĕксĕк. Ыр çынсен йывăçран мар, тимĕртен тунисем çĕрсе татăлчĕç пуль, ку çаплах ик вăрман хушшинчи уçлăхра тĕнчене сехĕрлентерсе тăрать.

— Çавă вара Кантратти тăприйĕ-и вăл?

— Çавăн пулмасăр, камăн пултăр.

— Пĕр пупа пытарнă теместчĕç-и-ха унта?

— Нимле пуп та мар, Пуян Кантратти выртать.

Темшĕн Кириле мучин кăмăлĕ пăсăлчĕ. Пĕр хушă эпир ним чĕнмесĕрех утрăмăр. Кўлĕ хĕрнелле анатпăр. Тĕнче тўлеккĕн канать.

— Хăй кунта, ывăлĕ лере апла? — терĕм эп асăрхануллăн, Кириле мучи паçăрхи калава малалла тăсасса ĕненсе.

— Çапла... Мула хапсăнни пăсать çынна. Юлашкинчен тĕп тăвать.

— Мучи, малалла каласа кăтарт-ха, тата мĕн-мĕн куртăн, епле майпа хăтăлса тухрăн утрав çинчен?

— Халь те йăлăхмарăн-и-ха итлесе?

— Йăлăхмарăм.

— Тоомас кулак хăйне кўрентернине час манакан йышши пулмарĕ. Вăл ман хыçранах йĕрлесе çўренине эпĕ аван сисеттĕм. Пĕр вăхăт Яак (Якку) патĕнче пурăнса пăхрăм. Ман пирки ăна та инкек пулма пултарать: тытĕç те çуртне вут тĕртсе çунтарĕç, ăçта кайса кĕрĕ вара хăй те çын патне киле кĕрсе пурăнаканскер, ĕмĕр тăршшĕпе мана ылханса пурăнĕ. Çакна шута илсе, эпĕ строительствăн ытти работникĕсемпе пĕрле кантуртах пурăнма шут тытрăм. Пĕррехинче, ирпе-ирех, пĕр вăхăтрах кантăкран та, алăкран та килсе шаккарĕç. Эпир пурте сиксе тăтăмăр, пĕр-пĕрин çине шиклĕн пăха-пăха хăвăрт тумланатпăр. Тата хытăрах шаккарĕç. Пуринчен ытла стройкăна кальрех çеç килнĕ теçетник сехĕрленсе ўкрĕ.

Сиксе чӗтренипе урисене ниепле шăлавар пӗҫҫине чикеймест. Кӗтмен хăнасене хирӗҫ юлташ тухрӗ, эпӗ телефон патне лартăм. Алăк урлă мана ыйтаççӗ. Юлташ вӗсене темӗн ăнлантарать, кунта çук, кӳршӗ яла кайнă, тет пулас. Лешсем ӗненмеççӗ, пӳрте кӗртме ыйтаççӗ. Юлташăм кулак хӳрешкисемпе алăк витӗр калаçнă хушăра эпӗ сăнав вышкипе çыхăнтăм. Унтан самантрах çичӗ çын хашкаса чупса çитрӗç, кашни икшер винтовка, темиçешер патронташ йăтнă. Тоомас ушкăнне моряксем чăлпар! салатса, хăваласа ячӗç, пире хӗçпăшаллантарчӗç. Çав каçах эпӗ лару-тăру пирки Яккупа ларса канашларăм.

— Малтан материк çинче мӗн пулса иртнине тӗплӗн пӗлмелле. Вара эпӗ сана ăсатса ярăп,— терӗ вăл лăпкăн.— Çак кунсенче Выборга кайса килетӗп... Эсӗ унччен вăрмана тар, пытанса пурăн. Кӗçӗр лупас çине, утă хуракан çӗре шала, кӗрсе вырт, кăçал çур ăшă килчӗ, кӗрӗксемпе витӗн те ним шухăшламасăр çывăр.

Ирхине çынсем тăриччен эпир хура вăрман витӗр чуллă хысак патне кайрăмăр. Хысак çине хăпарса пӗр сарлака та лаптак чул айӗнчен пӗчӗкрех чулӗсене кăлартăмăр та тасатса самаях ирӗк ырăн турăмăр, иккӗн-виççӗн кӗрсе ура çинче çӳремелӗхех. Чул купаласа алăк пекки хăвартăмăр. Унта мӗн те пулин карсан, аванах хӳшӗ пулать. Ăшă сыхлама шала, стена çумне те, çӗре те, хăмăш купаларăмăр. Туса пӗтертӗмӗр те, «мӗнрен япăх çурт?» тесе савăнатпăр.

— Хăнăхиччен сулхăнрах пулӗ те, ăшă япаласем килсе парăп-ха сана,—тет Якку.—Сăртсемпе уçланкăсем юртан тасалнă, йӗр тăрăх халь сана тупаяс çук. Хăрушлăх сиксе тухсан, кунтан тарма та çăмăл. Кичем пуласран, килсех çӳрӗпӗр, хам та, ыттисем те килӗç... Асту, халлӗхе вут ан чӗрт-ха.

Якку кайсан, пӗрер сехет çӳрекелерӗм те кăнтăрла ăшă чух çывăрса илем, çӗрле сивӗре çыврасси пулас çук тесе, «çуртăма» кӗтӗм, чӗркенсе выртса ыйха путрăм. Мӗн чухлӗ çывăрнă, пӗлместӗп, чул катăкӗ шаклатса ӳкнӗ сасăпа вăранса кайрăм, винтовкăма ярса тытрăм. Пуçа çӗклесе пăхатăп, нимӗн те курăнмасть. Тепӗр чул катăкӗ кусса анчӗ те юр çине пырса тăрăнчӗ. Унтан кашăртатса темӗн шуни илтӗнчӗ. Эпӗ, хӳшӗрен пуçа кăларсан, çӳлте, хысакăн чи тăрринче, хӗр урисене сулласа ларнине куртăм. Мана курсан, вăл кулса ячӗ те, чул çинчен чул çине сике-сике, хӳшӗ патне анса тăчӗ. Рийна

çăкăр, çĕрулми, сĕт, пулă илсе килнĕ, мана хăналама пуçларĕ:

— Çи, ĕç,— терĕ пĕрре эстонла, тепре вырăсла. Хăй пысăк чул çине урисене усса ларчĕ, салака текен пулла, пуçĕсене татса таçта çити ывăта-ывăта, юратсах çиме тытăнчĕ. Апат хыççăн манăн чул хӳшше пуçне чиксе пăхрĕ те:

— Кунта сана питĕ кичем пуль? — терĕ. Вăл тата темĕн каларĕ, эпĕ, эстонла лайăххах ăнланманнипе, пуçа пăркаларăм. Рийна ахăлтатса кулса ячĕ.

— Эпĕ,— терĕ хăй çине кăтартса,— эсĕ,— халĕ ĕнтĕ ман çине кăтартрĕ,— хорошо, лайăх.— Шĕвĕр пӳрнине çӳлелле тăратрĕ:— Пĕччен — начар.

Эпĕ тинех ăнлантăм: иккĕн лайăх, пĕччен начар, тет иккен. Халĕ ĕнтĕ иксĕмĕр те кулатпăр. Питĕ çамрăк пулнă çав, вунсаккăр-вунтăххăрсенче кăначчĕ. Кăшт савăнмалли тупăнсанах ача пек савăннă, малашнехи пирки ытлашши пуç çĕмĕрсе ларасах та темен, вăхăчĕ, самани хăрушă пулин те, тĕнче çине çамрăк куçпа, çутă куçпа пăхнă. Пурнăçăм утрав çинче йывăрччĕ, шывĕ пурпĕр халĕ те, ав, çур ĕмĕр иртсен те, çуттăн курăнать, пуласлăхăм — тĕтреллĕччĕ, унта ирттернĕ икĕ çул паян кунччен те асран тухмасть.

Рийна сывăхарах пырса ларчĕ. Ăнланмалла мар темле сăмах калать те кулать хăй, унтан çумах ларчĕ, пуçне ман чĕркуççи çине хучĕ. Ăна эп çӳçĕнчен шăлса ачашлатăп. Хĕрача сасартăк макăрса ячĕ те мана мăйран ыталаса илчĕ:

— Эп сана юрататăп, сансăр пурнаймастăп, вилетĕп,— тет.

— Эпĕ те юрататăп сана, Рийна.

— Юрататăп, юрататăп, юрататăп...

Чунран юратнипе хамăн та йĕрес килет. Икĕ тăнлавĕнчен ик алăпа çупăрласа тытса тутинчен хытă-хытă чуптăватăп. Рийна хăвăрт-хăвăрт сывлать, куçне хупнă вăл, мăйăмран уртăннă. Кăкăрăма вут хыпрĕ, пирвайхи хут юратнăскер, каçченех Рийнăна çупăрласа, пĕчĕк ачана ачашланă пек ачашласа лартăм. Тĕттĕм пуличченех кăвак тинĕселле пăхса, тăрă шыв хĕрринче, çутă савăнăçпа телей ытамĕнче, тарăн шухăш шухăшларăм: «Хальччен эпĕ тăр-пĕчченччĕ, килсĕр-çуртсăр, тăван çĕршывсăр, таçти ют çĕрте пытанса пурăнакан таркăн этемччĕ. Паян вара, акă, юрату тупрăм, çамрăк чун, ир ватăлса сарăхма тытăннăскер, çĕнĕрен ешерсе, чечекленсе кайрĕ, усăн-

нă çунат юсанчĕ, çĕнĕ вăй илчĕ. Тăван çĕршыва çухатнă-скер, тӳрех икĕ тăван çĕршыв чунăма кĕчĕ, çак утрав та калама çук сывăх та тăван пулса тăчĕ. Мĕншĕн тесен вăл Риййнăн тăван çĕрĕ. Риййна — эпĕ, эпĕ — Риййна. Çавăнпа та мана паян Риййна пурнакан утрав çеç мар, вăл пурăнакан пĕтĕм çут тĕнче ытармалла мар ырă».

Çапла шутларăм эпĕ ун чух вунтăххăрти хĕрӳ пуçпа. Çамрăк хунав яланах хĕвел патне туртăнать çав... Ман умра вĕçĕ-хĕррисĕр тинĕс сарăлса выртатчĕ, хыçра ман юрату тăшманĕсем, эпĕ ун хутне кĕнĕшĕн тавăрас тесе, пĕтĕм утрава ухтаратчĕç, мана тытса тинĕсе путарасшăнччĕ. Анчах эпĕ путмарăм, çăлăнса тухрăм, юратăва та пĕтме памарăм. Çак ĕçре мана ырă çынсем пулăшрĕç.

Қаçхи сулхăн çапсан, Риййна чул хӳшше кĕчĕ те икĕ çын валли вырăн сарчĕ. Эпĕ нумайччен çывăрса каяймарăм. Пирвайхи юрату мана тĕпренех пăлхатрĕ: «Этем тени пур çĕрте те пĕрех иккен вăл, çыннисем çеç пĕр пек мар: пĕрисем ырă, теприсем хаяр, виççĕмĕшĕсем—çăткăн. Мулшăн хыпса çунаканнисем пурте тенĕ пекех—юнĕçен, çынçиен тесен те йăнăш пулмĕ...»

— Ма çывăрмастăн? — терĕ ыйхăллă сасăпа Риййна.

— Тинĕселле пăхатăп.

— Ан пăх, çывăр.

— Тинĕс çинче сутăсем нумай. Манăн киле, Российйăна, каймалла. Эс манпа пыма килĕшетĕн-и, Риййна?

Хĕрача чылайччен хуравламарĕ, шухăшласа выртрĕ. Вара аран-аран çавăрттарса каларĕ:

— Тăвансемпе сывпуллашмасăр, пĕр япаласăр пăрахса кайма хăратăп. Малтан эсĕ кай, материкра мана кĕтсе тăр. Навигаци уçăлсан, залив урлă пулăçсемпе пĕрле каçатăп та, санпа тĕл пулатпăр.

Риййна ирхине ирех кайрĕ, каçпа килме пулчĕ, анчах килеймерĕ, шăматкун çеç, пиллĕкмĕш кунне, хашкаса чупса çитрĕ.

— Мунчаран тӳрех эпĕ,—терĕ вăл хашкама ниепле те чарăнаймасăр,— вăрманпа тăвагă çухрăм чупрăм. Апатçимĕç, кĕпе-йĕм илсе килтĕм, ку — апат, ку—кĕпе-йĕм,— çыххисене ума кăлара-кăлара лартрĕ Риййна.

— Ма час килеймерĕн?

— Тинĕсе тухрăмăр, пулă начар кĕрет.

— Эпĕ те пулă тытрăм, чул çинче ăшалаçа çирĕм.

— Ай-я-яй, ай-я-яй! — тĕлĕнет Риййна, кĕпе тӳмисене вĕçертме хушса: — Таса мар кĕпе-йĕмне хыв, тасине тăхăн. Çак çĕр шăтăкĕнчен тухма та вăхăт çитнĕ ĕнтĕ, тулта, ав, епле ăшă.

Хăй хут çине пăха-пăха илет, кирлĕ сăмахсем шырать, хут çинче çуккине аллисемпе кăтартса ăнлантарать. Ытарайманнипе, эпĕ ăна ыталаса илетĕп, çума пăчăртаса питĕнчен хытă-хытă чуптăватăп. Çак пилĕк кун хушшинче Рийна чылай улшăннă, хăйне мăн çын пекех çирĕп тыткалать.

Ирхине эпĕ сунара кайма пуçтарăнтăм. Рийна пуçне çĕклерĕ те: «Ăçта каян?» — тет. Винтовкăна кăтартатăп, каймалла, тетĕп.

— Пулă пĕтмен-ха, ытти апат-çимĕç те пур,—хирĕçлет вăл.

— Çав ăсансене тасатса хур,— кăтартатăп чул айне, хам тухса каятăп. Рийна хыçран кăшкăрать:

— Хăвăртрах таврăн!

...Пĕр уйăх ытла пытанса пурăнтăм эпĕ чуллă хысак çинчи шăтăкра. Юлашкинчен ырми-канми кĕтнĕ кун çитрĕ: каçхине хысак çине Якку пычĕ те хăй пĕр старикпе ман пирки калаçса татăлнине пĕлтерчĕ. Старик шхунăпа материке, пулă заводне, темиçе çĕр пичĕке салака тĕтĕмлеме турттарса каять-мĕн. Çула май мана та илме килĕшет. Укçине Якку тӳлесе те татнă иккен ĕнтĕ. «Санăн,— терĕ вăл,— лармалла та каймалла, çавă çеç юлнă. Шхуни утравăн тепĕр енче кĕтсе тăрать...»

Пытарса хунă кимме туртса кăлартăмăр. Рийна шухăшлăн та ерипен кимĕ çине япаласене вырнаçтарма пулăшать. Вырнаçтарса пĕтерсен, Рийна кимĕ сăмсине кĕрсе ларчĕ, пуçне уснă хăй, шухăша путнă, шывалла пăхать. Тинĕс шывĕ кимĕ айĕнче тăрă-тăрă, тĕпĕнче выртакан чулсем шăкăрах курăнаççĕ, тинĕсĕ хĕвел çинче çап-çутă çуталса выртать.

Эпĕ кимме тĕксе ятăм та хӳрене кĕрсе лартăм. Ĕçсем питĕ аван пыратчĕç пек ĕнтĕ, анчах, кĕтмен çĕртен, чуна ыраттармалла япала сиксе тухрĕ: Рийна куçĕсем куççульпе тулчĕç, вăл хăйсенле темĕн кăшкăрса ячĕ те, кимĕрен сиксе анса, çыран хĕрринелле чупрĕ, чул çине ларса питне аллисемпе хупларĕ, хытă татăлса йĕнипе унăн пĕтĕм ӳт-пĕвĕ чĕтрет. Эпĕ кимĕ хӳрине тытса пымалли тимĕре алăран ӳкертĕм. Кимме çыран хĕрне илсе пытăм та, Рийнăна, йăтса илсе, калле сăмсана лартрăм. Чĕлхе пĕлменни хытă кансĕрлерĕ мана çак самантра, савнине чунра мĕн пуррине йăлт каласа ăнлантараймарăм. Çĕр метр та каяймарăмăр, Рийна татах кимĕ çинчен сикрĕ, çыран хĕрне ишсе тухрĕ. Эпĕ ăна каллех лартасшăн пултăм, хальхинче вăл аллипе те урипе те çап-

каланчĕ, кимĕ çине ниепле те ларасшăн пулмарĕ. Яккăва Рийнăпа хăварма тиврĕ:

— Тархасшăн каласа ăнлантар-ха,— терĕм эпĕ Яккăва,— хĕрипраç шăпи — тупмалли юмах, хĕрсенчен пĕри те хăй ĕмĕрне кампа тата ăçта ирттересse тĕплĕн пĕлмест.

— Хăвала киммӳне хăвăртрах,— тавăрчĕ мана хирĕç Якку.— Курмастăн-им норд пуçланать, çулу çинче вара шыв айĕпе те, çийĕпе те мĕн чухлĕ чул. Çил тапрансан, киммӳне чул çине çавăрса çапса турпас тăвать! Рийнăна ӳкĕте кĕртетĕпех эпĕ. Хăвах ăнланма тивĕç: çăмăл-им тăван çĕршыва пăрахса кайма! Хамăртанах илер, мĕн тери тĕмсĕлетпĕр тăван çĕршывсăр!

Чуллă хысак тĕлĕпе иртнĕ чух эпĕ унпа çĕлĕке сĕлтсе, чĕрĕ çынпа сывпуллашнă пек сывпуллашрăм: «Тавтапуç сана,— терĕм,— таркăн çынна пытарса усранăшăн, тăшмансенчен хăтарнăшăн. Тавтапуç, хысак, тавтапуç, утрав. Кунта эпĕ пуçласа юрату мĕн иккенне пĕлтĕм...»

Текех çаврăнса пăха-пăха, сăмсах хыçне пăрăнтăм. Пуçра хамăн çав-çавах пĕр шухăш: «Ларĕ-ши ыран çак кимĕ çине Рийна?»

Каçхинене старик ман япаласене пулă пичĕкисене чиксе пĕтерчĕ, аялтан та, çиелтен те тăварланă типĕ пулăпа хупларĕ. Ку вăл лере пырса çитсен мана ярса ан тытчăр тесе çапла турĕ. Шхуна çинче эпĕ ахаль пулăç пулса пыратăп.

Ирхине çил кăнтăр-хĕвелтухăç енчен вĕрсе ячĕ. Шхуна çула тухма хатĕр: якăрне хăпартнă, парăссене сарнă.

— Кайрăмăр! — кăшкăрчĕ пулăç, рульне ярса тытса, майпен фарватерелле туха пуçларĕ. Эпĕ куçа илмесĕр утрав çине, чуллă хысак енне пăхатăп: курăнса каймĕши Рийнăн яштака та тăп-тăп кĕлетки, асăрхаймăп-ши унăн вĕл-вĕл шурă тутăрне?! Ик алăпа та канатсенчен çатăрласа тытса, утрав мĕн куçран çухаличчен хыçалалла тинкертĕм, анчах та — кăлăхах. Утрав хыçа тăрса юлчĕ, Рийна сырана тухмарĕ. Апла пулин те, эпĕ ăна хампа илсе кайрăм, чунра, чĕрере. Кунçулта тӳсме тивнĕ калама çук йывăр кунсенче вăл маншăн мĕн тери пысăк савăнăç, телей пулчĕ. Эпĕ çакна Рийнăпа уйрăлсан тата çивĕчрех туйса илтĕм, тарăнрах ăнлантăм.

Питĕре çитсенех мана тиф çулса антарчĕ. Те чуллă хысакра, нӳрĕ те сивĕ çĕр шăтăкĕнче, уйăх ытла темиçешер кун выçăхса пурăннăран, организм хавшаса çитнĕ,

те урăх сăлтавпа, эпĕ урампа пынă çĕртех йăванса кайнă та тăна çухатнă. Телее пула, шăпах ман тĕлпе матроссем иртсе пынă, моряк тумĕ тăхăннă çын ним хускалмасăр выртнине курсан, тăпах чарăннă, тĕрĕслесе пăхнă. Çамка вĕри çатма пек пĕçернĕ. «Тиф!» — тесе кăшкăрнă çамкана хыпаласа пăхаканни, вара лав тытса госпитале ăсаттарнă.

— Эх, хаклă юлташ,— каллĕ-маллĕ утнă май тарăхса калаçать Тухтăр,— медикаментсем çителĕклĕ пулсанччĕ пирĕн, пачах урăхла пăхăттăмăрччĕ чирлисене. Эсĕ те тахçанах сывалса тăнă пулăттăн, ыратнине те туймăттăн. Патшапа улпутсем ялан çичĕ ютран кӳнĕ имçамне, Раççейре кăларасси пирки шутламан та. Эс, тăванăм, ан кулян, тĕрĕслесе пăхрăмăр та — сывалмалла курнатăн. Организм текенни çамрăк санăн, кăвакарчăнăм.

Тухтăр пĕрмаях шантарать, хавхалантарать. Госпитальтен вăл пĕрре те каймасть темелле. Тулли кĕлеткеллĕскер, сăнĕпе лăпкă вăл, кăмăлĕ уçă та ырă, куçĕсем çутă. Тухтăр иртен пуçласа каçчен ывăнма пĕлмесĕр ĕçлет.

Госпитальтен сывалса тухсан, урамра «Листок правды» текен хаçат номерĕ тупрăм та, çуллахи çанталăк ытла та ырă пулнипе киленсе, пĕр сквера канма лартăм. Хаçачĕ вăрттăн тухнă иккен, «Правда» редакцине юнкерсем аркатса тăксан çак ятпа кăларнă. Хаçат пăхкаласа кăшт каннă хыççăн, туяпа хуллен туяланса Московски вокзалалла утрăм.

Вокзалта юнкерсем пысăках мар митинг пекки уçнă. Ман юнкерсем мĕн каланине итлесе пăхас килчĕ. Перронти тенкел çине пĕри хăпарса тăнă та «Живое слово» хаçатран темĕн вуласа парать. Хăлхана: «Ленин — шпион, Германи разведкин агенчĕ т. ыт. те»,— тени кĕрех кайрĕ. Тарăхнипе эпĕ кĕсъерен «Листок правды» туртса кăлартăм. Çакна рабочисем асăрхарĕç те мана сырса илчĕç. Вĕсем хаçата сасăпах вуласа тухрĕç, каялла парса çапла кăшкăрчĕç:

— Ак халĕ çак йĕкĕте итлесе пăхăр, мĕн калĕ вăл сире!

Юнкер вырăнне тенкел çине эпĕ хăпарса тăтăм. «Хисеплĕ юлташ! — пуçларăм хаçата вулама.— Июлĕн пиллĕкмĕшĕнче тухнă «Живое слово» номерĕнче Ленинпа тусĕсене шпионсем тенĕ. Çак ирсĕр элеке политикăлла хак панă май, эпир çапла каласшăн...»

Мана вуласа пӗтерме памарӗç: «Çитет, çитет!» — тенисем илтӗнчӗç. Куçа хаçат çинчен илсе пăхрăм та хама тӗлленӗ виçӗ штыка куртăм. Юнкерсем мана тенкел çинчен тӗксе антарса çул çинче тăракан состав патнелле хуса кайрӗç. Хирӗç тăнин усси çукчӗ. Госпиталь хыççăн уралансах çитейменни те хытă чăрмантарчӗ. Тарăхнипе эпӗ туяна çӗклесе çапрăм, васкамасăр перрон тăрăх утрăм. Виççӗмӗш класлă вагон тӗлне çитсен, сасартăк чарчӗç те алăкран шала тӗксе кӗртрӗç. Эпӗ кӗнӗ çӗре вагонта иккӗн ларатчӗç те ӗнтӗ, иккӗшӗ те салтакла тумланнă, арестленӗскерсемех иккен.

— Кам, большевик-и? — кӗрсен тӳрех ыйтрӗ вăрăм мăйăхлă ватăрах салтакӗ.

— Çапла,— куçа мăч та тутармасăр тавăртăм эпӗ.

— Лар. Пирӗнпе çулӗ хавасларах пулӗ,— хăй çумне вырăн пачӗ çап-çамрăк салтакӗ.

— Питӗртен пурне те пурпӗрех илсе кайса пӗтерейменне,— каллех сăмах хушрӗ аслараххи.

— Эсир мӗнле полкран? — интереслентӗм эпӗ.

— Пулемет полкӗнчен,— çавăнтах ответлерӗ вăл.— Июльти демонстрацие хутшăннăшăн Керенский пирӗн полка салатса яма хушрӗ. Нумайăшне фронта ăсаттарчӗ...

Пӗр станцире пире таçта шуйттан шăтăкне илсе кайрӗç те тӗттӗм путвала хупса хучӗç. Путвалне тахçан улăм сарнă пулнă, халӗ унта çумăр шывӗ тулнă та, эпир чӗркуççи таран шывра тăратпăр. Выртас килсен, шыва выртмалла. Талăка яхăн путвалта тытнă хыççăн пырса купăста шӳрпи сыптарчӗç, каллех çăрапа питӗрсе илчӗç. Виççӗмӗш кунне офицер килчӗ те пире фронта кайма ӳкӗтле пуçларӗ. Эпир килӗшмерӗмӗр. Çур уйăхран ку офицер улшăнчӗ, тепри, кӗçӗнрех чин, подпоручик, каллех фронта хамăр ирӗкпе кайма тархаслать. Çур уйăхра выçă касăлса çитнӗскерсем, чееленме шутларăмăр:

— Йытă вырăнне хума пăрахăр, вара шухăшласа пăхăпăр, шывра, тӗттӗм çӗрте, вунпилӗк кун выçă тăрса йăлтах хавшарăмăр эпир,— тетпӗр. Подпоручик: «Мда-а»,— терӗ те таçта кайса çухалчӗ. Пӗрер сехетрен симӗр алăк çумне çакнă çăраççи чӗриклетсе илчӗ, алăка яри уçса хучӗç. Икӗ салтак пире тухма хушрӗç, хăмаран çапса тунă вакун пеккине хăваласа кӗртрӗç те самаях ăшă тулă пăтти пачӗç. Тепӗр кунне, ирхине, кăнтăрла, каçхине, хырăм сарăличченех яшка, пăтă çиме тӳр килчӗ.

— Пусма самăртаççĕ,— терĕ çамрăк салтак, эрнеренех выçăпа аптраса çитнĕскер.

— Апатпа кăмăла çавăрасшăн.

— Тен, офицерĕ лайăххи лекрĕ?

Темиçе кунтан офицер таврăнчĕ те пирĕнпе лăпкăн, тусла калаçа пуçларĕ:

— Эп хальрех çеç окопсенчен тухса килнĕ, салтаксем пухма ячĕç, задани çавăн пек. Сирĕн вырăнта пулсан, эпĕ çур уйăх каяллах фронта кайма çырăннă пулăттăм...— Кăштах чĕнмесĕр тăнă хыççăн, кашнине куçран пăхса хушса хучĕ: — Çырăнăр. Эпир сире маршевăй ротăна ярăпăр. Унта сире хураллама пăрахаççĕ, вара... эсир ухмах мар пуль тетĕп... вара сирĕн ĕç... Çырăнма сĕнетĕп...

Арестленисем пĕр-пĕрин çине пăхса илтĕмĕр. Пуçа сĕлтсе эпĕ хам килĕшнине пĕлтертĕм. Манпа ыттисем те пĕр пулчĕç:

— Çырăр,— терĕм вара подпоручика,— мĕн пулсан пулать.

Пире хуралпа Мускава пĕр маршевăй полка илсе килсе ячĕç. Кĕске вăхăтрах хутсене çырса хатĕрлерĕç, кĕпе-йĕм, тум пачĕç те мунчана хăваласа кайрĕç.

— Мунчи çывăхах мар, транвай çине ларăпăр,— тет хуралçă салтак.

— Пире пурпĕрех,— хаваслăн хуравлатпăр конвоира,— хăвăртрах çитсе тăраниччен çапăнасчĕ те çăвăнасчĕ.

— Тĕрĕсех çав,— пирĕн майлă пулать вăл,— салтака тата мĕн кирлĕ.

Икĕ лини хĕресленнĕ çĕрте трамвайсем капланса тăнă. Халăх вĕркет, кăшкăрашать-çухăрашать. Мĕн тумаллине эпир çийĕнчех тавçăрса илтĕмĕр. Çамрăк салтак хыçалти алăкран, мăйăхлă ватăрах салтакĕпе эпир малтинчен тухса сирпĕнтĕмĕр. Конвоир халăх хушшине пӳлĕнсе юлчĕ. Виççĕмĕр те Хусан вокзалнелле çул тытрăмăр, унта, пĕр çĕтĕк хупаха кĕрсе ларса, кам ăçта каяссине сӳтсе яврăмăр.

— Ăçта каймалла? — терĕ мăйăхли.— Пирĕн полка хăваласа салатнă, Питĕре çитсе туссене шыраса тупас, тен, хĕрлĕ гвардине çырăнма май килĕ.

— Эпĕ те санпа пыратăп,— терĕ çамрăкки.— Эсĕ тĕнчере нумайрах пурăннă, нумай тӳссе курнă. Санран ниçта та юлмастăп, вилме те пĕрле вилетĕп.

Вара туссем ман енне çаврăнчĕç:

— Эсĕ ăçталла çул тытасшăн?

— Яла каятăп, киле. Унта та революци тумалла, кулакпа тĕрлĕ харампыра тытса силлемелле.

Çапла хăталса юлтăмăр эпир фронт нушинчен.

Питĕре Энтюк тетене шырама кайса çавăн чухлĕ хура-шур курса таврăнтăм. Граждан вăрçи пĕтсен, хăех тупăнчĕ, Хура тинĕсе куçарнă пулнă ăна.

6

Кириле мучи сасартăках шăпланчĕ те пĕр хушă чĕнмесĕр пычĕ. Пакуссем уйăх çутинче ĕрет-ĕретĕн таçта çитиех тăсăлаççĕ. Ир енне сывлăм ӳкрĕ, ыран апла çантал䑫к уяр пулать иккен-ха. Сывлăм пĕрчисем çутă уйăх питтинче ахах-мерченĕн çиçеççĕ. Атăсем самаях шӳрĕç пулмалла, йывăрланчĕç. Çитсен, çĕнĕрен вут чĕртрĕмĕр, ĕреххетленсе вут умне ăшăнма лартăмăр. Татăлнă калава Кириле мучи вут умĕнче малалла тăсĕ-ши тесе, шиклене-шиклене старик çине пăха-пăха илетĕп. Те каçхине çывăрмасăр çӳреме хăнăхманран, шăмшак самаях йывăрланчĕ, куç хупăна пуçларĕ, ларсан-ларсан ĕнсе лăнк! каять. Çакна мучи те сисрĕ пулмалла:

— Куратăн-и, уйăх анать? — терĕ вăл.— Халĕ чи тутлă ыйхă вăхăчĕ. Ешĕл хунава пачах тĕлĕрсе илмесен юрамасть, кĕрсе вырт-ха хӳшше, аçампа чĕркен, утăпа витĕн... Ирхине хăвнах çăмăл пулĕ.

Пăхрăм та, уйăх чăнах анать иккен. Çутатса ывăннă та канма каять. Хӳшше кĕрсен, унăн хушăкĕнчен эпĕ вут çуннине, вут умĕнче хускалмасăр шăппăн ларакан старик мĕлкине чылайччен сăнаса выртрăм. Вара çывăрса кайнă. Тĕлĕкре темле утрав курнă. Çӳллĕ те чăнкă çыран çинче хамăрпа пĕр класра вĕренекен Аськина Анюк, çӳçне салатса янăскер, ниçта кайса кĕреймесĕр ăшталанса, кăшкăрса макăрса çӳрет пек. Хăй, пĕрехмай хăлаçланса, тинĕселле темĕн кăшкăрать. Мĕн кăшкăрнине ниепле те ăнланса илме çук. Хам ăçта пулнине астумастăп: те тинĕсре, те вăрманта. Анюк хăлаçланать-хăлаçланать те кассăн-кассăн иртекен шурă тĕтрепе хупланать, хăлаçланать-хăлаçланать те хупланать. Акă ĕнтĕ Анюкăн тĕтрепе пĕрле хумлă-хумлă вăрăм çӳçĕ çеç ялав пек вĕлкĕшсе-чӳхенсе тăрать. Çӳçрен ялав, ялавран çулăм, тем пысăкăш çулăм, пулса тăчĕ. Вара пĕтĕм утрава вут хыпса илчĕ. Çулăмра — телефон юпи çӳллĕш хура хĕрес. Акă хĕрес сулкаланма, унтан хăлаçланма

тытăнчĕ. Анлăн утăмласа ман паталла хăрушшăн килет...

Вăрансан та чылайччен тĕлĕк хăрушлăхĕнчен хăпаймасăр сехĕрленсе выртрăм. Те сулахай енне выртнипе чĕрене йывăр пулнăран, те мучи каласа панисем чуна пырса тивнĕ, эпĕ икĕ сехет ытла тĕлĕкпе аташнă. Хăранипе халĕ те чĕтреме пăрахмасăр, тĕлĕке Кириле мучине каласа патăм. Кириле çаплах вут умĕнче ларатчĕ. Умĕнче — вăлта хуллисем, тĕрлĕрен банкăсемпе çипсем, вăлтасем. Ирпе пулла кайма шутланă иккен вăл. Тĕлĕкĕмрен Эстун Кирили хытă тĕлĕнчĕ. «Анюк» тес вырăнне эпĕ, паллах, «пĕр хĕрупраç» терĕм.

— Тĕшмĕше ĕненсех пĕтерместĕп те, кунта мĕн-тĕр пурах.

— Мĕн-ши, Кириле мучи?

— Урине мăнаккуна инкек пулман-ши эпир кунта утă хураллана вăхăтра?

— Сан карчăкна-и?

— Вара çав.

— Эп тĕлĕкре карчăк мар, çамрăк хĕр куртăм.

— Эс мĕн, карчăксем тӳрех карчăк пулса çуралнă тетĕн-им?

— Урине мăнакка та хитре хĕрччĕ-и?

— Питĕ маттур хĕрачаччĕ. Ун çинчен кĕçĕр çĕрĕпех каласа кăтартрăм та хăвна.

— Хăçан?

— Халь çеç чарăнтăм.

— Леш утрав çинчи-и? Рийна-и? Эс ăна утрав çинех тăрса юлчĕ терĕн-çке!

— Малтан юлчĕ, кайран килчĕ... Яккупа. Яккăва эпĕ хамăн адреса парса хăварнăччĕ.

— Анчах та Урине мăнакка чăваш вĕт?

— Кам каларĕ? Халь чăваш, унччен эстони майриччĕ.

— Ан тĕлĕнтер-ха.

— Ним те тĕлĕнтерместĕп. Киле кайсан, ыйтăпăр акă.

— Эсĕ шӳтлен пуль, мучи? — Шӳтлеместĕн пулсан, каласа пар-ха эппин, епле майпа килсе ӳкрĕ вăл çакăнта çити Балтика тинĕсĕнчен?

— Каларăм-çке-ха Яак (Якку), эстонцă пулса кайнă Самар чăвашĕ, хайхи тус, илсе çитерне тесе. Малтан Питĕре, Питĕртен Мускава, Мускавран Хусана, Хусантан Чистая... Еçĕ те пĕтнĕ. Утрав çинчен эпĕ кайсан темиçе уйăхран унта кайзер салтакĕсем пырса тулнă. Хай-

хи кулак кам кăна вырăссемпе туслă пулнă çавсене нимĕçсене тытса пара пуçланă. Яккупа çемйи, Рийна, Рийнăн ашшĕпе пиччĕшĕ, тата ытти нумай пулăç сĕм вăрмана тарса пытаннă, арçынсем çав кулака епле пулсан та тытса вĕлерме тупа тунă. Пĕрре çакна ăшă вырăн çинченех илсе тухаççĕ те вăрманти вăрттăн вырăна сĕтĕрсе пыраççĕ, çавăнтах сут туса пуçне тунката çине хураççĕ... Рийна ашшĕ, пиччĕшĕ тата Якку Баронран юлнă динамита шанчăклă вырăна пытарнă пулнă. Кулака вĕлернĕ хыççăн тепĕр чăрсăр ĕç тăваççĕ: айне динамит хурса нимĕçсен штабне сывлăша сирпĕтеççĕ. Штаба сирпĕтиччен арçынсем ачасемпе хĕрарăмсене чылайăшне материка ăсатнă. Çак диверси нимĕçсене ургарсах ярать: икĕ ялтан çĕр çын ытла персе пăрахаççĕ, çав шута Рийнăн ашшĕпе пиччĕшĕ те лекнĕ. Çапла вара Урине мăнакку ман пекех тăлăх-турат пулса тăнă. Икĕ тăлăх-турат пĕрлешсе çемье чăмăртарăмăр, икĕ ывăл пĕр хĕр çуратса ӳстертĕмĕр. Ывăлсен пуçне Гитлер çирĕ, хĕрĕмĕр ав сывах... Михаля, унăн ачи, ман мăнук пулать. Ăна пĕлетĕн пуль ĕнтĕ, туслă та мар-и-ха унпа?

— Туслă, паллах. Вăл сирĕн радиотехникăпа питĕ кăсăкланать, мана та çавăнталла сулăнма хĕтĕртет.

— Ăна пĕлни те кирлĕ. Мĕн чуль нумайрах пĕлетĕн, çавăн чул лайăхрах, çул уçăрах. Самани питĕ хивре килнипе эпĕ нумай вĕренеймерĕм. Пĕрехмай çапăçу та кĕрешӳ, вăрçă çине вăрçă... Сире, мăнуксене, ырă пултăр тесе тăрăшрăмăр, сисмерĕмĕр те, ĕмĕр иртсе кайрĕ. Аллă çул ытла пĕрле пурăнтăмăр Урине мăнаккупа. Хăш хушăра Рийнăран Урине кинеми пулса тăчĕ, сиссе юлаймарăмăр. Пурнăçсем йывăр килчĕç, çавăнпа пуль... Халĕ ĕнтĕ вăл эстони майри пулнине астăвакан та ялта темиçе çын кăна пуль, сахаллансах пыраççĕ. Килсенех ăна ялта пит йывăрччĕ: чĕлхине те пĕлмест, йăли-йĕрки те урăхла кунта, çыннисене те палламасть, пурте «эстун, эстун» теççĕ, мана хама та Эстун Кирили тесе чĕнме пуçларĕç, çав ят паян кунччен те хăпмасть çумран. Рийна эстони майри пулнине маннă, кăна манмаççĕ. Малтан Рийнăпа вырăсла калаçаттăмăр, «мой дом далеко» тесе час-часах куççуль юхтаратчĕ. Кайран чăвашла шакăртаттарса калаçакан пулчĕ те Рийнăран Урине пулса тăчĕ, хуйхă-суйхи те майĕпен сĕврĕлчĕ. Ывăлсем вăрçăра вилни вара пачах хуçса хăварчĕ мăнтарăна, вĕсем вилнĕ хыпара илсен, сарă çӳçĕ пĕр каçра юр пек шуралса ларчĕ.

Эс тата тĕлĕкӳнте хура пысăк хĕрес куртăм тетĕн. Ҫаҫран эпĕ каласа пани пуҫна ларса юлнă та ҫавă курăннă ĕнтĕ. Пуян Кантраттие такамсем эпĕ яла ҫитичченӗх, хăй вăрманĕнчех, ҫул урлă тилхепе карса ҫул варне ҫакса хунă. Пĕрисем хăйĕн тарҫисемех ҫакнă теҫҫĕ, теприсем урăхларах та калаҫаҫҫĕ. Вăрманта вăл сахалтан та эрне тăнă. Ҫайран тин, совет влаҫĕ ҫĕнтерсе ҫирĕпленсе ҫитсен, санăн аслаҫу каласа паратчĕ: кайрăмăр, тет, асаннӳпе пĕрре Кантратти вăрманне кăмпана. Чи тĕттĕм ҫĕрсенче, улах вырăнсенче, вăрман хуҫи тĕлне пуласран хытă шикленсе, ним сасă кăлармасăр ҫӳренĕ аслаҫупа асаннӳ, ун чухнехи яшă ҫынсем. Пĕлтĕрхи ҫулҫăсене сирсе майра кăмписем, шур кăмпасем, кăрăҫсем йышлă тухса ларнă. «Ытла та хитре-ҫке шур кăмпапа кăрăҫ! Яшка валли типĕтсен, ҫисе тăранмалла мар пулать»,— савăннă кăмпа татнă май аслаҫу. «Каларăн та,— хирĕҫленĕ асаннӳ.— Тăрăнна та хăйĕн яшкине, пĕрех унпа супать. Сала майрисем, авă, кăмпана шаритлеҫҫĕ, тăварлаҫҫĕ, кукăль пĕҫереҫҫĕ». Хайхисем кăмпа тата-тата ывăнсах ҫитеҫҫĕ. «Ҫанар-ха, Мĕтри,— тет асаннӳ,— вăрманти пĕтĕм кăмпана татса та пĕтереймĕн. Итле-ха, епле шăп вăрманта». Кăмпа кунтăкĕсене кивĕ ҫул хĕрне лартаҫҫĕ те хăйсем те лараҫҫĕ. Ҫалаҫнă май ҫул урлă, ҫул тăрăх пăхкалаҫҫĕ. Сасартăк аслаҫу кĕл пек кăвакарса каять, чĕлхесĕр пулса тăрать. Аллине хăй текех пĕр еннелле кăтартать, нимуй ҫын пек: «М-м, ав, мĕн, унта»,— тесе мăкăртатать. Асаннӳ вăл кăтартнă ҫĕрелле ҫаврăнса пăхать те чут ҫеҫ йăванса каймасть: ҫын ҫӳремен кивĕ ҫул урлă тилхепе карнă, тилхепе варринчен пăяв ҫаклатса ҫын ҫакса хунă. Хăра-хăра пырса пăхаҫҫĕ те: Кантратти! Ҫуҫне хупнă, пичĕ кăвакарса шыҫăнса кайнă. Чĕлхи ҫăварĕнчен алсатуль пек тухса тăрать, хуп-хура. Пăхса тăрсан-тăрсан тин мăшăра тăн килсе кĕрет. Кунтăкĕсене ҫавăрса тытаҫҫĕ те ҫак усал вырăнтан ҫаврăнса пăхмасăр тараҫҫĕ: курман-илтмен, пĕр сăмах. Ҫынни те тата тĕнчере ҫук пӳтсĕрскер. Темиҫе ҫултан тин каласа кăтартрĕҫ ҫакна аслаҫупа асаннӳ, унччен ҫăвара шыв сыпнă пек пурăнчĕҫ. Вăрман урлăсене хытă силленĕ терĕ кун хыҫҫăн кантуртисем, вăхăтлăх правительство йыттисем. Пирĕн яла килсе тĕкĕнмен, ялтан ытла инҫетре ҫакăнса тăнă ҫав Кантратти, хăйсенченех кам та пулин, тенĕ пуль. Вăхăчĕ пăлхавăрлă, тăнăҫсăр вăхăтчĕ, эсерсен Кантраттисĕр пуҫне те ĕҫĕсем мăй таранах пулнă пуль. Ик вăрман хушшине шăтăк

алттарнӑ та персе чикнӗ пуяна, ҫине элес-мелес юман хӗрес ларттарнӑ. Пӳкле вилӗмпе вилнӗскерне, чӑваш йӑлипе, ҫӑвана мар, уйрӑм пытарнӑ.

— Халӗ те паллӑ мар-и вара кам вӗлерни?

— Паллӑ мар. Хӑйӗн тарҫисемех пуль. Мӗншӗн тесел ытла та чунсӑр, тискер, хыткукар ҫынччӗ Қантратти. Тарҫисене те чӗрӗлле ҫинӗ ӗнтӗ вӑл. Самана тикӗс марне кураҫҫӗ те лешсем... вара...

Мучи вӑлтисене майласа пӗтерчӗ. Хӗвел тухаспа эпир кӳлӗ хӗрне антӑмӑр. Хӑмӑш хушшинче пирӗн пӗчӗкҫеҫҫӗ кимӗ пур, пирӗн те мар-ха вӑл, колхозӑн, халлӗхе ҫеҫ пирӗн. Хускалмасӑр тӑракан тӑрӑ шыва шӑпӑлтаттарса кимме шаларах тӗртсе кӗртетпӗр, пулӑ тытмалли ӑпӑртапӑра кимӗ ҫине хуратпӑр. Эпӗ кӗсменсем тытатӑп, мучи хӳрене ларать. Хӑмӑшсенчен иртсен, кӑшт шаларах, «якӑр ратпӑр»: вӑлтасене пӗри пӗр еннелле, тепри тепӗр еннелле ывӑтатпӑр, вара иксӗмӗр те тӑм пуканесем пек чӗнместпӗр, ҫур сехет, сехет ҫурӑ ҫапла ларатпӑр. Шыв тӑп-тӑрӑ. Тайӑлса пӑхсан, унӑн тӗпӗ йӑлтах курнать. Хӗвел тухнӑ май шыв ҫийӗ ҫутала пуҫларӗ, тухса ҫитсен — кӳлӗ ҫине ҫӑмӑл ҫутӑ тӗтре карса илчӗ. Эпӗ умри хӗрлӗ путӑша куҫа хупмасӑр сӑнатӑп: «Ма туртса антармасть, мур илесшӗ!» Хӗрлӗ путӑш-хулкка шыв ҫийӗнче ҫаплах хускалмасӑр тӑрать. Мучи ӗнтӗ виҫ-тӑват хутчен вӑлта хуллине картлаттара-картлаттара туртрӗ, хӗрлӗ ҫунатлӑ самаях пысӑк уланкӑсене вӑлтаран вӗҫертсе илсе витрери шыва ячӗ. Ман ӗҫ ӑнманнине вӑл лайӑхах туять пулмалла. Ҫаврӑнчӗ те: «Хулккапа вӑлта хушшинчи ҫипне кӗскет,— терӗ,— кунта кӳлӗ тарӑн мар, вӑлту шыв тӗпнех ҫитсе выртать, пулӑ куртӑр тесен, шывра ҫакӑнса тӑмалла. Вӑлти вӗҫӗ те ӑманӗнчен тухса ан кайтӑр».

Мучие итлесе вӑл каланӑ пек турӑм та кӗтме пуҫларӑм. Чӑнах та! Хулкка малтан силленсе илчӗ, унтан... путса анса кайрӗ. Пӗррех туртса кӑлартӑм вӑлтана. Унта ҫакланнӑ хӗрлӗ ҫунатлӑ пулӑ, шывран чаклатса тухса, тӑҫта ҫити ҫӳле ҫӗкленчӗ те вӗҫерӗнсе кайса кимӗ тӗпне килсе ӳкрӗ. Савӑннипе эпӗ ташламанни кӑна! «Ытла хытӑ ан турт,— мӑкӑртатать мучи,— кӳлӗри пулӑсен ҫӑварӗсене йӑлтах ҫурса пӗтерӗн».

Хӗвел тухса ҫурӑмсене самаях хӗртме пуҫланӑччӗ ӗнтӗ, ман котелок уланкӑпа тулса ларчӗ. Мучин пӗчӗк витри те чут ҫеҫ тулмарӗ. Тата тытнӑ пулӑттӑмӑр-и,

хӳшшӗмӗр патӗнчен йытӑ вӗрни, хӗрача ҫинҫе сасӑпа хыттӑн кӑшкӑрни уҫҫӑн илтӗнсе кайрӗ:

— Мучи! Хумкка-а! — янӑрать сасӑ.— Вӗри яшка илсе килтӗм! Урине мӑнакка парса ячӗ-ӗ!

Кириле кӑмӑлсӑррӑн йӑшаланса илчӗ: «Никкӑн хӗрӗ амӑшӗ пекех уҫӑ саслӑ»,— тесе ҫыраналла ҫаврӑнса пӑхрӗ те хатӗр-хӗтӗрсене пуҫтарма хушрӗ. Эпӗ, хӗрсе кӑна ҫитнӗскер, тата кӑшт ларасшӑнччӗ, ҫӳлтен каллех уҫӑ сасӑ илтӗнчӗ:

— Хӑвӑртрах килӗ-ӗр! Сивӗнет!

Анюк-ҫке ку! Аськина Анюк! Вӑл пулмасӑр кам пултӑр — чанкӑлти майра...

Эпир хӑмӑш хушшинелле ишнӗ самантра Анюк сӑртран пирӗн паталла сиккипе чупса анчӗ. Хыҫӗнчен хӳрине кӗлентӗр пек авса хунӑ Улайкка ӗрӗхтерсе пырать. Анюк ҫанӑсӑр кӗске кӗпепе, кӗпи ҫутӑ, чечеклӗскер пулас та, чечекне аякран уйӑрса илме ҫук. Ҫӳхе ҫитсӑ, хӗрача хытӑ чупса аннипе, ӳчӗ ҫумнех ҫыпӑҫса ларнӑ. Чӗркуҫҫийӗсем вӗлтлетсе ҫеҫ пыраҫҫӗ. Кӗске ҫивӗчӗсене ҫыхнӑ шурӑ сарлака хӑюсем, пысӑк лӗпӗшсем пулса, Анюк хулпуҫҫийӗсем ҫине ларасшӑн пуҫӗ тавра вӗркеҫҫӗ, ӑна хӑвалаҫҫӗ пек. Кимӗ патне Анюк тап! тап! тап! тап! тутарса, ҫӗре кисретсе чупса пычӗ. Вӑт тӗнче култармӑш: хӗрача пуҫпа ҫуллахи шӑрӑх кунта кирза атӑ тӑхӑнса янӑ! Эпӗ ҫакна тӳрех асӑрхарӑм та манӑн питӗ кулас килсе кайрӗ.

— Атя атӑсене улӑштаратпӑр,— терӗм эпӗ тӑрӑхлас шутпа,— хамӑн тӑвӑртарах, санӑн хӗрӗх иккӗмӗш размер тенине илтнӗччӗ.

— Шел, вӑтӑр саккӑрмӗш анчах, тен, сана лутра кӗлеллӗ туфли килӗшерех парать? Манӑн кунтах пур, сумккӑра, хӗсмест, ҫӑмӑл, вӑтӑр улттӑмӗш размер.

— Ху ма тӑхӑнмастӑн тата, пилӗк ҫухрӑм кирзӑ атӑ сӗтӗрнӗ?

— Эп велосипедпа килнӗ... Утӑ тавӑрнӑ чух атӑсӑр хӑрушӑ, ҫӗлен сӑхма пултарать.

Анюк виртлесе Кириле мучинчен вӑрттӑн чӗлхине кӑларса кӑтартрӗ те шыва чӑмпӑлтаттарса кимӗ патне кӗчӗ. Мучи, сӑмах чӗнмесӗр, малтан ӑна вӑлтасене тыттарчӗ, унтан ытти ӑпӑр-тапӑра, ман тулли котелока, юлашкинчен, кусене типӗ ҫӗре тухса хурсан, хӑйӗн витрине пачӗ.

— Ку витрери пуллине эп тытнӑ,— терӗм эп мучие куҫ хӗссе, Анюк умӗнче мухтанса илес шухӑшпа.

— Асту, тупăннă герой.
— Герой-и, герой мар-и, тытрăм-ха.
— Атту эп Урине мăнакка витрине палламастăп пуль.
Ну, каçăр сăмса-çке çак Анюк! Ăна ним каласа та килĕштерме çук. Чим-ха, сăмси чăнах та каçăр мар-и унăн? Анюк сăмси мĕнлине тепĕр хут пăхса илес тесе пуçа çĕклерĕм те, хĕрача кĕтмен çĕртен йăл кулчĕ. Сăмси... каçăр мар иккен, тӳрĕ хитре сăмса. Улайкки те, хуçи пекех, манпа питех интересленмест: эп тип çĕре тухсанах ман тăрăх пĕр-иккĕ сикрĕ те мучине пырса çулăхрĕ, кăкăрĕ çинех сиксе ăна питĕнченех çуласа илчĕ.
— Эккей ку Улайккапа,— мăкăртатать Кириле кĕсменсене кимĕ тĕпне майласа хунă май,— пĕр талăк курмасăрах епле тунсăхланă.
Кимме шалçа çумне кăкартăмăр та хӳшĕ патне хăпартăмăр. Анюк, чăн та, велосипедпа килнĕ иккен: «çуран лаша» хӳшĕ сулхăнĕнче шăппăн канса тăрать.
— Анюк, велосипедпа ярăнса килем-ха.
— Ывăннă вăл, кантăр-ха, яшка çимелле, яшка сивĕнет.
— Яшка çисен, ирĕк паратăн-и?
— Ирĕк паратăп.
— Пирĕн пулă шӳрпи пур, сыпатăн-и пулă шӳрпи?
— Çиес килмест ман, тавтапуç.
Утă хураллакансем валли Урине мăнакка ватă автанне пуснă, яшкине, час ан сивĕнтĕр тесе, чĕреспе парса янă. Яшкапа пĕрле пĕрер тукмак, пĕрер çунат çирĕмĕр те, мучи ман валли йĕтес тупса кăларчĕ:
— Акă, йĕтес туртăр, эп сирĕнпе тупăшаймăп, ватă ĕнтĕ, час манăçатăп,— терĕ.
Аллăма тăсса ĕлкĕриччен Анюк пычĕ те йĕтесе тытса илчĕ. Эп сиксе тăрсан, хӳшĕ тавра тара пачĕ. Хăвалярăм-хăваларăм — ниепле çитме çук. Малта Анюк вĕçтерсе пырать, ун хыçĕнчен — эпĕ, ман хыçран — Улайкка. Улайкка хыçăмран хамлатса сиксе пычĕ-пычĕ те шăлавартан кăларса янă кĕпе аркине кап! хыпрĕ. Хыпрĕ те çакăнса каялла туртма пуçларĕ. Ирĕксĕрех чарăнтăм. Çакна курсан, Анюк кула-кула йăвансах кайрĕ. Майпен лăпланса ума пырсан, йĕтесне сăмса умĕнче вылятса:
— Мĕн илсе памалла туртатпăр? — терĕ.
— Мĕн илсе памалăх укçа пур пирĕн, иксĕмĕр те шалу илместпĕр? — тавăртăм эпĕ.— Çапла килĕшĕпĕр: эп вăлтсан, эс велосипедпа ярăнтаратăн, эсĕ вăлтсан,

эпĕ кимĕпе ярăнтаратăп. Килĕшрĕмĕр-и? Килĕш ĕнтĕ.

— Килĕшрĕмĕр!

Кирек хăçан, кирек ăçта, кирек кампа йĕтес туртсан та, асăрханă-и эсир, пуç яланах: «Малашне асра тытасчĕ, улталанас марччĕ»,— тесе шутлать. Çав майпа, малашĕ йĕтесне туртнă самантрах пуçланать пулин те, çав самант пирки пит шухăшласах каймастăн, хăш чух вăл пуçран та тухса ӳкет. Йĕтесе иккĕн туртса уйăратăн та, пĕри çавăнтах, çав самантрах, тепĕрне, çекĕл пек шăмă мĕнле хуçăлса икке уйрăлнине пуçне кĕртсе лартнăскерне, урăххи çинчен шухăшласа та ĕлкĕрейменскерне, йĕтес хуçăкне тыттарать. Лешĕ: «Асăмра!» — тес вырăнне куçне чарса анраса тăрать. Çав вăхăтра: «Йĕтессĕм!»— тени шартах сиктерет ăна. Анюкпа йĕтес туртрăмăр та, хам татăка кăкăр кĕсйине чикесшĕн пултăм, йĕрки çапла. Анюк хăй çине пăхкаларĕ те кĕсъе таврашĕ çуккипе: «Ме-ха манăнне те чиксе хур»,—тесе тăсса пачĕ йĕтесне. «Асăмра!» — темеллеччĕ манăн. Эпĕ, тăмана, Анюка кĕсйи çуккишĕн шелleme вăхăтлă пăрахайманнипе, ним калама аптăрарăм, Анюк «йĕтессĕм!» тесен çеç «асăмра» тесе ятăм. Анюка каллех кулă. Манăн вара, тин кӳлĕ çинчен таврăннăскерĕн, çĕнĕрен унта тухмалла. Ним тума та çук, вăйă йĕркине пăхăнмаллах. Пиртен тухнăскер мар. Кам айăплă? Хам айăплă. Хам ытла та анкăминкĕ. Манран мучи те кулать, кĕнеке çыракан пулаймастăн капла, тет. «Кĕнеке çыракан» тенĕ сăмахсене илтсен, Анюк хăлхине чанках тăратрĕ:

— Кĕнеке çыракан? Фу! Хумккаран пулать-и кĕнеке çырасси. Вăл «çырас» сăмаха та хальчченех «ы»-па мар, «и»-пе çырать те...

Тавлашсан та усси çуккине туйса, эпĕ кĕскен çеç: «Кайрăмăр!» — терĕм. Эп хушнине чи малтан Улайкка илтрĕ, хăлхисене тăратса ман енне пăхрĕ те янках сиксе тăчĕ. Хуçи, те пaçăрхи критика витнĕрен, лăпăш-лапăш аттине хывса çапса çăмăл туфли тăхăнчĕ. Эстун Кирилли, ăпăр-тапăр япаласене тирпейлесе вырнаçтарнă май, Макаров адмиралăнни пек шурă кĕреçе сухалне çинеçинех ачашлать, пирĕн çине кăмăллăн та юратса пăхать. «Шывра ан алхасăр, киммĕр ӳпленсе кайĕ, вăйăран вăкăр сиксе тухĕ,— терĕ вăл хыçран пăхса юлса,— утă тавăракансем халех килмеççĕ пуль-ха, питех ан васкăр».

Кăмăлсăрланни сисĕнетех çав. Эп кăмăлсăр пулнишĕн хăйне айăпласа, Анюк, эпир кӳлĕри уçă вырăна

тухсан, манпа ытла та ырă калаçа пуçларĕ. Çине-çинех ыйту парать, «леш мĕн?» те «ку мĕн?» тесе кăна пырать. Хăмăшсен хушшинчен пĕртен-пĕр ула чарлан çĕкленчĕ те, пирĕн çывăха ана-ана темиçе хутчен çуначĕпе шыва çапса илсе, малалла, Эстун Кирили Чарлан утравĕ теекен утрав еннелле, вĕçсе кайрĕ. Ăна эпир мĕн куçран çухаличченех пăхса ăсатрăмăр, вара хамăр та унталла ишме тытăнтăмăр. Кимĕ айĕнчи тăрă шыв ирхи хĕвел çутипе вутăн-хĕмĕн ялкăшать, кĕсмен вĕçĕсенчен ахах-мерчен пулса тăкăнать. Çак илеме эпĕ çеç мар, Анюк та ытарайми пăхса савăнса пырать-мĕн. Савăнăçне ниçта чикейменнипе кимĕ пуçне тăчĕ те, сылтăм аллине малалла кăнтарса:

> Под ним струя светлей лазури,
> Над ним луч солнца золотой! —

тесе хучĕ. Кимĕ сулăнса кайнипе хăй чутах ӳкетчĕ, ирĕксĕрех ман мăйран уртăнмалла пулчĕ. Çапла тунипе кимĕ пушшех те тайăлчĕ, иксĕмĕр те кăшт çеç шыва çатлатмарăмăр. Эпир ахăлтатни утрав çине те илтĕнет пуль. Çывăхах мар-ха пиртен утрав, ик çухрăмсем те пулать-тĕр.

— Эп сана тĕлĕкре курнă, сан çӳçӳ питĕ хулăм пек, пилĕкрен явкаланать пек, сана кĕске çӳç мар, вăрăм çӳç килĕшет,— терĕм Анюка. Вăл çакна тăрăхлани вырăнне йышăнчĕ:

— Эпĕ те сана курнă,— терĕ йĕкĕлтесе,— çӳçӳ-пуçу тăмаланчăк пек, куршанаксем çыпăçса пĕтнĕ пек, сана тăмаланчăк пуç мар, шакла пуç килĕшерех парать пек...

— Ан шăл йĕр-ха эс, Анюк, эпĕ чăн калатăп.

— Эпĕ те чăн калатăп.

— Эпĕ сана темле утрав çинче курнă. Вут çунать пек, çулăм, тĕтĕм явăнать...

— Эп сана лачакара курнă. Пылчăк, çăрăлчăк пек...

— Эс кăшкăрсах макăратăн пек, Анюк...

— А эсĕ макăрайми те пулнă.

— Мĕне пĕлтерет-ши çакă пĕтĕмпе?

— Тăххăрмĕш класра вĕрене пуçласан, математикăпа иккĕ çине иккĕ илессе.

— Эс пĕрре те иккĕ илмĕн ĕнтĕ.

— Эп иккĕ мар, пĕрре илĕп...

Çапла калаçса пыра-пыра эпир сисмен те, умри ут-

рав, Чарлан утравĕ, пирĕн патах çитсе тăнă, унăн çӳллĕ те хĕрлĕ çыранĕ уçсăнах курăнать ĕнтĕ, çийĕнче чарлансем йышлăн явăнаççĕ, явăнаççĕ-явăнаççĕ те шыв çинелле чул пек анаççĕ, вара каллех тӳпенелле ярăнса хăпараççĕ.

Хыçалалла çаврăнса пăхрăмăр. Унта пирĕн хӳшĕ, хӳшĕ патне юлнă Улайккапа Кириле мучи кăшт çеç палăраççĕ...

Çыран айнех пырса çитсе, Анюкпа иксĕмĕр те:

— Сывă-и, утрав, Чарлан утравĕ! — тесе кăшкăратпăр. Ахрăм янăрать.

Утрав урăх нимĕн те чĕнмест, хăй сыввине пĕлтерсе чарланĕсене шуйхатать çеç. Чарланĕсем çуллахи хĕвеллĕ ире мухтаса тата пире саламласа хытăран-хытă çуйăхаççĕ.

— Пирĕн утрав,— терĕм те Анюка çыра кусĕнчен пăхрăм.

— Пирĕн утрав,— хуравларĕ вăл, ачашшăн йăл кулса.

Ула чарлан, пуç çийĕн вĕçсе иртсе, кӳлĕ хĕрринелле вăскарĕ... Вăл çыраналла таврăннине халь Кириле мучи, тен, ывăç тупанĕ айĕнчен сăнаса тăрать пуль? Сăнанă май, тен, каллех яшлăхне аса илет?..

Эпир, çӳллĕ çыран айĕпе иште иртсе, сĕвек çĕре пырса чарăнтăмăр. Сĕвек çыранта шыв патне çитиех тенĕ пек симĕс çерем. Анюк туфлисене çерем çине тухса хучĕ, эпĕ шăлавар пĕççине тавăрса ятăм, вара кимме хăйăр çине сĕтĕрсе кăлартăмăр. Утрава тĕпчеме пуçличчен, çӳллĕ çырана улăхса тавралăха сăнас килчĕ. Çемçе курăк çинче çарран утма питĕрех те ырă иккен. Шывалла карттус сăмси пек тухса тăракан çӳллĕ вырăнтан тавралăх таçта çити курăнать. Ял. Фермăсем. Водокачка. Ял çумĕнчи хурăн кати, ун айккипе иртекен шоссе. Шоссепе вĕçĕ-хĕррисĕр чупакан машинсем... Аякра пирки пурте пĕчĕккĕ, уçăмсăр курнаççĕ. Қатаран леререх пысăк вăрман, çав вăрманăн пĕр хĕрри кунтах çаврăнса килет, Павăл хăртнинчен иртсе кăшт кайсан, çĕнĕрен пысăк вăрман, вунă-вуник çухрăма тăсăлаканскер, пуçланать. Пирĕн колхозăн кӳлĕ хĕрринчи çаранне час-часах, кашни çулах пулмасан та, вăрман урлăсем каçса çулкалаççĕ, хатĕр утта турттарса кайма та йĕрĕнсех тăмаççĕ. Хăйсене вĕсем «вăрман патшисем» тесе шутлаççĕ. Ялĕ, Таркăн ятлăскер, вăрман айĕнчех ларать, пысăк мар, çирĕм-вăтăр килтен ытла та мар пуль. Вăрланă утисене килĕсене

кĕртмеççĕ, вăрмана пытараççĕ, çавăнтанах аякран утă шыраса килекенсене, хĕлле, утă хакĕ икĕ хут ўссен, е çур-



кунне енне, утă-улăм ылтăн хакĕпе танлашсан, сутаççĕ. Çуллах, çаран çинчен тўрех, тиесе янă самантсем те пулман мар. Кун пек меслет вăрăсемшĕн тата аванрах: хатĕр ют утта ик хака сутса тиесе яраççĕ те, сутаканĕсем те, илекенĕсем те, пуçтах шоферсем, услам тăваççĕ. Вăрлама, паллах, хурал çукрах çĕрсенчен, хуралĕ укçана е «çуттине» кăмăллакан çарансенчен, канлĕ. Ăçта мĕн начар выртнине вăрман урлăри пĕчĕк ялта, уйрăмах Пуян Кантратти йăхĕнчи пĕр-ик кил, аван пĕлеççĕ. Тытма вĕсене пĕрне те тытман-ха, çын сăмахĕ çеç ку халлĕхе — çак ялти хăшпĕр çынсен алли кукăр тени, анчах унта Пуян Кантратти йăхĕнчи пĕр-ик тымар пурри вара тĕрĕсех. Тытман вăрă — вăрă мар, тетпĕр те, çакă пур чухне те тўрре килмест çав. Хăш чух тытман вăрă та вăрă пулать, çакна пĕлме пире совет самани хăй пулăшать, ăçтан вăрласа мĕнле пуйнине халăх контролĕ часах тĕпчесе пĕлет.

Колхозăн кӳлĕ хĕрринчи çаранĕ тĕп çаран мар, тĕп çарансем пирĕн пысăк вăрманăн аслă ĕшнисенче. Халĕ пĕтĕм халăх çавăнга утăра, кӳлĕ хĕррине маларах çулса пăрахрĕç, паян кăнтăрла утă тавăрса, каçпа ăна купасене хывмалла.



Шоссепе машшинсем унталла-кунталла чуппине Анюк çăварне карсах пăхса тăрать.

— Кăткăсем пекех вĕркеççĕ,— терĕ вăл сасăпах.

— Машинсем-и?

— Аха. Элеватора тырă леçме вăхăт çитсен, аттерен пурпĕрех ирĕк ыйтса илеп.

— Кам машшин шанса патăр сана, праву ăçта?

— Сан ăçта? Унччен права та илĕп-ха.

— Эпĕ те илетĕп.

— Сана Михаля мотоцикл çӳретме вĕрентрĕ-и?

— Вĕрентрĕ.

— Мана та атте вĕрентрĕ.

— Вĕрентрĕ? Çавăнпа çĕтĕк велосипед утланса килтĕн-и кунта?

— Атте мотоциклпа ирех района кайрĕ... Эп Чистайран яла çити, аллă çухрăм, «ЗИСа» хамах тытса килнĕ, эсĕ газик çине те ларса курман пуль-ха.

Хĕрачасене тавлашса çĕнтерме питĕ йывăр, хăш чух

пачах май çук. Анюкпа эпĕ тĕкех тавлашмарăм. Колхозри Никкăн механикăн хĕрĕ кирек мĕнле машинăна çӳретме те мĕн пĕчĕкренех пĕлнине кама калăн? Çакă ялта пуриншĕн те тахçанах паллă. Ывăл ачисем çулла, каникула тухнă-тухман, тракторсем çине «утланаççĕ»: хăш чух пĕр-пĕр çын вырăнне, лешĕ сывмар е ерçеймен чухне, хăш чух вара хăйсене те шанса параççĕ. Хĕрӳ вăхăтра, ĕç алли çитмесен, килĕшме тӳр килетех çав.

Тавралăхпа киленсе тăрансан, утрава курса çаврăнас терĕмĕр. Пĕрер икçĕр метртан вăрман пуçланать. Вăрмана кĕриччен катăркас тĕл пулчĕ, пилеш, çĕмĕртсем... унтан — шĕшкĕлĕх. Шĕшкĕлĕхпе иртрĕмĕр те юманлăха лекрĕмĕр. Çӳресен-çӳресен, вĕтĕ ăвăслăхра куян çури куртăмăр. Вăл, пĕчĕкскер, хăрама та пĕлмест, пире курсан тармарĕ, хăлхисене вырттарчĕ те йывăç çумне лăпчăнчĕ. Анюк ăна «аннӳ патне кай, тилĕ тытса çийĕ» тесе хулăпа хăратса ячĕ. Инçе те мар чĕрĕп нăрхлатать, патне пыма пуçласан, шăтăкне кĕрсе çухалчĕ. Тĕлĕнмелле вăрман ку утрав çинче: тискер кайăксем çынран хăрама пĕлмеççĕ, çын çӳресех каймасть пулас кунта.

Кайăк-кĕшĕк хĕрсех юрă шăрататать. Чечексемлĕ пĕр уçланка тухрăмăр та ӳкнĕ йывăç çине канма лартăмăр. Çывăхри турата пилеш кайăкĕ йышăнчĕ, тăрăшсах ытти кайăксене вăрçтарса, шăхăра-шăхăра юрла пуçларĕ. Тäçтан муртан чакак вĕçсе килчĕ, Анюкран пĕр хăлаçа тенĕ пек шăлан çырли тĕмĕ çине ларчĕ те, пуçне хăяккăн пăрса, хӳрине çӳлелле-аялалла вылятса илчĕ. «Камсем эсир, мĕн туса çӳретĕр?» — тет-ши ĕнтĕ? Хăрнă ăвăса улатакка таккать. Хĕрсе ĕçлекенскер, вăл пирĕн çине çаврăнса та пăхмарĕ.

Вăрманти пур чĕрĕ чун та ирпе-ирех вăраннă. Хĕвелĕн вăрăм урисем вăрманăн чи тĕттĕм çĕрĕсене çитнĕ, çăра çулçă витĕр тухса хурт-кăпшанкă таранах ăшăтаççĕ. Уçланкăра шурă, сарă, симĕс лĕпĕшсем пĕрне-пĕри хăваласа вĕçеççĕ. Анюк ури патĕнченех харсăр кăткăсен отрячĕ иртрĕ. Пĕри ушкăнран юлса вилĕ шăнана, хăйĕнчен темиçе хут пысăкскерне, çурăмĕ çине çавăрса хучĕ те малалла кайрĕ.

Вăрманта, шăп мар та, тăнăç, канлĕ. Ӳкнĕ хăрăк йывăçсем урлă каçа-каçа, вĕтлĕхсем витĕр, хулăм та лапсăркка юмансем хушшипе эпир уçланкăсене темиçе те тухрăмăр, чечек татрăмăр, çырла çирĕмĕр. Хавасланмалли те, тĕлĕнмелли те чылай пулчĕ. Утравăн сарлакăшĕ çур çухрăм, тăршшĕ иккĕ-виççĕрен ытла мар. Хĕл-

ле кунта сунара килмелле. Ҫуян ҫеҫ мар, тилӗ те, пакша та тытма пулать. Тен, ӑсан та пур?

Хӗвел ҫӳлӗрен-ҫӳле хӑпарчӗ. Чӑтма ҫук ӑшӑ. Пирӗн ӗҫес килет. Ҫӑнтӑрла ҫитеспе вӑрмантан тухрӑмӑр та шыва кӗме шутларӑмӑр. Ӑшӑх вырӑнта малтан пӗрне-пӗри хӑвала-хӑвала, чикелене-чикелене шыв тӑрӑх чупрӑмӑр, питрен шывпа сирпӗтрӗмӗр, вара шыв айӗнчен каймалла выля пуҫларӑмӑр. Шыва чӑмса Анюк мана ураран вӑрттӑн пырса тытасшӑн, анчах шывӗ питӗ тӑрӑ пирки, аялтан пыни йӑлтах курнать. Анюк сиксе тухиччен эпӗ таҫта аякка таратӑп. Чӑмма мана черет ҫитсен, Анюк «хӑлхана шыв кӗчӗ» тесе вӗри хӑйӑр ҫине тухрӗ. Пӗччен мана та шывра интереслӗ мар, юнашар тухса лартӑм. Хӑйӑр ҫинче пӗр вӑхӑт хӗвелпе пиҫрӗмӗр, шыва тепре кӗрсе тухса ҫерем тӑрӑх тихасем пек сиккелесе ҫӳрерӗмӗр. Эпир пӑлхатнӑ тӑрӑ шыв, самаях пысӑк хумсем пулса, ҫыран хӗрринче хӑяккӑн выртакан кимме пыра-пыра ҫулать, майӗпенех лӑпланать те, эпир каллех чӑнкӑ ҫырана хӑпаратпӑр. Ҫириле мучи юлнӑ енне пӑхатпӑр:

— Килсе тулнӑ, авӑ чупкалаҫҫӗ! — иккӗн харӑсах кӑшкӑрса ярат пӑр утӑ тавӑрма тата ӑна паянах кулпасене хывма иртенпех ӗмӗтленекенскерсем, кӳлӗ хӗрринче аран ҫеҫ палӑракан кӗлеткесене асӑрхаса.

Кимӗ патне анса ӑна шывалла сӗтӗрнӗ хушӑра ҫӳллӗ ҫырана кӗтмен-туман ҫӗртен, таҫтан-муртан, сасартӑк этем тухса тӑчӗ. Пӗр хулӗ урлӑ салтак хутаҫҫи ҫакнӑ, хура куҫлӑхпа, ҫӳҫӗ хулпуҫҫи таран, джинсы текен тӑвӑр шӑлавар, шакмаклӑ кӗпе тӑхӑннӑ, сылтӑм аллинче — ҫава. Хутаҫҫипе ҫавине ҫӗре хурса, кӑкӑрӗ ҫинче ҫакӑнса тӑракан бинокльпе эпир хальрех ҫеҫ пӑхнӑ еннелле тӑрӑшсах сӑна пуҫларӗ. Пӑхса пӗтерсен, пире саламланӑ пекки туса ал сӗлтрӗ те ҫав ҫӳллӗ ҫӗртех кӗпине, шӑлаварне хыврӗ, плавки вӗҫҫӗн ҫеҫ юлса (арҫын иккен!) вырӑсла: «Внизу глубоко?» — тесе ыйтрӗ. «Наверно глубоко»,— терӗмӗр эпир Анюкпа вӑтанарах. Ҫынни вырӑсха та, пиртен чылай аслӑскер, ˝епле вӑтанмӑн хальччен курман-илтменскер умӗнче? Анюк пушшех те вӑтанчӗ. Пӑшӑлтатса ҫеҫ: «Чӑнах та сикеет-ши?» — тесе ыйтрӗ манран. Малалла мӗн пуласса чӑтаймасӑр кӗтетпӗр. Акӑ йӗкӗт виҫ утӑм каялла чакрӗ, чупса пырса ҫырантан пуҫ-хӗрлӗ сикрӗ те, сывлӑшра кустӑрма пек ҫаврӑнса илсе, шыва питӗ меллӗн, ӑна нумай та сирпӗтмесӗр, кӗрсе кайрӗ. Кӗрсе кайрӗ те... пачах ҫухалчӗ. Тӑрсан-тӑрсан

тин пиртен инçе те мар пăнкăлт! сиксе тухрĕ. Куçнепуçне чаркаласа сывлăш çавăрса ярсан, кулса пирĕн пата пычĕ. Вырăсах пуль çав, малалла та вырăслах пуплерĕ:

— Самаях çӳллĕ иккен, аяла ниепле вĕçсе çитме çук.

— Вун метрсем пӳр пулĕ,— хуравларăм эпĕ, кĕсменсене кимĕ çине хурса,— тен, ытларах та...

— Эсир камсем? — хаваслăн ыйтрĕ йĕкĕт, пĕр хăлхине ывăç тупанĕпе хупласа хăрах уран сикнĕ май.

— Çынсем...

— Çынсемне куратăп-ха. Мĕн ятлă?

— Эпĕ Хумкка... Ку — Анюк.

— Фомка и Анка. Интересно. Брат с сестрой?

— Çук, пĕр ялсем, пĕр класра вĕренетпĕр.

— Понятно. Дама сердца.

— Мĕн вăл — «дама сердца»?

Вырăсла калаçакан йĕкĕт ахăрса кулса ячĕ:

— Боже мой! — терĕ вăл варне тытсах ахăлтатса.— Ну и Томас! Фома тени вăл акăлчанла — Томас. Хушамату ăнсăртран акăлчанла мар пуль те?

— Çук, Фомин. Сирĕн мĕнле?

— Чингачгук. Эп çак утравăн патши, индеецсен харсăр воинĕ, сунарçă тата йĕрлевçĕ. Сирĕнни пек тĕксĕм ӳтлисене тапăнмастăп, шурă ӳтлисене çеç хĕрхенместĕп. Манăн вигвам вăрманти вăрттăн вырăнта, ун тĕлне хам çеç пĕлетĕп. Çитес çывăх вăхăтрах эпĕ хурахсен харсăр ушкăнне пухма пуçлатăп. Чингачгук Йывăр Алă малашне сире хăйĕн чи шанчăклă та çывăх тусĕсем тесе шутлĕ.

Çапла калаçнă май, Чингачгук хăрах уран сикме чарăнчĕ те текех вырăнтан та хускалмасăр, малтан аллисене тĕлĕнмелле авкалантарса-вылятса, унтан хулпуççисене, кăкăрне хускатса, хăвăртран-хăвăрт ташлама тытăнчĕ. Параппан çапнă пек туса тутипе пимп! помп! тесе илет, акă ĕнтĕ пĕтĕм кĕлетки «ташлать» унăн. Тепĕртакран пĕр урине малалла кăшт куçарса унпа каллех малтанхи çĕре пуса пуçларĕ, унтан — теприне. Вара кĕвĕ майĕпе малалла та хыçалалла тайăла-тайăла урисемпе лап-лап! пусса ташларĕ.

Йĕкĕт çапла хитре юптарса калаçни тата индеецсен ташшине ăста ташлани пире питĕ килĕшрĕ. Алă çупса, хамăр та унран курмалăх хуçкаланма-авкаланма пуçларăмăр. Уйрăмах Анюк савăнса ӳкрĕ. Вăйă ăна улăштарсах ячĕ:

— Ниměнле Анюк та мар эпě,— Ненси! — терě вăл сасартăк.— Ненси ниměнрен те хăрамасть!

Ташлама пăрахса, Анюк çўллě çыран çине чупса хăпарчě. Чупса хăпарчě те:

— Эй, эсир! — терě хыттăн, пирěн енне сылтăм аллине кăнтарса.— Итлěр те курăр: Ненси шывра та путмасть, вутра та çунмасть. Вăл чи шанчăклă, чăрсăр хурах пулě!

Эпир сăмах чěнсе ěлкěриччен виç утăм каялла чакрě те пěрех ярăнса анчě шывалла! Чăн та, сывлăшра çаврăнса илесси-тăвасси пулмарě унăн, пуçне ыраттарасран аллисене çўлелле кăнтарса ывăç тупанěпе ывăç тупанне перěнтерчě те вěçе пачě. Анюк харсăрлăхěнчен эпě кăна мар, йěкěт те хытă тěлěнчě:

— Да-а,— терě вăл, сывлăш çавăрса ярса.— Вăт ку номер! Сире паянах хам ушкăна илетěп. Эпě калатăп çакна — Чингачгук!

Чингачгук пирěнпе çěр çул паллана çын пек ал тытса уйрăлчě, сăмах майěн çеç, çакă уншăн ниме те пěлтермен пек, ыйтрě:

— Эсир халь, паллах, Джо мучие пулăшма васкатăр? Вăл паçăрах, эпě биноклыпе пăхнă чухнех, ывăç тупанě айěнчен кунталла тинкеретчě: «Ăçта çухалчěç ку Томаспа Ненси?» — тет пуль ěнтě.

Эпě çакна малтанах ăнланмарăм:

— Мěнле Джо? — терěм тěлěнсе.— Вăл пирěн Кириле мучи ятлă,— вара хам анкă-минкě сурăх пулнишěн хытă вăтанса: — Çапла, çапла, Джо, эпě мансах кайнă, Кириле тесе урăх старике калаççě! — тесе ятăм. Манран Анюк та кулать:

— Санран мěн хурахě пултăр? — тет.— Ытла та тавçăрусăр.

Иксěмěр те кимě çине кěрсе лартăмăр, Чингачгук ăна шалалла тěксе ячě:

— Джо мучие хăтарăр та хěвел анаспа калле килме тăрăшăр,— хушрě вăл, пире çула ăсатса. Тепěр çырана çитиччен эпир, Анюкпа иксěмěр, Чингачгукпа индеецсем çинчен тěрлě халап шухăшласа кăларса пытăмăр. Палламан йěкěт хуларан канма похода килнě пěр-пěр студент пуль, терěмěр. Ахальтен мар вăл темěн те пěлет. Килěнче унăн, паллах, магнитофон та, транзистор та, сайра тěл пулакан тем тери интереслě кěнеке те пур ěнтě: ялпа хулана ăçтан танлаштаран. Пире вара утрав çине хăйне унта кичем пулнăран чěнет...

# 7

Кӳлӗ хӗрринчи утта тавӑрма пӗтӗм шкул тенӗ пек хӑпса килнӗ: пиллӗкмӗш класс чанасем пек чакӑлтатать, кунта пӗр кӗрепленe иккӗн сӗтӗрекен те, кӗрепле утланса лашалла выляканта, астумасӑр кӗрепле шӑлӗ ҫине пусса ҫамкине ҫаптаракан та пур; улттӑмӗшпе ҫиччӗмӗш классем хулленрех шавлаҫҫӗ, мучи мӗн каланӑ ҫавна итлесе, малтанрах ҫулса пӑрахнӑ паккуссене тавӑраҫҫӗ. Вуннӑмӗшӗнчен темиҫе ача ҫеҫ килнӗ, ыттисем пурте ашшӗ-амӑшӗсемпе пӗрле вӑрман ӗҫнисенче ҫулаҫҫӗ. Кунта килнисенчен ытларахӑшӗ — пионервожатӑйсем. Аслӑраххисем асӑрхаса тӑмасан, вӗтӗр-шакӑр халӑх тем те туса хума пултарать: халӗ ҫеҫ, авӑ, икӗ шакла пуҫа кӳлӗрен ҫавӑтса килчӗҫ — ыттисенчен вӑрттӑн шыва кӗме тарнӑ. Инкек-мӗн сиксе тухсан, путса вилсен, кама ответ тыттармалла? Ҫавӑнпа та вожатӑйсем пуҫтахсене аларан вӗҫертмеҫҫӗ, шыв ӗҫме те, канма та пӗчченшерӗн ямаҫҫӗ. Пирӗн хӳшӗ тавра велосипед, мотоцикл, мопед, бидонсем, сеткӑсем, рюкзаксем, салтак хутаҫҫисем, спорт сумккисем, тӗрлӗрен тумтир ерминккери пек сарӑлса выртать; хамӑрпа пӗр класра вӗренекен Ваҫҫук Алюшӗ кӳлсе килнӗ ватӑ сарӑ кӗсре хӳрипе шӑна-пӑвана хӑвала-хӑвала хӳшӗ сулхӑнӗнче такам тин ҫеҫ ҫулса панӑ ешӗл курӑка ҫиет. Пырса ҫитсенех мучи пире апат ҫырткалама хушрӗ; апат ҫисе кӑшт кансан, сенӗксем тыттарчӗ те утта тавӑрма та кирлӗ марри ҫинчен пӗлтерчӗ. Улӑхра ҫаран вӑрман ҫаранӗ пек мар, курӑкӗ те кунта унти пекех йӗпе мар, хӗвел хытӑ хӗртнӗ май витӗрех типсе пырать, ҫавӑнпа та утта пӗр хӗрринчен пуҫтарса купасене хывса пымалла. Купана хывнӑскерне вара ӑна ҫумӑр та хытах йӗпетеймест. «Ҫумӑрӗ ан ҫутӑр-ха та, халь вӑл пире кирлех мар,— тет Кирле мучи типнӗ утта тыта-тыта пӑхса.— Анчах каҫа кӗвӗлесе яма та пултарать, ахальтен мар паян иртенпех чӑтма ҫук пӑчӑ. Шӑмшак та тем йывӑрланнӑ пек, ҫанталӑк улшӑнасса сисет вӑл...»

Кӗҫӗн классем халь паккуссене тавӑрса мар, пӗчӗкпӗчӗк купасем туса хӑвараҫҫӗ, вӗсене аслӑраххисем пысӑкрах купасене пухаҫҫӗ. Аслӑ классем, мучирен ӑс ыйта-ыйта, пысӑк купасемех купалаҫҫӗ.

Анюкпа Улайкка хӗрачасен ушкӑнне кайса ҫулӑхрӗҫ; хӗрачисем, питӗ дисциплинӑллӑскерсем, ним шавламасӑр ӗҫлеҫҫӗ, темӗн пӑшӑлтатаҫҫӗ-пӑшӑлтатаҫҫӗ те

ихиклетсе кулаççĕ, унтан ушкăнпа шыв кайса ĕçеççĕ.

Кимĕрен тухсанах мана Ваççук Алюшĕ пырса çыпăçрĕ, малтан хăйĕн чуман лашипе мухтанса тăна илчĕ, унтан утрав çинче мĕн-мĕн курнине тĕпчесе тарăхтарчĕ, халĕ ак хăй çĕркаç ял клубĕнче курнă «Пуççăр юланут» фильм содержанине каласа парать. Çумран каçчен те хăпмасса сиссе, унпа эпĕ сӳрĕккĕн çеç юмахларăм, Чингачгук пирки те, индеецсем çинчен те нимĕн те асăнмарăм, каçпа хамăр каллех утрав çине каясса, унта интереслĕ вăйă вылясса çак чараксăр çăвара пĕлтермерĕм, Анюк хĕрача пулсан та, кунтан шанчăклăрах, çирĕпрех, ăслăрах, пакăлти мар.

— «Пуççăр юланутра» мустангсем, тискер лашасем, кăтартаççĕ,— килсе кĕрет хăлхана Алюш сăмахĕсем.— Унта Койот ятлă вăрă-хурах пур; ай, хăрушăскер...

— Тата мĕн пур?

— Тата улма-чăпар ут пур.

— Тьфу! Тата мĕн пур?

— Пĕр хитре хĕр, çук-ха, икĕ хитре хĕр...

— Хитре иккенĕ ăçтан паллă?

— Авкаланаççĕ...

— Тата мĕн тăваççĕ?

— Юланутпа çĕмĕрен пек çӳреççĕ. Хĕрне каччи çуралнă кун ячĕпе тискер лаша парнелесе пачĕ.

— Пуççăр юланучĕ пур-и вара?

— Пур! Пур! Вăл пĕр хĕрĕн шăллĕ, ăна йăнăшпа пĕр офицер вĕлерчĕ.

— Кассий Колхаун капитан-и?

— Эсĕ те курнă-и-мĕн вăл кинона?

— Çук, кĕнекине вуланă: Майн Рид, «Пуççăр юланут». Тупса вулама сĕнетĕп. Пăх-ха, лашу вĕçерĕнсе кайнă, кӳлĕ еннелле сĕнккерĕ.

Алюшăн ват кĕсри чăнах та вĕçерĕннĕ, анаталла утать. Çакна курсан, йăлăхтармăш тус унталла тапса сикрĕ. Эпĕ тинех çăмăллăн сывласа ятăм.

Улăхра майĕпенех утă купisен йышĕ ӳссе пычĕ. Малтан вĕсем виççĕн-тăваттăн çеçчĕ, кăштран теçеткене, вара çирĕме, вăтăра... хĕрĕхе çитрĕç. Каç енне, кĕçĕн классене яла ăсатсан, мучи юриех шутласа пăхрĕ: çитмĕл купа! Пухманни тата кăшт пур-ха... Юлашки паккуссене пуçтарса купаланă вăхăта алăсем сăрăлтатса тăракан пулчĕç, çийĕмĕртен шăпăртатса тар юхать, пилĕксемниепле те авăнасшăн мар. Хамăр пурпĕрех хаваслă, пĕрне-пĕри куç хĕсетпĕр, шӳтлетпĕр. Мучи хытă савăнни сисĕнет:

— Çамрăксемпе ăçта калаçма,— тет вăл, йăл-йăл кулнă май шурă сухалне ачашласа.— Хушсан, ту-сăрта тепĕр енне çавăрса лартĕç.

Алюш ĕç пĕтернĕ-пĕтермен ват кĕсрине кӳлчĕ те ман пата пычĕ:

— Қайрăмăр-и? — терĕ вăл ырă кăмăллăн.— Ыран турттарма килмелле пулать, Никкăн виç машин ярап терĕ. Тиеме те пирĕх тӳр килет — пĕтĕм халăх ĕшнесенче вĕт. Қанар часрах çитсе...

— Пыраймастăп-ха эп.

— Ма?

— Хурала юлатăп. Эс ирхине çырткаламаллисем илсе кил, юрать-и? Анюк та пирĕнпе юлать, ашшĕне, Никкăн тетене, кала курсан. Май пулсан, Михаля мотоциклпа килсе кайтăр.

— Михаля килеймест, вăл кĕçĕр пĕтĕм колхозĕпе дежурнăй, правленинчен, телефон умĕнчен, унăн çĕрĕпех ниçта та кайма юрамасть. Колхоз пысăк, ĕç участокĕсем нумай, темрен тем пулас пур.

— Ну, салам кала эппин, Қириле мучине пулăшма юлчĕç, те.

— Юрать, эпĕ хам та Михаляна юлташа кайсаларатăп пуль-ха. Алă ылмаш çăмăлрах пулаканччĕ.

Çакна эпĕ пĕртте кĕтменччĕ — эпир Алюшпа пĕртăвансем пек ăшшăн уйрăлтăмăр. Вăл чуман кĕсрине пушăпа туртса çапрĕ те хăлтăр-халтăр урапине ялалла тăнкăлтаттарчĕ, эпĕ хӳшĕ патне таврăнтăм. Пуçра хамăн пĕр шухăш: «Чингачгук мĕн тăвать-ши халь? Эккей, тăмписменсем: мĕншĕн ăна хамăрпа илмерĕмĕр-ха эпир? Мĕн туса ларать вăл пĕр-пĕччен унта, çын çӳремен çав пĕчĕк утрав çинче? Кичемлĕх пуснипе ниçта кайса кĕреймест пуль? Кунта хуть çынсемпе паллашатчĕ, ĕçлес килсен ĕçлеме те пулатчĕ. Тен, вăл пĕччен мар?» Шухăша турăхпа пашалу çисе ларакан Анюка пĕлтертĕм. Анюк сыпнă турăхне çăтса ячĕ те ури çине тăчĕ:

— Чингачгук мĕн тăвать тетĕн-и? Пире кĕтет, эпир пыриччен тигрсемпе, крокодилсемпе, çĕленсемпе çапăçать. Хальччен, паллах, шайккă пухнă. Пире параппан çапса, вут тавра ташласа кĕтсе илеççĕ...

Қириле мучи, утă куписене ытараймасăр, улăхпа тепре çаврăнса килчĕ те эпĕ чĕрçи çине çĕрулми тултарнине курса хĕвеланăçнелле кăтартрĕ:

— Утрав çинче улма пĕçерсе пăхасшăн пуль-ха? Ăçтан каласа кăтартса сана çав чуна илĕртмĕш япалана,

халь ак унталла çеç ыткăнса тăратăн. Эх, çамрăклăх, çамрăклăх... Эхе-хей, эй, алла, эй, турă, тутар каларăшле. Тулыккĕ каçа ан юлăр, хĕвел пĕлĕте ларчĕ, çумăрĕ тăвăллă пулсан тем инкек курăр, киммĕр ӳпленсе кайĕ...

Старик тĕрĕсех калать-ха, анчах «чуна илĕртмĕш япала» та хăй патнеллех туртать. Эй, мĕнех сиксе тухтăр çав хушăра: çитетпĕр те. вут чĕртмесĕрех, улмана Чингачгука парса, каялла килетпĕр. Сăмах панăскернеулталас мар ĕнтĕ. Тен, хăй пирĕнпе ларса каçĕ? Утă хураллама унпа тата хавасрах пулать: хуралта — Чингачгук хăй, Томпа Ненси, Джо тата вĕсене чунран парăннă ăслă йытă... Хулара çавăн пек тус пурри тата мĕнрен япăх?

Чингачгук пире çав çӳллĕ çырантах кĕтсе илчĕ, эпир кимĕрен тухнă-тухман таçта васката пуçларĕ: «Юрать-и çапла кая юлса çӳреме, мĕн тери пысăк ĕç кĕтет, вĕсем пур тин сĕтĕрĕнсе çитрĕç». Пăхатпăр та, умра пачах урăх çын тăнăн туйăнать: юптарса калаçасси те, чăрсăр индеец рольне выляссси те таçта кайса кĕнĕ, васкатать, тěкех васкатать. Юманлăх витĕр тухса вĕтĕ ăвăслăха кĕтĕмĕр, çаплах васкатать. Уçланкă курăнса кайрĕ. Пĕр хĕрринче, паçăр хамăр канса ларнă çĕртен сылтăмарах, курăка çулнă, уçланкăри пĕртен-пĕр ват çăка патне хӳшĕ тунă, умĕнче вут çунать, каскасем çинче хире-хирĕç арçынпа хĕрарăм ларассĕ. Çывхарнăçем, ума çакăн пек сăн тухрĕ: хӳшĕ çăварĕнчен транзистор акăш-макăш хуçкаланчăк джас çухăртать, унта та кунта пушă кĕленчесем, консерва банкисем йăваланса выртаççĕ, çĕре сенĕк тăрăнтарса хунă, унтах вĕрен, тилхепе çыххи, кĕреплe куратăн. Чи тĕлĕнмелли... пысăк хĕрес, чим, хĕрес мар, лайăхрах пăхрăм та — пуслăх, яштака вăрăм хурăнран такам тинрех çеç якатса тунă пысăк пуслăх, лаша лавĕ валли мар, машшин валли пулас... Айккинчен пăхсан, çак пуслăх çине урлă икĕ сенĕк пăрахнăран, вăл пысăк хĕрес майлах курăнать. Эпир çитсе чарăнсан, хӳшĕ енне çурăмĕпе ларакан тăмаланчăк çӳçлĕ çиллес çамрăк хĕрарăм ура çине тăчĕ; хĕрлĕ çӳçлĕскерĕн, темшĕн, пичĕ те хĕп-хĕрлĕ. Тăмаланчăк пуç пурĕ те пĕр предложени çеç каларĕ: «Ача вăййи вылятăр». Вара тĕреклĕн те йывăррăн пусса вĕтлĕхелле кĕчĕ. Юлташĕ, пуçне шапшакла хыртарнă хăравçă сăнлă арçын, пире хирĕç чупса пычĕ, алран çавăтсах каска çине ларма хистерĕ. Эпĕ ун умне çĕрулмисене шăкăрах тăксан, пушшех хыпăнса ӳкрĕ, вĕсене çавăнтах кĕл ăшне хума васкарĕ.

— Çапла вара,— терĕ Чингачгук каска çине мана хирĕç Анюкпа юнашар вырнаçса.— «Чарлан утравĕ» операцие пуçлатпăр, пуçличчен малтан, этемсен хушшинче сарăлнă йăлапа, пĕрер черкке тытса парар,— каска çумне таянтарнă кĕленчерен вăл икĕ стакан шур эрех ячĕ, пушă виççĕмĕш стакана шуррине яма тăхтаса вут енне кăшкăрчĕ:— Эй, Хаджи, шампанского!

Хаджи çавăнтах йăпăр-япăр çитсе тăчĕ, хӳшĕрен пысăк хура кĕленче илсе тухрĕ:

— Стакан кирлĕ мар-и?

— Кирлĕ мар, куçу-пуçу ахаль те тăманалла пăхакан пулнă.

Хаджи хирĕçмерĕ, кĕленчене Чингачгука тыттарса каллех вут патне кайрĕ. Пăккине шаплаттарса кăларса, кăпăкланса тăракан эрехне стакана янă чух пирĕн çĕнĕ тус пĕрехмай шӳтленсе турĕ, куç хĕсрĕ, вăрттăнла ăнланмалла мар паллăсем пачĕ. Вăл сисмен хушăра эпĕ те Анюка куç хĕсрĕм. Куçпа куç тĕл пулчĕç те, Анюк: «Эс мана питех айван тесе ан шутла, пуслăхсемпе вĕренсем мĕн тума кирлине эпĕ паçăрах аван туйрăм»,— тенине ăнланса илтĕм.

Ав мĕнле туристсем иккен вĕсем — канма кĕреплесемпе, сенĕксемпе çӳреççĕ, Хаджи текенни вара вырăсла пирĕн ялтан вуник çухрăмри Ялттан текен аул тутарĕ пек хуçкалантарса калаçать. Эрехе Чингачгук стакана вĕçкĕнле виç пӳрнепе тытса: «Паллашнă ятпа»,— тесе ĕçсе пачĕ. Вара эпĕ ĕçессе кĕтмесĕрех «операци» планне калама пуçларĕ:

— Старик патне каçатăр та...

— Джо патне...

— Джо патне каçатăр та ăна киле яратăр, вăл кайсан пире пĕр машина утă сутатăр...

Эпĕ мĕн те пулин хуравлама ĕлкĕриччен Чингачгук мана пилĕк тенкĕлĕхсене пĕр тĕрке укçа тыттарчĕ:

— Ку халлĕхе... аванс, хĕрĕх тенкĕ...

Сăмсаранах тĕксе панипе укçана тытма тӳр килчĕ. Çапла туни калама çук пысăк йăнăш пулса тухнине темиçе çеккунтран туйса илтĕм, çывăхрах фотоаппарат çути çине-çинех çутăлса илчĕ, Хаджи ихĕлтетсе кулса ячĕ:

— Тата ӳкерес-и? Ĕмĕр асăнмалăх!..

Хытă тарăхнипе эпĕ тепĕр нихăçан каçармалла мар йăнăш турăм: эрехпе Чингачгука питрен сапрăм, укçисене пĕрерĕн-пĕрерĕн çурса таткаласа вута ывăтма пуçларăм. Çурма ĕлкĕрейменнисене Чингачгукпа Хаджи тă-

пăлтарса илчĕç. Мана пулăшма Анюк сиксе ÿкрĕ, ăна тăмаланчăк пуçлă хĕрарăм çÿçĕнчен çавăрса тытрĕ те çăка патне сĕтĕрсе кайрĕ.

— Кĕрт йытти,— терĕ вăл таврăнса таса чăваш чĕлхипе,— алă ÿтне ашĕ-мĕнĕпе çыртса татса илчĕ.

Эпĕ, икĕ арçын пусса выртнипе, пуçа Анюк енне ниепле çавраймастăп. Çавăртăм та хăранипе тата çÿçенниле хаяррăн кăшкăрса макăрма, урса кайса тапкаланма, çапкаланма, турткаланма пуçларăм, иккĕшне те ывăтса ярса Анюк патнелле ыткăнтăм. Анюка аллисене хыçалалла пăрса çăка çумне çыхса хунă, çăварне çĕтĕк татăкĕпе пăкăланă, сăмсинчен шăпăртатса юн юхать. Хĕрача патне çитесси пулмарĕ, çула хĕрарăм пÿлчĕ, ура хурса ÿкерчĕ те пусса выртрĕ, вара ыттисем çитрĕç.

— Ухмахланма пăрах,— терĕ Чингачгук йывăррăн сывласа аллăмсене хыçалалла пăрса çыхнă май.— Укçана кĕсйÿне пĕтĕрсе чик те, кайрăмăр. Эпĕ хушнă пек тусан санăн пĕр кĕсъе укçа пулать. Ху пек тусан — шиш. Впрочем эп сана çур пус памасан та пултарап, мĕншĕн тесен пирĕн пленка, документ, пур. Тăмана ан пул, шутла. Пире пурĕ те лĕр машшин çеç кирлĕ...

Килĕшсен те, килĕшмесен те серепене çирĕп çакланнине яр-уççăн куратăп: вĕсен аллинче эпĕ Чингачгукран укçа илнине ÿкернĕ кадрсем. Унта эпĕ çеç мар, Анюк та пур. Килĕшнĕ пек туса Кириле мучи патне хамăр çеç каяймастпăр. ĕнтĕ халĕ, çакăн пек тĕркĕшÿ хыççăн Анюкпа иксĕмĕре çеç ниепле те ямаççĕ, пĕрле ларса пыраççĕ те мучие çыхса пăрахаççĕ, утта тиесе каяççĕ, кайран йĕрлесе тупас-тăвас пулсан: «Эпир ним те пĕлместпĕр, старикпе йĕкĕт утă сутма хăйсем тахçанах систерсе хунăччĕ, хамăрăн ытлашшине сутатпăр, терĕç»,— тесе суйма пултараççĕ. Çапла шутларăм та ним тума çуккипе чикĕсĕр тарăхса вăрăсен пуçлăхне куçран суртăм. Кĕленчепе пуçран çапрĕç, çĕр пуçхĕрлĕ çаврăнса кайрĕ.

Тăна кĕрсен, хам ăçта выртнине нумайччен ăнланаймарăм. Пуç халь-халь çурăлса каяссăн ыратать, шăмшак ийе чăмланă пек лăнчăрах кайнă. Таврара пăч-тĕттĕм, нÿхрепри пек сулхăн та шăп. Тÿпене хура пĕлĕтсем карса илнĕ, çанталăк пăсăласшăн пулмалла. Эпĕ тăнсăр чылай выртнă, çакă хĕвел анса тĕттĕм каç хуплама ĕлкĕрнинчен те, кăвайт сÿнес патне çитнинчен те аван курнать. Калама çук ĕçес килнипе хÿшше кĕресшĕнччĕ, хÿхлесе йĕнĕ сасă чуна çурса кайрĕ: «Анюка çăка çумне çыхнипех хăварнă иккен сынçиенсем».

Шăнса кӳтнипе Анюк калаçаймиех пулнă, алли-урине çыхса тăллана кантрана шăлпа кăшласа салтрăм, пăкăлана çĕтĕкне туртса кăлартăм, хĕрача нимле сăмах та калаймасть, пĕтĕм кĕлеткипе сиксе чĕтрет, хăй пĕрехмай хамăр килнĕ еннелле кăтартать. Кантра-пăявва çĕре çĕклесе çапрăм та Анюка алăран çавăтрăм:

— Мĕн пулсан пулать, мучи патне каçатпăр. Мĕн те пулин тумаллах.

Мĕн тумалла? Çакă вара хама паллă мар. Çыран хĕрне çитнĕ çĕре самаях ăшăнтăмăр. Кимĕ ăçта? Çук кимĕ! Тен, эпир ăна кăшт сулахаярах туртса кăларнăччĕ? Сулахаярах мар, çакăнтах. Çĕре пĕшкĕнсе пăхрăм, хăйăр çинче йĕрсем те палăраççĕ. «Кимĕпе вĕсем ларса каçнă, ăçта-тăр хăйсен те пулнă, пирĕнне вара эпир ан каçайччăр тесе илнĕ»,— çапла шухăшларăм та эпĕ, çиллĕм капланса килнипе тата ним тăвайман енне, шăла шатăртаттартăм. Çак вăхăта Анюк юнлă пит-куçне кӳлĕ шывĕпе çуса тасатрĕ, йăлтах лăпланса, ӳпкевлĕн калаcа хучĕ:

— Тытмалла марччĕ çавсен укçине, мемме пăру эсĕ, тăну вара çерçинни чухлĕ те çук.

Анюка хирĕç эпĕ нимех те калаймарăм. Вăл çӳллĕ çырана хăпарчĕ те леш енне пăха пуçларĕ.

— Куратăн-и? — терĕ тепĕртакран.— Павăл хăртнинчен машин анать, çутине сӳнтерчĕ, çакă вăл улăхалла пăрăннине пĕлтерет. Вăрă. Вăрă пулмасан, фарăсене сӳнтерес çук, тата машшин пĕрремĕш те мар: е иккĕмĕш, е çавах тепĕр хут килет.

Епле тĕмсĕлсе пăхсан та, эпĕ машшин çутине асăрхаймарăм, пăхма пуçличчен сӳнтерчĕç пулмалла. Леш енчи çыранта кăвайт çеç йăвашшăн мĕлтлетет.

Анюк çӳллĕ çырантан чупса анчĕ те пaçăр кимĕпе хамăр килсе аннă тĕлте аллине татах шыва чиксе пăхрĕ:

— Шыв хуранта ăшăтнă пек ăшă... — шыв шăмпăлтатса илчĕ, Анюк шыва кĕрсе кайрĕ пулмалла, чылай шалта, пӳ çитме пăрахнă вырăнта, сасси каллех илтĕнчĕ: — Ман хыççăн иш, маларах ывăнакана ывăнманнин пулăшса пыма тӳр килет.

Эп шартах сикрĕм:

— Ан ухмахлан, Анюк! Кунтан леш енне çитме ик çухрăма яхăн, путса вилетпĕр.

— Иш теççĕ сана! Кириле мучи тĕрме тĕпĕнче ан çĕртĕр тесен, иш. Путса вилсен, мĕнех вара, таса чунпа вилетпĕр...

Анюк тата темĕн каларĕ, ишсе кайрĕ те, шыв шăмпăлтатнипе мĕн каланине уйăраймарăм.

— Вут çути çинелле иш, мана хуса çит.

Эпĕ хуса çитнĕ чух Анюк месерле выртса ишетчĕ, ывăнса çитес пулсан мана та çапла ишме хушрĕ. Қапла малалла хытах кайма çук та, самаях канса илме пулать.

Шывра ишнĕ малтанхи самантра вăй кĕнĕн, пуç кашласа ыратма чăраннăн туйăнчĕ, анчах кăштран эпĕ самаях хулленлентĕм, уйрăмах сулахай хул, Чингачгук шатăртаттарса хыçалалла пăрса хуни, çĕкленесшĕн мар. Анюк çывăхах ишсе çитрĕ, пĕр самант мана пулăшса пычĕ, хытă каласма чарчĕ. Çывхарса пыратпăр пулас.

Хăйçути мĕлтлетет-ха, сÿнмест. Темме, шывра ишетĕп пулин те, ыйăх пуса пуçларĕ, алăсене хулленренхуллен хăлаçлатăп.

— Сулахаярах, сулахаярах,— тет Анюк пăшăлтатса тенĕ пек,— унта ăшăх вырăна часрах тухма пултаратпăр.

Сулахаярах ишетпĕр. Вут çути сылтăмран мĕлтлетет, мĕлтлетет тени тĕрĕсех те мар-ха вăл, самаях хитре çунать. Умĕнче мĕлкесем пур пек... Тата темиçе хут хăлаçлантăм та савăннипе чутах кăшкăрса яраттăм: ура кÿлĕ тĕпне лекрĕ!

— Анюк!

— Мĕн? Мĕскер çухăран?

— Тĕпĕ...

— Çапла, тĕпĕ... шыва хулленрех шăмпăлтаттар...

Хăмăш хушшипе çырана тухсан, пĕр вăхăт сывлăш çавăрса яраймасăр выртрăмăр, сывлăш çавăрса ярса кăшт кансан, çакăн пек канаш турăмăр: епле тĕттĕм пулин те, Анюк кас тĕттĕмĕпе усă курса машшин патне йăпшăнса пырать, номерне уйăрса илме тăрăшать, номерне уйăрса илсен, çав самантрах тÿрĕрен яла чупать, эпĕ вара хÿшĕ патне кайса мучие шыраса тупатăп, ăна епле те пулин мăшкăлтан хăтарма хăтланса пăхатăп.

Анюкпа уйрăлса кăшт утсан, темле çемçе япаларан такăнса ÿкрĕм. Тытса пăхрăм та, йытă вилли! Улайкка... Чĕрĕ юн шăрши сăмсана кÿ! килсе кĕчĕ. Вут патне шуса çывхартăм: мучи те, никам та çук. Шăплăх. Анюк кайнă енче çеç çынсем хытах мар темĕн каланисем вăхăтвăхăт илтĕнеççĕ тата хытă япала хытă япала çумне лексе пулнă сасă килет. Шăппăн, çутăсăр ĕçлеççĕ вăрăсем.

Хÿшше ĕселенсе кĕтĕм, анчах ним тума ĕлкĕрейменрĕм, ура сассисем, çын мăкăртатса калаçни, сенĕк-кĕ-

репле пĕр-пĕрин çумне лексе кăларнă сасăсем сасартăках çывхарчĕç. Туятăп: мучи кунтах выртать, йăшăлтатнине, сывланине илтетĕп, çăварне пăкăланă, хăйне çыхса пăрахнă пулмалла.

— Мучи, эпĕ ку, ан хăра,— терĕм хăвăрттăн пăшăлтатса,— укçа пачĕç-и? Çăварне шыраса тупса пăкка туртса кăлартăм.

— Пачĕç те илмерĕм, анчах шакла пуçли картăчкă ӳкерчĕ эпĕ укçа тытса тăнă чухне, тем тăвасшăн ĕнтĕ...

— Эх, мучи, мучи, пысăк йăнăш тунă эсĕ...

Урăх нимĕн те калаçса ĕлкĕреймерĕмĕр: пĕри, вутпуççи тытнăскер, хӳшĕ патне çывхарчĕ, эпĕ старик çăварне часрах паçăрхи çĕтĕке чикрĕм те хӳшĕри утă ăшне чаваланса кĕтĕм:

— Ну, мĕнле? — терĕ вутпуççиллĕ вăрă чăвашла.— Аслăлантăн-и-ха? Тунмастăп: вăрман урлăри Таркăнтан эпĕ, Пуян Кантратти йăхĕнчен, поэтла каласан, «пепел Клааса стучит в мое сердце», тăм çамка — çакна эсĕ ĕмĕрне те ăнланас çук, çĕр хурчĕ, ăман, асаттене эсĕ вĕлертĕн-и, падло? Хĕресне те эсĕ кăларттарса пăрахрăн-и вăрçă вăхăтĕнче? Не выйдет, хамăр вилмесĕр не позволим... çĕнĕрен-çĕнĕ хĕрес ларĕ асатте тăпри çинче, эсĕ тĕрме тĕпĕнче çĕрĕн, ху ухмахлăхна пула.

Чингачгук, ку чăнах та çавăччĕ, вутпуççине кăвайт çине ывăтрĕ те пĕшкĕнсе мучие урисенчен ярса тытрĕ, каштăртаттарса вут патне сĕтĕрсе кайрĕ. Унта унăн аллине те, урине те салтрĕç, çăварĕнчен пăккине кăларчĕç.

— Ватăлмалăх кунунта лăпкă пурнассу килсен, çăварна шыв сып та çур çынна çур сăмах ан кала çак ĕç çинчен, çавăн чуль утăран темиçе купа çухални вăл паллă та мар. Укçа паратпăр — ил, ан йĕрĕн, кирлĕ пулĕ. Чингачгук нихçан та вăрламасть, сутăн илет. Хальхинче вара эпĕ хăвна та сутăн илтĕм — ак çакăнта эсĕ, мана утă сутса ларатăн.— Чингачгук Хаджи мăйĕнчен çакăнса тăракан фотоаппарата шăкăртаттарса кăтартрĕ.— Ну, мĕнле, пĕрер вун тенкĕ чăнах та парас-и, карчăкна йĕм туянса тăхăнтартăн, е парас мар?..

Чингачгук кĕсйинчен вуннăлăх çĕнĕ укçа кăларчĕ те саркаласа мучие сăмсинчен çапрĕ. Мучи укçана илмерĕ, çатăркка хут вут çине ӳкрĕ. Ана Хаджи йăпăр-япăр илсе чикрĕ. Тăмаланчăк пуçлă хĕрарăмпа тепĕр арçын, палламанскер, çитрĕç. Арçын вăрăсене çитсенех васкаса пуçларĕ, тул çутăличчен шанчăклă вырăна пытанасчĕ, терĕ. Ыттисем çула тухас умĕн апат çырткалас кăмăллă

иккенне курса, хыпăнса ӳкнĕ пек пулчĕ: «Эпĕ унта машшина сӳнтермесĕрех...»

Этем сăмахне каласа пĕтерейменĕ, Анюк кайнă енче «ЗИС» моторĕ хăватлăн мĕкĕрсе ячĕ, таçта çити фара çути ӳкрĕ. Пурте, çав шутрах Кириле мучи те, урисем çине сиксе тăчĕç. Вăрăсем, команда панă пек харăс, япала-хатĕрĕсене ярса илчĕç те тискер кайăксем пек ӳлесе унталла тĕпĕртетрĕç. Вут умĕнче Кириле мучи çеç Макаров адмиралăнни пек шурă кĕреçе сухалне каçăртса шак хытса тăрса юлчĕ. Савăннипе эпĕ ун умне шуйттан çури пек сиксе тухрăм, мучие аллинчен çавăтса, ахăрса та кулса, вут тавра тискер ташă ташлама пуçăнтăм, вара сасартăках лăпланса Эстун Кирилине тутинченех чуптуса илтĕм. Анюк çав хушăра ялалла каякан çула тухрĕ, такăр çулпа чĕкеç пек ярăнса иртрĕ те пăрăнса сăрт хыçне çухалчĕ. Тепĕртакран вăрăсем çĕмĕрттерсе çитрĕç. Ансăртран мучие çапса ан пăрахчăр тесе, сых ятне алла пуртă илтĕм, ун умне мала тухса тăтăм:

— Чингачгук, кĕçĕр эсĕ мĕн калаçнине комсомол посчĕ магнитофон çине çырса илнĕ, машшинăра арестленĕ, парăн, ан ухмахлан, касса пăрахатăп!

Чингачгук çывхарма хăтланчĕ. Çума мучи пырса тăчĕ, аллинче — çава.

— Пуçăра касса тататăп, паçăрхи пек систермесĕр çапса антараймăр. Аслаçуна вара, чăнах та, эпĕр...

Çапла каларĕ те мучи мана пуçран шăлса илчĕ:

— Сана кăштах суйма тӳр килчĕ, каçар ĕнтĕ, сын вĕлерекен тесе ан ятла... Юнĕçенччĕ те, пурпĕр этем, халĕ те каç-каç куçа курнать.

— Итле, старик,— терĕ çав хушăра Чингачгук йăваш сасăпа.— Эпир шӳтлерĕмĕр, уттăра пачах та тиемен, сирĕн çыннăр, вăрттăн паттăр, пуш машшина хăвалаоа кайрĕ, слушай, ку — хулиганство, эпир кунта çул май кĕнĕччĕ. Тата эп пачах та Таркăнтан мар, Чистайран, эс тахçан Кантратти пуяна вĕлернине ăнсăртран пĕр шофертан пĕлтĕм.

— Пĕлетĕп эп эсĕ камне: Таркăнти Кантратти Хĕлипĕн кĕçĕн ывăлĕ, аçу Çĕпĕртен каялла хăçан таврăннине те аван астăватăп, вăл таврăнсан нумайран та мар ик вăрман хушшинчи хура хĕрес çĕнелчĕ.

Чингачгук нимĕн те чĕнмерĕ. Вăрăсем пĕр-пĕринпе пăшăлтата пуçларĕç, виççĕшĕ, Чингачгук (Кантратти Хĕлип ывăлĕ), Хаджи тата Тăмаланчăк пуç, кӳлĕ хĕрринелле кайма тăчĕç, анчах çав самантра кĕтмен япала

пулса иртрӗ: шофер, ҫӳллӗ те патвар йӗкӗт, Чингачгука ҫухаран ҫавӑрса илчӗ:

— Пӑттуна пӗҫертӗн пулсан, ҫимесӗр ӑҫта каятӑн, пӗччен ҫиме мана йывӑр пулать. Утта сутӑн илтӗмӗр терӗр, хӑвӑр вара старике ҫыхса пӑрахнӑ...

Шофер патне эпӗ пытӑм:

— Мучие ҫыхса пӑрахнӑ, хӗнесе пӗтернӗ, Улайккана вӗлернӗ, мана пуш кӗленчепе ҫапса ӑнратнӑ, Анюка ӑака ҫумне ҫыхса хӑварнӑ,— терӗм ҫилӗллӗн. Ҫак сӑмахсене илтсен, шофер пушшех тарӑхса кайрӗ:

— А-а?! Эсир чӑн-чӑн вӑрӑ-хурахсем-ҫке, фашистла элементсем — уголовщина!

Ҫӳллӗ йӗкӗтпе Чингачгук ҫыхланса ӳксе ҫапӑҫма тытӑнчӗҫ, Тӑмаланчӑк пуҫпа Хаджи анаталла тарчӗҫ, тепӗртакран вӗсен сассисем кӳлӗ ҫинче илтӗнчӗҫ, фотоаппарат Хаджи мӑйне ҫакӑнса «Чарлан утравнеллле» ишрӗ. Шоферпа иксӗмӗр, мучи пулӑшнипе, Чингачгука, Кантратти Хӗлипӗн, Эстонири Чарлан утравӗ ҫине пытарнӑ Ехрем шӑллӗн кӗҫӗн ывӑлне, вӑл мӗн ятлине Эстун Кирилли те, шофер та пӗлеймест, вут умне пырса лартрӑмӑр. Эпӗ ун умӗпе мӑнкӑмӑллӑн утса иртрӗм:

— Чингачгук Йывӑр Алӑ мар эсӗ, Йӗпе Сӑмса, мемме пӑру,— терӗм юриех хыттӑн.— Ҫакна эпӗ калатӑп: Томас — Океансен Ҫавраҫилӗ... — вара вутпуҫҫипе ҫутатса Улайкка виллине шырама утрӑм, Чингачгук пуҫне усса ларса юлчӗ. Ял енчен умлӑн-хыҫлӑн виҫӗ ҫутӑ уйрӑлса кунталла ҫиҫӗм пек хӑвӑрт ҫывхара пуҫларӗ. Эпӗ Улайккана тупса вут патне илсе пынӑ ҫӗре ун ҫывӑхне виҫӗ «Урал» мотоцикл ҫитсе чарӑнчӗ, сӑпкасемпе ларкӑчсем ҫинчен тӑххӑрӑн шӑкӑрах анса тӑчӗҫ: чи маллта — Анюк ашшӗ, Никкӑн механик, ун хыҫӗнче — атте, аттене лартса килекен Михаля. Никкӑн, Михаля тата атте, ытти тӑвата ҫынпа пӗрле, вӑрӑсене хупӑрласа илчӗҫ, Анюкпа Алюш манпа Улайкка патне чупса пычӗҫ. Улайкка чӗлхине кӑларнӑ, нимӗн хускалмасӑр выртать. Хӗрача ун патне пӗшкӗнчӗ те ӑна сӑмсинченех чуптуса илчӗ, йытта шелленипе сасӑпах макӑрса ячӗ. Хамӑр сисмесӗрех эпир те, Алюшпа иксӗмӗр, ҫанӑпа куҫҫуле шӑла пуҫларӑмӑр: питӗ шел Улайккана, лайӑх тусчӗ, ӑслӑ йытӑччӗ...

1973

СЕНИЭЛЬ (ЕГОРОВ)
Михаил Павлович

**У ЧИСТОЙ ВОДЫ**

ПОВЕСТИ

На чувашском языке

Редактор Ю. И. Скворцов
Художник В. И. Агеев
Художественный редактор
А. А. Афиногенов
Технический редактор
Г. С. Самсонова
Корректор
Л. А. Иванова

ТУПМАЛЛИ

Феникс кайăк . . 3
Бандероль . . 58
Çутă шыв хĕр-
ринче . . . 128

НТ 31878. Сдано в набор 12/VI-1975 г. Подписано к печати 10/X-1975 г. Формат 84×108/32. Бумага типографская № 3. Физ. печ. л. 6,25. Усл. печ. л. 10,50. Учетно-изд. л. 11,01. Заказ № 2393. Тираж 10 000 экз. Цена 42 коп.

Чувашское книжное издательство, Чебоксары, пр. Ленина, 4. Типография № 1 Управления по делам издательств, полиграфии и книжной торговли Совета Министров Чувашской АССР. Чебоксары, Канашское шоссе, 18.

Цена 42 коп.